53-103

ВЛАДИМИР САДАЙ

# ЮР ИРĔЛЕТ



СИГ... НЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

ЧĂВАШГОСИЗДАТ · 1953

ВЛАДИМИР САДАЙ

# ЮР ИРӖЛЕТ

*Калавсем*



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1953

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палатс
„8“ августа 1953 г.
№ 143

*ХИСЕПЛĔ ВУЛАКАНСЕМ!*

Çак кĕнекене кĕртнĕ калавсене вуласа тухнă хыççăн хăвăр шухăш-кăмăлăрсене пире çырса пĕлтерме тăрăшăр. Килĕшрĕç-и вĕсем сире, мĕн ытларах килĕшрĕ, мĕн килĕшмерĕ? Çырура хăвăр мĕн ĕçпе пурăннине, миçе çултине кăтартăр.

Пирĕн адрес: *г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. Чувашгиз, сектор художественной литературы.*

## ЮМАНКАССИ

### 1

Полкран тухиччен ăсталла çул тытассине шутласа та хуманччĕ-ха Аркадий. Унăн Сталинграда та, Çĕпĕре те, пĕррехинче хăй йывăр аманса ӳкнĕ Озерки хулине те каясси килетчĕ. Анчах тусĕсенчен уйрăлса поезд çине ларсан, пăртак лăплансан, вăл тӳрех Чăваш республикине таврăнма шут тытрĕ—тăван çĕршыв, ашшĕ-амăшĕ, ӳссе çитĕннĕ тăван çĕршыв туртрĕ ăна; вăтăр икĕ çула çитсе те пулса курман-ха вăл унта. Сталинград патĕнчен пуçласа Берлина çитиччен ялан тенĕ пекех пĕрле çапăçнă, вăрçă хыççăн та пĕр полкрах пулнă тусĕ те—Валентин Александров—ăна çавăнтах кайма сĕнчĕ.

— Кайса кур, Аркадий Иванович,—терĕ вăл Талыкина, тухса килес умĕн. Полкран тухса килнĕ кун тактикăна вĕренмелли вĕçевсем пуçланмаллаччĕ: летчиксем кăвак çутăллах хăйсен стоянкисене пухăнчĕç. Аркадийĕн ниçта васкамалли те çукчĕ, анчах ыттисенчен вăл та юлмарĕ, аэродрома пычĕ.—Илемлĕ унта пирĕн, калама çук аван. Вăрман, Атăл, кӳлĕсем... Хĕрсем мĕнле тата, Аркадий Иванович! Çавăнтах кай. Анчах асту, туй-мĕн тăвас пулсан, пире чĕнмесĕр ан хăвар.

Кашни тусех хăй патне кайма сĕнчĕ, анчах Аркадий вĕсене ним те татса калаймарĕ: çĕршывĕ пирĕн пур çĕрте те илемлĕ, пурнăçĕ пирĕн пур çĕрте те аван, пур çĕрте те хамăр çынсем—хуть ăçта кай, ывăлне, шăллĕне, пиччĕшне кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илĕç... Çапла вара темиçе облаçран, темиçе хуларан вăл пĕрне те суйласа илейме-

рĕ, хăй ăçта каяссине пĕлмесĕрех тусĕсене алă тытса тухрĕ те, куççулĕ тухасран куçĕсене хупкаласа илсе, пурне те юлашки хут честь пачĕ. Вара, хăйĕн салтак пурлăхне чикнĕ пĕчĕк чемоданне тытса, команда пункчĕ еннелле утма пуçларĕ. Унта ăна Александров çеç ăсатрĕ—ытти летчиксем хăйсен самолечĕсем патне саланчĕç: темиçе минутран вĕсен сывлăша хăпармаллаччĕ.

Команда пунктне вĕсем виççĕмĕш эскадрилья самолечĕсен хыçĕпе кайрĕç. Кунта унăн 1944 çул вĕçĕнче Будапешт çийĕнче вĕçнĕ самолечĕ те ларать. Юлашки вĕçевре, урасăр хăварнă асран кайми вĕçевре, Аркадий урăх самолетпа пулнă: кăна ун чух юсатчĕç — таран тунипе винчĕ тĕпреннĕччĕ. Халĕ, вăл ытти самолетсем пекех, сăмсине çӳлелле каçăртса, тӳпенелле пăхса ларать. Унăн сулахай капочĕ çинче Герой çăлтăрĕ çиçет; Аркадие Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă хыççăн механик ӳкернĕччĕ ăна. Сыв пул, çапăçури тус, пĕрре мар вилĕмрен çăлса хăварнă паттăр тус! Сыв пул, Васюк, ывăнма та, канма та пĕлмен механик!

Стоянкăран иртсен, команда пункчĕ енчен командир вездехочĕ килни курăнчĕ. Валентинпа Аркадий чарăнса тăчĕç. Машинăра чăнах та Гаврилов пулчĕ—ăсатма килет. Вăл анмасăрах Аркадипе Валентина ларма сĕнчĕ. Ларсан, руле яланах хăй тытса çӳрекенскер, вездеходне пăрчĕ те çул çине вăркăнса тухрĕ, хуланалла вĕçтерчĕ. Яланах çапла çӳрет вăл,—хăварт, анчах хальхинче Аркадие командир нихçанхинчен те хăвăртрах кайнă пек туйăнчĕ. Çул май Талыкин: самолетсене пăхса пырăп, паллакан летчиксемпе механиксене, техниксене курăп, тесе шутланăччĕ, анчах вĕсем вĕлт те вĕлт çеç иртсе юлчĕç—ал сĕлтсе хăварма та май пулмарĕ. Çапла аэродромран хулана хупласа тăракан вăрман сăмсахĕ патне çитрĕç; çул вăрмана кĕмест, сăмсах тавра çаврăнса каять. Сыв пул, аэродром, тăван аэродром! Ку аэродромран Талыкин чи малтанхи хут тăшманпа çапăçма çĕкленчĕ. Усал тăшмана çапса аркатнă хыççăн та кунтах çаврăнса килчĕ. Чăн та, вăл, Герой пулин те, летчик марччĕ вара ун чух, штаб начальникĕ çеç пулчĕ, анчах ку аэродром халĕ ăна тăван кил пекех туйăнать. Нумай япала хăварать вăл кунта: туссем—Украина, Польша, Австри тата фашистла Германин йӳçĕ тĕтĕмпе, çула картлакан вут-çулăмпа, хĕрнĕ металпа тулнă тӳписем тăрăх вĕçсе тухнă çывăх туссем, самолетсем—мĕнле хăрушă çапăçура та тăшмана

çĕнтерме пулăшнă вăрт-варт самолетсем, васкавлă та савăнăçлă, савăнăçлă та канăçсăр пурнăç...

Çул вăрман сăмсахĕ хыçне пăранса кĕчĕ, аэродром курăнми пулчĕ. Аркадий хăй те сисеймерĕ, ун куçĕнчен куççуль тумламĕсем сăрхăнса тухрĕç те питçăмартисем çинелле юхса анчĕç. Ăсатма пыракан командирпа Александров вĕсене асăрхасран хăраса, вăл пуçне кабинăран кăларчĕ, типчĕр тесе, питне çиле хирĕç тытрĕ...

Станцире Гавриловпа Валентин поезд тапранса кайиччен ех пулчĕç. Хускалса кайсан та перрон çинчех тăчĕç, аллисемпе сĕлтрĕç.

— Аркадий Иванович, Чăваш республикинех кай!— кăшкăрчĕ ăна Валентин юлашкинчен.—Саксоновпа Ямутов тăванĕсене курăн тен, каласа кăтартăн!

Билет Мускава çитиччен çеç илнĕччĕ. Мускавра вара вăл хĕвелтухăçнелле каякан поезд çине ларчĕ. Канашра ун çинчен анчĕ те Шупашкара кайрĕ. Халĕ акă, çав çулпах, Юманкассине килет: парти обкомĕ ăна МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ пулма хушрĕ...

Çулăн икĕ айккипе те сарлака вăрман йăрăмĕсем тăсăлаççĕ. Вĕсене çич-сакăр çул каярах лартнă пулмалла,—çӳлĕ, ешерме ĕлкĕреймен пулин те, çăра. Вăхăтвăхăт поезд ĕмĕртенпех кашласа ларакан вăрмана чăмачăма кĕрет. Пăравус кăшкăртни вара кунта таçта çитиех каять, пайтахчен у-у-у! туса янăраса тăрать.

Поезчĕ ку инçе çĕре çӳрекенни мар, кашни разъездрах чарăнать. Чарăнмассерен вара анакансем те, ларакансем те нумай пулаççĕ. Пĕр разъездра аккордеонпа хупăлчаллă хăма купăс тытнă икĕ йĕкĕт тата тăватă хĕр ларчĕç. Вĕсем—комсомол райкомĕ колхозсене янă агиткультбригада иккен, района таврăнаççĕ. Вырнаçса ларсанах пĕри, хура çӳçлĕ илемлĕ йĕкĕчĕ, аккордеон калама, тепри, сарăраххи, лутрарах та сарлакараххи, юрлама пуçларĕ. Юррăн çăмăл кĕвви Аркадий Ивановичпа пĕр купере пыракан ыйхăпа йывăрланнă çамрăка та пăртак уçса ячĕ. Вăл хĕрелнĕ куçĕсене аллипех сăтăркаларĕ те тӳрленсе ларчĕ, чӳречерен пăхса илчĕ.

— Пирĕн район пуçланнă иккен,—терĕ вăл, анаслакаласа.—Райцентра каятăр пулсан, çитес станцăра сирĕн анмалла пулать.

Аркадин чĕри сиксе илчĕ. Акă, çитрĕ те! Малашне ĕнтĕ унăн çакăнта, çак таврара пурăнмалла пулать. Аркадин кунта нимле тăван та, тус та, пĕлĕш те çук-ха,

анчах вăл, мĕн поезд çине ларнăранпах, часрах çакăнта çитме васкарĕ. Вагонта, станцисенче иртсе кайнă кашни минут, кашни сехет çав тери хаклă пулнăн, ахалех харама кайнăн туйăнчĕ ăна.

Аркадий стена çумнерех сиксе ларчĕ те, сĕтел çине чавсаланса, чӳрече витĕр пăхма пуçларĕ.

Поезд çаплах малалла ыткăнать. Шурă хурăнсем, телеграф юписем вĕлтлетсе çеç юлаççĕ. Вĕсен хушшинче ула-чăла хирсем, ĕнтĕ ешĕрме пуçланă хăмăр улăхсем, йăмра айне пытаннă тăпăл-тăпăл ялсем, çырма айккисемпе ешĕл сăрт пичĕсем тăрăх сапаланнă ĕне, сурăх кĕтĕвĕсем курăнаççĕ. Сухаласа хуратнă пусăсем тăрăх, ăçта килчĕ унта, сеялкăсем, культиваторсемпе сӳресем сĕтĕрекен тракторсем шăваççĕ. Унтах, ĕçленĕ çĕртен аякра та мар, трактористсем пурăнакан кустăрмаллă будка ларать, тĕрлĕрен пичкесем выртаççĕ, вăхăтлăха çеç тунă аран палăракан çулсем çинче вăрлăх тиенĕ е шыв пички лартнă урапасем, пĕччен çынсем курăнаççĕ. Ахаль те чипер пейзажа сеп-сенкер тӳпе вара пушшех те капăрлатса тăрать. Тĕтре те йăсăрланмасть, ăрша та вылямасть-ха: сывлăш тап-таса, тăп-тăрă—пĕлĕтпе çĕр таçта, аякра-аякра пĕрлешеççĕ. Унти сăртсем çинчи кашни мăкăль, кашни тĕм аллаппи çинчи пек уççăн курăнать.

— Мĕнле илемлĕ кунта!—терĕ Аркадий сасăпах, сăнаса пырсан-пырсан. Вара хăйне хирĕç сак çинче ларакан хĕрĕнкĕрех каччă çине пăхса илчĕ.

Лешне каллех ыйхă пуснă иккен: пуçне малалла сĕнкнĕ те халь-халь Аркадий чĕркуççийĕсем çине ӳпĕнсе анас пек сулкаланса пырать. Çилхе пек вăрăм хура çӳçĕ пайăркан-пайăркан çамки çинелле усăнса аннă. Вагон силленĕ май, вĕсем пĕрре çамкипе сăмсине пырса тиveç-çĕ, тепре Аркадий чĕркуççине сĕртĕнеççĕ.

Поезд хуллентерех кайрĕ, тормозларĕç пулмалла: вагон кустăрмисем хыттăн тăкăлтатса илчĕç. Ыйхăллă йĕкĕт хыçалалла сулăнса кайрĕ, тӳрленсе ларса, хĕрелнĕ куçĕсене, питне сăтăркаларĕ.

— Çывăрман та, ыйхă пусать акă,—терĕ вăл, тӳрре тухма тăрăшнă пек; ним сăлтавсăрах йăл кулса илчĕ:— Çĕркĕ ресторанра вăрахрах ларнăччĕ те...

Вĕсем Шупашкартанах пĕрле килеççĕ. Çапах та Аркадий ун çинчен ячĕсĕр пуçне—хăйне вăл Алексей терĕ,— урăх ним те пĕлмест-ха. Темшĕн-çке, ăна килĕшсех каймарĕ ку йĕкĕт. Те вокзалта, билет илӳçĕн, хĕсĕне-хĕсĕне,

çынсемпе ятлаçа-ятлаçа черет умне кĕрсе тăнипе, те ўсĕр пулнипе, унпа ытлашшиех калаçасси те килмерĕ унăн.

Апла пулин те, йĕкĕт калаçма пуçлани халĕ ăна пăртак савăнтарнă пек те пулчĕ.

«Мухмăрĕ иртет пулас»,—шухăшларĕ вăл.

Поезд каллех хытăрах чупма пуçларĕ. Часах вăл çамрăк хурăн вăрманне пырса кĕчĕ, аташса каясран хăранă пек, темиçе хутчен çине-çине кăшкăрса ячĕ.

Алексей чўрече умнерех сиксе ларчĕ.

— Да-а,—терĕ вăл, ыйхине сирес шутпа пулас, хулĕсене выляткаласа.—Пирĕнни пек çĕршыв сахал тĕнчере. Эсир хăвăр ăçтисем пулатăр тата?—Алексей Аркадий енне çаврăнчĕ.

— Эпĕ...—Аркадий труках ним калама аптрарĕ. Хăй ăçтан иккенне те татса калама хĕнтерех çав ăна. Унăн ашшĕпе амăшĕ Çĕпĕрте, Красноярск таврашĕнчех пурăннă. Выçлăх çул Чăваш республикинчен куçса кайнă вĕсем унта. Аркадий ун чух, çынсем каланă тăрăх, иккĕре çеç пулнă-ха, куçнисене-мĕнсене ним те астуса юлайман. Ашшĕн сăн-питне те астумасть халĕ Аркадий: вăл Çĕпĕре çитсен тепĕр çултанах тифпа чирлесе вилнĕ. Аркадий асĕнче ăна пытарнă кун çумăр пĕрĕхни тата амăшĕ, хыткан та ырă, калама çук ырă амăшĕ, «пĕлĕт те йĕрет ав, ывăлăм» тени çеç тăрса юлнă. Хăй çиччĕре чух вилнĕ амăшĕн сăнĕ вара, ĕнер çеç курнă пек, умĕнче тăрать. Ăçтан манăн ăна, хăй чĕрçи çинче упранă, хăй кăкăрне çитерсе ўстернĕ аннене! Акă халĕ, ашшĕ-амăшĕсем çуралса ўснĕ çĕршыва курсан, вăл ăна тепĕр хут аса илчĕ. Аса илчĕ те çав тери шеллесе пăрахрĕ: чăвашсен хальхи çĕршывне, çĕнелнĕ, пуян çĕршывне курса савăнаймарĕ вăл...—Кунтисемех эпĕ,—терĕ Аркадий пĕр хушă чĕнмесĕр ларнă хыççăн. Анчах ăçтан иккенне каламарĕ. Пĕлмест.

Çул айккинче ытла анлă мар, анчах тулли юханшыв курăнса кайрĕ. Пăртакран вăл вагон айнех авăнса кĕчĕ. Кустăрмасен айĕнче тимĕр кĕпер тăнкăртатса юлчĕ.

— Тав турра, çывхаратпăр,—терĕ Алексей, анаслакаласа.—Çитессе сунмарăм паян.—Кăшт чĕнмесĕр ларнă хыççăн хушса хучĕ:—Пустуях пулчĕ çав çўрени те...

— Ăçта кайнăччĕ вара эсир?—интересленчĕ Аркадий.

— Шупашкарта пултăм. Тракторсемпе комбайнсем валли запчаçсем ыйтма кайнăччĕ те, ĕç тухмарĕ. Илсе

килни пĕтнĕ, киввисене юсăр, теççĕ.—Йĕкĕт аллипе сулчĕ, чӳречерен пăхса илчĕ.—Пултăр эппин, юсаччăр... Тепĕр тесен, эп айăплă мар, маншăн пулсан хуть, тракторĕсем ахалех ларччăр, запчаçĕсене шеллеççĕ пулсан.

Аркадий, çийĕнчех ăнланса илеймесĕр, ун çине кăн! пăхса илчĕ. Йĕкĕт сăмахĕсем ăна тĕлĕнтерчĕç те, çилентерчĕç те. Мĕнле тракторсем çинчен калаçать-ха вăл? Мĕншĕн лармалла вĕсен халь, ĕç вăхăтĕнче?

— Эсир МТС-ра ĕçлеместĕр пулĕ вĕт?

— Юманкасри МТС механикĕ эпĕ. Старши механик...

Акă мĕнле паллашрĕ Аркадий Иванович малашне хăйпе пĕрле ĕçлемелли çынпа! Механик хăй кам иккенне пĕлтерсен, вăл ăна пушшех те çиленсе кайрĕ, ятласа та тăкасшăнччĕ ĕнтĕ, анчах, çынсен умĕнче аван мар тесе, тытăнмарĕ; юрĕ, урăх чухне ĕнтĕ, çитсен. Çитменнине тата вăл... ура та мар! МТС-ра та нумай чăрманмалла пулĕха унпа, халĕ хăй каланă пекех шутлать, çавăн пекех ĕçлет пулсан.

Алексей тăчĕ те çамки çинелле усăнса аннă кăтра çӳç пайăркисене ĕнси хыçнелле ывăтрĕ, питне-куçне, çамкине йӳççĕн пĕркелесе илсе, каллех вырăнне ларчĕ.

— Та-ак, çитрĕмĕр,—терĕ вăл, сăмахĕсене тăсса.

Поезд, чăнах та, хуллентерех кайрĕ. Чӳречерен çĕнĕ çатанпа карнă улмуççи сачĕ курăнчĕ. Семафор юпи, тин çеç хĕрлĕпе сăрланă стрелочник будки вĕлтлетсе юлчĕ.

Поезд, стрелкăсемпе рельса сыпăкĕсенче тăнклататăнклата, вокзал çурчĕ умне çитсе чарăнчĕ.

— Вăт, çитрĕмĕр те,—терĕ тепĕр хут Алексей, кулам пек туса.— Анса пĕрер çĕр грамм ĕçмелле штолĕ; пуç ыратать. Атьăр, пыратăр-и?

Ку çеç çитменччĕ тата. Механик Аркадие пушшех те çилентерсе ячĕ. Сăмах та чĕнесшĕн марччĕ ĕнтĕ вăл ăна, анчах чăтаймарĕ, чĕнчĕ.

— Итлĕр-ха, Алексей Петрович, халĕ, хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче ĕçни килĕшсех каймасть вĕт-ха,—терĕ вăл.—Тен, таврăннă тĕле мĕнле те пулин ĕç тупăнать?

— Паян ĕçлеме çук ĕнтĕ. Ывăннă, пуç та ыратать.— Вăл каллех кулса илчĕ. Анчах кулли, Аркадий çиленме пуçланине туйнипе пулас, темле, айăпа кĕнĕ чухнехи пек тухрĕ.—Директор аван пирĕн...

«Аванах мар-тăр çав, эсир мĕн хăтлансан та каçарать пулсан. Халлĕхе калама йывăр та, паллашсан курăнĕ эппин»,—шухăшларĕ Аркадий, тӳрех пăхма шикленнипе

пулас, пуçне вагонăн тепĕр айккинчи чӳречи енне пăрнă механик çине пăхса; анчах йĕкĕте хăй шухăшĕ çинчен ним те шарламарĕ.

Аркадипе пĕрле вагонран Алексей те тухрĕ. Тем калас кăмăлпа, ун хыççăн вокзал çурчĕ умнех çитрĕ.

— Район центрĕ инçе-и кунтан?—ыйтрĕ унтан Аркадий, чарăнса тăрса.

— Инçе мар. Станцирен иртетĕр те çул çине тухатăр, çулĕ вара тӳрех чайнăя çитерет. Ну, тепре куриччен эппин.—Механикăн алă тытма та шухăшĕ пурччĕ пулмалла, анчах Аркадий Иванович кăмăлсăр пăхнине сиссен, тĕршĕнерех пачĕ те пăрăнчĕ. Вăл малтан буфет енне кайма тăнăччĕ, анчах каялла çаврăнса пăхрĕ те, Аркадий çаплах хăй çине пăхса тăнине асăрхаса, пысăк утăмсемпе вагонĕ патнелле утса кайрĕ.

Темле аван мар туйăм хăварчĕ ку тĕлпулу Аркадий Иванович чĕринче.

## 2

Хĕвел ĕнтĕ йывăç пĕвĕнчен те çӳлерех хăпарнă, самаях хĕртет. Станцири çынсенчен чылайăшĕ пиншакпах çӳреççĕ. Çамрăкраххисем—уйрăмах хĕрсем—кĕпе çеç тăхăннă; шурăскерсем, ыттисем хушшинче таçтанах курăнаççĕ.

Поезд кайсан, Аркадий Иванович пĕчĕк чемоданĕпе шинельне аллине илчĕ, васкамасăр, паллакан çын çукши тенĕ пек пăхкаласа, вокзал витĕр станци хыçне тухрĕ.

Қăшласа пĕтернĕ кусла çумĕнче тăват-пилĕк лаша тăрать. Вĕсен таврашĕнче лавçисем те курăнкалаççĕ— çамрăксем те, ваттисем те пур. Хăшĕ, илме килнĕ çыннине кĕтсе пулас, урапа çинче чĕлĕм туртса ларать, хăшĕ, пыракан çыннине кĕтсе илнĕ те, лашине майлать.

Аркадий, вĕсем патне пырса, вĕсенчен кам та пулин район центрне каймасть-ши тесе ыйтасшăнччĕ, анчах, пасăр Юманкасси МТС механикĕ (хушамачĕ унăн Қозлов пулчĕ, Алексей Петрович Қозлов) унта çитме икĕ километр та çук пулĕ тенине аса илсен—ыйтмарĕ, ятарласа лартса тунă икĕ вăрман йăрăмĕ хушшипе тăсăлакан анлă та тӳрĕ çул çине кăштăртатса тухрĕ те, уксахла-уксахла, анаталла утса кайрĕ. Йăвă ӳссе ларнă йывăççен хушшинчен çил ытла кĕреймест пулин те, кунта уçă çĕрти пек пăчă мар. Йывăççем кăчкă кăларнă, чуна килентере-

кен ырӑ шӑршӑ—ҫуркунне, ҫулла шӑрши сараҫҫӗ. Ҫакӑ вара кунта ҫанталӑка та сулхӑнлатнӑ пек туйӑнать.

Ҫурма ҫулта, ҫула касса каякан тӗпсӗр ҫырма урлӑ хывнӑ чул кӗпертен иртсен, Аркадий Иванович чарӑнса тӑчӗ. Малалла ҫул, майӗпен сулахаялла пӑрӑнса, тӑвалла каять.

Те вунӑ куна яхӑн тенӗ пек путлӗн канма пулманнипе, те—пуласси ҫинчен шухӑшласах пӑлханнипе ӗнтӗ—ларма та, выртма та май пур чухнех ялан ура ҫинче пулнипе, унӑн протез ҫине тӗреннӗ ура кӑкӗ ыратма пуҫларӗ. Ҫитес ҫӗре ҫитичченех, ӗҫлес ӗҫе тытӑничченех ура кӑкӗ шыҫса кайиччен, вӑл ларса канма шутларӗ; ҫултан пӑрӑнчӗ те пӗр ешерме пуҫланӑ ҫаврашка тӗмеске ҫине ларчӗ; картузне хывса, ӑна чемоданӗ ҫинче выртакан шинелӗ ҫине ӳпне хучӗ.

Ура самаях сӑрӑлтатать. Нумаях утнӑ пулмалла ҫав ӗнтӗ полкран тухнӑранпа. Мускавра та, тӑван столицӑна лайӑхрах курас тесе, ытларах ҫуран ҫӳрерӗ: Ленин музейӗпе историллӗ музейран пуҫласа, Хӗрлӗ площадь тӑрӑх, Кремль стенисен ҫумӗпе, Мускав шывӗ патне ҫитиччен каллӗ-маллӗ ик-виҫӗ хут утса ҫаврӑнчӗ, Ленин мавзолейне кӗме темиҫе сехет черет кӗтсе тӑчӗ, ҫӗнӗрен тӑвакан ҫӳлӗ ҫуртсемпе метро станцийӗсене тата ытти паллӑ вырӑнсене ҫитсе курчӗ.

Ҫулпа никам та иртмест-ха. Килни те курӑнмасть: станцӑри ҫынсем ытти ялсене саланаҫҫӗ пулмалла.

Аркадий Иванович шалаварне ҫӗклерӗ, урине кантарас тесе, протезне ҫирӗплетсе лартнӑ чӗнӗсене пушатрӗ. Пушатрӗ те, темшӗн-ҫке, хӑйне ӗмӗрлӗхех урасӑр хӑварнӑ юлашки вӗҫеве, юлашки ҫапӑҫӑва тата ҫав ҫапӑҫура вилнӗ хӑйӗн тусне—Ямутова, Юманкасси каччине—Ямутов Павӑла аса илчӗ. Аса илчӗ те хурланчӗ, тусӗ хӑйпе пӗрле тӑван ялне таврӑнайманшӑн хурланчӗ.

...Ҫав ҫапӑҫура вӑл хӑй те ӳксе саланма, е, каярахпа, фашистсем хупӑрласа илнипе вилме пултарнӑ. Анчах ӑна Олеся хӑтарчӗ...

Ҫапӑҫу шӑпах Озёрки хули ҫийӗнче пулса иртрӗ. Павӑл ҫунса кайсан, Аркадий пӗчченех виҫӗ «мессерпа» ҫапӑҫрӗ. Виҫӗ «мессертан»—иккӗшне, ултӑ «хейнкельран»—пӗрне персе антарчӗ; бомбардировщикӗсем хула ҫине бомбӑсем пӑрахатчӗҫ. Анчах, пӗччен скер, нумай тытӑнса тӑраймарӗ вӑл: унӑн патронӗсем те пӗтрӗҫ, бензинӗ те нумай юлмарӗ.Вара ҫапӑҫуран пӑрӑнса тӑшман умӗн-

че намăсланас мар тесе, Аркадий таран турĕ те, самолечĕ-мĕнĕпех, пĕр урамри сквера кĕрслетсе ӳкрĕ...

Мĕн кăна курмалла пулмарĕ вара унăн çавăн хыççăн! Çунакан самолет кабининчен ăна нимĕç салтакĕсем туртса кăларчĕç. Туртса кăларчĕç те аэродрома—хула хыçĕнчи çереме вĕсем аэродром тунă-мĕн—илсе кайрĕç. Пĕр чул витене хупса хучĕç. Унта унччен те пĕр совет летчикĕ, ун пекех ӳксе аманнă истребитель выртнă иккен; Аркадие пырса пăрахнă чух вăл тăнсăрччĕ. Кайран вĕсем паллашрĕç. Истребитель кӳршĕри дивизиренех пулнă-мĕн. Ӳксен, вăл, хамăр еннелле тухма хăтланса, шуса та пăхнă, анчах пĕррехинче, тĕттĕм каç, аэродромран инçех те мар иртсе каякан типвара пуçхĕрлĕ тăрăнса аннă та тăнне çухатнă... Сулахай алли унăн пĕтĕмпех ваннă, ури хуçăлса, тепĕр майлă çаврăнса ларнă. Кунсăр пуçне тата, ӳкнипе, çамки тирĕ сĕвĕнсе кайнă; куçĕсем çинелле усăнса аннă. Питĕ хытă асапланчĕ вăл. Чунĕ епле тытăнса тăчĕ-тĕр; курми те, илтми те пулчĕ, ăшне пĕр чĕптĕм ямасăр, сивĕ шывпа çеç пурăнчĕ.

Пĕрле икĕ кун та икĕ каç, хамăр бомбардировщиксем хăтаричченех пурăнчĕç. Суранĕсем иккĕшин те шыçса кайрĕç, таврари ӳчĕсем çĕрме пуçларĕç; пурпĕрех вилмелле тесе, фашистсен врачне яхăна та ямарĕç вĕсем.

Ытла калаççах кайман пулин те, Аркадий хăйĕн юлташĕ Чистай таврашĕнчи чăваш иккенне, арăмĕ Чăваш республикинчи пĕр ялта учительницăра ĕçленине пĕлчĕ...

Вилме те хатĕрленнĕччĕ ĕнтĕ, юрать—тав çапăçури туссене!—бомбардировщиксем çăлчĕç. Иккĕмĕш каçĕнче вĕсем аэродром çине вĕççе килчĕç те урăм-сурăм бомба тăкрĕç, фашистсен самолечĕсене те, вĕсем пурнакан палаткăсемпе çемленкесене чăлпар салатрĕç. Пĕр бомби Талыкинпа унăн тусĕ—Аркадий ун ятне астумасть халĕ—ларакан витен кĕтессине ишсе антарчĕ. Аркадий нумай шухăшласа тăмарĕ, хăрах урасăр та вăйран кайнăскер, тусне çурăмĕ çине хучĕ те, ăçталла кайнине пĕлмесĕрех, йăнăша-йăнăша та кана-кана, тĕттĕм хирелле шуса кайрĕ... Çутăлнă çĕре хула хĕрринчи пĕр çурт патне çитсе выртнă-мĕн. Анчах ăна Аркадий астумасть. Вĕсене Олеся тупнă та пĕр ишĕлнĕ çурт айĕнчи подвала çĕклесе кайнă...

Çакăн хыççăн вĕсем Озĕрки хулинче икĕ кун пурăнчĕç. Олеся вĕсене пăхса тăчĕ, чăн-чăн тухтăр тупса, чăнчăн имçамсемпе сиплеттерчĕ. Медицинăна хăй те аван

чухлатчӗ вӑл, партизансен отрядӗнче сестрара ӗҫлерӗ кайран...

Тусӗн сывлӑхӗ питӗ начарланса ҫитсен, ӑна Пысӑк ҫӗр ҫине ӑсатрӗҫ; партизансен отрядӗнче вӑл пурӗ те пӗр кун ҫеҫ пурӑнчӗ. Ӑсатас кун Аркадий ӑна хӑйӗн ашшӗнчен юлнӑ юман портсигарне асӑнмалӑх пачӗ. Палламан летчик хӑйӗнне парнелерӗ: алюминирен самолетсем юсакан мастерскойра тунӑ портсигар; Аркадий ӑна халӗ те хӑйпе пӗрле илсе ҫӳрет...

Икӗ эрнерен Пысӑк ҫӗр ҫине тухсан, Аркадие Совет Союзӗн Геройӗ туса хучӗҫ, Озерки хулинчи вӑл ӳкнӗ урама, вӗсем тата Олеся пурӑннӑ ишӗлчӗк ҫурт ларакан урама, ун ятне, Талыкин ятне пачӗҫ...

— Ту-у-ту-ут!—илтӗнчӗ сасартӑк хыҫра.

Аркадий ҫаврӑнса пӑхрӗ те станци енчен хӑй патнелле ҫӑмӑл машина ыткӑнса килнине курчӗ. Вӑл васкасах протезне майлаштарса лартрӗ, шӑлавар пӗҫҫине антарчӗ, майӗпен ура ҫине тӑчӗ.

Салтак урасӑр пулнине тата вӑл станци енчен район центрнелле кайнине чухласа илчӗҫ пулмалла машина ҫинчисем—кӗпер ҫине кӗреспе вездеходне ҫул айккинерех пӑрчӗҫ те чарӑнчӗҫ. Тӑп чарӑннипе машина малалла чикӗннӗ пек пулчӗ, унта темскер шӑтӑртатса, нӑтӑртатса илчӗ. Хыҫӗнчен парӑлтатса пыракан сӑрӑ тусан пӗлӗчӗ ун урлӑ кӗпер ҫинелле вӗҫсе иртрӗ, унтан, майӗпен сайралса, айккинелле сарӑлса, сӑрталла хӑпаракан ҫул тӑрӑх шуса кайрӗ.

— Эсир Виҫпилеше каймастӑр пулӗ вӗт?—шофер ҫумӗнче ларакан самӑртарах та ҫирӗп пӳ-силлӗ, каҫӑр сӑмсаллӑ та хурарах сӑн-питлӗ ҫын айккинелле тайӑлчӗ те, ҫурри таран машинӑран тухса, Аркадий енне ҫаврӑнчӗ. Вӑл, пӗчӗк теме ҫук ҫӑварӗн айккинчи катӑк шӑлне кӑтартса, йӑл кулса илчӗ. Ун хӑтланчӑшӗнчен те, сарлака та уҫӑ питӗнчен те, тӳррӗн пӑхакан, пӗр-пӗр вӑрттӑн шухӑш тытас пулсан, ҫавӑнтах систерме пултаракан кӑвак куҫӗсенчен те Аркадий вӑл ырӑ ҫын иккенне, ҫынна ырӑ тӑвас тесен, чунне пама та хатӗр пулнине туйрӗ.

— Эсир Виҫпилеше-им?—ыйтрӗ вӑл; ҫӑмӑл машина патне ҫывхарчӗ, сасартӑк ларма килӗшрӗ. Кайрануншӑн кӑшт ӳкӗнсе те илчӗ те—ытла хӑюллӑ пулни, сӗмсӗрленни, сӗкӗнни пекех пулса тухать вӑл хӑш чух,—анчах машина ҫинчисем ҫаплах кӑмӑллӑн кулкаланине курсан,

ăпланчĕ. Чемоданĕпе шинельне кĕтессе вырнаçтарса хучĕ, хыçалти вырăна кĕрсе ларчĕ.

Машина малалла вĕçтерчĕ.

Аркадие ырă тăвакан çынсем вăл ăçтан килнипе çеç интересленчĕç. Ăçта, мĕн тума кайнине ыйтмарĕç. Талыкин хăй те,—пĕтĕм пур-çука пĕлесшĕн çунакан çын пек курăнасшăн мар пулса,—ним те тĕпчемерĕ, ниçта вырнаçа пĕлмен протезне айккинелле тăсса ячĕ те вĕсен пасăр татăлнă, халĕ çĕнĕрен сыпăннă калаçуне итлеме пуçларĕ.

Машина хуçисем таçта тем тума кайнă та ĕçне ăнтараймасăрах таврăнаççĕ пулас. Аркадипе калаçма чарăнсанах, вĕсем иккĕш те тĕксĕмленсе кайрĕç. Хулăнраххи, ăна ларма чĕнекенни, шухăша путнă пек пулчĕ.

— Хăйне майлă çын вăл,—терĕ пăртакран руль тытса пыраканни, çирĕм пиллĕксенчен иртнĕ хĕрлĕрех çӳçлĕ, лутрарах та хытанка йĕкĕт.

— Кам çинчен çак эсĕ?

— Василий Михайловича калатăп-ха. Тем хăтланать вăл.

— Хăтланма темех хăтланмасть те, çапах та начар тăвать. Ăнланмасть теме çук, ăнланать вăл, анчах çынсен пулăшуне йышăнса намăсланас килмест унăн. Тĕлĕнмелле!

— Лисковне кураймарăмăр вĕт. Вăл пулсан майлаштаратчĕ пулĕ те...—руль тытса пыраканни çамки çинелле усăнса аннă хĕрлĕ çӳç пайăркине лĕпки çинерех çавăрса хучĕ.—Илья Николаевича каласа кăтартсан, лекет те ĕнтĕ... Вăл та тăруках пĕлтермен пулĕччĕ çав. Çийĕнчех вăрçса тăкаканни мар вĕт, майĕпен-майĕпен çеç çаврăнса пырать. Қайран, чăнах та, ӳкĕнмелле пулатех вара лешĕн.

Машина сăрт çине хăпарса çитрĕ те хăвăртрах кайрĕ. Қăшт пырсан, вăл уçă вырăна вăркăнса тухрĕ; вăрман йăрăмĕ сулахаялла, ишĕлкелеме пуçланă чăнкă çыр тăрăх каять иккен. Çыранăн леш айкки сĕвек. Унта Виçпилеш вырнаçнă. Вăл ал тупанĕ çинчи пекех курăнма пуçларĕ. Сарлака та тӳрĕ урамсем хиртен шыв патнелле чупса анаççĕ те унта мăнаçлăн саркаланса ларакан ватă йăмрасемпе çӳçесем айне кĕрсе çухалаççĕ. Илемлĕ. Кăмăллă.

Çирĕп те çӳлĕ карлăклă, курпунрах пысăк кĕпер урлă каçрĕç. Çул айккинче «Пищекомбинат» текен вывескăллă чул çурт тата пекарня вĕлтлетсе юлчĕç. Урам. Қатрашкаланма пуçланă анлă çул. Тĕрлесе пĕтернĕ чӳречеллĕ

çуртсем. Тарасаллă пусă. Юпасем. Мăкланма пуçланă хулăн вулăллă йăмрасемпе тирексем. Столовăй. Ун умĕнче икĕ грузовик тата пуçне сĕлĕ хутаççи тăхăнтарнă лаша тăрать. Урапи айĕнче çĕтĕк кĕрĕке тӳнтер майĕ тăхăннă пек курăнакан усăнчăк хăлхаллă ула йытă выртать, качака путекки утвалли хыпашлакаласа çӳрет.

Шоферпе мăнтăртарах юлташĕ машини çинчен анчĕç. Шоферĕ радиатор пробкине уçса, мотор капотне çĕклесе пăхрĕ.

— Шывĕ пĕр тумлам та чакмасть,—терĕ вăл.—А бензинĕ чакать вара. Василий Михайловича счет ярса парар мар-и?

— Кирлĕ мар. Хăвăн айăпу та пур кунта. Пăх-ха эсĕ ху çине малтан: кам кăмăлне каймалли çын ĕнтĕ? Хĕрлĕ çӳçлĕ, шĕвĕр сăмсаллă, имшер, вăйсăр: машинсем юсама мар... Калăттăм та, çын пур ĕнтĕ. Çитменнине тата тӳрех реставраци тăвас пирки сăмах пуçласа ятăн. Вăл запчаçсем кĕтсе ларать вĕт-ха... Эх, эсĕ те çав ĕнтĕ... Майне пĕлместĕн. Пар-ха, хам ларам унта.—Тачкарах пӳ-силли руль умне, тепри, хĕрлĕ çӳçли, ун çумне ларчĕ.

— Этремене пымастăр-и эсир?—ыйтрĕ тин çеç машина çинчен анса тăнă Аркадирен руль умне ларни.—Пыратăр пулсан, атьăр.

— Çук, пысăк тав сире куншăн та. Манăн пăртак кунта тăрас пулать-ха.—Аркадий иккĕшне те пырса алă тытрĕ.—Сыв пулăр, чипер çитĕр.

Машина кайрĕ. Талыкин вăл мĕн урам кукăрне пăрăнса кĕрсе курăнми пуличченех пăхса тăчĕ.

Ырă, уçă, такам кăмăлне те каймалли çынсемччĕ иккĕшĕ те. Аркадий вĕсемпе çывăхрах паллашманшăн, паллашма кăна мар, ячĕсене те, ăçтисем иккенне те пĕлсе юлманшăн ӳкĕнсе илчĕ. Вара столовăя кĕрсе пирус туянчĕ те вездеход кайнă урампах райкомалла утрĕ.

3

Райком секретарьне Аркадий шăп райком пусми çинче тĕл пулчĕ. Лешĕ таçта кайма хатĕрленнĕччĕ пулас: плащпа, кепкăпа. Пусма айккинче çăмăл машина ларать; шофер кабинăна кĕрсе ларса, моторне те хускатса ячĕ.

Секретарь пусма çурринчех чарăнса тăчĕ. Паçăр райком ăçтине кăтартса яракан пĕр кинемей: «Пирĕн секре-

тарь вăрçăра аллине çухатса килчĕ», тенĕччĕ те, Аркадий ăна хăех палласа илчĕ.

— Çитрĕр те-и? Питĕ аван, паллашар: Федотов, Илья Николаевич,—терĕ секретарь, Талыкин хăй çинчен пĕлтерсен; вара машини енне çаврăнчĕ.—Максимыч, машина халех кирлĕ мар-ха, тăхта пăртак.

Алă тытрĕç. Илья Николаевич каялла çаврăнса каллех пусма çине хăпарма пуçларĕ.

— Кĕрсе калаçар-ха эппин,—чĕнчĕ вăл Аркадий Ивановича.

Илья Николаевич вăтам пӳллĕ, çинçерех. Илемлĕ, тӳрĕ сăмсаллă. Сулахай питçăмарти çинче ясмăк пĕрчи пысăкăш тĕксĕм хăмăр пур палли курăнать. Анчах çамки çинче темле пысăк суран хыççăн пулнă йĕр ун сăн-питне пăснă пек туйăнать; вăл хĕрлĕ, шурă питĕнчен чылай расна. Çавăнпа та кепкине вăл куçхаршисем çинерех антарса лартнă. Хытканрахскер, вăл ывăннă çын пек курăнать. Анчах сеп-сенкер куçĕсем питĕ те чĕррĕн çиçеççĕ, çынна, унăн ĕмĕт-шухăшне пĕлме тăрăшнă пек, тӳрех куçран пăхаççĕ. Сулахай алли чавса таранах татăк хăйĕн. Пушă çаннине, ан сулкалантăр тесе, кĕсйине чиксе хунă. Ури те чăн урах мар: кашни ярса пусмассерен вăл çăтăрт-çăтăрт туса илет. Анчах секретарь, ăна асăрхаман пекех, пĕвне тӳрĕ тытать, уксахланине те кăшт çеç палăртать.

«Йывăр пулмалла ăна ĕçлеме,—шухăшларĕ Аркадий, ун хыççăн пысăк кабинета кĕнĕ май.—Анчах пултарать пулас, çынсем ырăпа çеç асăнаççĕ, мухтаççĕ». Вăл пасăр Виçпилеше çитиччен пĕрле килнĕ шоферпа столовăй умĕнче тĕл пулнă ватă кинемее тата вĕсен сăмахĕсене аса илчĕ. Вара секретаре тата та хытăрах юратса пăрахрĕ. Федотов хăй сĕтелĕ хушшине кĕрсе ларманни те килĕшрĕ ăна.

— Ларăр, Аркадий Иванович,—терĕ секретарь диван çине кăтартса.

Вăл картузне хывса çакрĕ, аллипе протезне хуçлатса, хăй те диван çинех пырса ларчĕ. Унтан вара, кĕсйинчен «Казбек» пачки кăларса, пирус сĕнчĕ. Тивертме Талыкин тиверттерчĕ.

— Çул çинче нумайранпа-и?—ыйтрĕ пăртакран Илья Николаевич.

— Полкран тухнăранпа икĕ эрне çитрĕ,—терĕ Аркадий Иванович.—Мĕн каннипе çитет пулĕ тетĕп, ниçта ларас-тăрас килми пулчĕ ĕнтĕ.

Райком секретарĕ кулса илчĕ.

— Апла пулсан, савăнтарма пултаратăп: кунта ĕçсĕр аптрамалла пулмасть,—терĕ вăл.—Ĕç ытлашши пулнипе ан аптрăр çеç.—Вăл Аркадий енне çаврăнарах ларчĕ.—Тӳрех калатăп сана, ĕç нумай кунта. Çĕнĕлле ĕçлеме тытăнмалла, пурнăçне те, пурнăçри йĕркесене те тĕпрен улăштармалла пулать. Çыннисене те, пайтахăшне, урăхла пăхакан, çĕнĕлле шухăшлакан тăвас пулать—директортан пуçласа тракториста çитиех.—Илья Николаевич тăчĕ те сĕтел çинчи пепельницăна илсе диван пуçĕ çине хучĕ, хăй каллех ырăнне ларчĕ.—Япăх çынсем çук, япăх руководительсем çеç пулаççĕ, çакна пирĕн яланах асра тытмалла. Сирĕн директора, Ухварова, эпир асăрхаттарнăччĕ, анчах вăл бюро решенийĕсенчен тивĕçлĕ вывод тумарĕ пулас: лару-тăру улшăнсах каймарĕ-ха. МТС çаплах кая юлса пырать, ĕç дисциплини япăх. Тракторсене çуракине тухас умĕн çеç юсаса пĕтерчĕç, комбайнсене те пит хуллен юсаççĕ. Мĕншĕн ĕçсем начар пыраççĕ-ха унта? Райком çапла шутлать: ĕç ăнса пыманни пĕтĕмпех МТС коллективĕнчен,уринчен ытла, директортан, вăл кадрсемпе ĕçлеменнинчен килет. Вăл пур ĕçе те хăй ăссĕн, никампа канашламасăр тума тăрăшать, анчах ĕçĕ тухсах каймасть. Ун пек чух вăл хăй инкекне пытарма хăтланать, асăрхасан—çиленет, чăкăлташма пăхать. Çакă вара коллектива та пăсать, ĕçе те чăрмантарать, анчах Ухваров çаплах улшăнмасть-ха. Çаплах МТС та. Чăнах та, хальччен те чаплă МТС пулман вăл, чылайранпа кая юлса пырать ĕнтĕ. Çавăнпа Ухварова ямалла турĕç те унта. Анчах Ухваров, хальччен Ялхуçалăх министерствинче, пысăк вырăнта ĕçленĕскер, хăйне кăшт «аяларах» антарнăшăн кӳренчĕ пулас. Ĕçе йĕркелесе ярас вырăнне, МТС хуçалăхĕ çине алă сулчĕ. Паллах, ăна урăх çĕре куçарма та, ĕçрен кăларма та пулать, анчах ку эпир çынна тĕрĕс çул çине кăларма вăй çитерменнине пĕлтернĕ пулĕччĕ. Япăх коммунистсем пулнă пулăттăмăр апла тусан. Эпир ăна икĕ хутчен бюро ларуне чĕнтертĕмĕр, ятларăмăр, анчах ку нимле пулăшу та параймарĕ. Эппин, урăхла тумалла пулнă. Çав «урăхлине» тума эпир сана сĕнесшĕн.—Илья Николаевич диван аякки çине таянса, Аркадий çине пăхса илчĕ те каллех тӳрленсе ларчĕ.—Иккĕленме кирлĕ мар, Аркадий Иванович, Ухваров, пĕтĕмĕшпе илсен, хамăр çын, биографине кура калатăп. Ачаллах тăлăха юлнă, пуçтарса çӳренĕ.

Вĕреннĕ, нушапах аслă шкул пĕтернĕ. Анчах çакăн хыççăн вăл питĕ хăвăрт çĕкленсе каять те хăйне пăртак пысăка хума пуçлать; ĕçĕсем яланах ăнса пырсан, пысăк вырăна лексен çапла пулаççĕ хăшпĕрисем. Çапах та Василий Михайловича пăсăлса кайнă çын теме çук. Хальччен вăл ĕçлекен çынсемпе хăйсемпе сахалтарах тĕл пулнă, вĕсене пуринчен ытла, телефонпа, тĕрлĕрен циркулярсемпе вĕрентнĕ, хушнă; кабинетра ытларах ларма хăнăхнă. Çавăнпа та çынсене вăл начартарах пĕлет, ĕç меслечĕсене те пĕлсе çитеймест, вара—йăнăшать. Çапах та хăй йăнăш тунине чун-чĕрипе туйса илсен, калама çук аван директор пулма пултарать вăл. Сăмахпа мар, ĕçпе, тĕслĕхпе ытларах ăнлантармалла ăна. Лайăх çынсем те сахал мар унта, вĕсем те пулăшĕç. Çитсенех Лисковпа—парторганизаци секретарĕпе тĕплĕн калаçăр; вăл яланах хăйĕн бригадинче, хирте пулать. Упнеркин бригадира, Ахонов комбайнера курма тăрăшăр. Лайăх ĕççĕ вĕсем, яланах çĕнĕ япала шухăшласа тупаççĕ. Канаш пама та пултараççĕ—итле. Парти массăпа çыхăнса тăнипе, ăна ертсе пыма пĕлнипе вăйлă. Хăвна та нумай тăрăшма тивет. Халĕ эпĕ вĕрентнĕ пек ялан вĕрентсе калани кăна çителĕксĕр,—секретарь çунса пĕтнĕ пирусне пепельница тĕпне пусса сӳнтерчĕ те Аркадие куçĕнчен пăхса йăл кулса илчĕ,—лайăх ĕçлеме те пĕлмелле пулать. Яланах асра тыт: аван тĕслĕх—чи лайăх агитаци.

Илья Николаевич шăпланчĕ те тӳрленсе ларчĕ.

— Ывăнтартăм пулмалла сана, нумай калаçатăп,—терĕ вăл.—Унти лару-тăрупа паллаштарас терĕм. Чăрмантармĕ. Пулăшу кирлĕ пулсан—ыйт, вăтанса ан тăр. Çак кунсенче хам та çитсе курма шутлатăп-ха. Тен, ыранах пырăп. Çитес бюрора сирĕн МТС-ра комбайнсене юсасси мĕнле пыни çинчен калаçса илесшĕн-ха; вăрах юсаççĕ;—хатĕрленĕр, ыйтма пултараççĕ.

Кун хыççăн Илья Николаевич тĕрлĕрен ыйтусем пачĕ. Тăванĕсем, тусĕсем пур-и, ăçта вĕсем? Пуринпе те интересленчĕ, темиçе канаш пачĕ. Кайран вара каллех пирус тивертсе ячĕç.

— Халь ăçталла эс, тӳрех Юманкассине-и?—ыйтрĕ вăл.

— Çулĕ пĕрре ĕнтĕ ман, Илья Николаевич, Юманкассине.

— Вăт, ку аван, пĕрле кайăпăр. Ман Чурапая çитмелле-ха.

Шофер выранне Федотов хӑй ларчӗ. Малтанах ку Аркадие шиклентерчӗ те. Епле тытса пырӗ-ха вӑл рульне хӑрах алӑпа? Анчах ҫӑмӑл машина, ниҫта чаранса тӑмасӑр, ялтан чупса тухса тикӗс ҫул тӑрӑх малалла ыткӑнма тытӑнсан, Аркадин тӗлӗнмелли ҫеҫ юлчӗ. Пултаруллӑ ҫав райком секретарӗ! «Аван тӗслӗх—чи лайӑх агитаци», терӗ ав паҫӑр. Ӑҫан ун пек пуласси ан килтӗр-ха акӑ?

— Юрататӑп ҫапла руль умӗнче ларма,—терӗ Илья Николаевич, пӑртак кайсан.—Самолет ҫинчи пекех туйӑнса каять.—Вара кулкаласа хушса хучӗ:—Эпӗ летчик пулнӑ вӗт вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче; паҫӑр эпӗ калаймарӑм та сана.

Ҫакна илтсен, Аркадий савӑнса кайрӗ. Вӑл хӑй те летчик пулнӑ-ҫке-ха урине ҫухатиччен! Унӑн райком секретарӗнчен хӑш армире, мӗнле самолет ҫинче ҫапӑҫни ҫинчен ыйтса пӗлесси килчӗ—тен, тӗл те пулнӑ-и ӑҫта та пулсан? Унӑнни пек пур паллиллӗ летчика таҫта курнӑччӗ пулас вӑл, чӑнах та курнӑччӗ,—анчах халлӗхе ун пирки сӑмах тапратмарӗ. Ӑҫайран, урӑх чухне.

Умри айлӑма Чурапай тухса ларчӗ.

4

Юманкасси Чурапайран тӑвата ҫухрӑмра ларать. Илья Николаевич ҫӗнӗ замполита унта машинӑпах леҫсе хӑварасшӑнччӗ, анчах Аркадий хӑй ҫуран каясшӑн пулчӗ.

Сывпуллашрӗҫ те уйрӑлчӗҫ.

Аван ҫуркунне хирте! Пуҫ ҫийӗнчех тӑри сассисем илтӗнеҫҫӗ; тӳпе юрланӑ пекех туйӑнать. Чуна килентерсе хӗвел хӗртет. Ырӑ! Халь ӗнтӗ Илья Николаевич МТС-ри лару-тӑрупа «хӑратни» те манӑҫа тухрӗ. Хӑвӑртрах ӗҫлеме ҫеҫ тытӑнасчӗ! Хире тухсан, таврара тракторсем кӗрленине илтсен, ку кӑмӑл пушшех ӳссе кайрӗ.

Малта, сӑрт ҫинче, ӑрша вылять; ҫул ҫав сӑрт тӳпинче пӗтнӗ пек, унӑн вӗҫӗ шыва тӑрӑннӑ пек туйӑнать. Ҫывхарса пынӑ май, малти чӗтресе тӑракан пӗркенчӗк майӗпен сирӗлчӗ те, сӑрт хыҫӗнчен Юманкасси юманӗсемпе йӑмрисем кармашса тухрӗҫ. Вӗсем пысӑкланнӑҫемӗн пысӑкланса пычӗҫ. Часах вара ял та курӑнма пуҫларӗ.

Мӗн тери илемлӗ вӗсем, паянхи чӑваш ялӗсем, паянхи чӑваш ҫӗршывӗ! Ахальтен мар иккен Ямутов яланах Юманкассине аса илетчӗ, «алӑсӑр, урасӑр юлсан та, ун-

тах таврӑнасчӗ», тетчӗ. Мӗнле саваннӑ пулӗччӗ-ши вӑл халӗ, ҫак сӑрт ҫине килсе тӑрас пулсан! Анчах вӑл таврӑнаймарӗ. Аркадин ӑна тирпейлесе пытарма та май килмерӗ... Ӑҫта-ши халӗ тата унӑн арӑмӗ, хура ҫивӗтӗсене хулпуҫҫи урлӑ уртса янӑ Елюк? Самолет айӗнче задание кайма сигнал кӗтсе ларнӑ вӑхӑтсенче унӑн сӑнӳкерчӗкне Ямутов яланах кӑлара-кӑлара пӑхатчӗ...

Хӑвӑрт утнипе пулас, Аркадий Иванович тарласа кайрӗ, хыпӑннӑ пек пулчӗ. Чарӑнса тӑрса, саланнӑ шинельне майласа тытрӗ ҫеҫ, хыҫалта урапа шӑлтӑртатни илтӗнчӗ. Аркадий ҫаврӑнса пӑхрӗ те хӑй патнелле пӗр хӗрарӑмпа хытканрах, пӗчӗкрех арҫын ларса килнине курчӗ. Хӗрарӑмӗ, Ямутов арӑмӗ евӗрлӗскер, тилхепе тытнӑ, арҫынни, мазутпа вараланнӑ комбинезонӗпе сӗртӗнсе хӗрарӑма вараласран хӑранӑ пек, ун хыҫӗнче ларса пырать.

Аркадий Иванович тӗлне ҫитсен, хӗрарӑмӗ лашине чарчӗ.

— Ларӑр, юлташ,—терӗ вӑл, ӑна чӗнсе.

— Чӑнах та, атьӑр,—чӗнчӗ арҫынни те ун хыҫҫӑнах.

— Инҫе мар ӗнтӗ, ҫуран та ҫитӗп,—терӗ Аркадий, аллинчи пӗчӗк чемоданне ҫӗре лартса. Анчах лешсем ҫине тӑрсах чӗнчӗҫ те, килӗшрӗ; шинелӗпе чемоданне урапа пуҫне хучӗ, арҫын ҫумне сиксе ларчӗ.

— Ну-у, янавар, — тилхепине турткаласа илчӗ хӗрарӑм.

Лаша юрта пуҫларӗ.

Те ӑна «пысӑк» ҫын вырӑнне хумарӗ, те хӑй ҫапла шӳт тума юратаканскер пулчӗ, арҫынни Аркадий Ивановичпа тахҫан палланнӑ ҫын пекех калаҫма пуҫларӗ.

— Эпӗ ӑна аран-аран хӑваласа ҫитрӗм, лартасшӑн мар, мур илесшӗ, сире ав, лашине чарсах лартать,—терӗ вӑл, хӗрарӑм еннелле кӑтартса.—Мӗне те пулин пӗлтеретех ӗнтӗ ку.

Пурте кулса илчӗҫ. Хӗрарӑм хӗрелсе кайрӗ. Ку ӑна пушшех те чиперлетрӗ.

— Ӑҫталла эсир?—ыйтрӗ Аркадий арҫынтан; тумӗпе вӑл ӑна тракторист пулнӑ пек туйӑнчӗ.

— Директор чӗнтерет, МТС-а.

— Трактор ҫӗмӗрӗлмерӗ пуль вӗт?

— Ҫу-ук, ӗҫ вӑхӑтӗнче ҫӗмӗрӗлсе курман вӗсем пирӗн. Мӗнле те пулин урӑх ӗҫ пулӗ-ха. А эсир хӑвӑр ӑҫта каятӑр ҫак? МТС-а мар пулӗ вӗт?

— Ҫавӑнта ҫав.

— Командировкӑна пуль? Шупашкартан-и?

— Шупашкарне—Шупашкартан килетӗп те, анчах командировкӑна мар, яланлӑхах.

Арҫынпа хӗрарӑм Аркадий Иванович ҫине тӗлӗнерех пӑхса илчӗҫ.

«Чӑнах-и?»—терӗҫ вӗсен куҫӗсем.

— Ӗҫлеме килетӗп.

— Замполита мар пулӗ вӗт?—савӑннӑ пек пулчӗ арҫынни.

— Замполит пулма хушрӗҫ-ха.

— Вӑт, аван ку. Вӑхӑтлӑ килтӗр.—Пӗчӗк те вӑрт-варт арҫын Аркадий Ивановича алӑ пачӗ:—Паллашар-ха эппин. Эпӗ Лисков пулатӑп, арӑм хӑш чух, хисеплесе, Михаил Петрович тесе те чӗнкелет,—терӗ вӑл.—Бригадирта ӗҫлетӗп. Нумаях пулмасть парторганизаци секретарьне суйларӗҫ.

Аркадий Иванович ун аллине тытса чӑмӑртарӗ, ятне пӗлтерчӗ. Лисков килӗшрӗ ӑна: ун пек шӳт тума юратакан ҫынсене кӑмӑллать вӑл. МТС-ра ӗҫсем мӗнле пыни ҫинчен ыйтса пӗлчӗ, анчах тӗплӗнех, нумаях калаҫаймарӗҫ. Ют ҫын умӗнче аван мар тесе, хӑшпӗр кирлӗ япаласем ҫинченех ыйтма хӑймарӗ вӑл. Ҫитменнине часах яла та пырса кӗчӗҫ.

Ялӗ чӑнах та илемлӗ вара. Икӗ вӑрӑм урам Ӑксӑм тӑрӑх таҫта ҫитиех тӑсӑлса выртаҫҫӗ. Чурапай ҫулӗ кӗрекен урам, урлӑ выртаканнисене касса, Ӑксӑм хӗррине, МТС патнелле анать; МТС-ӗ шывӑн леш енче. Унӑн икӗ енне те юмансем, йӑмрасем, тирексем лартса тухнӑ. Сывлӑшра вӗсен ырӑ шӑрши ейӳленсе тӑрать.

Лавҫӑ—Аркадий унӑн ятне те пӗлеймерӗ—пӗр пысӑках мар шатрун патнелле пӑрчӗ те лашине чарчӗ.

— Халь ӗнтӗ ҫуран та инҫе мар, анса утах,—терӗ вӑл Лискова, кулкаласа.—Аркадий Иванович, сире хамӑр пата илсе кӗретӗп, унсӑрӑн ниҫта та ямастӑп.

Аркадий Иванович кӗрсе чӑрмантарасшӑн марччӗ. Каласа та пӑхрӗ вӑл ун пирки, анчах хӗрарӑм ӳкӗте кӗресшӗн пулмарӗ, хӑйӗнни ҫинех тӑчӗ.

— Ҫук, ҫук, апат лартмасӑр ямастпӑрах ӗнтӗ сире,—терӗ вӑл.

Кӗрес килмесен те, кӗчех вара Аркадий. Епле кӳрентерӗн-ха ун пек ҫынна? Лисков та хӗрарӑм кӑмӑлне та-

тасшăн пулмарĕ, ун хутне кĕчĕ, Аркадий Ивановича кĕрсе тухма, апатланма сĕнчĕ.

Вĕсене хирĕç утмăл çулалла çитнĕ карчăк тухрĕ.

— Пăянам, пирĕн пата хăна килчĕ. Илсе кĕр-ха эсĕ ăна,—терĕ хĕрарăм, лашине çавăрса.—Эпĕ халех тăварса килетĕп.

Аркадий Ивановича вара ирĕксĕрех килĕшме тиврĕ. Вăл Лисковпа сывпуллашрĕ те, хăйне ун умĕнче айăпа кĕнĕ пек туйса, кинĕ: «Хăна килчĕ» тенĕрен хыпса ӳкнĕ карчăк хыççăн пӳрте кĕчĕ. Анчах алăк урати урлă каçсанах малти стена çинчен, ылттăнланă рама ăшĕнчен кулса пăхакан Ямутов Павăл сăнне курчĕ те сасартăк чарăнса тăчĕ.

«Акă кам пулчĕ иккен «лавçă»! вĕçсе иртрĕ шухăш ун пуçĕнче.

Унăн çавăнтах урама чупса тухса Елюка чĕнсе илес те вĕсене, Павăл амăшĕпе иккĕшне, хăйĕн вăрçăри тусĕ çинчен, унпа пĕрле çапăçусене мĕнле çӳрени çинчен, юлашки хăрушă вĕçев çинчен каласа парасси килчĕ, анчах ку калав вырăнсăр пуласшне тавçăрса илчĕ те нимех те шарламарĕ.

«Ун çинчен аса илтерсе ватă çын чĕрине ыраттарас мар,—шутларĕ вăл.—Ахаль те нумай хуйхăрнă пулĕ ун пирки. Тен, çӳçĕ те Павăл вилнĕ хыççăн шуралнă-и?»

Анчах çавăн пек пысăк суран аннесен чĕринче тӳрленместь çав, ĕмĕрне те тӳрленмест.

— Ывăл ку ман, Павăл,—терĕ карчăк, Аркадий хăй тусĕн сăнӳкерчĕкĕ çине пăхнине асăрхаса.—Летчик пулнă. Истребитель теççĕ-и-ха. Геройла вилчĕ, тесе çыру ячĕç.

«Пĕлетĕп, анне, питĕ аван пĕлетĕп эпĕ ăна»,—терĕ ăшĕнче Аркадий. Анчах хăй шухăшне, тем пек калас тесен те, Павăл амăшне пĕлтермерĕ. Чăтрĕ. Тепĕр чух, хăçан та пулин, сăмах май каласа парĕ. Телее пула, Униç аппа та—Павăл амăшĕ хăйне çапла чĕнме хушрĕ—калаçăва урăх енне пăрчĕ. Сĕтел çине апат лартнă май, вăл кинĕ — Елюк çинчен калаçма, ăна мухтама пуçларĕ.

— Ырă курса кăна пурăнмаллаччĕ те вĕт иккĕшĕ, таврăнаймарĕ ав. Çапах та кĕтет кин, шел çав ĕнтĕ ăна та, çамрăклах пĕччен... Ăна-кăна шутламасть пуль çав, хăтана çӳрекелеççĕ тет те...

Апатланнă хыççăн Аркадий Иванович МТС-а кайма хатĕрленчĕ. Анчах Павăл амăшĕ тăруках кăларса ямарĕ

ăна; кĕлете ертсе тухрĕ те, вырăн сарса парса, выртса канма хушрĕ. Çывăрма шутламарĕ тата МТС-а васкарĕ пулин те, Талыкин килĕшрĕ: тĕсĕ-пичĕпе те, калаçăвĕ-хăтланчăшĕпе те Униç аппа ăна хăйĕн тăван амăшне аса илтерчĕ. Вăл хушни вара халĕ амăшĕ хушни пекех туйăнчĕ.

...Вăхăт вăрахах иртрĕ çав ĕнтĕ унтанпа. Анчах ун чух пулнă япаласем халĕ те асрах, асрах тăраççĕ.

Ача чухне Аркадий пусма çине тухса хĕвеланăç енчи хăмаç пĕлĕтсем тĕксĕмленсе килнине, майĕпен çăлтăрсем çутăлнине пăхса ларма юрататчĕ. Илемлĕ çав ялта каçхине! Шăп. Хутран-ситрен çеç хиртен кая юлса таврăнакан урапасем лăчăртатни, лашасем юлхавлăн тулхăрни, хĕрарăмсем килĕсем çинчен мансах «лашалла» вылякан ачи-пăчисене каçхи апата йыхăрни, вăрăмтунасемпе ўпресем ўлени тата амăшĕ картишĕнче чăр-чăр-чăрр! тутарса, ĕне суни илтĕнет. Лăпкă. Пўрт умĕнчи тирекпе ăвăс çулçисем çеç шĕпĕлтете-шĕпĕлтете илеççĕ. Тата анкарти хыçĕнченех пуçланса каякан сĕм вăрман ассăн сывлакалани сисĕнет. Тĕттĕм. Таврара шĕвĕр тăраллă чиркў те арăш-пирĕш çўçлĕ йываçсем, йĕпеннĕ чăхсем пек тĕршĕнсе ларнă пўртсен хура мĕлкисем те вĕсенче вĕлтĕртетекен хăй çутисем çеç курăнаççĕ. Çапах та тĕнче темле, çав тери илемлĕ пек туйăнать. Савăнтарать те вăл, кăштах салхулантарать те, кăмăла та çĕклет вăл, пăртак кичемлентерет те.

— Пысăк пиçса, ăçта эсĕ?—илтĕнет сасартăк картишĕнче лăпкă йăваш сасă.—Кил.

Амăшĕ чĕнет. Вăл ĕнине суса пĕтернĕ те пўрте кĕрет. Ун тавра, урипе перкеленсе, пĕчĕк пиçса — кушак явкаланать. Амăшĕ ăна та, Аркадие те сĕт ярса парать, ĕçсе ярсан, Униç аппа пекех, çывăрма васкатать...

Çакна аса илчĕ халĕ Аркадий. Аса илчĕ те — выртасси те, çывăрасси те килмерĕ. Тăчĕ. Тумланчĕ. Пўрте кĕчĕ. Хăй сăмахне кўнменшĕн кăмăлсăрланнă пек пулнă Униç аппана лăплантарчĕ те урама тухрĕ, анаталла, МТС еннелле утрĕ.

Пралук хĕрринчи çăл валакĕ умне пухăннă хĕрарăмсем, вăл илтесрен шикленнĕ пек, тем çинчен вăрттăн пăшăлтатса юлчĕç.

— Çакăн пек йĕкĕтсем хăнана çўренĕ чух Елюк Алексеее каймастех ĕнтĕ,—терĕ вĕсенчен пĕри хытах.

Аркадий хĕрарăмсем мĕн пирки пăшăлтатнине тинех

чухласа илчĕ. Темле, аван мар пулса кайрĕ ăна. Анчах вăл вĕсен сăмахне илтнине те, çиленнине те палăртмарĕ. Хăй ăшĕнче: «Вăт, чакаксем»,—тесе вăрçса илчĕ те, пайтах утнипе ури кăкĕ ыратма пуçланине пăхмасăрах, хăвăртрах утса кайрĕ.

## 5

«Неушлĕ ăнланмастăр эсир?!—çилĕллĕн, сасăпах каларĕ Ухваров, хăй çырнă заявленин пĕр кĕтессинчи «хăй вырăнĕнчех ĕçлетĕр» сăмахсене курсан. Ним тума аптранă енне, вăл заявленине сĕтел çине пăрахрĕ те ун çине пресс-папье хучĕ.—Анчах, мĕн ăнланмалла-ха вĕсен?»—çавăнтах урăх шухăш пырса кĕчĕ ун пуçне.

Министерство ăна юлса пыракан МТС ĕçне йĕркелеме янă. Халĕ унтан МТС ĕçне лайăхлатасса кĕтеççĕ. Кĕтеççĕ те, хушаççĕ те. Анчах... ĕçсем ĕлĕкхинчен нимпе те уйрăлса тăмаççĕ-ха, вăл çаплах кайра пыраканнисен шутĕнчен тухмасть...

Чăн та, малтан, Юманкассине килнĕ чух, Ухваров кăшт урăхларах шутланăччĕ. Мĕнех вара вăл, МТС ĕçĕ? Ун пек мар пысăк ĕçсенче пулкаланă хальччен Ухваров. Çавăнпа та ĕç енĕпе хăйне самаях аяла антарнăшăн вăл хытă тарăхрĕ, «кадрсемпе усă курма пĕлместĕр эсир, аслăрах вырăнта эпĕ усăллăрах пулнă пулăттăм»,—тесе шухăшларĕ. Ку шухăша, паллах, министерствăра куçкĕретех каламарĕ вăл. Пачах урăхла, МТС ĕçне йĕркелесе яма пулатех, тесе шантарчĕ. Райкомра та çаплах каларĕ... Анчах сăмах — сăмахпах юлчĕ, ĕçсем пĕтĕмпех урăх май çаврăнса кайрĕç: Ухварова райком бюровне чĕнтерсе ятлаççĕ, урăх ĕçе куçарма ыйтса çырнă заявление каялла тавăрса параççĕ. Мăшкăл мар-и ĕнтĕ ку?

«Капла ĕç тухмасть, Министрсен Советне çырмалла пулать. Урăх ĕçре эпĕ ытларах усă кӳме пултаратăп»,—терĕ вăл, хайхи заявленине тепĕр хут алла илсе.

Мĕншĕн апла пулса тухрĕ-ха ку? Мĕншĕн Ухваров МТС ĕçне, хăй каланă пек, йĕркелесе яраймарĕ-ха? Сăлтавĕ ăçта? Е майсем, пулăшакансем пулмарĕç-и?

Çапла çав, ĕçе лайăхлатма майсем те, пулăшакансем те сахалрах пулчĕç. Ĕçлеме тытăннă-тытăнманах ура хучĕç ăна. Никам та мар, парторганизаци секретарĕ ура хучĕ! Йăнăш турĕ çав Ухваров ун чухне ăна хулана ярса!

Вăл сĕтел хушшинчен тухрĕ те, пăртак кабинет тăрăх уткаласа çӳренĕ хыççăн, чӳрече умне пырса тăчĕ.

«Аха, килет»,—шухăшларĕ вăл, контора еннелле васкаса утакан парторганизаци секретарне курсан. Вара, ăна кĕтсе илме хатĕрленсе, сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ.

Килнĕ çынсемпе кирек хăçан та сĕтел хушшине ларса калаçать вăл, урăхла юрамасть те. Килнĕ çын, тракторист-и вăл, рабочи-и е служащи-и, директор хушмасăр лармалла та мар. Этикăна пĕлес пулать!

Анчах парторганизаци секретарĕ хальхинче унăн йĕркисене пăхса тăмарĕ. Кабинета кĕрсенех, вăл директора сывлăх сунчĕ те диван çине пырса ларчĕ.

— Итлетĕп, Василий Михайлович,—терĕ вăл.

Аякран, чеен пуçласа ярасшăнччĕ Ухваров хăйĕн сăмахне, анчах ун пек тума пулать-и вара кунпа: витĕр курать вăл, чеескер.

— Витресене ăçта хутăр эсир, Лисков?—ыйтрĕ директор тӳрех.

Капла ыйтсан аванрах пулмалла: айăплă çын тăруках ним калама аптраса ӳкет. Ун пек чух этем тунма та хăяймасть, перет те ярать тӳррипех.

— Пĕрне Шихранов, тепĕрне Яндулова патне леçтертĕм,—терĕ Лисков ним пулман пек; хăй кăшт кулса илчĕ. Мăшкăллать!

«Леçтертĕм». Çынсемшĕн макăрма пăрахман иккен-ха халĕ те. Çавна пула МТС запчаçсемсĕр юлчĕ те кăçал. Пĕтĕмпех пĕтерчĕ çав ун чух Лисков. Запчаçсем илме кайсан вăл аллă листа шăвăç, вунвиçĕ карбюратор, çичĕ магнето илсе килес вырăнне пĕр карбюратор, çичĕ листа шăвăç тата тĕрлĕрен ăпăр-тапăр çеç илсе килчĕ. «Пире çитет, ыттисене парăр», тесе хăварнă тет. Епле ырă çынмĕн: «Мейĕр акă, илĕр, эпир кивvисене те юсăпăр».

Çаксене аса илсен Ухваров пушшех çиленсе кайрĕ. Анчах мĕн каласа ятлас-ха ăна халĕ? Витрисене те хăйне илмен вĕт. Хăйне илнĕ пулсан, ятлама авантарах пулĕччĕ хуть. Чее. Çапах та Ухварова ултаьлаймĕ-ха, куркаланă ун пеккисене вăл хальччен.

— Витресене каялла кӳртер, Лисков. Аван мар ыйтмасăр илме. Эсĕ, парторганизаци секретарĕ, çапла тăватăн та, ыттисем мĕн хăтланĕç?—Хытăрах каласшăнччĕ те Ухваров, тухмарĕ. Вăрçма та хăймалла мар çав ăна. Кĕске вăхăтрах, бригадир туса хунăранпа, чи кайра пыракан бригадăна мала кăларчĕ вăл. Трактористсем хуш-

шинче — хисеплӗ ҫын. Иван Бунеевпа хӑйпе ӑмӑртса ӗҫлет. Тен, МТС-а та вӑлах чапа кӑларӗ-и?

Лисков васкамарӗ, кӗсйинчен пирус кӑларчӗ те, ирӗк ыйтса, тивертсе ячӗ.

— Айӑпа пытармастӑп, Василий Михайлович,—терӗ вӑл.—Тахҫанах каламаллаччӗ сире ун ҫинчен. Анчах эсир пиртен аякра тӑратӑр, каланине «илтместӗр».—Лисков Ухварова куҫранах пӑхса илчӗ.—Ҫук, урӑхла ан ӑнланӑр эсир, сирӗн авторитетӑра чакарасшӑн мар эпӗ, пысӑк правусене те хапсӑнмастӑп, Козлов валли те, эсир каланӑ пек, «шӑтӑк» чавмастӑп: ун пек вак-тӗвекленесси пулмасть манран. Анчах МТС-а, ҫавӑнпа пӗрлех, Тӑван ҫӗршыва сиен кӳме хӑтланакансемпе килӗшме пултараймастӑп. Кӗрешетӗп, сире те кӗрешме сӗнетӗп вӗсемпе.

— Камсемпе вара?—тӗлӗнчӗ Ухваров.

— Запчасть, расходламалли материал, тетӗр, вӗсене пӗтӗмӗшпех илсе килменшӗн хирӗҫме пуҫларӑр. Анчах, астӑватӑр вӗт-ха эсир, эпӗ заявка панӑ чухнех каларӑм кун ҫинчен: ҫитет пире мӗн илсе килни те. Дефектсен ведомоҫне лекнӗ кашни деталях улӑштармалла мар, юсасан та юраҫҫӗ хӑшпӗрисем. Козлов «докладнойӗсене» ӗнениччен, ҫынсемпе калаҫса пӑхасчӗ сирӗн, хирте, мастерскойра ытларах пуласчӗ.

Ну, ку ытлашширех те вара: Ухваров халлӗхе ухмах мар-ха, мӗн тумаллине хӑй те аван чухлать.

Унӑн ҫилли тӑвӑлса килчӗ, анчах ним те чӗнеймерӗ Лискова хирӗҫ: питӗ лӑпкӑ, анчах чӗрене тивмелле калать вӑл; хирӗҫлеме те йывӑр.

— Витресене илер-ха акӑ. Интересленсе пӑхрӑр-и эсир, ыйтрӑр-и Козловран: кам валли тунӑ вӑл вӗсене? Мӗнле шӑвӑҫран?—Лисков, ответ кӗтсе, шӑпланчӗ.

«Докладнойсем» ҫинчен тӗрӗсаларӗ вӑл. Пӗлет иккен. Анчах витресене кам валли, мӗнле шӑвӑҫран тунине Козловран ыйтман Ухваров. Комбайнсемпе молотилкӑсене юсама тесе илсе килнӗ шӑвӑҫран туман-ши? Пӗлмелле пулать.

Лисков ун куҫӗнчен пӑхать, ответ кӗтет. Чее, мур. Мӗн калас? Юрать, такам ӑна Лискова ответ парасран хӑтарчӗ: алӑка шаккарӗҫ. Халиччен ҫынсем хӑй патне кӗнине юратсах кайман Ухваров, кӑна илтсен, савӑнса ӳкрӗ.

— Кӗрӗр!

Алăк ячиех уçăлчĕ те кабинета тĕксĕм кăвак шăлаварпа ешĕл китель тата сенкер кăшкарлă салтак картузĕ тăхăннă, хытканрах та хура, ытла илемлĕ теме çук, анчах кăмăллă сăн-питлĕ, вăтăртан иртме пуçланă çын кĕрсе тăчĕ.

— Здравствуйте,—терĕ вăл, Ухваровпа Лисков çине пăхса илсе.—Эпĕ — Талыкин, Аркадий Иванович. Обком мана МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ пулса ĕçлеме ячĕ.—Вăл директорпа Лискова алă тытрĕ, кĕсйинчен кирлĕ документсене кăларса Ухварова тыттарчĕ. Хăй диван çине, Лисков çумне пырса ларчĕ.— Акă, каллех тĕл пултăмăр,—терĕ вăл ăна, кулкаласа.

Кусем пĕр-пĕрне пĕлеççĕ те иккен ĕнтĕ. Ку Ухварова шиклентерсе ячĕ: витресем çинчен калаçса ан кайтăр тата, намăс курмалла пулĕ. Козловĕ таврăнсанах тĕпчесе пĕлмелле пулать. Юлашки вăхăтра Ухварова хăйне те килĕшмест-ха ун хăтланăвĕ, иртĕнкелеме пуçларĕ.

— Аван, аван, пĕрле ĕçлĕпĕр эппин,—терĕ Ухваров, Талыкинăн документсене каялла парса.—Хваттер пур пирĕн. Лайăх хваттер.

— Хваттерĕ кирек мĕнли те юрĕ вăл, çемье çук ман. Ĕлкĕреймерĕм-ха,—замполит кулса илчĕ. Кулли Ухварова килĕшрĕ — тӳрĕ чĕреллĕ çынсем çапла кулаççĕ. Лисковĕ халлĕхе кайма та пултарать, урăх чухне те калаçма пулĕ-ха ун çинчен. Козлов килсен.

— Лисков, эсĕ халлĕхе кайма пултаратăн. Эпĕ хамах пĕлĕп вăл ĕçе.

— Пĕлĕр. Çитес бюро ларăвĕнче ун пирки калаçмаллах пулать — çитет ĕнтĕ пустуй калаçăва тăсни.

Акă мĕнле лартса хăварчĕ вăл директора. Пĕтĕмпех урăх енне çавăрчĕ вĕт калаçăва. Кайтăрччĕ хуть. Хиртен чĕнтернĕшĕн каçару ыйттарĕ тата. Унтан кĕтсех тăр— пултарĕ вăл.

— Юрĕ, юрĕ, Лисков. Мастерскоя кĕрсе пăх-ха эсĕ, ремонтниксем хаçат кăларасшăнччĕ.

— Мĕн пирки çак эсир?—ыйтрĕ Талыкин, малтанхи пекех, пĕрре Ухваров, тепре Лисков çине пăхса.

«Эсĕ çитменччĕ тата».

Ухваров Талыкин çине хăй çиленнине пытармасăрах пăхса илчĕ. Хăйĕн ыйтăвĕ директора килĕшменнине чухларĕ пулмалла замполит, Лисков çине: «Юрĕ, кайран калаçăпăр»,—тенĕ пек пăхса илчĕ.

Лисков ура çине тăчĕ.

— Каярахпа кĕрĕп эппин,—терĕ вăл, Аркадий çине пăхса. Вара тухса кайрĕ.

* * *

Директор кабинетĕнчен тухсан, Лисков коридорта чарăнса тăчĕ.

«Çапах та мĕн тумаллине тăваймарăм-ха. Хăй йăнăшнине те, Козлов сиен тунине те ăнлантарса парасах пулать ăна. Юрамасть унсăрăн. Аркадий Ивановичпа канашласа пăхмалла пулать»,—шухăшларĕ вăл.

Кантуртан тухрĕ те мастерской еннелле утрĕ.

«Аван çын пулчĕ иккен-ха замполит. Лăпкă, ăслă калаçать. Ăнланĕ вăл. Мастерскойран таврăннă чух кĕретĕпех».

Анчах Аркадий Ивановича Лисков вăл каç тупаймарĕ. Бухгалтеринчи хĕрсем ăна: «Çĕнĕ замполит арăмне илме кайнă», терĕç.

Каçхине курнăçас пирки калаçса татăлман пулин те, ку хыпар Лискова кӳрентерчĕ.

«Пĕрер эрнелĕхе хулара та пурăннă пулĕччĕ арăмĕ, халĕ, çак хĕрӳ вăхăта çухатса çӳриччен,—шухăшларĕ вăл.—Таврăнсан калатăпах».

## 6

Лисков тухса кайсан, Ухваров çĕнĕ замполита МТСра ĕçсем мĕнле пыни çинчен, çынсем çинчен,—питĕ йывăр кунти халăхпа ĕçлеме!—каласа парасшăнччĕ, анчах калас тенĕ сăмахне пуçлаймарĕ те: кабинета пĕр кĕтмен çĕртен «Хум» колхоз председателĕ Садуркин, вăрăм та хытканрах хура çын вăркăнса кĕчĕ.

— Здравствуйте,—терĕ вăл; чарăнса тăмасăр малалла иртрĕ те малтан Ухварова, унтан Аркадие алă пачĕ. Унтан каллех директор умне пырса тăчĕ.—Санпа калаçма килтĕм, Василий Михайлович. Хăвăрах пĕлетĕр, участковăй механик чирленĕ, больницăна леçрĕç, эсир яма пулнă старши механик çаплах çук-ха. Мĕн тумалла ĕнтĕ пирĕн? Капла ĕç тухмасть, эпĕ райкома каятăп.

— Вĕçтермеллеччĕ, ма кунта кĕтĕн-ха апла?

Садуркин кĕнĕ-кĕменех çапла кăшкăрса тăкни Ухварова хытах çилентерчĕ, вăл ура çинех сиксе тăчĕ.

Ялан çапла райкомпа хăратма хăтланаççĕ вĕсем, председательсем. Хăйсем ним ĕçлемеççĕ те, айăпĕсене МТС çине йăвантараççĕ. «Акă курăр, МТС айăплă кунта». Пĕлет Ухваров сире!

Садуркин шӳт туса калаçмасть пулмалла. Вăл, чăнах та, хытах çиленнĕ. Пысăк хура куçĕсем сиввĕн, шăтарас пек пăхаççĕ.

— Ķайăп та,—терĕ вăл, тухса кайма хатĕрленсе.— Садуркин сулхăна кĕрсен киленсе кайрĕ тесе ан шухăшлăр, эпĕ сирĕн пек кабинетра ларма хăнăхман. Сывă пулăр!

— Çул такăр пултăр!

Директор сăмахĕсем Аркадие пĕртте килĕшмерĕç. Юрамасть-çке-ха çынсемпе апла калаçма.

Лешĕ каятчĕ пулĕ ĕнтĕ, анчах Аркадий ăна чарчĕ.

— Тăхта-ха, Садуркин юлташ,—терĕ вăл.—Райкома ан васка-ха эсĕ, малтан пире каласа пар йĕркипе. Лар та кала: мĕн пулчĕ?

— Трактор ĕçлемесĕр ларать, акă мĕн пулчĕ,—терĕ Садуркин, каялла çаврăнса. Замполитăн лăпкă сасси унăн çиллине пăртак сĕвĕрĕлтерчĕ пулас. Анчах лармарĕ вăл — ларсах калаçмалла тата!—кабинет тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа çӳреме пуçларĕ.

— Мĕншĕн ĕçлемест? Упнеркин ăçта?—лăпланчĕ Ухваров та.

— Паян иккĕмĕш кун ӳсĕр выртать.

Ухваров замполит çине пăхса илчĕ. Акă кур та савăн ĕнтĕ пирĕн кадрсемпе: бригадир иккĕмĕш кун ӳсĕр выртать.

— Итле-ха, Садуркин,—терĕ Ухваров, хăй вырăнне ларса.—Трактор ĕçлемесĕр ларма пултараймасть. Халех кай та кала Упнеркина: трактора паян ĕçе ямасан, эпир ăна ыранах бригадине урăх çынна пама хушатпăр. Вара хăйне хăй ӳпкелетĕр. Ķаçхине унта механик пырать.

— Пире халех кирлĕ — май çывхарать. Эпир кĕтсен те, вăхăт кĕтмест сирĕн механика.

— Василий Михайлович, апла пулсан, хам кайса килем мар-и унта?—терĕ Талыкин вырăнĕнчен тăрса.— Моторсене пăртак чухлакалатăп эпĕ.

Ухваров ун çине тĕлĕннĕ пек пăхса илчĕ.

«Мĕн тăвăн-ши ĕнтĕ унта?—шухăшларĕ вăл.—Малтан хамăн кайса килмелле-ха. Ӳкĕтлеме, йăпатма кирлĕ мар

Упнеркина, бригадиртан кăларса çапмалла. Урăх ним те тума çук унпа: пăсăлнă çын...»

— Чăнах та, тахçан килет-ха механик,—терĕ Садуркин та, пăртак çемçелсе.

Замполит, механик ĕçе васкасах çӳременнине пĕлнĕ пекех, кулса илчĕ. Е паçăр, МТС-а килнĕ чух, Лисков каласа панă-ши?

— Қайăр эппин,—терĕ Ухваров, замполитпа килĕшсе.—Ыран ирхине хам та пырса çаврăнăп-ха.

Сывпуллашрĕç те тухрĕç.

Чылайччен кабинет тăрăх уткаласа çӳренĕ хыççăн, Ухваров шлепкине тăхăнчĕ те тĕкĕр умне пырса тăчĕ.

Тĕкĕре курсан, пĕркун Илья Николаевич кабинета: парикмахерски пек,—тенĕччĕ. Вăл юрĕ те-ха, анчах шлепкине вара хывмаллах пулать. Замполит та паçăр ун çине тĕлĕннĕ пекрех пăхрĕ.

Ухваров мастерскойне кайма тăчĕ. Анчах унта Лисков кайнине аса илчĕ те хваттернелле утрĕ.

* * *

Садуркин лашине вĕçертрĕ те урапи çине сиксе ларчĕ. Аркадий Иванович ун çумне, хыçаларах вырнаçрĕ.

— Ну-у, Чуман, кайрăмăр!—тилхепине туртса илчĕ председатель, лашине чуптарма хăтланса.

Анчах Чуман чупма васкамарĕ-ха. Қартишĕнчен тухиччен, вăл утса çеç пычĕ.

Хурарах сухаллă, лутрарах та тăн-тăн мучи картиш шăлма чарăнсах вĕсем çине пăхса юлчĕ.

— Ай-да Василь Михалч,—пăртак аяккалла кайсан, илтрĕ Аркадий унăн сассине,—çитрĕ кăна, хăваласа яма та ĕлкĕрчĕ, пăх та кур эс ăна.

Такама කаларĕ вăл, анчах кам çинчен каланине Аркадий çийĕнчех чухласа илчĕ.

## 7

Қозлов килне аран-аран çитсе ӳкрĕ. Хĕвел ăшшинче эрех ăна самаях пусрĕ. Унăн пуçĕ ытларах çаврăнма, кăмăлĕ пăтранма пуçларĕ. Ал-ура вăйĕсем пĕтсе килчĕç. Яла çитиччен вăл темиçе хут та лара-лара канчĕ.

— Çапла пуличчен ĕçме юрать-и вара,—мăкăртатса кĕтсе илчĕ ăна амăшĕ, пĕрре пăхсах ывăлĕ ӳсĕррине туйса.—Хăвна пăртак чухларах çӳресчĕ, Элекçей. Туй тума шутлатăн вĕт. Қам хĕрĕ килĕ капла пулсан? Елюк, Елюк тетĕн те, вăл та, инке-арăм тесе, сан пек ĕçекен çынна кайма тӳрех сиксе ӳкес çук. Çитменнине тата...

— Мĕн тата?

— Хатĕрленни те сая каять пуль çав,—ассăн сывласа илчĕ амăшĕ.—Паçăр Матĕрне килнĕччĕ те, çав каласа пачĕ-ха. Елюк патне пĕлнĕ çынни килнĕ, тет. Таçта, хулара паллашнă пулнă, тет-и. Авланман та, тет. Районран халĕ çеç килсе çитрĕ, тет. Замполит пулать, теççĕ.

Вăн мĕнле! Лешех, района çити пĕрле килниех пулсан, Елюк ăна юратса пăрахатех ĕнтĕ. Юратмалли çын вăл...

— Ĕçме пăрах, Элекçей,—мăкăртатрĕ малалла амăшĕ.—Ĕçкĕпе пĕтекенсем нумай пулнă; ĕçрен те кăларĕç капла. Директор хăвна ырă тунине пĕлсен, шăпăрт кăна, ырă пулса кăна çӳремелле те вĕт... Хуларан килесшĕнччĕ, кунта лайăх вырăн тупасшăнччĕ — пурне те туса пачĕ Василий Михалчă. Эппин, ăна юрама тăрăш, ытла иртĕнсе ан çӳре, лăпкăрах пул...

Анчах амăшĕн сăмахĕсем унăн хăлхине те кĕмерĕç. Вăл аттисене çĕнĕрен тăхăнчĕ те çарапуçăнах урама тухрĕ.

«Қайса ыйтам-ха эппин,—шухăшларĕ вăл, ялти мĕнпур «çĕнĕ» хыпара пĕлекен Мăнтăр Матĕрнесем патнелле утнă май.—Тен, тĕрĕс те мар пулĕ-ха...»

— Çăвара карса юлтăн, Элекçей,—терĕ ăна Матĕрне, кĕнĕ-кĕменех.—Миçе каларăм сана, хăюллăрах пул, çине тăр, тесе. Акă халĕ... Халĕ те кая юлман-ха та... Ирт, мĕн алăк патĕнче тăратăн тата?

Мăнтăр Матĕрне, пичке евĕр пӳ-сийĕшĕнех çакăн пек ят туяннăскер, пилĕкĕсене тытса, урай варрине тухса тăчĕ.

— Эсĕ йĕркипе каласа пар, нимĕн те ăнланмастăп.— Алексей тĕпелелле иртрĕ те сĕтел çине чавсаланса ларчĕ. Унăн пуçĕ ыратать, тăхлан шăратса янă пек, йывăрланса кайнă. Çитменнине тата ку... Елюк...

— Ăнланасси-мĕнĕ...—Матĕрне, кулкаласа, каллех Алексей умне пырса тăчĕ.—Елюк темле салтак лартса килчĕ хиртен. Шупашкарта, канашлăва кайсан, паллашнă тет-и çав. Тĕрлĕрен калаççĕ, тĕплĕн пĕлейместĕп те. Кил-

чĕç те чарăнчĕç, пĕр-пĕрин çине куç илмесĕр пăхаççĕ, кулкалаççĕ. Кайран вара салтакĕ кĕрсе юлчĕ, Елюкĕ кĕлетсем патне вăрлăх тиеме кайрĕ. Майрасем пек, ыталаса илсе чуптусах хăварчĕ.

— Хм...—Алексей çакна илтсен, ним тăвайман енне, аллипе сĕтеле çапса илчĕ.—Ав кама кĕтнĕ-мĕн вăл. Ну, курăпăр малашне... Пар-ха пĕрер çĕр грамм, пуç ыратать.

Матĕрне лĕхлетсе кулса илчĕ.

— Эпĕ хатĕрлесе хунă-и элле саншăн? Сана ăс вĕрент, хĕр çавăрса пар, çитменнине ĕçтер тата. Капла та ĕнтĕ нимле те тавăрас çук. Витрӳне туса пĕтертĕн-и-ха?

— Ыран, ыран хатĕр пулать. Ун пирки ан пăшăрхан эсĕ. Тултарса пар та хăвăртрах, манăн каяс пулать.

— Ан васка, Елюк çĕрле тин таврăнать килне. Кас пулсан тин кай. Кай та асăрханулларах пул. Пĕлетĕн мĕншĕнне. Лайăххрах калас, йăпат. Унпа калаçма пĕлес пулать. А леш каччине эпĕ калăп... Систерĕп Елюк урăх çынна «юратнине» — сивĕнтĕр.

Алексей Матĕрне патĕнче кас пуличченех ларчĕ. Тĕттĕмленсен, вăл тайкалана-тайкалана урама тухрĕ те Елюксен çурчĕ умĕнчи вăрăм сак çине кайса ларчĕ. Анчах нумай лараймарĕ вăл, пуçĕ ытла йăвăрланнипе, сак çинех йăванса кайрĕ те кăвак çутă киличченех, тин çес хиртен килсе çитнĕ Елюк вăратиччeнех çывăрчĕ...

...Ирхине вара çăл патĕнче Мăнтăр Матĕрне хĕрарăмсене каласа панă сăмахсем хăвăртах ял çине сарăлчĕç:

— Элексей авланать, тет, иккен. Чăнах та Елюка илет, тет. Иртнĕ кас çутăличченех хăйсен умĕнче ларнă тет иккĕш. Çамрăксенне пĕлме çук çав. Елюкĕ килĕшмест, килĕшмест терĕç те, хайхи килĕштерсе те янă: йăли çапла ĕнтĕ, пăртак турткаланас пулать хĕрĕн.

## 8

Вăтам шкултан вĕренсе тухсан, Елюк, Павăл пекех, педагогика институтне кайма шутланăччĕ, анчах амăшĕ сасартăках чирлесе ӳкрĕ те, пĕрер çуллăха тăхтамалла пулчĕ: каяс пулсан, килте кĕçĕн шăллĕ çеç юлатчĕ. Амăшĕ вара, пурнăçĕнче хура-шурра нумай тӳссе ирттернĕскер, тăтăшах: «Йывăрлана пуçларăм, шутласа панă кунсем пĕтсе килеççĕ пулас»,—теме пуçларĕ те хĕл варринчех вилсе кайрĕ. Хуйхă. Пушă çурт. Шăллĕ виççĕмĕш

класра çеç вĕренет. Çавăнпа та вĕренессине вăрахлăха хăварма тиврĕ — Елюк колхозра ĕçлеме пуçларĕ.

Ĕç, ӳркенекен çын пулмасан, кашниех лайăх вăл,— хир ĕçĕ те, педагогсен ĕçĕ те, ытти те. Қаярахпа вара Елюк вĕсене уйăрми пулчĕ, ака-суха тăвассине, çумлассине, утă çулассипе тырă выраccине юратса пăрахрĕ те колхозрах юлма шутларĕ. Қаникула килсен, Павăл та яланах колхозра ĕçлетчĕ. Вĕренсе пĕтерсен те ĕçлеме Юманкассинех килме ĕмĕтленетчĕ...

Қаярахпа Елюка бригадир турĕç. Ĕçĕ нумайланчĕ вара. Ĕçĕпе пĕрлех — хуйхи те, савăнăçĕ те: пур япала та ăнăçлă пулмасть вĕт. Хирсене шыв та чавса кĕртменччĕ, вăрман тăрăхĕсем те лартманччĕ-ха ун чух, тырă тухăçлă пуласси пĕтĕмпе тенĕ пекех çумăртан килетчĕ...

Хĕрĕхмĕш çулта, пединститут пĕтерсе, Павăл яла таврăнчĕ. Шкулта вĕрентме тытăниччен тесе, Елюк бригадинче ĕçлеме пуçларĕ: çумлама та çӳрерĕ вăл, утă та çулчĕ. Питĕ те савăнăçлă, сисĕнкĕсĕр иртрĕ вăхăт. Вăл çул вара, çав каç — çав çумăрлă лĕп каç — ун асне ĕмĕрлĕхех тăрса юлчĕ...

...Қăнтăрла Елюк кунĕпех хирте, хăй бригадин хирĕнчи калчисене курса çӳрерĕ. Вĕсем питĕ аван, кĕççе пекех шăтса тухнăччĕ ĕнтĕ, анчах типĕ, шăрăх çанталăка пула часах пĕкĕрĕлме пуçларĕç. Çурхи çĕртме тăвакан трактор хыçĕнчен те хĕвел çинче ылттăн тĕслĕ курăнакан тусан варкăшса выратчĕ.

Яла Елюк тĕттĕмленме пуçласан, хулана каякан шоссене юсакан хĕрсемпе тин таврăнчĕ. Шкул умĕнче, йăмрасем айĕнче, турниксемпе таканкkасене майлаă çĕрте ĕçлекен Павăлпа та вăрахах тăмарĕ вăл, ыран тумалли ĕçсене палăртнă вăхăта ĕлкĕрес тесе, тӳрех колхоз правленине кайрĕ.

Ытти бригадирсемпе правлени членĕсем ăна кĕтсе ларатчĕç. Вăл пырсанах вара наряд кĕнеки çине ĕç çырма пуçларĕç.

— Ыран çумăр çутармалла,—терĕ шӳте юратакан Лисков, пур ĕçсене те палăртсан; вăл ун чух урăх бригадăра бригадирта ĕçлетчĕ; тракториста вăл фронтран таврăнсан тин вĕренме кайрĕ.—Е электростанцие хăвăртрах тумалла.

— Юлашкине тумалла. Вăл пулсан, çумăрне те çутарма пулать,—терĕç пухăннисем.

Çакăн хыççăн вара пĕтĕм калаçу çумăр çине куçрĕ.

Колхозниксем иртнӗ ҫулах тума тытӑннӑ электростанципе хир шӑвармалли канавсене ҫуркуннерех туса пӗтерменшӗн тарӑхрӗҫ...

Елюка тусӗ-акамӗсен юррисем те, купӑс сассисем те илӗртмерӗҫ. Апат ҫисенех вӑл ВКП(б) историне вӗренме ларчӗ. Вӑл каҫ Павӑл та тухмарӗ пулмалла сада—Елюк хӑй пымассине шкул патӗнчех систерсе хӑварчӗ.

Вӑхӑт вуникӗ сехет тӗлнелле ҫывхарма пуҫласан, пӗр кӗтмен ҫӗртен, аслати авӑтнӑ сасӑ илтӗнсе кайрӗ. Елюк кӗнекипе тетрачӗсене уҫӑ халлӗнех сӗтел ҫине хӑварчӗ те урама чупса тухрӗ.

Хӗвеланӑҫ енчи тӳпе, чӑнах та, хуралса, кӑвакарса килет. Унта ҫине-ҫинех ҫиҫӗмӗн хуҫӑк-хаҫӑк сӑннисем курӑнаҫҫӗ, аслати кӗмсӗртетни илтӗнет.

Елюк, ытла савӑннипе, пӗр вӑхӑт ним тума аптраса тӑчӗ. Ҫиҫӗм сӑннисем пысӑкланчӗҫ, ҫывӑхрах вӗҫкелеме пуҫларӗҫ. Аслати те хытӑрах кӗрлеме пуҫларӗ. Турикасра вӑйӑран саланакан хӗрсен юрри илтӗнчӗ:

Ҫирӗк хуппи ҫиле май,
Ҫирӗк хуппи ҫиле май.
Атьӑр, хӗрсем, киле май,
Атьӑр, хӗрсем, киле май.

Самантран ҫӗр ҫине шултра ҫумӑр тумламӗсем патлатса ӳкрӗҫ. Шӑпӑртаттарса ҫумӑр ҫума пуҫларӗ.

— Ҫу, ҫумӑр, лӳшке! —терӗ Елюк савӑнӑҫлӑн; ҫара пуҫӑнах, кӗпе вӗҫҫӗнех хирелле чупса тухрӗ.

Ҫумӑр вӑйланнӑҫемӗн вӑйланса килет. Елюк часах шапарса ҫитрӗ. Кӗпи йӗпенсе ҫан-ҫурӑмӗ ҫумне ҫыпӑҫрӗ, ҫӳҫӗ ҫамки ҫине усӑна-усӑна анчӗ.

Ҫуркунне акнӑ тулӑ пусси патне ҫитсен, вӑл чарӑнса тӑчӗ. Калча тунисен хушшинчи пушӑ вырӑнта шыв кӳленсе тӑрать. Елюк пылчӑкланнӑ тӑпрана аллине илсе йӑваласа пӑхрӗ. Вара аллине ҫумӑр ҫине тытса ҫурӗ те малалла, ыраш пусси патнелле кайрӗ.

Ҫумӑр ҫаплах кашлать. Хутран-ситрен ҫиҫӗм ҫиҫсе, асар-писер аслати авӑтса илет. Ҫиҫӗм вара хӑйӗн куҫа йӑмӑхтаракан ҫутӑ вучӗпе каҫхи йӗпе тӗттӗме ҫунтара-ҫунтара илет, пӗтӗм хире уҫа-уҫа кӑтартать. Ыраш пусси патне ҫитеспе Елюк унта такам тӑнине асӑрхаса илчӗ. Ҫывӑхнерех пырсан, вӑл ӑна палласа илчӗ те унӑн чӗри пушшех те хыттӑнрах тапма пуҫларӗ.

— Павӑл, эсӗ-ҫке?!

— Ара çав...—Павăл, ахаль те вăтанаканскер, халĕ хăйне аван мар япала тунă вăхăтра пырса тытнă пекех пулса кайрĕ, ним чĕнме аптрарĕ; Елюк çывхарнине асăрхаман пулас. Вăл та Елюк пекех витĕрех йĕпеннĕ. Кăнтăрла тĕкĕр пек курăнакан çутă атти кунчи таранах пылчăкпа вараланнă, тĕрленĕ кĕпепе хăй, пиçиххисĕрех. Тен, çавăнпа-и, вăл пушшех те вăтанса кайрĕ, пуçне айккинелле пăрса, калаçăва урăх енне пăрчĕ:—Халĕ ĕнтĕ çĕнтерӳ пирĕн алăра, Елюк: малтан сăмах панă чухлĕ туса илетпĕрех, намăс курмастпăр.

— Курас марччĕ. Ма шурă кĕпепех тухса килтĕн-ха эсĕ?—терĕ Елюк, унăн йĕпеннĕ çӳç пайăркисене хыçалалла тикĕслесе хурса.

— Эсĕ килессе пĕлмен эпĕ...Васкарăм та...

Çапла вĕсем шурăмпуç киличченех хирте çӳрерĕç. Ăшă çумăр çунă хыççăн хир çинче пăс йăсăрланма пуçларĕ, çӳлте, тăрăлса пыракан тӳпере, тăри юрра ячĕ...

Çав каçран вара вĕсем пĕрне-пĕри пушшех те çывăхрах туйма пуçларĕç. Хĕлле, çĕнĕ çул умĕн, пĕрлешрĕç — Елюкпа шăллĕ хăйсен çурчĕпе ытти хуралтисене колхоза пачĕç те Павăлпа унăн амăшĕ патне куçрĕç.

Мĕн чухлĕ ĕмĕтчĕ, мĕн чухлĕ тумалли ĕçчĕ малта! Мĕнле илемлĕ те савăнăçлă пурнăçчĕ малта! Анчах çур çултанах пĕтĕм ĕмĕт тенĕ пек татăлчĕ — пĕр кĕтмен çĕртен вăрçă пуçланчĕ, Павăл фронта тухса кайрĕ...

Елюк ăна станцие çитичченех ăсатрĕ. Калаçма ирĕкрех пултăр тата пĕрле вăрахрах пулар тесе, лавран кая юлса, çуранах утса пычĕç вĕсем. Чунĕ мĕнле хурланчĕ пулин те, кăмăлне хытарчĕ Елюк. Юлашкинчен, поезд тапранса каяс умĕн ыталашса чуптунă чух çеç чăтаймарĕ. Пуçне Павăл кăкăрĕ çине хучĕ те ĕсĕкле-ĕсĕкле йĕме пуçларĕ; малашне хăйпе мĕн пулассине пĕлмесĕр тискер вăрçа хирĕç тухса каякан упăшкине тата ăшĕнче тăрсантăрсан пĕр йăшăлтатса илекен пĕчĕк Павăла шеллерĕ вăл... Ашшĕ — ывăлне, ывăлĕ — ашшĕне чăнах та кураймарĕç вара кайран...

Виçĕ çултан Павăл вилни çинчен çырса пĕлтерчĕç. Анчах Елюк ку хутĕнче, мĕнле хурлансан та, пĕр куççуль те кăлармарĕ. Арчинчен упăшкин çĕнĕ костюмне кăларчĕ те ăна курăнмалла çĕре çакса хучĕ, кашни кунах тенĕ пек тасатса тăчĕ. Вăрçă чарăнни çинчен пĕлтернĕ кун ирех Павăла ăсатнă çулпа станцине кайрĕ, унта вăрахчен упăшкине юлашки хут курнă çĕрте—перронăн хĕвел-

анăç енчи вĕçĕнче тăчĕ. Унăн кăмăлĕ хуçăлса килчĕ. Вара вăл ялалла анакан çул айккинчи папкасем кăларнă акацисен хушшине кĕчĕ те выртсах, сасăпах макăрчĕ. Яла каçпа тин, тăрукаха ырханланса, питĕ ывăнса таврăнчĕ. Икĕ çул çурăри пĕчĕк ывăлне — Ваççăна — аллине илчĕ те нумайччен ăна ашшĕнни пекех кăтра пуçĕнчен çупăрласа, унăн ашшĕнни пекех сеп-сенкер куçĕнчен пăхса ларчĕ; текех пĕрре те йĕмерĕ вара.

Анчах халĕ, Павăл пекех летчик пулнă замполита курсан, Елюкăн пĕрре тӳрленме пуçланă суранĕ сасартăках сăрăлтатса, ыратса кайрĕ. Вăл салхуланчĕ, шухăша путрĕ. Кĕлет патĕнчен хирелле вăрлăх турттарса кайнă чух макăрма патнех çитнĕччĕ ĕнтĕ, юрать, бригадăна каялла таврăнакан Лисков хăваласа çитни чарса тăчĕ.

Çапах та, хăйĕн ĕçне мĕнле тăрăшса турĕ пулин те, кунĕпех канлĕх тупаймарĕ вăл. Тăтăшах пăшăрханса çӳрерĕ. Ирпе вара килне таврăнсан, хăйсен умĕнче ӳсĕр Қозлов тĕлĕрсе ларнине курчĕ те пушшех те кӳренсе кайрĕ...

...Қозлов ĕлĕкрех те йĕркеллĕ каччă шутĕнче пулман. Вăтам шкул пĕтерсен, вăл ялхуçалăх институтне кайса кĕнĕ. Анчах унта улт-çичĕ уйăх та тăрайман: начар вĕреннĕшĕн тата институтри йĕркесене пăснăшăн ăна кăларса янă. Анчах Алексей яла таврăнман, ака-сухапа аппаланса «çĕмĕрĕлес» килмен унăн—çапла каланă вăл пĕррехинче яла «отпуска» таврăнсан — хуларах ăçта килчĕ унта аппаланса çӳренĕ: таçта завхоз, таçта—склад заведующийĕ, таçта — продавец та пулса пăхнă. Қаярахпа «Автотракторосбыта» пырса лекнĕ...

Иртнĕ çул вăл яла таврăнчĕ те МТС-ра старши механикра ĕçлеме пуçларĕ. Унчченхи механик — ăна урăх МТС-а директора ячĕç — институт пĕтернĕ çынччĕ, ĕçлеме те пайтахранпа ĕçлетчĕ. Çавăнпа та машинăсен таврашне нихçан та пырса вăрăнман Қозлова ун вырăнне лартни ял халăхне самаях тĕлĕнтерчĕ: пĕрисем — вăл «юсаннă, ăса кĕнĕ иккен», тесе калаçкаларĕç, теприсем аслăрах руководительсем ăна çавăн пек пысăк ĕç шанса панинчен тĕлĕнчĕç. Анчах темиçе кунтанах юлашкисем тĕрĕс шухăшлани палăрчĕ...

Елюк Қозлова ĕлĕкех килĕштерместчĕ. Халĕ вара пушшех те юратми пулса çитрĕ...

Яла таврăнсан, Қозлов пушшех те иртĕхсе кайни

палăрчĕ: пĕрмаях ӳсĕр ҫӳрет, начар ĕҫлет, ҫитменнине тата унпа яланах уллах ҫĕрте тĕл пулма, хăй туйăмĕсем ҫинчен систерсе калама тăрăшать. Ҫав каҫ та, вăратас мар тенĕ ҫĕртенех, Елюк ăна ури ҫинех сĕтĕрсе тăратрĕ те питĕ хытă ятласа тăкрĕ, хăйсен умĕнчен хăваласа ячĕ.

Анчах ĕҫ кунпах пĕтмерĕ-ха вĕсен.

## 9

— Кĕрсе апатланар-и малтан?

— Ҫук, тавтапуҫ, тракторсем патне илсе кай.

Ĕҫлемен трактор ялăн тепĕр айккинче, вăрман хĕрринче ларать. Вăрманĕ ĕлĕкрех юхăннă пулнă-мĕн, анчах ăна халĕ майланă. Йĕри-тавра лутра ҫеҫ ҫатан тытса тухнă. Ҫатан ку енче — ăҫта килчĕ унта, хăва тĕмĕсем чĕлтĕртетсе лараҫҫĕ; вĕсене кăклакаланă та кăларсах пĕтереймен пулмалла: сухаланă чух ҫаврăна-ҫаврăна иртнĕ. Тĕмсен таврашĕнчи иртнĕ ҫулхи сарă курăкпа витĕннĕ сухаламан ҫĕр татăкĕсем саплăксем пек курăнса выртаҫҫĕ.

— Кăҫал та кăкласа пĕтереймерĕмĕр ҫав тымарсене,—терĕ Садуркин, замполит вĕсене сăнаса пынине курсан.—Кĕркуннеччен тăхтамаллах пулать ĕнтĕ. Ĕҫĕ нумай унăн, тата калча та таптанать.

— Эсир ăна тракторпа ҫăлăр,—сĕнчĕ Аркадий Иванович,—кăкарăр та сĕтĕрттерĕр.

— Пирĕн тепĕр пусă пур-ха кун пекки. Кунтан та хăрушăрах темелле. Ҫапла тетпĕр. Василий Михайловичпа калаҫса пăхрăм та, малтан хамăр плана тултарар-ха, кайран тымар кăклăпăр, тет. Сăмах тĕрткелĕр-ха эсир, тен килĕшĕ? А? Эп пырăп унта.

Аркадий МТС ĕҫĕпе хальччен нихҫан та ҫыхланман, ҫавăнпа та вăл халĕ Садуркина юрĕ теме те, хирĕҫлеме те пĕлмерĕ... «Тен, директор ҫапла калать пулсан, чăнах та май ҫук-и? Ҫапах та ку — тумалли япалана тума тытăнса тăни — килĕшсе каймалли япалах мар-ха, калаҫса пăхас пулать»,—шухăшларĕ вăл.

— Юрĕ, «тĕрткелĕп», Садуркин,—кулса илчĕ Аркадий Иванович, хăйне куҫранах пăхса ларакан вăрт-варт председателе.—Калаҫса пăхăп эпĕ ун пирки. МТС планне кĕмелле вăл ĕҫ те.

— Калаҫăр-ха, калаҫăр, Аркадий Иванович. Алăпа

кăларсан ытла вăраха каять, хаклăраха та ларать. Тракторпа питĕ лайăх пулĕччĕ.

Садуркинпа замполит ĕçлемен трактор патне çитсе чарăнчĕç. Майкăпа çеç юлнă тракторист, çинçе пӳ-силлĕ пулнипе тăсланкăрах çын пек курăнакан шакла пуçлă, хуратут пуснă питлĕ йĕкĕт, тракторĕ патĕнчен пăрăнчĕ те, мазутланă аллине çĕтĕк-çурăкпа шăлса, вĕсем патне пычĕ. Алă тытрĕç.

— Мĕн пулнă сирĕн трактора?—ыйтрĕ Аркадий, паллашнă хыççăн трактор патне пырса.

— Чирленĕ-ха вăл, Аркадий Иванович,—терĕ Мигушев; трактористăн ячĕ çапла пулчĕ.—Зажигани тĕрĕс мар. Майлатăп-майлатăп, майне ниепле те кӳрейместĕпха.—Вăл тарланă çамкине шăлса илчĕ.—Пĕлӳлĕх çитеймест пуль, пĕрремĕш çул çеç ĕçлетĕп. А бригадир...

— Мĕн пулнă? Қала, кала, ан хăра. Пулăшмасть-им?

— Эпĕ бригадир мар, тет. Василь Михалчă виçĕмкун кăларатпăр, паян юлашки кун ĕçлетĕн терĕ те... Помощникĕ çук. Эпĕ те ку тракторпа пĕччен çеç ĕçлетĕп.

— Қăларатпăр тенĕ те, кăларман пулĕ вĕт-ха ăна бригадиртан?

— Тепле çав. Қăларман пулас-ха та, Упнеркин çынни çавăн пек вăл.

— Ав мĕнле тата. Директор мĕншĕн кăларма пулчĕ вара ăна?

— Пĕркунне килнĕччĕ те çапла, шăпах вентилятор чĕнĕ татăлнă вăхăт пулчĕ. Хăйне майлă çын çав директор та. Мĕн те пулин пулсан, тӳрех хăтăрма, хăратма пăхать. Çур сехет ĕçлемесĕр тăнăшăнах кахалсем, сире трактор мар, шăпăр та шанса пама юрамасть, тесе мăшкăлласа пĕтерчĕ. Трактор вăл кайсанах ĕçлеме пуçларĕ те вĕт, Упнеркин чăтаймарĕ, куран, хăйне кӳрентернине: çавăнтанпа такки ĕçет теççĕ. Унччен ĕçнине курман та, а халĕ вăт... çапла, ĕçет теççĕ. Арăмĕ те каларĕ.

— Ĕçет?

Қу хыпар Аркадий Ивановича халĕ ĕнтĕ шалтах тĕлĕнтерсе пăрахрĕ; паçăр, МТС-ра, Садуркин ун çинчен пăртак ӳстеререх те каларĕ пуль тесе шутланăччĕ. Анчах ку сăмах тĕрĕсех пулчĕ иккен. Қилĕшмелли япалах мар вара. Çапла Ухварова та мухтама çук. Иккĕш те тĕрĕс мар тăваççĕ.

— Апла эппин. Пар-ха, хам тĕрĕслесе пăхам тракторне.

Аркадий, чылайччен тăрмашнă хыççăн, мотора хускатса ячĕ.

«Чăнах та зажигани иккен,—шухăшларĕ вăл, мотор, чыхăна-чыхăна, хура тĕтĕмункисем ывăтнине курсан.— Ниушлĕ ăна майлама пултаракан çын çук кунта?»

— Эпир пурсăмăр та кăçал çеç вĕренсе тухнă-ха. Пĕлейменнисене Упнеркинпа участковăй кăтартаканччĕ те... МТС механикĕ чĕнсен те килмест. Килсен те усси çук—те пĕлмĕш пулать, те чăнах та чухламасть.

Зажигание тĕрĕс майласа ярсан, Аркадий Иванович çупа хăрăм хытса ларнă свечасене тасаттарчĕ. Унтан газораспределенине тĕрĕслерĕ. Пур ĕçсене те туса пĕтерсен, мотора тепĕр хут хускатса ячĕç.

Садуркинăн та, Мигушовăн та пичĕсем сасартăках çутăлса кайрĕç. Председатель замполит патне пырса ун аллине чăмăртарĕ.

— Тав сана, пысăк тав, Аркадий Иванович!

Мигушов мотор газне чакарчĕ.

— Акма тытăнатпăр,—терĕ вăл, сеялка патне пынă хăй пекех тăсланкăрах йĕкĕте. Лешĕ пуçне сĕлтрĕ:

— Чуптар!

Трактор, канлĕ ларас çĕртен хускатнăшăн тарăхнă пек, çилĕллĕн ăрăлтатса илчĕ те вырăнтан тапранчĕ.

— Степан Сергеевич, эсир ĕнтĕ кайма та пултаратăр,—терĕ Аркадий Иванович председателе.—Эпĕ кунтах пулатăп каçчен. Тата, Упнеркин патне кайса пăхăр-ха: чирлемен-и вăл?

— Чирленĕ...—Садуркин кулса илчĕ.—Кĕмесĕр ан кайăр, Аркадий Иванович.—Урапи çине ларас умĕн вăл вăрлăхпа шыв турттаракансене инструкци пачĕ:—Асту, Прухха мучи, Петĕр шăллăм, сирĕн айăпупа трактор ĕçлемесĕр ларни ан пултăр.

Трактор каялла çаврăнса килеймерĕ, сеялкăра вăрлăх пĕтнĕ-мĕн. Вăрлăх илсе кайса ярсан, Аркадий Иванович руль умне хăй ларчĕ. Вăрлăх пусă вĕçне çитсе тепĕр хут çаврăннă çĕрте пĕтрĕ. Аркадий Прухха мучипе Петĕре михĕсене тата шывпа горючи пичкисене пусă варринерех куçарма хушрĕ.

— Халĕ ĕнтĕ вăрлăх тата шывпа горючи таврашне кашни çаврăнмассерен çак тĕлте тултарăр,—терĕ вăл Мигушовпа сеялка патĕнче ĕçлекенсене.—Тата çакна астăвăр: пĕрре çаврăнма сире хĕрĕх виçĕ минут кирлĕ. Çак вăхăтран кая юлса ан çаврăнăр—кирлĕ мар ĕçпе вăхăта

сая ямасан, çапла ĕçлесе кунне аллă виçĕ гектар акма пулать. Тăрăшарах ĕçлесен—ытларах та, курăр акă.— «Правда» хаçатра малта пыракан механизаторсем сехетлĕ графикпа мĕнле ĕçлени çинчен çырнă статьяна вулани тата кунччен летчик пулни Аркадий Ивановича питĕ пулăшрĕ; боевой задание кайнă чух тата тактикăна вĕреннĕ чух кашни секунда шута илекенччĕ вĕт.

* * *

Вăл бригадăри виçĕ трактор патĕнче те пулчĕ. Яла вара тĕттĕмленсен тин анчĕ. МТС-па колхоз хушшинчи договора пăхса тухнă хыççăн Садуркин ăна хăй патне çывăрма илсе кайрĕ.

## 10

Арăмĕ колхоза замполит килни çинчен пĕлтерсен, Упнеркин вырăнĕ çинчен сиксе тăчĕ те сĕтел умне пырса ларчĕ. Пуç ĕнтĕ çаврăнмасть, ыратать, пушанса юлнă та, унта темле кирлĕ мар япала кĕрсе тулнă пек туйăнать; мухмăр пуçланнă пулмалла.

Упнеркин чӳрече янаххи çинчи эрехлĕ стакана илсе сĕтел çине лартрĕ. Анчах эрех шăрши сăмсана килсе çапсанах, унăн пĕтĕм кăмăлĕ пăтранса кайрĕ, хăсасси килчĕ.

— Максăм, замполит ырламĕ сана куншăн... Ан ĕç,— терĕ арăмĕ, Упнеркин стакан тытнине курсан.—Халь бригадиртан кăлараççĕ тетĕн, е кăларчĕç те терĕн-и-ха?— ун чух, ĕçлемесĕр ĕçсе çӳресен, партирен те кăларĕç акă.

— Партирен?!—Упнеркин тăчĕ те кăмака умнелле иртсе, стаканри эрехне таз çине тăкрĕ.—Партирен?— ыйтрĕ вăл, арăмĕ çине тĕлĕнсе пăхса.—Партирен кирлĕ мар çынсене кăлараççĕ, вĕсем унта ăнсăртран кĕрсе кайнă пулсан. А мана...—Упнеркин стаканне шкапа ӳпĕнтерсе лартрĕ, пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа çӳреме пуçларĕ.—Мана кăларма... Эпĕ партие нимле сиен те кӳмен. Икĕ кун эрех ĕçнĕ, хире тухман иккен. Çав çеç пĕтĕм айăпăм-сиенĕм те. Урăх ним те çук. Анчах кала-ха: хăçан ĕçнĕ эпĕ эрехе ĕçес килсе? Çилĕ килнипе, ним тăвайман енне ĕçрĕм. Эх, Наçтук, хам та пĕлетĕп те вĕт, чун чăтмарĕ ĕнтĕ... Шутласа пăх-ха эсĕ акă ху та: çирĕм минут тăчĕ иккен те трактор, уншăн мана бригадиртан кăларатпăр тесе хăратаççĕ пулать. Пĕчĕк мар-çке-ха эпĕ, мана апла хăратма?

— Пĕчĕк ачаран та хушăрах пултăн капла. Е килсе йăлăнасса кĕтетĕн-и? Мигушов паян иккĕмĕш кун ĕçлемест вĕт...

— Килтĕр те тӳрлеттĕр Ухваров е Козловне ятăр, эпĕ кирлĕ мар пулсан...—çиленме пуçларĕ Упнеркин.

Арăмĕ каçхи апат хатĕрлеме тытăнчĕ. Анчах Упнеркинăн çиесси килмерĕ. Вăл ура çинчех, пĕр стакан сĕт ĕçрĕ те, ăш вăрканине пусарма тăрăшса, мĕн тĕттĕмленичченех урай тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕ.

«Партирен мар, бригадиртан кăлармата сăлтав çук вĕсен,—шухăшларĕ вăл, паçăр арăмĕ каланине аса илсе.—Замполит ăнланĕ-ха, тен, каласа парсан. Вара—курăнĕ унта...»

Тĕттĕмленсен, салтăнмасăрах вырăн çине выртрĕ. Анчах çывăрасси килмерĕ унăн, вăл замполита кĕтрĕ.

Мĕншĕн килмерĕ-ха вăл тата? Килсе ятлатăрччĕ хăвăртрах та, ĕçĕ пĕттĕрччĕ.

Çук, замполит килмерĕ. Ятлаçма ытла хавас çын мар пулас.

Çамрăксем те вăйăран кĕреççĕ авă. Çурçĕр те иртрĕ пулмалла ĕнтĕ. Анчах ăш çаплах вăркать. Пĕтĕм ыйхă вĕçнĕ, ниçта ларас, ниçта тăрас килмест. Хăвăртрах шуçăм килтĕрччĕ хуть! Мĕнле йывăр иккен ĕçлемесĕр пурăнма!

Пайтахчен çапла тĕрлĕрен шухăшсемпе тарăхса выртнă хыççăн Упнеркин тăчĕ те, кĕпипе пиншакне тăхăнса, урама тухрĕ. Пӳрт умĕнчи сак çине ларчĕ.

Каç çуллахи пекех ăшă. Умри вата йăмра тăрринче майралла çыхнă шурă тутăр пек курăнакан уйăх çакăнса тăрать. Çурри кăна пулин те, вăл самаях çутатать. Тракторăн пĕр-пĕр детальне илсе майласа лартма та пулать кун пек çутăра. Аван! Ĕçлемелле те, ĕçлемелле кăна, ĕçлес те килет, анчах... анчах Упнеркин кунта тек ĕçлемест ĕнтĕ. Тек бригадир та, тракторист та мар...

Ăксăм еннелле такам пичкепе тăнкăртатса иртсе кайнине курсан, Упнеркин ура çине тăчĕ.

— Прухха мучи!—кăшкăрчĕ вăл, трактористсем патне шыв турттаракана палласа илсе.—Прухха мучи!

Пичке кĕмсĕртетме чарăнчĕ.

— Ну, мĕнле унта тракторсем?

— Мĕнле пулччăр, кĕрлеççĕ, культиваци тăваççĕ. Мигушов паян çĕрле те каймарĕ, ĕçлемесĕр тăнине тавăрас тесе, талăкĕпех ĕçлет.

— Тракторĕ мĕнле... юсанă-и?

— Замполит юсаса хăварчĕ паян.—Прухха мучи, пичке çине утланса ларнăскер, ĕхлеткелесе, çĕре анчĕ те кĕсйинчен чĕлĕмне туртса кăларчĕ.—Вăт замполит, коммунист тесен те юрать. Ятламасăр-тумасăрах, çаннине тавăрчĕ те машинăна йăпăртах юсаса пачĕ. Қашни тракторпах хăй тытса пĕрер хут çаврăнса та пăхрĕ. —Мучи чĕлĕмне чĕртсе ячĕ, «васкатăп-ха, Степан Сергеич хытă шаккаса хăварчĕ Петĕрпе иксĕмĕре те», текелесе, каллех пички çине утланса ларчĕ.—Мана пичкене урапа çине хума та пулăшрĕ. Çитменнине ятпах чĕнчĕ тата, «эсĕ, Прухха мучи, ватă пулсан та, ĕççĕр ларасшăн мар-ха ав, ĕçлетĕн, маттур», тет. Çаплах каларĕ, хам сăмахăм мар.

— Ман çинчен ыйтрĕ-и вăл?

— Ыйтрĕ, какшĕ. Такăшĕ ăна эсĕ чирлĕ тенĕ-и, ыран сан пата лаша яма, больницăна леçме хушрĕ, тет, Садуркина. Эпĕ илтмен те хуть...

— Чирлемен эпĕ,—терĕ Упнеркин, Прухха мучи умĕнче хăйне аван мар туйса.—Ну, кай эппин, шыв кирлĕ пулĕ.

Пичке, кĕмсĕртетсе, Ăксăм еннелле анса кайрĕ. Упнеркин пĕр самант юпа пек хытса тăнă хыççăн каллех хăйсен умне таврăнчĕ.

Замполит хăй патне килсе Ухваров пек ятлаçнă пулсан, лайăхрах та пулĕччĕ-и тен. Қаçару ыйтĕччĕ те ӳкĕнĕччĕ, ӳкĕнĕччĕ те ĕçлесшĕн тăрăшĕччĕ. Анчах вăл килмест авă, Упнеркин килĕнче йăлăнтарса выртнă вăхăтра, хирте, унăн ĕçне туса çӳрет. Кĕтменччĕ Упнеркин кун пек пулса тухасса. Ăна аван мар пулчĕ. Тарăнрах шухăшларĕ те вăл—вăтанса кайрĕ, кăмăлĕ пăсăлчĕ.

Кĕрсе çывăрма шутларĕ.

«Мĕн тумалла-ха, ыран замполит килсе ĕçе чĕнсен?— шухăшларĕ вăл, выртсан.—Қаймасан аван мар, кайсан... Ниушлĕ замполита чĕнтерес вара? Паллах, килме пултарать вăл, анчах...»

Çĕрĕпех çывăрмарĕ Упнеркин. Шурăмпуç килеспе тĕлĕрсе çеç кайнăччĕ, арăмĕ вăратрĕ:

— Тăр-ха, тăр, замполит килет.

Упнеркин выранĕнчен вăрт-варт сиксе тăчĕ те арăмĕ тăракан чӳрече патне чупса пычĕ. Урамра, Садуркинпа пĕрле, чăнах та, çар тумĕ тăхăннă уксахрах çамрăк çын килет. Упнеркин чӳрече патне пынă самантра вĕсем иккĕш те ун çурчĕ еннелле пăхса илчĕç, анчах, чарăнса

тăмарĕç; вĕсен хыçĕнчен иртрĕç те хирĕçри пралукпа хирелле кайрĕç.

«Мĕн эпĕ, вăрă пек, çынсене курăнма вăтанатăп-ха?— шухăшларĕ Упнеркин, замполитпа председатель курăнми пулсан.—Каятăп та калаçатăп. Тӳррипе, коммунист пек».

* * *

Бригадăна вăл шăп смена улшăннă тĕле çитрĕ. Виçĕ трактор та çĕнĕ пусă йышăннă: иккĕшĕ—юнашар акаççĕ, тепри—вĕсене хирĕçре культиваци тăвать.

Замполит, уçă кăмăллă, яштакарах çын, ним пулман пек кулкаласа, ăна алă пачĕ, ятне пĕлтерчĕ.

— Сывлăх мĕнле?—ыйтрĕ вăл, Упнеркина куçран пăхса.

— Аван, Аркадий Иванович,—терĕ бригадир, иртнĕ каç Прухха мучи каласа панине аса илсе вăтанма пуçласа.

«Чăнах та чирлĕ пулнă тесе шутлать пулас».

Анчах Садуркинпа трактористсем умĕнче «тӳррипе, коммунист пек» каласа пама хăяймарĕ вăл.

— Тракторсем аван сирĕн,—мухтарĕ замполит.— Маттур, Упнеркин, аван юсанă.

«Неушлĕ никам та каласа паман ăна эпĕ икĕ кун ĕçе тухманни çинчен?—шухăшларĕ Упнеркин, куçĕсене замполитран пытарса. Унăн пичĕ пĕçерме пуçларĕ, хĕрелсе кайрĕ пулмалла. Неушлĕ асăрхамасть çакна Аркадий Иванович?—Калатăп, тӳррипех калатăп».

— Ир акакан культурăсене хăçан акса пĕтерме палăртнă эсир?—Замполит Садуркинпа Упнеркин çине пăхса илчĕ.

— Апрель вĕçĕнчех пĕтермеллеччĕ те...—терĕ Садуркин, Упнеркин çине пăхкаласа.

Пĕтермеллеччĕ те, акă, çак çын кая хăварать, тесшĕн ĕнтĕ. Чухлать Упнеркин ăна, чухлать. Анчах, кирлĕ пулсан, палăртнă вăхăтран та маларах пĕтерме пултарать Упнеркин.

Хăй тракторĕпе Мигушов çитсе чарăнчĕ. Моторне ĕçлеме чарчĕ те, пусă хĕрринчи культивациленĕ хура йăрăм урлă каçса, вĕсем патне пычĕ.

— Çывăрас килмест-и?—кулкаласа ыйтрĕ унтан замполит.

— Акса пĕтерсен çывăрăпăр, Аркадий Иванович,— терĕ Мигушов, мазутпа вараланнă аллине çĕтĕк-çурăкпа шăлкаласа.

— Çаплине çапла та-ха вăл, çапах та çĕрĕн-кунĕн ĕçлеме йывăртарах. Подсменщик хатĕрлес пулать, Максим Григорьевич.

— Хатĕрлетпĕр, Аркадий Иванович,—терĕ Упнеркин.—Халлĕхе, Мигушов каниччен, ун тракторĕпе хам ĕçлĕп... Çуракине вара май тĕлне пĕтĕмпех пĕтерĕпĕр.

Пурте ыррăн кулса илчĕç.

Пăртакран, тракторсем акма саланас чух, Аркадий Иванович пурне те сывлăх сунчĕ те кӳршĕ колхозра ĕçлекен бригадăна çул тытрĕ. Упнеркин ăна аяккаллах ăсатса ячĕ.

«Хамăр кăна чух та ятламасть хуть,—шухăшларĕ вăл, замполит урăх япаласем çинчен калаçнине кура тарăхса.—Бригадиртан кăларни çинчен те калаçмасть. Паян кăна килсе çитрĕм терĕ те,—пĕлмест мар-и?

Уйрăлнă чух вара чăтаймарĕ, çапла каласа хучĕ:

— Эпĕ чирлĕ пулман, Аркадий Иванович, ахалех... ĕçлемерĕм çак кунсенче. Директор, мĕн, кăларатăп терĕ те...

Замполит чарăнсах ăна куçран пăхса илчĕ. Анчах çилĕ таврашĕ те, тарăху та палăрмарĕ ун куçĕсенче: вĕсем ăшшăн, ыррăн, шелленĕ пек те çиçеççĕ. Упнеркин сасартăках вăтанса кайрĕ, пуçне усрĕ.

— Тĕрĕс-и вара çапла туни?—ыйтрĕ замполит, ăна çаплах куçран пăхса.—Эпир пĕр хамăршăн çеç мар вĕт, пĕтĕм обществăшăн тăрăшатпăр. Василий Михайлович та, кирлĕшĕн ятланă-и вăл, кирлĕ маршăн-и, паллах, обществăшăн тăрăшса ятланă. Çак шухăш пире, Максим Григорьевич, чи малтан пырса кĕмелле, çак кăмăл—чи пысăкки пулмалла—халăх телейĕшĕн чи малтан эпир, коммунистсем ответлă. Мĕн каламалла сана, эсĕ ăна ху та лайăх ăнланатăн. Ăнланман пулсан, ăнланса илтĕн пулĕ ĕнтĕ. Çавăнпа кун çинчен сăмах хускатмарăм та эпĕ.

Тахçанах паллашнă çывăх туссем пек, алă тытса уйрăлчĕç. Замполит вара, пăртак уксахлакаласа, çул çине тухрĕ те «Çăлтăр» колхозалла уттарчĕ.

## 11

«Çăлтăр» хирĕнче Аркадий Иванович чи малтанах капочĕсене çунат пек çĕклесе ларакан «СТЗ» трактора курчĕ.

«Неушлӗ ёҫлемест? Юсани те куранмасть...»—вӗҫсе иртрӗ ун пуҫӗнче шухӑш.

Будкӑран мазутпа вараланнӑ кӑвак шӑлаварпа ҫӳхе фуфайка тӑхӑннӑ ҫӳлӗ ҫамрӑк каччӑ тухса тӑчӗ. Аркадие курсан, вӑл каялла ҫаврӑнса пуҫне будкӑна чикрӗ те тем мӑкӑртатса илчӗ; унтисене «такам» килни ҫинчен пӗлтерчӗ пулмалла. Аркадий будка умне ҫитме ёлкӗрчӗ ҫеҫ, унтан сарӑ ҫӳҫне пуҫӗ тавра кӑшӑл пек хунӑ, кӑвак чечеклӗ пӗчӗк сарӑ тутӑрпа ҫавӑрса ҫыхнӑ, кивӗрех сӑрӑ жакеткӑпа хура юбка тӑхӑннӑ пӗчӗк пӳ-силлӗ те ҭулли пит-куҫлӑ хӗр сиксе тухрӗ.

— Здравствуйте,—терӗ вӑл; будка алӑкӗ умӗнчен пӑрӑнчӗ, кулам пек туса, тутӑрӗ ҫинчи чечексем тӗслӗ куҫӗпе Аркадий ҫине пӑхса илчӗ, хӗрелсе кайрӗ.

Аркадий иккӗшне те алӑ пачӗ. Паллашрӗҫ. Ҫӳлли, хытканни, автол тумланипе чӑпаррӑн куранакан тӑрӑхла питли—бригадир, Ятманов, хӗрӗ—Ермолаева тракторист пулчӗ.

— Мӗншӗн ёҫлемесӗр ларать-ха ку «СТЗ»?—ыйтрӗ Аркадий.—Ҫӗмӗрӗлмен пулӗ вӗт?

Бригадир, трактора пӑрахӑҫланӑ пек, аллипе сулчӗ.

— Ҡивелнӗ ёнтӗ, хавшанӑ, Аркадий Иванович,—терӗ вӑл.—Хавшанӑ япалана чирӗ те часах тивет. Ятманов кӗсйинчен алюминирен тунӑ тӑваткал портсигар тата хут кӑларчӗ.—Пӗтнӗ ёнтӗ, мӗн калама. Туртатӑр-и?

— Мӗнӗ пӗтнӗ вара?

Бригадир чӗнмерӗ. Будкӑран, магнето йӑтса, вӑтам ҫулалла ҫитнӗ, шӑртланнӑ янахлӑ ҫын тухрӗ. Сывлӑх сунса, Талыкина алӑ тытрӗ.

— Емеськин, тракторист.

Трактористсем бригадир табакӗпе хутӗнчен пирус чӗркесе чӗртрӗҫ те пурте трактор патне пычӗҫ.

— Акӑ,—терӗ Ятманов, пӳрнипе блок головкин татӑлса тухнӑ шпильки ҫине кӑтартса.—Ҫакӑн пирки тӑратпӑр-ха. Ытти деталӗсем те пӗтнӗ ёнтӗ, мӗн калама. Директор списать тӑвӑпӑр тенӗччӗ те, илтӗнмест-ха.

— Неушлӗ списать тумалли ҫеҫ юлнӑ?—шухӑшларӗ Аркадий, пӗрре блок, тепре бригадир ҫине пӑхса.—Ҫук, пулма пултараймасть.

— Дрель ҫук-и вара сирӗн?

— МТС-а телефонпа пӗлтернӗччӗ те, илсе килеймерӗҫ-ха.—Ятманов каллех аллипе сулчӗ те, кулкаласа, Ермолаева ҫине пӑхса илчӗ.—Халь ёнтӗ аппаланмасан

та юрать пулĕ унпа, пурпĕрех ĕçлесе килентерес çук вăл. Гусеницăллине парсанччĕ, вăт ĕç тухĕччĕ.

— Ҫусене ăçта хурăпăр вара, кустăрмаллисене?—Аркадий тракторăн малти кĕпчекĕ çине ларчĕ те блок головки çине пăхрĕ: трактористсем чĕнессе кĕтмесĕрех хушса хучĕ:—Дрель Упнеркинăн пур, çавăнта ярăр.

Ярас килмесĕрех, Ятманов плугаре чĕнсе илчĕ те, «Хум» колхоза, Упнеркин патне чуптарчĕ.

— Тата мĕнĕ çĕмĕрĕлнĕ-ха унăн? — ыйтрĕ Аркадий, сӳннĕ пирусне тепĕр хут чĕртсе.

— Ытти деталĕсем йĕркеллех те-ха, кивĕ ĕнтĕ, ак-ак çĕмĕрĕлет тесе çеç ĕçлемелле.

Аркадий трактора пăхса тухрĕ те каллех ларчĕ.

— Ҫиелтен пăхма ытла начарах мар-ха,—терĕ вăл.— Вараланса çеç пĕтнĕ. Пăртак тасарах тытма тăрăшмалла—машина тени çавна юрататъ.

Трактористсем Аркадий патнерех çывхарчĕç.

— Эсир акă гусеницăллă трактора ăмсанатăр. Тĕрĕс ĕнтĕ, вăл вăйлăрах та, меллĕрех те кунтан. Анчах кустăрмаллине те пăрахăçлама юрамасть, юлташсем. Ҫам ĕçлет-ха сирĕн унпа?

— Эпĕ,—терĕ Емеськин; таварнă çаннине антарчĕ те каллех тавăрса хучĕ. Ермолаева çине пăхса илчĕ,—тата...

— Ульки, Ермолаева,—пӳлчĕ ун сăмахне Ятманов.— Ытла лайăх çӳресех хăрăнтараймарĕ çав-ха ку трактор кăçал. Хавшанă, ним те тăваймăн. Дефектнăй ведомость тунă чухне детальсенчен нумайăшне улăштарма пулсаттăмăр, анчах Лисков, Алексей Петрович, парторг, пĕлетĕр пулĕ?—çапла пĕр канашлура киввисенех юсаса лартатпăр, терĕ те эпир те ун хыççăн сикрĕмĕр вара. Ҫитменнине тата ăмăртăва чĕнчĕç; намăсланас килмест вĕт çын умĕнче—йышăнтăмăр. Ульки те аван мар пулчĕ ахăртне. Аван мар, конешнă, йышăнмасан: Макар ĕçлекен бригада та çапла тума пулчĕ те иккен. Э? Ульки çиленме те пуçларĕ пулмалла. Чух кăна вĕсене: малтан çынсем хыççăн, малтисем хыççăн сикрĕç пулсан, халĕ те ан юлччăр вĕсенчен. А вĕсем, вĕсен бригади, пиртен те юлса пырать.

Ермолаева, «ан сӳпĕлтет пустуя», тенĕ пек, ăна хулĕнчен тĕкрĕ. Ҫакăнтан Аркадий тахăш колхозри бригадăра ĕçлекен темле Макар трактористпа Ульки хушшинче тем пулса иртнине туйса илчĕ. Анчах, хĕре вăтанта-

рас мар тесе, хӑй туйӑмне палӑртмарӗ, калаҫӑва урӑх енне пӑрма тӑрӑшрӗ.

— Лисков тракторӗсем начар ӗҫленӗ тени илтӗнместха,—терӗ вӑл.—Сирӗн кӑштах начартарах юсаннӑ пулмалла вӑл.

— Хальччен чиперех ҫӳрекенччӗ те-ха...

— Эппин малашне чипертерех ҫӳреттерме тӑрӑшмалла. Авантарах пӑхас пулать ӑна. Ӗненетӗр-и: мана ҫак кивӗ «СТЗ» халь «ДТ»-ран та хаклӑ тӑнӑ пек туйӑнса кайрӗ акӑ.

Ятмановпа Емеськин ун ҫине «мӗншӗн?» тенӗ пекрех пӑхса илчӗҫ. Ульки, вӗсен хыҫӗнче тӑраканскер, маларах тухрӗ. Вӑл питӗ те ҫамрӑк пулмалла-ха: вӑтанать, хӗрелет, калаҫма та именет. Хӑй ҫурхи чечек пекех хитре вара; телейлӗ ҫын сӑнлӑ, кулкаласа ҫеҫ тӑрать; кулнӑ чух вара икӗ питҫӑмартинче те илемлӗ путӑксем курӑнаҫҫӗ.

Аркадий гимнастерка кӗсйинчен пӗчӗк блокнот кӑларчӗ те ӑна уҫкалама пуҫларӗ.

— Акӑ, вуласа пӑхӑр-ха,—терӗ вӑл, ун ӑшӗнчен пӗчӗк хут татӑкӗ кӑларса.—Сасӑпах вула. Ҫартан тухса килес умӗн илсеттӗм.

Ятманов ҫырӑва тытрӗ те тӳрленсе ларчӗ. Аркадипе Ермолаева, унтан—Емеськин ҫине пӑхса илчӗ, вара хуллен, васкамасӑр вулама пуҫларӗ:

«Аркадий Иванович, ҫырӑвӑра илтӗм. Тав, пысӑк тав сире старике манманшӑн.

«Сире асӑнмассерен вӑрҫӑ вӑхӑчӗ, хам завод аса килет. Тата курӑп-ши ун чухнехи пек ӗҫлесе?

«Сывлӑхпа мухтанма пултараймастӑп,—начар. Тухтӑрсем иртсе каять теҫҫӗ те, анчах пулас ҫук ҫав, урасем ӗҫлемеҫҫӗ, сывлаймастӑп. Ҫапах та ытла хурланса выртмастӑп-ха: хам тума пултарнине эпӗ чылайӑшне турӑм...

«Астӑватӑр пулӗ: сирӗн заказа тунӑ чух эпӗ вуникӗ талӑк заводран тухмарӑм. Ҫав вӑхӑтрах эпир—тен эсир пӗлмен те пулӗ ун ҫинчен—тракторсем те туса кӑларattӑмӑр. Кустӑрмаллӑ тракторсем,—колхозсем, совхозсем валли. Эпир вӗсене хамӑр ирӗкпе, канмалли вӑхӑтсенче, заводран талӑкӗ-талӑкӗпе тухмасӑр тӑваттӑмӑр; ҫавӑн чухне ытла хавшаса ҫитрӗ ӗнтӗ ман сывлӑх. Анчах сире самолетсем кирлӗ вӑхӑтра тылрисене тракторсем те кирлӗччӗ вӗт... Вӑл тракторсем халӗ те ӗҫлеҫҫӗ пулӗ-ха. Ма-

лашне те пайтахчен ёçлёç: эпир вёсене тарпа çуса, хамăр ўпке-чёресене парса кăларнă. Пирён çынсем аван астăваççё çакна, упраççё пулё вăл тракторсене...»

Ятманов вуласа пётерчё те, çыруне тирпейлён хутлатса, Аркадие пачё. Ним чёнмесёр, тракторăн хыçалти кёпчекё çине таянчё, шухăша кайрё.

— Çапла çав,—ассăн сывласа илчё вăл.—Кам çырнă ăна?

— Ватă рабочи. Эпё унпа вăрçă вăхăтёнче, завода çёнё матчаçсем илме кайсан паллашнăччё. Вăрçă пётсен пёр-ик çултан вăл чирлесе ўкнё. Чирлеме ёнтё вăрçă вăхăтёнчех чирлёччё те,—станок умёнчен каясшăн пулман. Халё иккёмёш çул ёнтё санаторире выртать.

Пёр вăхăт пурте шăпах тăчёç. Çыру трактористсене шухăша ячё.

Çав самантра будка патне автолетучка çывхарни курăнчё.

— Дрель илсе килет пулмалла,—терё Ятманов, ура çине тăрса.

Вăл хёпёртенине Аркадий те сисрё. Ку ăна та савăнтарчё: бригадир кун пекех час «çаврăнасса» кётменччё вăл.

Автолетучка будка умне çитсе чарăнчё. Ун кабининчен икё çын сиксе тухрёç те трактористсем патне пычёç.

— Салам механизаторсене!—терё вёсенчен пёри, сарлака хулпуççиллё те лутрараххи, кулкаласа.—Савăн, Ятманов: сан кустăрмусене списать тăваççё.

— Камсем?

— Камсем пулччăр, начальствă. Мана радиатор илме ячёç. Хамăрăн шăтрё те...

Ятманов самантлăха шăпах тăчё. Сăнёнчен радиатор илме килнисем ун кăмăлне кайманни палăрчё. Ку чăнах та çапла пулнă-мён.

— Начальствă списать тутăр, эпир ёçлёпёр,—терё Ятманов, пёрре, радиатор илме килнё тракторист çине çиленсе, тепре, хăй хутне кёме ыйтнă пек, Аркадий çине пăхса.—Нимле радиатор та памастăп. Хёлле Козлов сённипе кăларса пăрахнисене пăхăр, унта юрăхлисем те пур-ха.

— Кам ячё-ха сире радиатор илме?

— Козлов та каларё, директор та. Ку «СТЗ» манăнниччен кивёрех. Çитменнине ёçлемест те авă.

— Тепĕр çур сехетрен акма тытăнатпăр унпа. Парăр-ха дрель.

— Радиаторна памастăн эппин?

— Çаплах кала, памарĕ, те. Хамăрăнне юсама хушрĕ, те.

Шофер дрель кăларса пачĕ. Ятманов ăна илчĕ те, килнисем çинчен мансах, трактор патĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Улькипе Емеськин, пулăшма тесе, ун патне пычĕç.

Радиатор ыйтаканни те ытлашши сăмах ваклама кăмăл тумарĕ. «Юрĕ, памастăн пулсан, йăлăнмăпăр»,— текелесе кабинăна кĕрсе ларчĕ те, летучка хускалса кайрĕ.

Аркадий килнисен ячĕсене те пĕлсе юлаймарĕ. Лешсем те ăна палламарĕç пулас: васкаççĕ. Çитменнине Ятманов та çилентерсе ячĕ авă. Маттур Ятманов. Ахальтен мар çав Илья Николаевич та: «лайăх çынсем пур унта, çавсемпе ĕçлĕр», терĕ. Мĕншĕн ĕçлес мар-ха? Ятмановпа Упнеркин пеккисемпе ĕçлеме пулать.

— Ку дрелĕ çинчен те манса кайрĕ тата,—кулса илчĕ Емеськин, моторĕ патĕнче чакаланнă май. Вара, шпилькине хырса пĕтерсе, блок головкине хыврĕ те хушса хучĕ:—Ĕçлеме кунпа та пулать ĕнтĕ те, çав, çĕннисене ăмсанса кăмăла пăсатпăр. Лайăх пăхмасан, çĕнни те часах кивве тухать вăл. Вара, Козлов каларĕш, каллех «заменă» кирлĕ.

Ермолаева кулса ячĕ. Аркадий ун куллинчен те, Емеськин сăмахĕсенчен те, Козлов хăй ĕçне начар пĕлнине, МТС коллективĕ ăна юратсах кайманнине туйса илчĕ.

— Аван çырнă сирĕн пĕлĕшĕр, Аркадий Иванович,— терĕ пăртакран Ятманов, кулма чарăнса.—Чĕрене тивмелле çырнă. Пĕрре-пĕрре пухура вуласа парасчĕ ăна. Усăллă пулĕччĕ. Алексей Петровича пĕлтерĕр эсир: ăна текех çиленместпĕр ĕнтĕ. «Атăл» колхозра пулас-тăвас пулсан калăр: унти трактористсенчен, уйрăмах Макартан, кулатпăр эпир. Çуракине майăн пĕрремĕшĕ тĕлне пĕтереймесен, хăй çине çилентĕр вăл Макар. Çаплах калăр. Пирĕн ятпа та, Ульки ячĕпе те. Э, Ульки? Юрĕ, юрĕ, ан çилен. Эсĕ, критикăна итле, усăллă пулĕ. Хе-хе!

Хĕвел ĕнтĕ систермеллех хĕртме пуçларĕ. Анăçран вĕрекен çил лăпланса ларчĕ. Ăшăтрĕ. Катрам пĕлĕтсем хушшине пытаннă тăрисен юрри янăравлăрах илтĕнекен пулчĕ.

## 12

Ухваров Қозлова курсанах Лисков илсе кайнă витресем çинчен ыйтса пĕлесшĕнччĕ. Анчах лешĕ калаçу пуçламăшĕнчех ун çинчен мантарса ячĕ.

— Запчаçсем памаççĕ, илсе килни çук, реставраци тăвăр теççĕ,—терĕ вăл, директор кабинетне кĕрсенех, ăна чи кирлине пĕлтерсе.—Складрипе те калаçса пăхрăм та, ĕç тухмасть. Ĕçместĕп, тет, çиленсе кайрĕ те тĕрткелесех кăларса ячĕ.

— Сан пек мар-и?—хурланмалла пулин те, Ухваров кулса илчĕ.

Аванччĕ çав Қозлов «Автотракторосбытра» склад заведующийĕ пулнă вăхăтра. Майлаштаратчĕ, пушă ямастчĕ. Хăйне валли çул уçасшăн çапла турĕ те хуть— çавăншăнах старши механик туса хучĕ вĕт ăна Ухваров— çаплах МТС-а та сахал мар усă кӳчĕ. Пĕр-пĕр деталь юрăхсăра тухсан, нихçан та ăна юсаса тарăхман, çĕннине лартатчĕç. Халь акă маларах кăларса пăрахнă детальсене тепĕр хут вырнаçтарма тӳр килет.

— Лискова ямалла марччĕ çав ун чух,—терĕ Қозлов, ларма ирĕк ыйтнă пек, диван патне иртсе.—Вĕсемшĕн пулсан хăть çурăлса кай акă. Замполичĕ те... Ĕçлеме тытăннă-тытăнманах хуçа пулса тăнă.

— Мĕн пулнă тата? Лар эсĕ.

— Логуновăн радиаторĕ юрăхсăра тухнăччĕ те, Ермолаева тракторне пурпĕрех списать тумалла тесе, Ятманов патне ятăм. Анчах Логунов пушăллах каялла вĕçтерсе таврăнчĕ. Замполит партарман, тет, радиатора. Вăл хăть палламан та ăна, çавă пулнă ĕнтĕ, çавăн ĕçĕ. Қаласа панипех палларăм; эпĕ унпа пĕрле, пĕр вагонра килтĕм вĕт Шупашкартан.

Çилли тăруи капланса килнипе Ухваров ура çине сиксе тăчĕ.

— Қам панă ăна ун пек право, директор приказне каялла тума?!. — кăшкăрса пăрахрĕ вăл.

Ытла та хытă каларĕ пулмалла, Қозлов шартах сикрĕ, ура çине тăчĕ.

Ухваров кабинет тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа çӳреме пуçларĕ.

«Ĕçлеме тытăннă-тытăнманах хуçа пулма хăтланать тата. Ну, юрĕ, курăпăр кам хуçа иккенне. Çĕнĕ трактора

ĕçсĕр лартма никам та право паман пире. Вăл Ермолаева урапи мар.»

Ухваров шлепкине тăхăнчĕ, тĕкĕр витĕр пăхса, хĕрлĕ автан пĕсехи тĕслĕ галстукне, жилеткине тӳрлетрĕ. Вăл кайма хатĕрленнине чухласа, Козлов алăк патне пычĕ.

— Халь ĕнтĕ икĕ трактор ĕçсĕр ларaççĕ,—хăйи-хăйми мăкăртатса илчĕ вăл.

— Эсĕ комбайнсене юсас тĕлĕшпе ĕçле,—терĕ ăна Ухваров.—Макарова пулăш. Райхаçатра ун пирки пире аванах хĕртсе илнĕ авă. Часах республикăри хаçатсенче те çырĕç... Аван мар капла, ĕçлес пулать.

Тепĕр минутран вара директор машини МТС картишĕнчен сиксе тухрĕ те икĕ енчен те çамрăк хунавсемпе хӳтĕленнĕ тӳрĕ çул тăрăх «Çăлтăр» колхозалла вĕçтерчĕ.

Çул çинче Ухваровăн çилли пушшех çĕкленсе кайрĕ. Ним тăвайман енне, вăл шоферне хистесе, вăрçса пычĕ:

— Хăвала, хăвала, ан мĕрелен.

«Çăлтăр» колхоз хирĕсем пуçланчĕç. Чылаях акнă иккен ĕнтĕ. Майăн пĕрремĕшĕ тĕлне шет пĕтерĕç те, «урапи» ларсан та. Анчах... ăçта вара вăл? Будка умĕнче «СТЗ» курăнмасть. Неушлĕ ĕçлеме тытăннă унпа?

— Стоп!

Машина çӳлĕ мар сăрт çинче чарăнчĕ.

Инçетре те мар, пĕр пилĕкçĕр-ултçĕр метрта, çулăн тепĕр енчи çĕртме пусси хĕррипе, сеялка сĕтĕрсе, леш «СТЗ» килет. Ермолаева патне, тракторăн сулахай çуначĕ çине Ятманов та хăпарса ларнă. Ухваров ăна çийĕнчех палласа илчĕ. Трактористсем директор ятарласа хăйсене вăрçма килнине пĕлмеççĕ пулин те, ăна темле аван мар пулса кайрĕ.

— Чуптар килелле,—терĕ вăл.

Шофер ăна çийĕнчех ăнланчĕ: машина, хыçалалла чакса, вăрт-варт каялла çаврăнчĕ те, çул урлă выртакан айлăма пăрăнса, Чурапаялла кайрĕ.

Йăнăш тунă Козлов Логунова кунта радиатор илме ярса, çитменнине тата Ухваров хăй те ăна çийĕнчех ĕненсе лартрĕ. Тăруках ĕненмелли çын мар çав вăл! Кăна вăл халĕ аван ăнланчĕ. Килмелле те марччĕ пĕреххут, хăй ухмахлăхне кăтартса. Кулаççĕ ĕнтĕ Ятмановпа Ермолаева, асăрхаса илчĕç пулсан. Тьфу!

Хăй йăнăшĕсене туйрĕ вăл, анчах ку ăна пушшех те çилентерсе ячĕ. Кăмăлĕ хуçăлчĕ. Ăшра çилĕ, эрлĕк нихçанхинчен те вăйлăрах вĕреме пуçларĕ. Ăна çавăнтах

ӗнер Лисков каланӑ сӑмахсем аса килчӗҫ: «Эсир пиртен аякра тӑратӑр...» «Ҫаланине илтместӗр...» Мӗнле ҫывӑх пулмалла-ха вӗсемпе, директора тӑтӑшах пӗр-пӗр шӑтӑка кӗртсе ӳкерме, трактористсем умӗнче намӑс кӑтартма тӑрӑшаҫҫӗ пулсан?

Чурапайра чарӑнса тӑмарӗҫ, тӳрех Юманкассине вӗҫтерчӗҫ.

«Ҫук, капла ӗҫ тухмасть. Мӗн те пулин тумаллах пулать. Анчах мӗн?»

Ун шухӑшӗсене шофер татрӗ:

— Василий Михайлович, замполитпа Лисков килеҫҫӗ. Чарам-и?—ыйтрӗ вӑл, машинине пӑртак хуллентерех ярса.

— Хӑвала, хӑвала,—терӗ ҫилӗллӗн Ухваров, шофер кӑтартнӑ ҫӗрелле пӑхса.

Замполитпа парторганизаци секретарӗ ҫул ҫине тухса ӗлкӗреймерӗҫ — ҫӑмӑл машина вӗсен тӗлӗнчен вӑшлатса иртсе те кайрӗ. Лешсем вара ӑна чарӑнса тӑрсах ӑсатса ячӗҫ.

— Чарӑнмаллаччӗ ӗнтӗ, Василий Михайлович,—терӗ шофер, пӑртак кайсан.—Ҫайран хӑйсене курӑнма аван мар...

Ухваров илтмӗш пулчӗ.

«Эсӗ кӑна вӗрентменччӗ ӗнтӗ директора,—ҫиленсе шухӑшларӗ вӑл.—Ятлаҫма ӗлкӗрӗпӗр-ха, МТС-ра та».

Анчах ятлаҫмалла пулмарӗ...

МТС-а тӗрӗлтеттерсе ҫитсен, кӑштах усӑлас тесе, вӑл кантур умӗнчи сак ҫине ларнӑччӗ ҫеҫ, станци енчен бензин турттаракан ешӗл машина кӗрлесе килни курӑнчӗ. Акӑ вӑл склад енне пӑрӑнчӗ. Анчах...—вӑт, путсӗр!—столовӑй умне ҫитрӗ те тӑпах чарӑнса тӑчӗ.

«Эрех е сӑра ӗҫме пулӗ ӗнтӗ,—шухӑшларӗ Ухваров, ҫиленсе.—Вӑт, путсӗр: ахальтен мар иккен ҫав яланах хӑнкӑла тӗслӗ ҫӳрет...»

Ухваров ура ҫине тӑчӗ. Шофер шӑп кӑна столовӑя кӗрсен, вӑл ӑна кайса тытма шутларӗ. Вара — чӑтса тӑтӑр: дисциплинӑна пӑсакансене мӗнле тыткаламаллине пӗлет вӑл. Анчах усал шухӑшӗсем унӑн тӑнӑ-тӑманах сӗвӗрӗлсе кайрӗҫ: кабинӑран, «ӗҫке яраннӑ» шофер мар, ҫар тумӗ тӑхӑннӑ, лутрарах та тулли пӳ-силлӗ ҫын тухрӗ. Вӑл районти ялхуҫалӑх пайӗн заведующийӗ Васильев пулчӗ. Шофер ӗнтӗ айӑпа кӗмест пулин те, Ухварова пурпӗрех столовӑй патнелле пыма тиврӗ.

Заведующипе директор пĕр-пĕрин аллине тытса чăмăртарĕç.

— Райком бюровĕн çитес ларăвĕнче сирĕн отчета итлес теççĕ,—терĕ Васильев, кантуралла утма тытăнсан.— Çавăнпа килтĕм эпĕ.

Ухваровăн чĕри кăртах сикрĕ, чунĕ сӳ! туса кайрĕ. Қаллĕх ятлама хатĕрленеççĕ иккен-ха. Иртнĕ кунсенче хăй çапла çынсене вăрçаканччĕ, а халĕ...

— Тархасшăн, тархасшăн.

— Замполит килсе çитрĕ-и-ха?—ыйтрĕ Васильев.

— Қилме — килнĕ те, халĕ çук-ха МТС-ра.

— Ăçта апла?

— «Хум» колхоза кайрĕ. Садуркин килнĕччĕ те...

— Аван. Ларма-тăма ытла юратсах каякан çын мар пулĕ çав. Ку — аван-ха вăл. Хăçан килет?

— Паян килет пулĕ. Ăçта каятпăр, кантура кĕрер-и е... апат çиес тетĕр-и?

— Çук, тавтапуç, мастерскоя кĕрсе тухар-ха малтан. Шăп мастерской алăкĕнче вĕсем радиатор йăтса тухакан Логуновпа тĕл пулчĕç.

— Пулчĕ те-и?—ыйтрĕ Ухваров, çуталса тăракан сапланă вырăнсене курсан.

— Пулчĕ те,—терĕ Логунов, кулкаласа.—Атту, Козлов сăмахĕпе... Ятманова ӳкĕтлесе çавăрма çук вĕт ăна. Емеськин та... Тепĕр тесен — тĕрĕс тăваççĕ вĕсем.

— Мĕн çинчен çак эсир?—пĕлесшĕн пулчĕ Васильев.

— Радиаторĕ шăтса кайнăччĕ унăн,—Логуновшăн ответлерĕ Ухваров.—Тăват-пилĕк соттă улăштарма тиврĕ. Кивĕ, паллах мĕн пуласси.—Хăй, лешĕ сăмахне тĕлсĕр хускатнăшăн çиленсе, Логунова куçран пăхса илчĕ.— Йăтса ан тăр эсĕ, йывăр-тăр. Туса пĕтертĕн пулсан, бригадăна таврăн эппин.

Вĕсене хирĕç Козлов тухрĕ. Васильева алă пачĕ. Радиаторпа витресем пирки намăсланнă хыççăн, Ухваров хăйне унтан пăртак риснĕ пек туйма пуçларĕ, механик ăна килĕшми пулчĕ.

«Иксĕмĕр кăна юлсан ятлатăпах»—шутласа хучĕ вăл. Мастерскойра вăрахах тăчĕç. Васильев пур цехсене те кĕрсе тухрĕ, рабочисемпе, комбайнерсемпе калаçрĕ.

Мастерскойран тухсан, кантур умĕнче, ял енчен килекен Талыкинпа Лисков тĕл пулчĕç. Ухваров вĕсене малтанах асăрхарĕ, вăтанчĕ, хирĕç йăпшăнарах, пуçне чиксе,

тӳрӗ пӑхма хӑймасӑр утса пычӗ. Анчах замполитпа парторг хӑйсем кӳреннине палӑртмарӗҫ. Талыкин тарласа кайнӑ, ывӑннӑ, тарӑхнӑ сӑнлӑ, ҫапах та хӑй уҫӑ кӑмӑллӑн кулать.

— «Ҫӑлтӑрта», «Хумра» пултӑм,—терӗ вӑл.—Ҫула май «Малалла» колхоза кӗрсе тухрӑм — унта ӗҫсем аван пыраҫҫӗ, ир акакан тырӑсене майӑн пӗрремӗшӗ тӗлне акса та пӗтеретпӗр, теҫҫӗ. Ҫураки хыҫҫӑн Садуркин тымар кӑклама тата кӳлӗ чавма тытӑнасшӑн — тракторсем ыйтать.

«Ытла мала ан сик-ха эсӗ, туман тихан пилӗкне ан хуҫ»—шухӑшларӗ Ухваров, анчах ун куҫӗнчен пӑхма хӑяймарӗ.

Садуркин хӑйӗн акӑнмасӑр выртакан Ҫеплипе ҫулсеренех типсе пыракан Ҫавра кӳлӗ ҫинчен мӗн Ухваров килнӗренпех йӑнкӑртатать. Анчах хирти ӗҫсене пӗтермесӗр трактор парасси ҫинчен татса калама йывӑр тесе, Ухваров ӑна ним те шантармарӗ-ха. Тултарччӑр акӑ плана, вара — курӑнӗ унта. Халӗ лешӗ замполита ҫыпӑҫнӑ иккен. Замполичӗ, паллах, пулӑшма пулнӑ. Ырӑ ятлӑ пулас килет-ҫке-ха! Қайран лешсен: директор паман, темелле пултӑр...

— Эпӗ хуть шантарсах каламарӑм та, тен, пама та юрӗ пӗрер трактор. Қӳлли питӗ лайӑх пулать, Василий Михайлович.—Талыкин портсигар кӑларчӗ те пурне те пирус сӗнчӗ. Ухваров хальччен хӑйӗнчен кӗҫӗннисенчен илекен марччӗ, анчах Васильев илнине тата замполит та ырӑ кӑмӑлпа сӗннине курчӗ те,—илчӗ.

Унӑн сӑлтавсӑрах килсе капланнӑ ҫилли сӗвӗрӗлнӗ пек пулчӗ. Хӑй кӑлӑхах ҫӗтӗлнине те туйрӗ, анчах, тав тунисӗр пуҫне, ним те чӗнмерӗ.

Тивертсе ячӗҫ.

— Ыйтаҫҫӗ пулсан — парасах пулать,—терӗ Васильев, пӗрре Ухваров, тепре Талыкин ҫине пӑхса.—Договор тӑвӑр та — парӑр, ӗҫлеччӗр. Атьӑр-ха эппин, калаҫар кӗрсе. Унтан вара колхозсене кайса килӗпӗр. Қозлов, эсир те кӗрӗр.

Пурте кантуралла кайрӗҫ.

Чул сарса тунӑ сукмак тӑрӑх алӑк патнелле утнӑ май Ухваров Талыкин уксахланине тата унӑн сылтӑм ури нӑтӑртата-нӑтӑртата илнине асӑрхарӗ. Замполит ҫапла чӑтӑмлӑ та лӑпкӑ пулма пултарни ӑна паҫӑрхинчен те хытӑрах вӑтантарса ячӗ. Унӑн пичӗсем ҫунса тухассӑн

пĕçерме пуçларĕç, вăл паçăр вĕсенчен ухмах пек иртсе кайнăшăн ӳкĕнме пуçларĕ.

Тепĕр икĕ сехетрен вĕсем—Ухваров, Талыкин тата Васильев—çуракинче кая юлса пыракан «Атăл» колхоза тухса кайрĕç.

Тăвата сынна тăвăр тесе, шофера хăварчĕç, ун вырăнне директор хăй ларчĕ; вăл вăрçăра танкист пулнă иккен. Вырнаçнă чух, хыçалта кансĕртерех тесе (Васильев умĕнчех çапла каларĕ), Талыкина хăй çумне ларма хушрĕ.

## 13

Тӳпе ахаль те тĕксĕмрех тăратчĕ. Кăнтăрла çитеспе вара, Ятманов бригади ĕçлекен «Çăлтăр» колхоз хирне тухсан, унта хура уçланкăсем палăракан пулчĕç, вăл пушшех те илемсĕрленсе кайрĕ; йăш-йăш-йăш туса, вĕт çумăр çума, хирсем çинче тĕтре евĕрлĕ шурăрах ĕнтрĕк йăсăрланма пуçларĕ.

— Начар-ха ку,—мăкăртатса илчĕ Ухваров, Талыкин çине пăхса.—Çураки вăраха тăсăлма пултарать. Кăть-кать ӳккелесен те ĕçлемеççĕ те, халĕ... подавнă.

Ку трактористсем çинчен каларĕ пулмалла. Анчах кăçал хальччен çумăр мар, сывлăм та ӳкмен-ха. Çапла вара, трактористсем те, йĕпе тесе, ĕçсĕр ларса курман.

Васильев Талыкин çине пăхрĕ те, чее куçне хĕскелесе, кулса илчĕ.

— Курăпăр акă,—терĕ вăл.

Ятманов бригадине кĕрсе тăмарĕç, тӳрех «Атăлалла» вĕçтерчĕç. Ку колхоз çуракинче кайра пыракан колхозсенчен пĕри шутланать. Чăнах та, юлашки кунсенче унта «ĕçсем пăртак самайланма та пуçланă», терĕ Васильев, анчах Ухваров ку кунсенчи сводкăсене пăхайман иккен, мĕнле «самайланнине» пĕри те пĕлеймерĕç.

«Атăл» хирĕ «Çăлтăрăннипе» пĕр чикĕре. Чикĕ тăрăх хăйăр тата вак чул сарса тунă анлă çул иртет. Çул тăрăх вара икĕ колхозĕ те вăрман лартса тухнă. Йывăçсем вунă-вуникĕ рет те пулĕ, çулçă кăларма ĕлкĕреймен пулин те чăтлăх пекех курăнаççĕ.

Кăшт кайсан, çул айккинелле, ялалла пăрăнса кĕчĕ. Ухваров машинине пăрчĕ те, вĕсем хирелле тухрĕç.

«Атăл» Юманкасси пекех лапамра ларать. Кунтан унăн йăмрисен тăррисем тата пушар сарайĕн каланчин

вĕçлĕ пуçĕпе темле радиомачтăсем çеç курăнаççĕ. Пăртакран вĕсем те пытанчĕç — çул тепĕр айлăма илсе анчĕ.

— Ахалех вăрçрăр эсир, Василий Михайлович, хăвăр трактористăрсене,—терĕ сасартăк Васильев, малалла ўпĕнсе; пайтахранпа пурте шăпах пыратчĕç.—Ав, ĕçлеççĕ вĕт!—Вăл аллипе айлăмран хăйсене хирĕç плуг сĕтĕрсе килекен трактор çине кăтартрĕ.

Ухваров, машинине чарсах, вăл кăтартнă енне пăхрĕ.

— Пăх ĕнтĕ, Нудеев Макар мар-и вара?—тĕлĕннĕ саспа каларĕ вăл, машинине вырăнтан тапратса.—Ĕлĕкрех нимле плана та тултараймастчĕ, халĕ... пăх ĕнтĕ эс ăна, а?

Трактор сăрталла майĕпен çеç хăпарать. Çăмăллатас тесе пулас, плугарĕ ларман, плуг хыççăн касă тăрăх утса пырать. Акă вĕсем пусă вĕçне çитрĕç, пĕр аллă метр пек сăрта урлă кайрĕç те каллех айлăмалла анма пуçларĕç. Ухваров çултан пăрăнчĕ, пĕртен-пĕр урапа çулĕ тăрăх трактор енне кустарчĕ.

Директор вездеходне курсан, тракторист чарăнса тăчĕ. Çав вăхăтра плугарь кĕреçине илчĕ те плуг тĕренĕсемпе кустăрмисене тасатма пуçларĕ.

Çитрĕç. Чарăнчĕç. Трактор патне пычĕç. Паллашрĕç. Тракторист чăнах та Макар ятлăскер, Нудеев хушаматлăскер пулчĕ. Ку хушамата ял-йышсем унăн ашшĕне, лешĕ хăйĕн ватă та чуман кĕсрине яланах «Ну, теп!» «Ну, теп!» тесе хăваланăшăн панă иккен. Трактористра вăл тăваттăмĕш çул ĕçлет. Хĕлле çирĕме кайнă. Хăй пĕчĕк пит-куçлă та хĕр пек илемлĕ сăнлă, именчĕкрех. Атăлсемех. Килĕнче амăшĕпе анчах пурăнаççĕ. Çуркунне авланма та шухăш тытнă-мĕн те, кăмăллакан хĕрĕ, те шўтлесе, те чăнах: малтан ĕçлеме вĕрен-ха, планна тултар, вара — авланма шутла, тенĕ иккен; вăл икĕ çул хушши ĕнтĕ тракторпа тумалли ĕçсен планне тултарса пырайман. Çаксене пурне те вăл Аркадие çеç, ыттисенчен вăрттăн, каласа кăтартрĕ. Анчах хĕрĕн ятне, вăл ăçта ĕçленине Макар пĕлтермерĕ. Именчĕ пулас. Çакăн хыççăн Аркадий сасартăк «Çăлтăр» колхозра ĕçлекен Ятманов бригадинчи кăвак куçлă Улькие аса илчĕ те ăнланчĕ, Макар каламасăрах туйрĕ. Ятманов сăмах та калама хушнăччĕ ăна, «Атăл» колхоза килсе тухсан, анчах Аркадий ним те шарламарĕ, кўрентересрен хăрарĕ.

— Халĕ мĕнле пыраççĕ-ха ĕçсем?—ыйтрĕ вăл.

— Халĕ чиперех ĕнтĕ. Майăн пĕрремĕшĕ тĕлне çур-

акине пĕтермех шутлатпăр. Çак пусă пăртак тытса тăрать-ха акă. Кĕркунне çĕртме туса ĕлкĕреймерĕмĕр те... халĕ тума тивет. Юрать-ха, акас вăхăта çухатса мар: çумăр çума пуçларĕ те, кунта куçрăмăр, йĕпе тăпра сеялка пыршисен умне тăвăлать. Сухалама—пулать, çумăр ытла тарăна витеймен-ха. Ну, пуçлатпăр эпир, Василий Михайлович.

— Пуçлăр, пуçлăр. А ыттисем ăçта сирĕн?

— Культиваци тăваççĕ. Тимофеев, ав лере, инçе мар, Макаровпа Семенов — Сӳнтĕк кранĕнче.

Макар, калаçнă маях, хăй тракторĕ çине хăпарса ларчĕ. Анчах вездеход кайма тăрсан, вăл ларкăч çинчен сиксе анчĕ те каллех машина патне пычĕ, замполита айккинелле чĕнсе илчĕ.

— Аркадий Иванович,—терĕ вăл, имене-имене.—«Сăлтăр» колхоза çитсе тухас пулсан, калăр эсир Ятманова, пур трактористсем умĕнче калăр: праçник тĕлне пĕтерет-пĕрех эпир çуракине. Ăмăртатпăр эпир вĕсемпе...—Нудеев тата тем каласшăнччĕ те,—тытăнса юлчĕ. Хăй хĕрелсе кайрĕ, пăлханма пуçларĕ. Вара:—Сыв пулăр-ха, калăр, чăнах та! Юрĕ-и?—тесе, хура аллинех пачĕ те айккинелле пăрăнса тăчĕ, тракторĕ патнелле кайрĕ.

Талыкин кулса илчĕ: самаях çунтарать пулас çав Ульки, пăшăрханать каччă! Анчах кăçал намăс курмастех ĕнтĕ — тăрăшать.

Машина «Сӳнтĕк краннелле»—Тимофеевпа Макаровсем ĕçлекен çĕрелле, кӳршĕри «Малалла» колхоз хирĕсем еннелле кайрĕ.

* * *

Директорпа унăн замполичĕ тата райком уполномоченнăйĕ кунĕпех колхозсем, трактор бригадисем тăрăх çӳрерĕç; пурĕ тăватă бригадăра пулчĕç.

Тин пырса тухнă çынна ырă ĕç те, усалли те ярах курăнса каять. Çаплах вĕсем те нумай япала курчĕç. Сӳнтĕкре, «Ирĕк» колхозра тракторсем, йĕпе тесе, ахалех ларатчĕç. Çитменнине тата, колхоз агротехникĕ трактористсене вунсакăр сантиметр тарăнăш çеç сухалама хушнă: ытларах ярсан, тĕлĕ-тĕлĕпе тăм тухать те тырă начар пулать имĕш. Çаплах тата — унтах — сакăрвунă гектар таран кондицие кĕртсе çитереймен вăрлăхпа акнă — вăхăт çук тесе, ăна тасатса аппаланасси килмен.

Асăрханă йăнăшсене тӳрлетсен, МТС-а таврăнчĕç те вăрахчен мастерскойсенче çӳрерĕç. Кунта та çитменлĕхсем нумай тупăнчĕç. Комбайнсене юсанă çĕрте кирлĕ пулакан япаласене Козлов дефектсен ведомоçне пăхмасăрах парать-мĕн, кама мĕн панине хисепе те илсе пымасть. Хăш-пĕр детальсене реставраци туса лартма та май пулнă, анчах вĕсене илсе пăрахнă та çĕнĕ детальсем кĕтеççĕ.

Кĕçĕрех, вăхăта вăраха ямасăр, парти бюровĕн ларăвне пухма пулчĕç. Унта комбайнсене юсанă çĕрте ĕçлекен рабочисене, комбайнерсене чĕнме шутларĕç.

## 14

Партбюро ларăвĕ Аркадие МТС-ри çынсене лайăхрах пĕлме пулăшрĕ. Халĕ, ялалла хăпарнă май, вăл, ларура тухса калаçакансен сăмахĕсене аса илсе, вĕсене тепĕр хут тишкĕрсе пычĕ; вăл яла, хваттерне таврăнать.

МТС-ра ĕçсем ăнса пыманни директор çынсемпе çыхăнса ĕçлеменнинчен, вĕсен шухăш-кăмăлĕсене, канашĕсене ним вырăнне хуманнинчен те нумай килет иккен. Чăнах та, масса шухăш-кăмăлĕпе килĕшменни, ĕçе пĕччен татса пани тата рядовой çынсен критикине йышăнманни пур ĕçе те пĕтерсе хума пултарать çав. Епле çакна хальччен ăнланса илеймен-ха Василий Михайлович? Тен, ăнланать те, чухлать те пулĕ, анчах мĕншĕн пур çитменлĕхе те пусарса, пытарса пыма тăрăшать-ха вăл? Кун пек малалла кайма çук вĕт, ĕçе çеç сиенлет вăл япала. Çаплах вăл йăнăш ĕçсем тăвакан, хăй ĕçĕ çине çăмăлттайла, сӳрĕккĕн пăхакан Козловпа килĕшсе, ăна хӳтĕлесе пурăнни те МТС-а нумай сиен кӳрет. Ун çинчен бюро членĕсем те, ларăва чĕннĕ çынсем те тӳрех каларĕç. Мĕнле çиленсе ларчĕç пулин те, директортан та шикленмерĕç. Питĕ аван турĕç вара; сăпайлă пултăр çынсемпе, итлетĕр вĕсене, тĕрĕс сĕнӳ параççĕ пулсан, вĕсем пек тутăр, пуçне пысăка хурса хăй майлă тума ан хăтлантăр, апла тумалла пулмасан. Бюро ларăвĕнче парторганизаци комбайнерсем хушшинче çителĕклĕ ĕçлеменни те палăрчĕ. Тĕрĕс каларĕ Ахонов комбайнер: чăнах та, мĕншĕн хăйсен комбайнĕсене юсаса пĕтернĕ комбайнерсем килĕсене саланнă-ха? Мĕншĕн, Ахонов пек, юлташĕсене пулăшмаççĕ? Мĕншĕн-ха пĕркун ун пирки Лисков сăмах хускатсан, Ухваров: çавăншăн ăмăрту та, малтан пĕтернисемпе пĕрле

ыттисен те, юлнисен те пӗтерме май пулнӑ, лайӑхрах ӗçлеччӗр, тенӗ. Тӗлӗнмелле, неушлӗ директор социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн принципӗсене ӑнланмасть вара? Ыранах унпа та, комбайнерсемпе те тепӗр хут калаçса пӑхмалла пулать. Егоров слесарь та маттур. Епле питлерӗ Қозлова: «МТС коллективӗнче ытлашши çын вӑл. Механикра мар, ӗлӗкхи пек, кладовщикра ӗçлеме те пултараймасть. Механика улӑштармалла, коммунист чӗриллӗ çын пултӑр вӑл». Хытӑрах каларӗ те, анчах вырӑнлӑ пулчӗ-ха ку: механик мар, чӑнах та çапкаланчӑк çеç çав лешӗ те. Паллашнӑ куннех темле ырӑ мар йӗр хӑварчӗ чӗрере. Директор мӗншӗн ун хутне кӗрет-ха тата? Е, паçӑр Васильев каланӑ пекех — лайӑх çунтарчӗ вӑл, аван турӗ,—пӗр-пӗрин йӑнӑшӗсене лайӑх пӗлсе тӑнӑ, Қозлов пултарайманнине пӗле тӑркачах ӑна механика илнӗ пирки çапла хӑтланаççӗ-ши вӗсем? Çапах та Ухваров пӑртак ӑнланчӗ пулас-ха, бюроран пурне те çиленсе, тарӑхса тухса кайрӗ пулин те, ыранах мӗн те пулсан ырӑ япала тӑвӗ тен: «ыран... ыран тӗрӗслӗп, пӗлӗп», текелерӗ. Маларах тӗрӗслемелле, маларах пӗлмелле пулнӑ! Райком бюровӗн çитес ларӑвӗнче пире аванах çунтарӗç ӗнтӗ: çитменлӗхсем чылаях çав.

Кӗпер çинче Аркадий чарӑнса тӑчӗ. Урине кантарас тесе, карлӑк çине таянчӗ.

Қаçӗ мӗнле хитре кӗçӗр! Ӑксӑмӗ епле тата, Ӑксӑмӗ! Ик айккинчен те лапсӑркка йӑмрасемпе хӳтӗленнӗ те, вӗсемпе ачашшӑн пӑшӑлтатса, майӗпен çеç электростанци çуттисем патнелле шӑвать.

Çумӑр ӗнтӗ паçӑрах чарӑннӑ. Электростанци çурчӗ тӗлӗнче, çӳлте те мар, хӗрхӗлтӗм тӗс çапнӑ тулли уйӑх çакӑнса тӑрать, тӗксӗм те нӳрлӗ тӳпере çӑлтӑрсем йӑлтӑртатаççӗ; ытти каçхисенчен чылай çутӑрах пек туйӑнаççӗ вӗсем.

Сулхӑн, анчах сивӗ мар, кӑмӑллӑ.

Йӗри-тавра ватӑ юмансем хупӑрласа илнӗ паркра çамрӑксем юрлаççӗ. Унтан купӑс сасси илемлӗн янӑраянӑра килет. Хальччен Аркадий чӑваш юррисене радио тӑрӑх çеç илткеленӗ, анчах ун чух сӑмахӗсене астусах юлайман. Мӗнле илемлӗ иккен вӗсем!

Куçусем сан тарӑн-тарӑн пӗлӗт,  
Қӑвак пӗлӗт санӑн куçусем.  
Çамрӑк каччӑн тутлӑ-тутлӑ ӗмӗт,—  
Санпала пуласшӑн шухӑшсем.

Пĕр юрă пĕтсен, теприне пуçласа ячĕ унта илемлĕ, янăравлă саслă йĕкĕт. Ун çумне ыттисем хутшăнчĕç — йĕкĕтсем те, хĕрсем те:

Санпала пуласчĕ, калаçасчĕ
Каçсенче, ял шăппăн каннă чух.
Сан сăнна курасчĕ, савăнасчĕ,
Уйăх çуттăн, çуттăн пăхнă чух.
Эп сана тем чуль сăмах каласшăн,
Анчах та... чарать çав именни!
Тĕнчере чи лайăххи эс маншăн,
Чи хакли, чи сывăххи, савни...

Карлăк урлă Ăксăм çине пăхса тăнă май Аркадие темшĕн — темшĕн мар ĕнтĕ, ĕмĕрне те асран каймĕç вĕсем — вĕçев шкулĕ, полк, полкри командирсемпе тусĕсем аса килчĕç. Юраев, Гаврилов, Цуркан, Александров, Барабошкин, Анчиков... Мĕн ĕçлеççĕ-ши халĕ вĕсем? Вĕçевсем пĕтнĕ хыççăн шавласа аэродромран таврăнаççĕ пулĕ е стоянка айккинче, пирус туртнă май, суйма юратакан Барабошкинăн кулăшла калавĕсене итлеççĕ-и? Юлашки çулсенче, вĕçмен пулин те, Аркадий кашни кунах аэродрома кая-кая килетчĕ, летчик-тусĕсемпе ĕлĕкхи çапăçу тытăçусене аса илсе калаçса ларатчĕ.

Туран шурă тумлă çынсем ларнă — каччăпа хĕр пулчĕç ахăртнех — кимĕ юхса аннине курсан, Аркадий кĕпер çинчен тухрĕ те парк хĕррипе ялалла хăпарчĕ.

Елюк çук пулĕ-ха килте. Тракторсем патĕнчен çĕрĕпе те пăрăнма çук вĕт. Е шыв илсе каймалла, е краççын. Кăвак çутăллах тата акма тытăнаççĕ, вăрлăх кирлĕ; харсăрскер, ăна кăларма та хăй çинех илнĕ. Урине аппа та выртнă пулĕ ĕнтĕ. Вăратма аван мар, çывăрса кайнă пулсан.

Елюксен çурчĕ патне çитеспе Аркадий хăйне хирĕç такам васкаса килнине асăрхарĕ. Çывхарах пырсан, пăхрĕ те — Козлова палларĕ. Лешĕ хăй те палласа илчĕ: тĕл пулас мар тесе пулас, аяккалла пăрăнса, пушшех те хăвăртрах утса кайрĕ.

«Ăçта пулнă-ши ку?—шухăшларĕ Аркадий, ун çине пăхса; чарăнсах тăчĕ.—Ăçта та пулин «сыпма» кайман-ши?»

Елюк хăйсен умĕнче лашине çитеретчĕ.

— Ма капла вăрах çӳрерĕр эсир?—ыйтрĕ вăл, Аркадий пырса çитсен.—Çухатрăмăр эпир сана. МТС-а та

пырса килтём... Пĕрисем арăмне илме, теприсем — колхоза кайнă, теççĕ.

— Арăмне?—Аркадий кулса илчĕ. Ķам каланă-ши апла?—Арăм çук-ха ман, Елюк.—Вăл пичке хунă урапа çине пырса ларчĕ.

— Ķозлов та пур тет...

— Ķозлов? Леш, механик-и?

— Ара çав.

— Суять вăл.

— Мĕншĕн авланмастăр апла пулсан?

— Хĕрсем юратмаççĕ мана, Елюк. Хитре мар эпĕ.

— Хăвăр юратмастăр пулĕ.—Елюк кулса илчĕ те лаша умĕнчи сĕлле пĕр çĕрелле пухса хучĕ.

Елюк сăмахĕ те тĕрĕс пуль çав. Аркадий хăй те юратман халиччен. Олеççăна юратмаллаччĕ ĕнтĕ, ĕмĕр-ĕмĕрех савса пурăнмаллаччĕ, анчах вăл та партизансен отрядĕнче тăшмансене хирĕç çапăçса вилнĕ. Урăххисене тĕл пулман.

Нумайччен калаçса лараймарĕç. Елюк Аркадие ирĕксĕрех пӳрте илсе кĕчĕ, апат лартса пачĕ. Ăçта выртмаллине кăтартрĕ те,—вăл ун валли нӳхреп лаççине вырăн туса хунă-мĕн: тӳшек сарнă, çемçе утиял, ик-виç минтер хурса панă,—хăй каллех хире тухса кайрĕ...

Ним те калаçаймарĕç те. Тен çавăнпах-и, вăл кайсанах Аркадие темле кичем, тем çитмен пек пула пуçларĕ, темле пысăк та питĕ кирлĕ ĕçе тума манса кайнă пек туйăнма пуçларĕ. Анчах мĕншĕн апла тата мĕн пулчĕ-ха— Аркадий хăй те чухласа илеймерĕ.

«Тен, ывăннипе пулĕ»,—шухăшларĕ вăл çутăласпа, тĕлĕрме пуçласан...

Тепĕр ирхине, Аксăм хĕрринелле, МТС-алла аннă чух, Аркадие кĕвенте йатнă хулăн хĕрарăм тĕл пулчĕ.

— Аван хваттер тупрăр эсир,—терĕ вăл кулкаласа.— Часах акă туй пулать, савăнăç, ĕçкĕ-çикĕ...

— Ķам туйĕ вара?—тĕлĕнчĕ Аркадий, хĕрарăм ăçталла пăрнине çийĕнчех чухласа илеймесĕр.

— И-и, тăванăм, пĕлмĕш пулатăр тата. Ĕнтĕ пĕтĕм ял пĕлет. Елюк Элексçее, Ķозлова каять. Пĕрлех ĕçлетĕр вĕт, пĕлетĕр пулĕ ĕнтĕ.

Акă ăçта кайнă пулнă иккен Ķозлов! Темле, кӳрентерсе ячĕ ку япала Аркадие. Анчах вăл ăна палăртас мар тесе, кулса илчĕ те:

— Каятех пулсан, тӑвӑпӑр туйне те,—терӗ; хӑй питӗ тӗлӗнчӗ.

Неушлӗ пӗрне-пӗри юратсах пӑрахнӑ-ши вара вӗсем? Ку кӗтмен хыпар Аркадие ҫав тери тарӑхтарса ячӗ— ӗнер ҫынсем «механик пекки» тенӗ ҫынпа ҫыхлантарас килмерӗ ун Елюка,—анчах вӑл ним те чӗнмерӗ, хӑй те качча каяс пекех ҫиҫекен ейкеленчӗк хӗрарӑмран часрах пӑрӑнма васкарӗ.

## 15

Ухваров ҫывӑрса каяймасӑр чылайччен пӗр аякки ҫинчен тепӗр аякки ҫине ҫаврӑнкаласа выртрӗ. Партбюро ларӑвӗ ун кӑмӑлне пӗтӗмпех пӑсса ячӗ. Комбайнерсем, рядовой комбайнерсем критиклерӗҫ ӑна! Директор тесе тиркесе тӑмарӗҫ, тӳп-тӳрех сӑптӑрчӗҫ. «Ҫӗннине, усӑллине курасшӑн мар, ҫынсенчен пӑрӑнса, кабинетра пурӑнать», терӗҫ. «Козлов пирки те нимле мера та йышӑнман». Талыкинпа Васильев та,—политиксем-ҫке-ха!— вӗсем майлах пулчӗҫ: «Коммунистсен пӗр-пӗрин ҫитменлӗхӗсене кӑтартнишӗн ҫиленмелле мар. Пирӗн пурсӑмӑрӑн та пӗр тӗллев: колхозниксене вӑйлӑ тырпул ӳстерме, ӑна хиртен пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртме пулӑшасси. Куншӑн эпир ответлӑ. Эппин, пур шухӑш-кӑмӑла, пур вӑйпа пултарулӑха ҫак тӗллеве пӑхӑнтармалла». Ухварова тӗртсе каларӗҫ ӗнтӗ. Директор вӗсеннинчен урӑхла тӗллев лартнӑ имӗш хӑй умне.

— Мӗн хӑшлатса выртатӑн эсӗ, Васенька?—вӑранчӗ арӑмӗ.

— Хӑшлатӑн ху та...

— Хуйхӑ сиксе тухрӗ-им?

— Ҫывӑр-ха эс, ан кансӗрле.—Ухваров тепӗр аякӗ ҫине ҫаврӑнса выртрӗ.

— Яла килнӗренпе пӗтӗмпех пӑсӑлса кайрӑн эс, чӑнчӑн мужике тухрӑн.

— Тухӑн.—Ухваровӑн ҫилли тӑвӑлса ҫитрӗ. Арӑмне ятласа та пӑрахасшӑнччӗ ӗнтӗ, анчах шарламарӗ, пурпӗрех ӑнлантарма ҫук ӑна. Уншӑн пулсан, упӑшки ҫеҫ лайӑх, ыттисем пурте тӗрӗс мар тӑваҫҫӗ. Калаҫать те вӗт: «мужике тухрӑн». Пӗрре-пӗрре калаҫса пӑхасчӗ унӑн кунти «мужиксемпе», вӑт пӗлӗччӗ.

Ҫӗрӗпе ҫывӑраймансӑр, ирпе ҫывӑрса кайрӗ те хӗвел йывӑҫ пӗвӗнчен иртсен тин вӑранчӗ. Хӑвӑрт-хӑвӑрт тумланчӗ те, замполитпа Васильевран шикленсе,—нумай

çывăрма юрататъ тейĕç тата!—картишне чупса тухрĕ, кантуралла васкарĕ.

Қантурта бухгалтерсемсĕр пуçне урăх никам та çукчĕ. Хĕлле кăмака умĕнчен хăпман Лариван мучи хуралçă та Ухварова картишĕнче тĕл пулчĕ.

Мастерской умĕнче ларакан «Сталинец» комбайн патне çынсем пухăннă. Паллană çынсем. Ухваров Талыкина, ĕнер МТС-ра çитмен çĕр хăварман Васильева, Ахонова, эрне каялла хăйсен комбайнĕсене юсаса пĕтерсе килĕсене кайнă Петровпа Сидулов комбайнерсене тата Қозлова палласа илчĕ.

«Мĕнле час килсе çитнĕ-ха кусем?—шухăшларĕ вăл.— Эпĕ чĕнсен каплах васкаса килес çук, мур илесшĕсем. Замполит чĕнсен ав, çил пек вĕçсе килнĕ, штурвальнăйĕсемпех. Хăратнă пулĕ-ха мĕнле те пулин»...

Анчах хăратни те паллă мар. Ырăпа, кулкаласа çеç калаçаççĕ. Тепĕр тесен, хăратнипе кăна кун пекех васкаса килес çук вĕсем. Ăнлантарнă пулĕ, политик вĕт. Аван çав ун пек çын пулма. Лăпкă, ырă; пĕрре пăхсах курăнать ун пек çын. Çынсем те ăна çывăх кураççĕ, итлеççĕ.

Қомбайн çине мотор лартатчĕç. Директор пырсан, вăхăтлăха чарăнчĕç. Талыкин ăна алă пачĕ. Қун хыççăн вара Ухваров пурне те алă тытса тухрĕ: аван мар-çке-ха пĕрне ал тытнă чух тепĕрне асăрхамасăр хăварсан. Қозлов, комбайн тепĕр енче ним ĕçлеме аптраса, ютшăнса тăраканскер, директор пырсан хĕпĕртерĕ, кулкалама пуçларĕ.

— Ĕçсем мĕнле пыраççĕ?—ыйтрĕ Ухваров, никам куçĕнчен пăхма хăяймасăр, комбайн патнерех иртсе.

— Пыраççĕ-ха пĕр май,— терĕ Салихов комбайнер.— Юлташсем пулăшма килчĕç акă.

— Аван, аван. Ĕçлĕр.

— Халь тытăннă ĕнтĕ, ĕçлес тетпĕр.

Юратсах каймаççĕ пулас çав çынсем Ухварова. Қалаçма та паçăр Талыкинпа калаçнă пек мар, сиввĕнрех, ютшăнарах калаçаççĕ. Мĕн каламаллаччĕ тата Ухваровăн вĕсене? Талыкин пек «маттур» темеллеччĕ-и? Иртĕнсе кайĕç тата, мухтасан. Çапла пулать вăл яланах.

Қомбайна пăхкаларĕç те мастерскоя кĕчĕç.

— Эсĕ мĕн ĕçлетĕн-ха халĕ?—ыйтрĕ Ухваров Қозловран, мастерской варринче чарăнса тăрса.

— Варуковпа бункер юсатпăр,—терĕ лешĕ, пĕрре директор çине, тепре замполит еннелле, унтан каллех ди-

ректор çине пăхса илсе; хăй вăтанчăк хĕрача пек хĕрелсе кайрĕ.—Комбайнĕ хăй юсаса пĕтернĕпе пĕрех ĕнтĕ те, полотнисем кивелнĕ, кăçала çитмеççĕ пулĕ. Хедерĕ те пăртак лăчăртатать, тетВаруков.

— «Лăчăртатать, тет». Чăрăшъелте чăхă сăваççĕ, тет. Эсĕ механик-и е... Калăттăм та, юрĕ ĕнтĕ, каламастăп. Ăçта юсатăр бункерне?

— Авă унта,—Козлов хăранипе аптраса ӳксе, цех вĕçĕнче, кĕтесре ларакан комбайн бункерĕ çине тĕллесе кăтартрĕ.—Юсамалли нумай-ха.

— Мĕнне юсатăр-ха унне?—Ухваров, мала тухса, бункер патне пычĕ те ăна пур енчен те пăхкалама пуçларĕ.—Е тытăнман та-и? Ма тытăнмастăр-ха?

Козлов ним калама аптрарĕ. «Тытăнман çав-ха»,—терĕç ун кăштах алчăранă куçĕсем. Ухваров тек чĕнмесĕр стремянка çине хăпарчĕ те бункер ăшне пăхрĕ. Ак тамаша! Унта пĕр пысăк тазпа пахча çимĕçĕсене шăвармалли лейка вырта параççĕ. Лейкин шыв пĕрĕхтермелли сăмсипе аяккинчи тыткине лартайман иккен-ха, вĕсем çаплипех бункер тĕпĕнче выртаççĕ.

Ухваров тазпа лейкăна илчĕ те, пĕр чĕнмесĕр, Козлова пачĕ. Лешĕ вĕсене урайне хучĕ, çиленсе те именсе, Талыкин çине пăхса илчĕ.

— Кам валли тунăччĕ кусене?

— Матĕрне аппа ыйтнăччĕ те...

— «Ыйтнăччĕ те»,—тăрăхласа илчĕ çилĕллĕн Ухваров, Козлов çине шăтарас пек пăхса.—Халех склада леççе парăр. Складран расписка илĕр те пилĕк сехетре ман пата кĕрĕр.

Ахальтен критиклемерĕç иккен вĕсене, Козловпа иккĕшне, партбюро ларăвĕнче. Лисков маларах та каланăччĕ те ун çинчен, Ухваров итлемерĕ, ахалех, кураймасăр хăтланаççĕ тесе шутларĕ. Çитменнине тата Ухваров ăна хăй, МТС-а çĕнĕ детальсем парса, кăштах ырă тукаланăшăн — склад хуçи пулнă-çке-ха, мĕнле те пулин майлаштарнă пулĕ ĕнтĕ,— механика илнĕччĕ: паллах, аван мар ĕнтĕ тусна кӳрентерме. Çавăн чухнех, механика илнĕ чухнех, тĕрĕслесе шухăшласа пăхмалла пулнă иккен!

— Козлова эпĕ старши механикран кăларма шутлатăп,—терĕ Ухваров, мастерскойран тухсан.—Мĕнле шутлатăр эсир, Аркадий Иванович?—Талыкина вăл чи пирвайхи хут ячĕпе чĕнчĕ.

— Эсир манран лайăхрах пĕлетĕр пулĕ ăна,—терĕ

Аркадий, Ухварова куçран пăхса. Директор шухăшĕ хумхатмарĕ ăна. Икĕ кун ĕçлемесĕр ӳсĕр выртнă Упнеркина, çĕнĕ трактора кĕтсе кивĕ трактора ĕçсĕр лартнă Ятманова ĕçрен кăларас тенĕ пулсан, Аркадий директорпа килĕшмен пулĕччĕ, анчах Ҫозлова хӳтĕлеме шутламарĕ. Ҫирлĕ мар. Вырăн çеç йышăнса пурăнать вăл МТС-ра. Ĕçлеме пĕлмест, вĕренмест, сиен кӳрет.—Ҫама лартас тетĕр вара ун вырăнне?

— Ҫама?—Чăнах та кама лартмалла-ха? Начартарах пĕлет çав-ха вăл çынсене.—Ун пирки шухăшлăпăр-ха, Аркадий Иванович.

— Паçăр эпĕ комбайнерсемпе калаçса пăхрăм та, вĕсем комбайнсене хăвăртрах юсаса пĕтерме обязательство илесшĕн. Райкомпа та калаçса пăхрăм. Илья Николаевич ырлать, анчах ăна пирĕн маларах шутласа пăхмалла пулнă, кӳршĕсен обязательствине сӳтсе явса, çĕнĕ обязательствăсем илмелле пулнă; кун çинчен Илья Николаевич тахçанах каланă пулнă иккен. Тунипе туманнине начар тĕрĕсленĕ, тет, хăйне вăрçать. Атьăр, пухăнса калаçар халĕ?

— Вăт, аван ку, Аркадий Иванович.—Ухварова ку хыпар калама çук савăнтарчĕ. Вăл замполитне: «Атя, Аркадий Иванович, тек хирĕçер мар, килĕштерсе ĕçлер»,—тесшĕнччĕ, анчах хăйпе пĕрре те хирĕçменнине, хăй çеç чăкăлташса çӳренине аса илчĕ те шарламарĕ.—Паянах канашлу туса ирттерĕпĕр вĕсемпе. Халĕ обязательство проектне çырса хатĕрлес пулать.

Ҫантура таврăннă чух вĕсене аллине вăрăм авăрлă шăпăр тытнă Лариван мучи тĕл пулчĕ. Вăл вĕсене çулла та пăрахман лăпсăркка çĕлĕкне хывсах сывлăх сунчĕ те: «шăрпăка таçта пăрахрăм ĕнтĕ», текелесе, тивертме ыйтрĕ.

Аркадий ăна тиверттерчĕ.

— Сире Садуркин, леш правур председатель кĕтсе ларать унта,—терĕ Лариван мучи, чĕлĕмне çине-çинех пăклаттарнă май.

Анчах Садуркин кантурта кĕтсе ларма кăмăл туманмĕн, вăл васкаса вĕсем патнелле утать. Хăй ярханах, çаннисене таврăнă, çара пуçăнах.

Ҫитрĕ те пурне те алă пачĕ.

— Тавтапуç сире, тăванăмсем!—терĕ вăл.—Иртерех акакан тырăсене акса пĕтерчĕ Упнеркин. Халĕ района каятăп, райкомпа райисполком ялав параççĕ. Вăт мĕнле!

— Аван, аван, Степан Сергеевич,—терĕ Талыкин ăна, çитĕнӳ тунă ятпа саламласа.—Упнеркина та тав ту пирĕн ятпа.

— Çапла, çапла, тав ту,—терĕ Ухваров та.—Маттур, те.—Вара вăл Талыкин еннелле çаврăнчĕ те:—Çапах та аван ĕçлет вăл, шуйттан,—терĕ.

— Лайăх ĕçлет пулсан, пире çерем уçма тата Çеплери пусса тымарсенчен тасатма трактор парăр эсир,—терĕ Садуркин, ним сăлтавсăрах брезент сумкине тепĕр хут хулпуççийĕ çине çакса.—Атту вăл пусă ахалех сая каять темелле. Тата курăк акмалли план та тулмасть. Курăкне халь чылаях акатпăр вĕт — Егор Васильевич пĕлет акă, (вăл Васильев çине пăхса илчĕ), выльăх-чĕрлĕх ашлăпăшлă, сĕтлĕ-çулă кăна мар, тата питĕ ĕрчĕхлĕ те пулчĕ пирĕн — апат пит нумай кирлĕ пулать.

Ухваров, самантлăха ним чĕнме аптранă пек пулса, пĕрре Талыкинпа Васильев, тепре, хăйи-хăйми, Садуркин çине пăхса илчĕ, анчах татса калама çаплах васкамарĕ-ха, парăпăр, парăпăр, текелесе, малалла утма тăчĕ.

— Эппин, парăр çав,—хутшăнчĕ калаçăва Васильев.—Çуракине пĕтернĕ пулсан, мĕншĕн парас мар?

— Вара çав,—терĕ Талыкин та.

— Юрĕ эппин,—килĕшрĕ Ухваров.—Районтан килӳçĕн кĕр, договор тăвăпăр.

Садуркин савăнса кайрĕ. Вăл пурне те тепĕр хут алă тытса тухрĕ те — лапчăтас пек чăмăртарĕ тата хăй — урапи çине сиксе ларчĕ. Хальхинче хуçи васканине Чуман та чухларĕ пулмалла: лешĕ, тилхепине тытнă-тытманах, хапха патнелле лăпăстатрĕ.

## 16

Райком бюровĕн ларăвне вĕсем тăваттăн — Ухваров, Талыкин тата Козлов машинăпа, Лисков — хăйĕн мотоциклĕпе,—кайрĕç. Виçпилеш, район центрĕ, Юманкассинчен инçе те мар та, калаçу çапах та çыхăнмарĕ çул çинче. Лисков: «Хăвалăр, хăвалăр, атту таптама пултаратăп», тенинчен кулнисĕр тата тĕрлĕрен вак-тĕвек япаласем çинчен калаçнисĕр пуçне, урăх ним те шарламарĕç. Бюровăн пулас ларăвĕ çинчен те Ухваров çеç асăнса илчĕ. «Унта ырăпа нихçан та чĕнтермеççĕ, савалама çеç», терĕ вăл. Аркадий Ивановичăн ăна хирĕçлесси те килчĕ, анчах:

«Хăш чухне ятлани те пулăшать», тесе хучĕ те малалла тăсмарĕ; МТС-ри ĕçсене ытла тĕплĕнех пĕлеймест-ха вăл. Çитменнине тата лешĕ те пит пăлханса пырать: «савалассине» туять пулмалла.

Туххăмах Виçпилеше çитрĕç. Чайнăй умĕнче йăпăртлăха чарăнса тăчĕç, Ухваров «Люкс» илсе тухрĕ; урăххине туртмасть вăл. Лисков чăрманса тăмарĕ, тӳрех райкомалла вĕçтерчĕ. Ухваровпа пĕрле юлнисем пырса çитнĕ чух вăл бюро ларăвĕ пулса иртекен Илья Николаевич кабинечĕ умĕнчи пысăк пӳлĕмре — акă ăçта тĕл пулчĕç вĕсем!—Аркадие станцирен райцентра çитиччен лартса килнĕ шофер хĕрлĕрех çӳçлĕ хытанка йĕкĕтпе калаçса ларатчĕ. Талыкин пырса кĕрсен, вĕсем иккĕш те йăл кулса илчĕç. Лешĕ палларĕ. Тăрса алă пачĕ. Паллашрĕç. Хĕрлĕрех çӳçлĕ йĕкĕт кӳршĕри МТС-ăн старши механикĕ Угандеев пулнă иккен. Виçпилеше — тăван ялне — вăл хăйĕн директорĕпе, арăмĕпе икĕ хĕрĕ патне кĕрсе тухмалла килнĕ-мĕн. («Ман хуçа бюро членĕ вĕт, пĕр килсен, виçтăват сехет те тăма тивет»). Директор часах пушанать те пулмалла ĕнтĕ — ларăвăн кун йĕркинче юлашки ыйту, Юманкасси МТС ĕçĕсене пăхса тухасси çеç юлнă.

— Эсир ун чух ĕçлеме килнĕ иккен,—терĕ вăл.—Эпир ыйтаймарăмăр та. Сирĕн МТС-а, ак, Василий Михайлович патне пулăшма тесе кайнăччĕ те,—а-а, салам, Василий Михайлович!—йышăнмарĕ. Халĕ мĕнле пыраççĕ-ха ĕçсем? Чăнах, пырам, çăмăлрах пулĕ, эпир юсаса пĕтертĕмĕр комбайнсене.

— Халĕ майлашса кайрĕç-ха ĕçсем,— терĕ Талыкин, Угандеев панă вырăна ларнă май; Ухваров лармарĕ.— Пыма килĕшетĕр пулсан—тархасшăн, эпир канашласа пăхăпăр-ха ак Василий Петровичпа.

Вăрахах калаçса лараймарĕç. Часах бюро ларăвĕ пыракан Федотов пӳлĕмĕн алăкĕ уçăлчĕ те унтан агротехникăна пăсса акакан «Ирĕк» колхоз руководителĕсем, парторганизаци секретарĕ, председатель тата агротехник — тураса якатнă кăвакрах шĕвĕр сухаллă тăпăлтăпăл старик—тухрĕç. Тухсанах вĕсем алăк умĕнче чарăнса тăчĕç те пĕр-пĕрин çине: «Лекрĕмĕр вĕт, э?» Кун пек тумалла пулман çав. Неушлĕ эпир çакна та пĕлмен ун чух?» тенĕ пек, пăхса илчĕç те тумланма пуçларĕç.

Бюро ларуне Юманкассене чĕнчĕç.

Чи малтан Ухваров, ун хыççăн Талыкинпа Лисков, чи

кайран, йăпшăнкаласа та хăравçăлла, кăн-кан пăхкаласа, Козлов кĕчĕ. Пĕр ушкăна, Илья Николаевич сĕтелне урлă тăрăнса ларакан сĕтел пуçне пырса ларчĕç.

Ларсан, Талыкин тепĕр хут Илья Николаевич çине пăхса илчĕ. Секретарь ывăннă сăнлă, анчах куçĕсем пĕркунхинчен те чĕррĕнрех çиçнĕн туйăнаççĕ. Юманкассем кĕрсен, Талыкин çине пăхса, вăл аран палăрмалла кулса илчĕ, саламласа, пуçне сулчĕ. Унăн черченкĕрех сынăнни пек шуранкарах сăн-пичĕ те, сулахай питçăмарти çинчи пур паллипе çамки çинчи темле пысăк суран хыççăн юлнă çĕвĕ йĕрĕсем те Аркадие таçта, тахçан курнă çынна аса илтерчĕç. Тен, çав Озерки хули патĕнче ӳксен тĕл пулнă суранлă летчик мар-ши? Тен, чăнах та, çавах? Халĕ Аркадий аванах аса илчĕ: çавах! Сăнĕ те — вăл ун чух тискерччĕ çеç — сасси те. Астăвать-ши халĕ Илья Николаевич çав асаплă кунсене? Усрать-ши вăл Аркадий панă юман портсигара?.. Кунĕсене астăвать пулĕ те, Аркадие палласа илчĕ-ши?..

— Бюро Юманкасси МТС директорĕн Ухваров юлташăн комбайнсене юсас ĕç мĕнле пыни çинчен каласа панине итлет,—пĕлтерчĕ Федотов, Юманкассем ларакан сĕтел пуçнелле пăхса.—Тархасшăн, Ухваров юлташ.

Василий Михайлович куçлăхне хывса тутăрпа шăлса тасатрĕ те ăна каллех тăхăнчĕ. Умне, сĕтел çине кăларса хунă хĕрлĕ хуплашкаллă пысăк блокнотне аллине тытрĕ, ура çине тăрса, малтан Козлов, унтан — Талыкин çине пăхса илчĕ. «Куратăр-и, МТС-ри ĕçсемшĕн сире мар, чи малтанах мана ответ тытма тивет», терĕç унăн темле пысăк ĕç çинчен шухăшланă чухнехи пек пăхакан куçĕсем.

— Комбайнсемпе тырпул пухса кĕртме кирлĕ ытти ялхуçалăх машинисене юсасси халĕ аван пырать теме пулать,—пуçларĕ вăл, пăртак блокнотне уçкаласа тăнă хыççăн.—Комбайнсенчен çуррине ытла — вăл миçине каларĕ — юсаса та пĕтернĕ ĕнтĕ. Ыттисене юсаççĕ. Хăшĕпĕри çеç расходламалли материалсем тата детальсем çуккипе тăраççĕ. Анчах çитес çывăх вăхăтрах ку çитменлĕхсене те пĕтерме ĕмĕтленетпĕр: «Автотракторосбытпа» калаçрăм та, «парăпăр», терĕç. Халĕ май килнĕ, вăй çитнĕ таран хамăр патăртах майлаштарма тăрăшатпăр-ха.— Малалла вăл хăш комбайнра мĕн çĕмрĕккине, мĕн çитменнине (дефектсен ведомоçĕнчен çырса илнĕ ĕнтĕ) вуласа кайрĕ.

Илья Николаевич ăна чармарĕ, анчах малтанхи пекех тимлĕн итлемерĕ те; тем çырма пикенчĕ. Ун çывăхĕнче, Васильева хирĕç ларакан пысăк кĕлеткеллĕ, самăртарах хура сăн-питлĕ çын—вăл Аркадие станцирен Виçпилешĕ çитиччен лартса килнĕччĕ; кӳршĕри МТС директорĕ, Угандеев «хуçи» пулчĕ пулмалла, Талыкин çине пăхса, кулам пек туса илчĕ. Аркадий вăл тем каласшăн пулнине туйрĕ.

Ухваров хыççăн сăмах Козлова пачĕç. Анчах вăл çĕннине нимех те пĕлтереймерĕ, Ухварова куçран пăхкаласа, ун сăмахĕсене çеç тепĕр хут каласа тухрĕ. Бюро членĕсем тата райхаçат редакторĕ — хăй çумĕнчех ларакан чалăшрах куçлă шуранка каччă — паракан ыйтусене те пĕлипĕлми, мăк-мак тукаласа çеç ответлекелерĕ.

Пĕр тĕрлĕ сăмаха, ни çынна, ни калакана усă паман сăмахсене итлесе ларса йăлăхнă бюро членĕсем Лисков калаçма тытăнсан тин хусканкаласа илчĕç. МТС-ри партбюро секретарĕ МТС-ра массăллă-политикăлла ĕçе япăх туса пыни, социализмла ăмăртăва кирлĕ таран сарса яманни тата райкомпа райисполкомра ĕçлекенсем те халиччен унта экскурсие пынă пек çеç пыра-пыра кайни, çителĕксĕр пулăшни çинчен каларĕ.

— МТС директорĕ те, Василий Михайлович, коллективран татăлса пурăнать темелле,—терĕ вăл малалла.— Механиксемпе мастерскойра ĕçлекенсен, комбайнерсен ĕçне тĕрĕслесе тăмасть вăл. Çавна пулах, хăйсен комбайнĕсене юсаса пĕтернĕ комбайнерсем тахçанах килĕсене саланнă, комбайнсемпе ытти машинăсене юсама кирлĕ япаласене Козлов, пирĕн старши механик пекки, унталла та кунталла салатать. Кунта вара иккĕшĕ те акă «шăвăç çук, хăма çук» тесе йăнкăртатрĕç. Козлов шăвăça ăçта чиксе пĕтернине Василий Михайлович хăй те аван пĕлет, анчах кунта вăл ним те шарламарĕ-ха... тата ăçтан тупса килнĕ-ха вăл çав «старши механика»?

Малтан Козлов, тавраналла: «Мĕнле кăна вăтанмасть суйма, тĕрĕс мар калать вăл», тенĕ пек пăхкаласа, кулам пек тукаласа та пуçне сулкаласа ларатчĕ, анчах Лисковăн юлашки сăмахĕсене илтсен, сасартăках пĕкĕрĕлсе ларчĕ те мăштах пулчĕ. Ухваров çиленсе, хĕрелсе кайрĕ. Анчах ним те чĕнмерĕ: тĕрĕс калать! Илья Николаевич çеç кулкаласа илчĕ, «кала, кала» тенĕ пек, пуçне сулчĕ. Кулли те, куçĕсем те... Çавах, çавах вăл, çав аманнă летчиках!..

Аркадий çак виç-тăват кун хушшинче асăрханă çитменлĕхсем çинчен, комбайнсене юсас ĕçе мĕнле хăвартлатма май пулни тата вăл тĕлĕшпе мĕн туни çинчен каласа пачĕ. Ун сăмахĕсем ытла критикăллах пулмарĕç, пăртак хӳтĕленме хăтланакан çынăнни пекрех тухрĕç. Анчах хăй каласа пĕтернине туйса, тепĕр хут çитменлĕхсем патне çаврăнас темерĕ вăл. Вĕсем çинчен Лисков та нумай каларĕ, Васильевпа Ишутов та — Угандеев «хуçи» — калĕç тен, шухăшларĕ вăл.

Вĕсем чăнах та питĕ вирлĕ каларĕç вара. Ухваровпа Козлова кăна мар, Лисковпа Талыкина та аван лекрĕ.

— Лисков хăй бригади малта пырсан çитет, тет пулас. Çураки пуçланас умĕн ытти бригадăсене хăй бригадинчи пек обязательствăсем илтересшĕн тăрăшман, халь те тăрăшмасть. Бригадăсенче социализмла ăмăрту обязательствисене ячĕшĕн çеç çырса хунă. Вĕсем мĕнле пурнăçланса пынине никам та тĕрĕслемест. Пайтах трактор бригадисенче трактористсен пурнăç условийĕсем çав тери япăх: будкăсенче таса мар, апат, вырăн йĕрки çук. Çавăн пекех МТС мастерскойĕсенче комбайнсене юсаса пурăнакан комбайнерсен те. Анчах, килсенех, ал айĕнчи ĕçсемпе, чи çывăхри çынсемпе паллашас вырăнне Аркадий Иванович та бригадăсене тухса кайнă,—терĕ Васильев.

Ытла хытă калани пулмарĕ ĕнтĕ ку, анчах Талыкин питĕ вăтанса кайрĕ. Ун питçăмартисем çунса тухас пек пĕçерме пуçларĕç.

«Илья Николаевич çеç ан паллатăрччĕ ĕнтĕ, аван мар атту»,—шухăшларĕ вăл, секретарь çине вăрттăн пăхса.

Çук, секретарь палламасть пулас. Кам шутлама пултартăр-ха пĕрре ăнсăртран, пачах ăнсăртран тĕл пулнă çынсем тепĕр хут ăнсăртран тĕл пулаççех тесе?

Те ун çинелле пăхса иментересрен сыхланса, те кирлĕ хут вулать, Илья Николаевич сĕтел çинелле пăхса ларать. Ухваров малтан темшĕн — критикăшăн ĕнтĕ, мĕншĕн пултăр тата!—çиленсе ларатчĕ, халĕ ун сăн-пичĕ йăвашланса кайрĕ. Ăна курсан, Аркадий Иванович директора шеллесе те пăрахрĕ. Йăнăшма, чăнах та, йăнăшкалать те пулĕ ĕнтĕ, анчах вăл чунсăр çынах мар çав, ăнăççăр пулакан кашни ĕç, паллах, ăна хурлантарать, кулянтарать. Неушлĕ ӳкĕнмест-ши акă халĕ, хăй йăнăшĕсене лайăх ăнланса, туйса илнĕ хыççăн?

Калаçакансем пĕтсен, решени йышăнчĕç те, Илья Николаевич лару хупăнни çинчен пĕлтерчĕ. Çынсем хыçалти

пӳлёме тухма пуçларёç. Ухваров та тăчё. Ассăн сывласа илчё те Талыкин енне çаврăнчё.

— Ну, пит хытă ёçлемелле пулать малашне,—терё вăл.—Угандеева чёнер-и эппин пулăшма?

Хăйсен пулăшуне йышăнманни çинчен ларура Ишутов та каларё. Çавăнпа та кун çинчен Аркадий Иванович хăй те калаçса пăхасшăнччё-ха Ухваровпа.

— Чёнер çав,—килёшрё вăл хаваслансах.

— Да, йывăр килет.

— Йывăрне — йывăр та, тумалла пулать. Парти хушать.

— Çапла.

Протезне нăтăртаттара-нăтăртаттара, вёсем патне Илья Николаевич пычё.

— Халь канашласа, шухăшласа пăхăр та тивёçлё вывод тăвăр,—терё вăл.—Бюро тёрёс каларё сире, тёрёс кăтартрё сирён çитменлёхсене.—Вăл Талыкин енне çаврăнчё:—Ну, ёç мёнле, килёшет-и?

— Килёштерме тăрăшатăп, Илья Николаевич. Ку ёçре манăн опыт сахалтарах та-ха, эсир пулăшăр акă, Василий Михайлович пулăшё — тен, хăнăхăп.

— Паллах, паллах,—терё секретарь.

Ухваров чёнмерё.

Çынсем саланма пуçларёç.

Илья Николаевич, туртса ярас тесе, портсигар кăларчё — юман портсигар!—анчах унта пирус пулмарё. Аркадий ăна хăй пирусне сёнме тăчё, анчах, секретарь Озерки таврашёнче хăйне вилёмрен çăлнă летчика асăнмалăх панă портсигара палласа илесрен хăраса, ним те шарламарё.

«Ёçсем майлашса, лайăхланса кайиччен пёлтерес мар-ха» — шухăшларё вăл. Пирусне вара секретаре Ухваров сёнчё.

— Ну, мёнле, Василий Михайлович, ярас-и сирён пата Угандеева?—пычё вёсем патне Ишутов.

— Килёшё-и пыма?

— Эпир тавçăрса иличчен вăл хăй шухăшласа тупнă-ха ăна. Ун пуçарăвё вăл.

— Ярăр эппин.

— Ёçе вăраха тăсиччен, эпё халех пыма пултаратăп,—хутшăнчё калаçăва Угандеев.

— Кай, кай эппин,—терё Ишутов; унтан пёр ушкăнра тăракан юманкассем еннелле çаврăнчё:—Анчах эсир ăна

ытлашши ĕçлеттерсе ан тарăхтарăр. Çынни вăл харсăрскер, хăваласа ямасан, шплинт йăтайми пуличчен ĕçлет.

— Ара, унăн хăйĕн канасси килмест вĕт,—кулса илчĕ Талыкин.—Пирĕн, хăвăрах пĕлетĕр, ĕçлемелли чылай-ха. Тен, тарăхмалли те пулĕ.

— Пĕрре лексен, часах хăтăлаймĕ çав,—шӳтлерĕ Ухваров та; хальччен чĕнмесĕр, шухăша кайса тăратчĕ те, вăл калаçма пуçлани Аркадий Ивановича самаях савăнтарчĕ.

Пурте пĕрле кайма килĕшрĕç. Вара тумланчĕç те сĕмтĕттĕм урама тухрĕç.

Тӳпене хуп-хура пĕлĕтсем карса илнĕ. Кĕçех, çуллахи пекех пăт-пăт тукаласа, çумăр ӳккелеме пуçларĕ. Анчах вăл çавăнтах чарăнчĕ; кăнтăр енчен варкăша-варкăша килекен ăшă çил хăваласа кайрĕ пулмалла. Вăл тепĕр касă илсе ан килтĕр тесе, çынсем васкама пуçларĕç.

Малтан Ишутов кайрĕ. Унтан вара юманкассем тапранчĕç. Илья Николаевичпа Васильев вĕсене райком çурчĕн тепĕр енче ларакан вездеходпа мотоцикл патне çитичченех ăсатса ячĕç.

## 17

Юманкассине çур сехет те каймарĕç пулĕ, анчах Аркадишĕн ку вăхăт çав тери вăраххăн иртнĕ пек туйăнчĕ. Унăн часрах МТС-а çитесси килчĕ. МТС-а çеç мар, киле те часрах таврăнасси килчĕ унăн: Униç аппана, унтан вара... вара Елюка курасшăн пулчĕ. Унпа нимех те калаçаймарĕç-ха вĕсем, Павăл çинчен те, ытти япаласем çинчен те. Чăн та, Павăл вилни çинчен каласа пама йывăр ĕнтĕ ăна, апла тума хатĕрленмест те-ха Аркадий, анчах çак юлашки кунсенче унăн темшĕн Елюка курса калаçасси килчĕ.

Лисков яла çитмерĕ, хăй бригадине кайрĕ; тракторсем ялтан инçетре, Чурапай патĕнчех акнă. Часах яла таврăнатпăр, тесе шантарчĕ те,—Угандеев та унпа пĕрлех кайрĕ.

Аркадий, сас-чӳ тумасăр картишне кĕчĕ. Пăлтăр алăкĕ патне те пынăччĕ ĕнтĕ, анчах Униç аппа çывăрнине чухласа илчĕ те — кĕмерĕ. Елюк хиртех пулмалла-ха... Неушлĕ вăл Козлова кăмăлласах пăрахнă-ши вара?

Лаç умне пырса ларчĕ. Урине кантарас тесе, аттисе-

не хыврĕ, протезне вĕçертсе илчĕ, вара, аллисемпе мĕн килчĕ ăна тыткаласа, хăрах урипе чанкки-чанкки туса, Униç аппа сарса панă — тен, Елюк та майланă пулĕ — вырăн патне иртрĕ. Унăн туртасси килчĕ,—Илья Николаевич ыйтсан, портсигарне палласа илесрен хăраса, пирус çук тенĕччĕ те, çул çинче, çынсен умĕнче, кăларса туртма именчĕ вăл,—вырăнĕ çине ларчĕ те пирус тивертсе ячĕ.

Вăхăт самаях иртрĕ пулмалла çав ĕнтĕ. Ялта, ăçта килчĕ унта, автансем авăтса ячĕç. Вĕсем лăпланчĕç çеç, таçтан инçетрен аслати сасси кĕрĕлтетсе килчĕ. Те шевле вылями, те çиçĕм çиçме пуçларĕ — лаç ăшчикки, синеçинех, йăлт та йăлт çутала-çутала илчĕ. Пăртакран Ăксăм еннелле мотоцикл тăрăлтаттарса иртсе кайрĕ. Лисковпа Угандеев хиртен таврăнчĕç пулмалла. Нумай та вăхăт иртмерĕ, урамра урапа çăтăртатни илтĕнчĕ.

«Елюк мар-ши?»

Анчах вăл пулмарĕ, пулсан та кĕмерĕ — урапа, çаплах çăтăртата-çăтăртата, майĕпен Чурапай енне иртрĕ те шăпланчĕ.

Аркадий кăвак çутă килеспе çеç çывăрса кайрĕ...

* * *

Те çывăрсах кайнăччĕ, те тĕлĕрсе çеç — тепре куçне уçнă çĕре ĕнтĕ алăк таврашĕнчи шăтăк-шăхăрсенчен лаç ăшнелле çутă-кăвак йăрăмсем тирĕне-тирĕне тăратчĕç.

Аркадий Иванович сиксе тăчĕ те хăвăрт-хăвăрт тумланса ячĕ, протезне тăхăнчĕ. Анчах аттисене тупаймарĕ— вĕсене лаç умĕнчи каска патнех пăрахса хăварнă-мĕн. Çутăласпа пĕр касă çумăр çуса иртнĕ те,—вĕсем йĕпенсе, исленсе кайнă. Çакăн хыççăн тин Аркадий пĕр мăшăр атăсăр пуçне тата тепĕр мăшăр ată та кирлине туйса илчĕ. Полкран тухса килес чух йăтса çӳресси тесе, вăл хăй çине тăхăннă япаласене хăварчĕ те (салтака темех кирлĕ мар вĕт) ыттисене пурне те—гимнастеркипе бриджине те, аттисене те — управлени звенин старшинине пачĕ.

«Паян кĕрсе тухасах пулать магазина,—шухăшларĕ вăл, çиййĕннипе чалăшма пуçланă кĕлеллĕ йĕпе аттисене тăхăннă май.—Костюм, кĕпесем туянас. Çарта çӳренĕ тума пĕтерес мар, асăнмалăх юлтăр»...

Елюк халĕ те килмен иккен-ха хиртен. Аркадий ăна, мĕншĕнне хăй те пĕлмесĕрех, кĕтсе пăхма та шутларĕ,

анчах ытти работниксенчен каярах юлса ҫитесрен шикленсе—ирпелен карӑнкаласа выртма юрататть тейӗҫ тата Козлов пеккисем!—МТС-а тухса утрӗ. Ӗнер ытла нимех те курман пекчӗ, анчах унта мӗн чухлӗ ӗҫ иккен! Райком бюровӗ ӑна ҫӗнӗ шухӑшсем, ҫӗнӗ ӗҫсем пачӗ. Аркадий Иванович вӗсене тума васкарӗ.

18

Козлов, хӑйне хӑй пусармалла, кунӗпе тем ҫинчен те шухӑшласа пӑхрӗ. Ӗҫлеймерӗ те. Кӑмӑлӗ пӗтӗмпех пӑсӑлса кайрӗ.

«Директорпа начар пурӑнман халиччен, итлекенччӗ вӑл. Ӳкӗнсе калаҫас та... Тупа тӑвас... Неушлӗ икӗ-виҫӗ листа шӑвӑҫлӑх та усӑ кӳмен ӗнтӗ МТС-а? Ӗҫлеме памаҫҫӗ, каятӑп тес, заявленине те ҫаплах ҫыратӑп. Ӳкӗтлӗ, конешнӑ...»

Тем те шухӑшла-шухӑшла тупрӗ. Тем те ӗмӗтленчӗ. Анчах вӗсенчен пӗри те пурнӑҫа кӗреймерӗҫ...

Ухваров унӑн заявленине вуласа тухрӗ те, механик ҫине пӑхмасӑрах, васкамасӑр ручкине илчӗ, пӗр сӑмах каламасӑр, сӗтел ҫинелле пӗшкӗнчӗ. Козлов, мӑйне тӑсса, заявленийӗ ҫине директор мӗн ҫырса хунине вулама тӑрӑшрӗ.

«Килӗшес, расчет парас».

— Бухгалтерине парӑр,—терӗ Ухваров, заявленине Козлова каялла парса.

Ак япала, кӗтменччӗ кун пек пуласса. Козлов вӗсене чӑнах та кирлӗ мар иккен! Мӗншӗн, мӗн пирки ҫаплах ҫиленчӗ-ха вӑл Козлова? Капла марччӗ вӗт-ха Ухваров халиччен? Замполит ӗҫех пулчӗ ку. Вӑл хӗтӗртнӗ пулӗ ӗнтӗ. Ӗҫекенсене юратмасть, теҫҫӗ вӗт. Курӑнмасӑр ӗҫмелле пулнӑ иккен пӗреххут...

Кантуртан вӑл яла мар, Аксӑм хӗррине анчӗ. Унта вара, хӑва тӗмӗсем хушшинче, тӗттӗмленичченех ларчӗ.

«Каятӑп кунтан,—ӗнтӗ темиҫемӗш хут шухӑшларӗ вӑл, кӗпер урлӑ каҫса ялалла хӑпарнӑ май.—Елюка илетӗп те пӗр-пӗр хулана каятӑп. Тӗнче Юманкассипе тулман, тупӑнӗ вырӑн. Ачи кансӗрлеме пултарать те ӗнтӗ, ӑна хӑварма та пулать. Униҫ аппа килӗшмесен, анне патне хӑть... Пӑхкалӗ, пӗчченех вӗт. Анчах. Анчах... пырӗ-ши-ха Елюк?»

Темле, чылайранпа тӑрӑшать пулин те, халиччен те калаҫса татӑлаймарӗҫ-ха вӗсем. Пӗрлешесси ҫинчен тӳр-

рипех калаçман та, çапах та Елюк кăмăлламасть пулас ăна. Те пĕрмай ĕçе васканă пирки, ерçӳ çук унăн — питех те калаçасшăн та мар вăл унпа.

«Ќĕçĕр пурне те тӳррипех калатăп. Илсе каятăпах. Курасчĕ çеç».

Çак шухăшсемпе вăл Елюк пурăнакан çурт еннелле утрĕ.

## 19

Аркадий паян та яла тĕттĕмленсен тин таврăнчĕ. Парк çумĕнче пайтахчен хĕрсем юрланине итлесе тăчĕ. Колхоз çамрăкĕсемпе паллашмалла, парка кĕрсе пăхма та шутланăччĕ ĕнтĕ, анчах Униç аппа çывăрса кайĕ те, шăкăртатса çӳресе ăна вăратмалла ан пултăр тесе, кĕмерĕ. Елюка та курасси килчĕ. Нимĕн те калаçман вĕт-ха вăл унпа. Неушлĕ Козлова кайма килĕшет-ши вара вăл?

... Пĕлмен, курман чухне ытлах кӳрентерместчĕ ку хыпар. Анчах халĕ... халĕ... курчĕ те!.. пӳрт умĕнчи сак çинче Елюк Козловпа ларнине курчĕ те унăн пĕтĕм ӳт-пĕвĕ сӳ! туса кайрĕ. Ним чĕнме, ним тума аптраса, Аркадий самантлăха чарăнса тăчĕ. Хăй те пĕлмен темле вăй ăна каялла çавăрчĕ, урам тăрăх аналла, Аксăм хĕрринелле илсе кайрĕ. Çыран çинче, кĕпер патне анакан çул хĕррине тытнă карлăк пуçне таянса ларакан ватă юман тĕлне çитсен, Аркадий чарăнчĕ. Çĕр айĕнчен авăнса тухнă тымар çине ларчĕ, тарăхса, пирус тивертсе ячĕ.

«Çынсем пустуях калаçмаççĕ иккен çав. Эх, Елюк, Елюк...»

— Аркадий Иванович,—илтĕнчĕ çав самантра хыçра Елюк сасси.—Ăçта каятăр эсир?

Чăнах та, ăçта каять-ха вăл? Аван мар пулса тухрĕ ку. Анчах... Елюк Тăван çĕршывшăн юлашки юнне панă çывăх юлташ арăмĕ-çке-ха!

— Аркадий Иванович, итлĕр-ха... Вăл хăй çыпăçать ман çумма, çул памасть... Сăмахне вара Мăнтăр Матĕрне сарнă... Эпĕ хам...

— Хăвăр кăмăлăр, Елюк. Анчах эпĕ сире Козловран пăрăнма канаш парăттăм. Павăл ячĕпе калатăп, ан çыхланăр.

— Ăçтан Павăла пĕлетĕр эсир?—тăруках хыпăнса ӳкрĕ Елюк; Аркадий çумне тымар çине пырса ларчĕ.

— Пĕр полкра çапăçаттăмăр эпир унпа...

— Пĕр полкра?.. Мĕншĕн ку таранччен те пĕлтермен эсир мана ун çинчен?

— Йывăр пулчĕ мана ун çинчен калаçма, Елюк...

Аркадий каласа пĕтерейменрĕ, шăпланса ларчĕ.

— Каласа парăр-ха, Аркадий Иванович...—Елюк ытла пăлханнипе ним тума аптраса, Аркадий аллине тытрĕ, сапаланчăк куçĕсемпе ун çине пăхса илчĕ.—Каласа пар-ха, мĕнле... вилчĕ вăл?

Йывăр ун çинчен калама. Тен, хускатмалла та марччĕ ку сăмаха? Аркадий хăйсем тăнă пĕр полевой аэродрома, полкри юлташĕсене, йăваш та лăпкă, хăйне хăй яланах айăплă çын пек тыткалакан Ямутова тата вĕçеве, Ямутовшăн та, Талыкиншăн та юлашки пулнă вĕçеве аса илчĕ.

...Каялла, аэродромалла таврăннă чух, Озерки хули патĕнче, вĕсене «мессерсемпе» «хейнкельсем» тĕл пулчĕç. Талыкинпа Ямутов вĕсенчен иккĕшне çапăçу пуçламăшĕнчех персе антарчĕç. Анчах малалла çапăçу йывăрланчĕ: Талыкин, — хăй, Ямутовăн — самолечĕ аманчĕ. Вара, усăсăр ӳкес мар тесе, Павăл таран турĕ: «мессерпе» «як» сывлăшрах саланса кайрĕç те хуçисемпех çĕре персе анчĕç... Çапла вара, задание вĕçсе каяс умĕн пĕрле ларса пирус туртнă хыççăн Аркадий Павăла урăх кураймарĕ...

Елюк Аркадин хурлăхлă калавне пуçне чиксе, ним чĕнмесĕр итлесе ларчĕ. Аркадий шăплансан, вăл тӳрленчĕ те, хулпуççинчен уртăнса, пуçне ун кăкăрĕ çине тайрĕ, ĕсĕкле-ĕсĕкле йĕме пуçларĕ. Аркадий, ăна лăплантарас тесе, аллине ун çурăмĕ çине хучĕ, усăнса тăракан хулăн çивĕтĕсене сăтăркаласа илчĕ.

— Каçар, Елюк... Анчах текех пытарма, чăтса тăма пултараймарăм эпĕ. Эпĕ... Хама та питĕ йывăр мана, Елюк... Эпĕ...

Те илтрĕ ун сăмахĕсене Елюк, те илтеймерĕ — юри тунă пекех, туран пĕр касă чăрсăр çил варкăшса килчĕ те юман çулçисене хускатрĕ, вĕсемпе шавлăн пăшăлтатса илсе, Аксăм тăрăх анса кайрĕ.

1951.

## ЧĔРЕ ХУШАТЬ

Çулталăк пуçламăшĕнче, иртнĕ çулхи ĕçсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, Гаврил Петрович кăçал та «Атăл» колхозпах ăмăртма шутларĕ. Ятарласа тунă пекех çав, атăлсен çĕрĕ те, йышĕ те вĕсенни чухлех — кая юлас-тăвас пулсан намăс та ĕнтĕ, çапах та кăмăллă ăмăртма: вăйсем икĕ колхозăн та пĕр пекех. Çитменнине тата председателĕпе те — Иван Захаровичпа,—вăл виçĕ çул хушши пĕр ротăра çапăçрĕ; саперсен ротинче — пĕрле Атăлпа Одер хушшине утса тухрĕ. Одер урлă каçнă чух çеç уйрăлчĕç вĕсем: Гаврил Петрович урине çухатрĕ; унтан тăшмана çĕнтерсе вăрçа вĕçленĕ хыççăн та-ха ултă уйăх хушши госпитальте выртрĕ.

Тĕл пулма вара вĕсем вăрçă пĕтнĕ çулхи кĕркунне, «Атăл» колхоз çывăхĕнчи станцире тĕл пулчĕç; чугун çул вĕсен хирĕпе иртет. Гаврил Петрович ун чух госпитальтен таврăнатчĕ. Иван Захарович вăл вăхăтра ĕнтĕ колхоз председателĕччĕ, кĕрхи калчасене пăхма тухнăччĕ. Вăл уксах Гаврил Петровича хăйĕн ула кĕсре кӳлнĕ çăмăл урапи çине лартрĕ те килне, Симĕскаса çитиччен леçсе хăварчĕ. Çул тăршшĕпех председатель хăйĕн ĕçĕсем çинчен калаçса пычĕ, хăйĕн шухăшĕ-ĕмĕчĕсене каласа кăтартрĕ.

— Начар пурăнатпăр-ха, Қавĕрле тусăм,—терĕ вăл.— Вăрçă вăхăтĕнче колхозăмăр кая юлнă. Халĕ ăна вăтам мисен шутне кĕртес тесен те нумай вăй хумалла пулать. Да-а, питĕ нумай тăрăшмалла. Вăрçăчченхи пекех тата мала та тухмалла вĕт-ха пирĕн. Çак ĕмĕтпе çеç пурăнатăп халĕ — чи мала тухасчĕ, «Атăл», атăлсем тетчĕр...

Иван Захарович ун чухне ĕнтĕ хĕрĕх çичĕ çула çитнĕччĕ; Гаврил Петровичран тăвата çул аслăрах вăл. Вăрçăра унăн çÿçĕ кăвакарса кайнăччĕ те — киле таврăнсан, ăна вăл хырса пăрахнăччĕ; халĕ те хырсах çÿрет-ха. Фронтри пекех хытканччĕ хăй, унти пекех вăртвартчĕ: «двухколки» çинчен темиçе хут та сике-сике анса, е сухаланине, е кĕрхи калчасене курас тесе, ана çине кĕре-кĕре тухрĕ. Хуп-хура та темле çуттăн курăнакан куçĕсем унăн йăлтăртатса çеç тăратчĕç; вĕсем халĕ те çаплах.

Халĕ Гаврил Петрович, хăйне председателе суйларĕç те, аван, питĕ аван ăнланать тусĕ ун чух мĕнле тарăхнине. Тарăхмасăр, тăрăшмасăр, вăй хумасăр илсе тухман пулĕ çав ĕнтĕ колхозне районти чи малти вырăна.

«Атăл» пур ĕçсене те кашни çулах чи малтан туса пĕтерет: çуракине те, кĕракине те, авăн çапассине те, ыттисене те. Чăнах та, Гаврил Петровича, ăмăртнă май, унран кая юлса самаях намăсланма тивет, анчах, çав ăмăрту хистенипех, вăл ытти колхозсенчен пайтахăшĕнчен мала тухать те,—савăнмалли те нумаях пулать; лайăх колхозпа ăмăртни усăллă çав.

Анчах кăçал, партин Центральнăй Комитечĕ октябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче Вунтăххăрмĕш съезда пухасси çинчен пĕлтерсен, Гаврил Петрович ку ăмăрту пирки питĕ хыпăнса ÿкрĕ, шухăша кайрĕ. Неушлĕ «Атăл» колхозран иртсе кайма, колхозри пысăк ĕçсене пĕлтĕрхинчен иртерех вĕçлеме пулмĕ-ши вара? Мĕнле пулĕ-ши, тăрăшса пăхсан, нихçанхинчен те тăрăшарах ĕçлесен? Хăçан та пулин чи мала тухмалла-çке-ха унăн, колхозăн ячĕ те «Малалла» вĕт?

Мĕнле пулĕ-ши мар, çине тăрсах тытăнмалла; иккĕленес пулмасть. Канашласа пăхас, майсем тупас пулать кăна тума. Унтан тырă леçмелли плана маларах тултарас, авăн çапса иртерех пĕтерес те... Иван Захаровича хистес — васкаччăр атăлсем те. Вĕсене курса — ыттисем. Вара çакăнпа хамăрăн партийĕмĕре, съезд уçăлнă тĕле, питĕ пысăк парне кÿнĕ пулăттăмăр.—Çапла шухăшларĕ Гаврил Петрович, çав пысăк та савнăçлă хыпара илтсен.

Вăхăта вăраха ямасăр, вăл парторганизаци секретарĕпе, Сергей Матвеевичпа калаçса пăхрĕ. Сергей Матвеевич вара, пур йывăр ĕçе те çăмăллатма, ăна ăнăçлă тума май тупаканскер, председатель сăмахне илтсен, савăнса кайрĕ.

— Эпĕ хам та çавăн çинчен шухăшлаттăмччĕ-ха,— терĕ вăл.—Парти съезчĕ умĕн питĕ пысăк çитĕнӳ тумалла пирĕн. Эпĕ шутларăм-шутларăм та-ха, тепĕр молотилка тупмалла мар-ши тетĕп.

— Питĕ аван шухăш ку санăн, Сергей Матвеевич. Канашласа пăхас пулать.

Çав каçах ун пирки вĕсем колхозри коммунистсемпе, унтан,—йĕтеме кайса,— колхозниксемпе канашласа пăхрĕç. Коммунистсен пуçарăвĕ пурне те савăнтарса, çунатлантарса ячĕ. Колхозниксем — ваттисем те, çамрăккисем те,—халĕ, съезд умĕн, нихçанхинчен те тăрăшарах ĕçлеме пулчĕç, элеватора тырă турттаракансен бригадине те, авăн çапакансен бригадине те пысăклатма сĕнчĕç.

* * *

Письмоносец хаçат, журнал илсе килес-тăвас пулсан, Иван Захарович чи малтан яланах районта тухса тăракан хаçата суйласа илет. Вулакансен кăмăлне пĕлсех пулĕ çав, унта, кашни номертех, колхозсенче çĕршывăмăра тырă парасси тата авăн çапасси мĕнле пынине кăтартакан сводка пичетлесе кăлараççĕ. Илет те Иван Захарович хаçата, тӳрех çав сводкăна пăхать: ытти колхозсем унран иртсе кайман-ши? Вара «Атăл» пур енĕпе те малта пынине курса ĕненнĕ хыççăн тин урăх япаласене вулама пуçлать.

Хальхинче те вăл çаплах турĕ. Анчах сводкăна ялан пулакан вырăнта тупаймарĕ вăл — ăна иккĕмĕш страницăна куçарса лартнă. Ун вырăнне, съезд умĕнхи ăмăрту колхозсенче мĕнле пыни çинчен калакан çырусемпе пĕрле, «Малалла» колхоз членĕсен обязательствине пичетленĕ. Малалласем çĕршыва тырă парса та, авăн çапса та сентябрь пуçламăшĕнчех пĕтерме пулнă, районти ытти колхозсене хăйсем пек ĕçлеме чĕннĕ.

Çак кĕтмен япала Иван Захаровича шалтах тĕлĕнтерсе ячĕ. Шиклентерчĕ те темелле: Гаврил Петрович унран иртсе кайма, ăна кая тăратса хăварма шут тытман-ши? Ик-виçĕ çул ялан малта пынă хыççăн кая юлсан, паллах, питĕ те намăс пулать ĕнтĕ. Гаврил Петрович хăех кулĕ:— «Аха, тăванăм, иртсе кайрăмăр-кайрăмăрах сиртен!»— тейĕ. Питĕ те кӳренмелле пулать вара!

Кӳренме лекет-и-ха е çук-и — Иван Захарович ăна ун чухнех пĕлеймерĕ,—анчах, ыттисенчен яланах малта пулма тата хăйне мухтанине çеç хăнăхнăскер, тусĕ ăмăртура

хăйне çĕнтересрен çав тери хăраса пуранчĕ вăл. Хăра малли те пур çав ĕнтĕ: апла-капла пулас пулсан, пĕтĕм чапĕ, ырă ячĕ Гаврил Петровича куçать вĕт!

Çакăн хыççăн тата икĕ кунтан унăн чăнах та сехĕрленсе ӳкме тиврĕ.

Кӳршĕ колхозпа чикĕленнĕ çĕртме пуссине курма кайсан, вăл «Малалла» колхозăн вăрман тăрăхне тасатма тухнă агролесомелиораторне тĕл пулчĕ. Вăрман ăсти ăна хăйсен колхозĕ планран ирттерсе тыра пама тепĕр обоз яни тата паян-ыранах авăн çапса пĕтерессипе çинчен каласа кăтартрĕ. Ун сăмахĕсем председатель чĕрине шар! шар! çура-çура кайрĕç; Иван Захарович аллинчи тилхепине те пăрахрĕ, шурă пиртен çĕлетнĕ картузне хывса, çутă пуçне кăтăр-кăтăр хыçса илчĕ. Унăн сасартăках çилли тăвăлса килчĕ, эрлĕк амаланса хăпарчĕ. Анчах халь тин ĕнтĕ ним тума та çук: тырă памалли плана «Атăл» ыран каççăр та тултараймасть пулĕ-ха, çапма вара... тăват-пилĕк куна та çитет...

Унăн текех калаçса тăрасси те килмерĕ, тилхепине каллех аллине илсе туртрĕ те çул çинелле кустарма пуçларĕ; ытла пăлханнипе, агролесомелиораторпа сывпуллашма та манчĕ.

«Пĕтерчĕ, пĕтĕмпех ята ячĕ,—шухăшларĕ вăл ĕнтĕ темиçемĕш хут та, ялалла васкана май.—Ыран кăвак çутăллах района рапорт пама вĕçтерĕ ĕнтĕ. Епле каяс мар-ха, районĕпех мала тухнă та иккен...»

Иртнĕ çулсенче Иван Захарович çапла тăватчĕ вĕт хăй те: çураки хыççăн та, тырă парса татсан та, авăн çапса пĕтерсен те, района рапорт пама каятчĕ. Унтан— эрлентĕр тесех пуль çав — «малаллана», Гаврил Петровича шăнкăртаттаратчĕ. «Ăмăрту договорĕ çине палла тăвăр унта: эпĕ пĕтертĕм»,—тетчĕ. Гаврил Петрович хăй те çапла тăвать пулĕ-ха...

Тем те шухăшласа пăхрĕ кунĕпе Иван Захарович. Тĕттĕмленсен, шӳт тума юратакан лесомелиоратор юри хăратмарĕ-и вăл, суйса памарĕ-и тесе, кӳршисем патне хăй кайса килме шут тытрĕ.

* * *

«Малаллана» каякан анлă çул çине çĕрле тухсан, Иван Захарович яланах Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланнă кунсене аса илет. Кунта питĕ кирлĕ тесе, райком ярасшăн марччĕ ăна фронта, анчах вăл çине тăрсах

ыйтрĕ те (характерĕ çавăн пек ĕнтĕ унăн — яланах паллăрах, пысăкрах ĕç тăвасшăн), райком килĕшрĕ. Пĕр тĕттĕм, пĕлĕтлĕ каç вара вăл тăван ялĕнчен тухрĕ те çак çулпа кайрĕ — фронта. Кўлнĕ урапа çине лармасăр, Иван Захарович çуран утса пычĕ. Поезд килнĕ тĕле васкамасан та ĕлкĕретчĕç те, ав çав тĕмеске çине ларса та канчĕ вăл... Ķанма тесе те мар, тăван çĕршыв илемĕпе киленме, ăна лайăхрах астуса юлма ларчĕ...

Çăмăл урапа чугун çул урлă кăлтăртатса каçрĕ. Ķăшт кайсан, «Малалла» хирĕсем пуçланчĕç. Йĕтеме çитме инçе те юлмарĕ ĕнтĕ: темиçе утăм каймалла та сылтăма пăрăнса кĕмелле. Унтан вара çухрăм та каймалла мар пулĕ — молотилка улани, çынсем шавлани, ав, уççăнах илтĕнет.

Çулăн сулахай енчи кĕртырри пуссине пĕтĕмпех сухаласа пăрахнă — хуп-хура курăнать. Сылтăм енчине çеç пĕтереймен: çултан пĕр икçĕр метрта, шыв чўхенсе выртнă пек, шурă хăмăл тăрăхĕ курăнать.

«Авăн çапассипе те тырă леçессипе пăртак каярах юлтăм пулсан, кĕрхи çĕртмене маларах пĕтерĕп, тен», — хĕпĕртенĕ пек пулчĕ çакна курсан Иван Захарович. Анчах сасартăк çулăн сулахай енче те молотилка кĕрлесе кайни ун кăмăлне каллех пăсса ячĕ.

«Ăçта илнĕ тата тепĕр молотилка? Çукчĕ-çке вĕсен, — шухăшларĕ Иван Захарович. — Авă мĕншĕн пиртен маларах пĕтереççĕ иккен вĕсем! Ултавпа, суяпа хăтланаççĕ, чееленеççĕ, чапа тухасшăн...»

Вăл, çиленсе кайса, тилхепине туртрĕ те лашине чарса тăратрĕ.

«Ĕнтĕ каймасан та юрать. Мĕншĕн маларах пĕтерни халĕ пĕтĕмпех паллă. «Малалла» та «Малалла» тейĕç ĕнтĕ районта. Хаçатра та... Сводка та урăхла пулать...»

* * *

Тепĕр кун ирхине Иван Захарович йĕтеме кайма çеç тăнăччĕ, Симĕскас енчен хуллен темле пысăк кўлепеллĕ ешĕл машинсем шуса килни курăнчĕ.

— Ķусем молотилкăсем вĕт! — кăшкăрса ячĕ правленирен чупса тухнă счетовод; куçлăхне хыврĕ те шăлкаласа илчĕ, тепĕр хут тăхăнчĕ. — Ăçта каяççĕ-ха вĕсем капла?

— Пĕлместĕп,—ним калама аптрарĕ Иван Захарович.—МТС-а мар пуль те...

Молотилкăсем çывăхарах çитсен, вăл вĕсене хирĕç кайрĕ. Анчах малтине сĕтĕрсе пыракан трактор çинче Гаврил Петрович кулкаласа ларнине курчĕ те, ним тума аптраса, чарăнса тăчĕ.

«Ăçта илсе каять-ха вăл молотилкисене? Неушлĕ çапса пĕтернĕ те МТС-а леçет?..»

— Иван Захарович, салам!—кăшкăрчĕ Гаврил Петрович, сылтăм аллине çĕклесе. Вăл майĕпен çĕр çине анчĕ те, уксахлакаласа, «Атăл» председателĕ патнелле утса пычĕ.—Сире пулăшма килетпĕр. Йышăнатăр-и?

Иван Захарович ним чĕнме аптрарĕ.

— Эпир пĕчĕк молотилкăпа та çапрăмăр кăçал. Ытти çулсенче вир те пăрçа çеç çапаканччĕ, кăçал акă тулă та çапрăмăр. Çавăнпа маларах пĕтертĕмĕр те ĕнтĕ,—кулкаласа каларĕ Гаврил Петрович.—Ăна та сĕтĕрсе килтĕмĕр акă; аван ĕçлет — хăвăртрах пĕтерĕпĕр... Кăçал çине тăрсах сиртен иртсе кайма шутласа хутăмăр эпир. Ан çилен, пирĕн колхоз ячĕ те «Малалла»-çке-ха; ку ята хăçан та пулин тĕрĕсе кăлармалла ĕнтĕ. Çапла-и?

Паçăр, мăшкăлламаллах çапла хăтланать ку тесе, çиленсе те, тарăхса кайнăччĕ ĕнтĕ Иван Захарович, анчах тусĕн тата трактористсемпе молотилка механикĕсен ăшшăн, ыррăн çиçекен куçĕсене курсан, унăн пур çилли те сĕвĕрĕлсе кайрĕ. Вăл çĕркĕ Гаврил Петрович çинчен аван мар шухăшланăшăн, тата иртнĕ çулсенче, унтан мала тухсан, хăйпе ăмăртакан тусне пулăшма кайманшăн ӳкĕнме пуçларĕ.

— Пысăк тав ĕнтĕ сире, каçарăр,—терĕ вăл, хăй шухăшне çынсене палăртас мар тесе мĕнле тăрăшрĕ пулин те, хĕрелме пуçласа.—Сире чăрмантаратпăр та ĕнтĕ... Каярах юлтăмăр вĕт... Эппин, хăвăрăнне пĕтертĕр пулсан...—Иван Захарович такăнма пуçларĕ, пулăшма килекенсене куçран тӳрех пăхма хăймасăр, пуçне çĕрелле усрĕ.

— Эпир хамăрах килнĕ вĕт, Иван Захарович, чĕнмесĕрех,—кулса илчĕ Гаврил Петрович.—Хăвах пĕлетĕн, парти, чĕре çапла хушать пире, коммунистсене. Пĕр ĕç тăватпăр вĕт, пĕр шухăшпа, пĕр ĕмĕтпе пурăнатпăр.

«Парти, чĕре çапла хушать пире, коммунистсене». Неушлĕ Иван Захаровичăн чĕри, кăмăлĕ урăхларах пулнă-ши вара? Урăхларах та пулнă пулĕ çав, хăй чапĕшĕн ытларах çуннă пулсан. Ĕçлемен мар ĕнтĕ, лайăх, чунне

парса ĕçленĕ, анчах мĕншĕн ыттисене те хăй пек ĕçлеме вĕрентмен, пулăшман вăл иртнĕ çулсенче? Вĕрентмелле, пулăшмалла пулнă. Парти çапла хушать. Чĕре çапла хушмалла коммунистсене!

Иван Захарович пушшех те хĕрелсе кайрĕ. Тепĕр хут: «Пысăк тав ĕнтĕ сире... каçарăр...»—текелесе Гаврил Петрович аллине тытса чăмăртарĕ; вара икĕ председатель те малти трактор çине хăпарса ларчĕç.

Молотилка сĕтĕрнĕ тракторсем «Атăл» йĕтемĕ еннелле çул тытрĕç.

1952.

## АКАШ КӐЛЛИ

Икӗ ҫул хушши отпускра пулман тесе, директор мана кӑҫал вӑрҫа-вӑрҫах отпуска хӑваласа ячӗ.

— Епле вӑл ҫамрӑк ҫыннӑн канас килмест, тет? Ҫӳре ирӗкре, вӑй пух,—терӗ вӑл, эпӗ килӗшсен.—Тен, туй та тусах пӑрахӑпӑр.

Туйне ӑна отпуск илмесӗр те тума пулать те-ха, анчах шӳт тумасӑр чӑтаймасть вара пирӗн директор.

Шӑп ҫав кунах тата манӑн Павӑл юлташа та отпуск пачӗҫ. Вӑл мӗнле канма шухӑшлать-ши тесе, каҫпа эпӗ ун патне кайрӑм.

Павӑл килтехчӗ. Эпӗ пырса кӗрсен, вӑл тем пекех савӑнчӗ.

— Шӑп вӑхӑтлӑ ҫитрӗн,—терӗ вӑл.—Эпӗ хам та сан пата пырасшӑнччӗ-ха. Кусара сунара кайса курар мар-и?

— Тем тумалла ӗнтӗ...

Тӗрӗссипе каласан, эпӗ сунарҫӑ та мар. Мӗн сунарҫи пултӑр манран. Хальччен эпӗ кӑвакал, куян мар, ҫерҫи те тытса курман. Каясшӑн та марччӗ ӗнтӗ, анчах Павӑл мана тӗрлӗрен сунар мыскарисем каласа кӑтартрӗ те, эпӗ килӗшрӗм. Мур хыптӑр кӑвакалне-куянне, Павӑл калашле, курса ҫӳрени паха.

Пуҫтарӑнтӑмӑр та кайрӑмӑр...

Каҫпа пӗр пӗчӗк разъезда ҫитсе антӑмӑр.

Йӗри-тавра пӗр вӑрман таврашӗ те курӑнмасть, тӳп-тӳрем хир, хир, хир сарӑлса выртать. Унта-кунта ҫеҫ ҫӗнӗ хунав лаптӑкӗсем курӑнкалаҫҫӗ. Кусем вӗсем — пулас вӑрмансем. Кайӑк-кӗшӗк таврашӗ те ҫук пулӗ кунта. Мӗн хӑямачӗ пултӑр ку ҫара ҫӗрте?

— Эс вӑрман ҫуккине ан пӑх,—тет Павӑл, ман шухӑшсене пӗлнӗ пекех.—Кунта кӳлӗсем нумай. Кусара ҫеҫ

çитсе ӳкесчӗ. Унта çӗр выртăттăмăр та ыран ирех Акăш кӳлли патне анăттăмăр. Эх, Тимӗр, курас пулсан эсӗ унти кăвакалсене! Тултармăш пек...

Разъезд çурчӗ умӗнче икӗ лав тăрать. Вӗсенчен хăшӗ те пулин Кусара каймасть-ши тесе, эпир унталла утрăмăр.

— Эсир те Кусара-им вара?—ыйтрӗ пиртен çитмӗл çулалла çитнӗ шӗвӗр сухаллă старик.

— Кусара çав. Эсӗ унта каймастăн пулӗ вӗт?

— Ларăр эппин, каймалла пулать. Паян та килмерӗ...—текелесе, старик лашине çул çине пăрчӗ те, тилхепине пуçтарса тытса, урапи çине хăпарса ларчӗ.

— Кама кӗтетӗн вара, мучи?—ыйтрӗ Павăл.

— Мăнука-çке, мăнука.

Мучин Инçет-Хӗвелтухăçӗнче служить тăвакан мăнукӗ тăхăр кун каялла хăй отпуска килме тухни çинчен пӗлтернӗ-мӗн. Ăна кӗтсе илме тесе, мучи ӗнтӗ икӗ кун умлăхыçлă разъезда килнӗ, анчах лешӗ çаплах çитеймен.

Эпир урапа çине хăпарса лартăмăр. Çăмăл урапана кӳлнӗ самăр ут тулхăрса илчӗ те тип-тикӗс çул тăрăх урапа йывăрăшне сисмен пекех юртса кайрӗ.

Часах каç пулса килни палăрчӗ. Хирти кăвакрах ӗнтрӗк майӗпен çăралма пуçларӗ. Тӳпере малтанхи çăлтăрсем хыпса илчӗç.

Исси мучи, пайтахчен чӗнмесӗр пынăскер, тилхепине чӗркуççи çине хучӗ те кӗсйинчен табак енчӗкӗпе пăхăр пуçлă чӗлӗмне кăларчӗ.

— Туртса ярăр,—терӗ вăл, пирӗн енне енчӗкне тăсса.

Пирӗн пирус та пурччӗ, анчах эпир, мучие кӳрентерес мар тесе, хаçат татса илтӗмӗр те чӗлӗм валли туранă шултра табакран пирус чӗркесе ятăмăр.

Çакăн хыççăн çеç Исси мучи кăмăлӗ уçăлнă пек пулчӗ. Вăл сӳнме пуçланă чӗлӗмне тепӗр хутчен табак тӳсе тултарчӗ те, ăна пăклаттара-пăклаттара, хамăр пыракан çула мухтама пуçларӗ.

— Çул мар, çатма!..

— Да, лайăх çул,—килӗшрӗмӗр эпир те.

— Ӗлӗк лакăм çине тӗкӗмччӗ. Хуçнă тӗнӗлсен хисепне те манса кайнă эпӗ. А халӗ... Алексей Иванча тав тăвас пулать, пурне те çавă...

— Кам вара вăл, Алексей Иванович?

— Ара, Алексей Иванчă, Петриванов, пирӗн председатель. Кам пултăр тата?—Вара Исси мучи шăпланчӗ те,

шухăша кайса, яла кĕричченех пĕр сăмах та чĕнмерĕ.

— Петриванова эпĕ хам та пĕлетĕп,—терĕ мана шăппăн Павăл.—Пĕтĕм облаçĕпе чапа тухрĕ...

Ку хушамата эпĕ кунччен те илтнĕччĕ пулас, анчах ăçта илтнине астуса илеймерĕм. Сахал-им вара кун пек хушаматлă чăвашсем?

Яла кĕнĕ çĕре тĕттĕмленсе çитрĕ. Исси мучи пире тӳрех председатель патне илсе кайрĕ.

— Алексей Иванчă çапла хушать,—терĕ вăл.

Урапа пысăк çĕнĕ çурт çумне çитсе чарăнчĕ.

— Акă, кунта.

Исси мучи тата тем калама тăчĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ: вырăсла хапха çумĕнчи пĕчĕк калинкке уçăлчĕ те пирĕн умма вăтам пӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ патвар йĕкĕт тухса тăчĕ.

— Кĕрĕр, кĕрĕр, юлташсем,—янăраса кайрĕ таврара унăн хулăм сасси.—Тавтапуç сана, Исси мучи, хăнасемшĕн. А Ванюк мĕнле? Паян та çук-и?

— Çитеймерĕ пулас çав,—мăкăртатса илчĕ мучи, вара:—Сыв пулса тăрăр-ха, ырă каç пултăр,—текелесе лашине çул çине кăларчĕ.

— Паллашар эппин: Алексей Иванович Петриванов.

Эпĕ хам ята пĕлтерсе, ун аллине чăмăртарăм. Павăлпа вĕсем тахçантанпа пĕлекен çынсем пек саламлашрĕç.

— Атьăр, кĕрер.

Эпир пысăк та çутă пӳлĕме кĕрсе тăтăмăр.

— Иртĕр, иртĕр, юлташсем,—каллех кĕрлесе кайрĕ Петриванов сасси.—Амуницийĕре хывăр, килти пек пулăр.

Эпир сунар хатĕрĕсемпе çиелти тумтирсене хывса çакрăмăр та тĕпелелле иртсе лартăмăр.

Пăртакран пӳлĕме яштак пӳллĕ, кăмăллă сăн-питлĕ çап-çамрăк хĕрарăм кĕрсе тăчĕ. Ку Алексей Ивановичăн арăмĕ пулчĕ. Вăл пире сывлăх сунса пĕр-ик сăмах хушрĕ те васкаса сĕтел çине каçхи апат пуçтарма тытăнчĕ.

Ирпе пĕçерсе кăларнă пӳремеч-ватрушкăсемпе, ăшаланă пулăпа тата пыллă сăрапа хăналанă май, Алексей Иванович пире тĕрлĕрен ыйтусем пама пуçларĕ. Хăйсем çинчен те каласа пачĕ:

— Çĕр çирĕм пилĕкшер пăт илтĕмĕр гектартан иртнĕ çул. Кăçал пĕр вăтăртан иртет пулас...

Алексей Ивановича итленĕçемĕн итлес килет. Вăл хăйĕн витĕмлĕ, ăслă сăмахĕсемпе, янăравлă сассипе çынна пĕтĕмпех тыткăна илет. Пайтахчен çапла ăна итлесе ларнă хыççăн, мана Петриванова кунччен курнăнах туйăнчĕ. Курнă-ши вара? Ăçта? Хăçан?

Çурçĕр çитеспе пирĕн калаçăва хуçа арăмĕ татрĕ.

— Алюша,—терĕ вăл, Алексей Ивановича чĕнсе.— Çывăрма выртма вăхăт мар-и? Хăнасен ыран ирех сунара каймалла вĕт.

— Юрĕ эппин, паянлăха çитĕ,—терĕ юлашкинчен Алексей Иванович та.—Эсир Акăш кӳлли патне каятăр вĕт-ха? Ирхине пĕрле кайăпăр.

Павăл выртнă-выртманах çывăрса кайрĕ. Эпĕ, Алексей Ивановича кунччен ăçта курнине аса илме тăрăшса, пайтахчен тарăн шухăша кайса выртрăм.

«Ăçта курнă-ха эпĕ ăна?»—темиçе хутчен те ыйтрăм хамран хам, асаилӳсемпе асапланса выртнă май; вара сасартăк пĕр тĕлпулăва аса илтĕм те, сивĕ шывпа сапнă пекех, тăрса лартăм. Неушлĕ çавă-ши вара? Çук, пулма пултараймасть! Чим-ха, ăна та Алеша Петриванов тесе чĕнместчĕç-ши? Çапла çав!

«Çавах»,—шухăшларăм эпĕ, вăрçă çулĕсенчи пĕр тĕлпулăва тепĕр хут аса илсе.

... 1943 çулхи август пуçламăшĕнче мана арми хаçачĕн редакторĕ чĕнсе илчĕ те Орел хули патĕнче çапăçакан пĕр истребительнăй дивизие кайма хушрĕ. Вăл вăхăтра, вăхăт çуккипе пулас çав, чаçсемпе подразделенисенчи корреспондентсем сахал, çырсан та информацилле çырусем çеç, çыратчĕç те, хамăр армири сывлăш паттăрĕсен мухтавлă ĕçĕсем çинчен çырса кăтартма пирех тиветчĕ.

Эпĕ хамăн «ФЭД»-па планшета çакрăм та, çула май çакланнă пĕр грузовик кузовĕнче силлене-силлене, çав кунах хама янă дивизие кĕрекен Родимый майор полкне çитрĕм.

Штабра мана оперативнăй дежурнăй, сăмах ваклама ытла юратсах кайман çап-çамрăк лейтенант кĕтсе илчĕ.

— Майор хăй кабинетĕнче,—терĕ вăл, эпĕ мĕн шутпа килнине пĕлсен.—Анчах халĕ ун патĕнче Петриванов. Тăхтăр пăртак, ларăр. Туртатăр-и?—Лейтенант уçă портсигарне ман еннелле тăсрĕ.

Эпир туртса ятăмăр.

— Кам вара вăл Петриванов?—ыйтрăм эпĕ, полк

командирĕ патĕнче кам пулнине пĕлес шутпа.—Заместителĕ мар пулĕ вĕт?

— Çу-ук,—терĕ лейтенант; вара, те ман ыйту çине хурав пама манса кайрĕ, те тӳрех калама кăмăл тумарĕ, пӳлĕмри пĕртен-пĕр хăма сак çине ларчĕ те хăй тĕллĕн калаçма пуçларĕ.—Тĕлĕнмелле этем. Чĕркуççи таран ури çук, а вăл каллех фронта килет.

— Кам çинчен çак эсир?

— Алеша Петриванов çинчен-çке. Халь вăл командир кабинетĕнче. Протезпа çӳреме те хăнăхса çитеймен-ха, хăй кунталлах, тăван полкаллах туртăнать. Госпитальрен тарса килнĕ теççĕ. Аттестатсăр-мĕнсĕрех...

Малалла вăл акă мĕн каласа пачĕ.

Ултă уйăх каялла звено командирĕ Петриванов, сывлăшри çапăçура аманса, тăшман тылне ӳкнĕ пулнă. Уйăх хушши полкра ун çинчен никам та ним те пĕлмен. Уйăхран çеç полка унран хыпар килнĕ: вăл темле майпа тăшман тылĕнчен хăтăлса тухнă та Уралти пĕр госпитале лекнĕ.

— Тĕлĕнмелле этем,—терĕ юлашкинчен лейтенант.—Никам та шутламан ĕнтĕ вăл каялла таврăнĕ тесе, а вăл пур... Çырас пулсан, обязательно çырăр ун çинчен.

Лейтенант сăмахĕсенче те, сассинче те вăл Петриванова тем тери юратни, хисеплени палăрчĕ. Манăн урасăр летчика часрах курас килчĕ.

— Час тухас çук пулас,—терĕ лейтенант, çунса пĕтнĕ пирусне алăк патĕнче ларакан çĕтĕк витрене пăрахса.—Батя темшĕн ятлать ăна. А вăл — ай, шуйттан — хӳтĕленет. Илтетĕр-и?—Лейтенант сасартăках шăпланса, аллине çӳлелле çĕклерĕ те ман куçран пăхса, тем итлеме пуçларĕ.—Во, илтетĕр-и?

Кӳршĕри пӳлĕмрен, чăнах та, хулăн та чĕтрекен—ăна пула стенасем те чĕтренĕ пек туйăнчĕç—вăйлă сасă илтĕнчĕ. Ку ĕнтĕ Петриванов сасси пулчĕ пулас, анчах унăн сăмахĕсем уçăмлăн илтĕнмерĕç те, вăл мĕн каланине эпĕ ăнланса юлаймарăм...

Петриванова мана тепĕр кунне çеç курма тӳр килчĕ. Эпĕ эрне каялла Совет Союзĕн Геройĕ ятне илтме тивĕç пулнă Петр Трофимов летчика шыраса, виççĕмĕш эскадрилья самолечĕсем тăракан çĕре кайрăм.

Трофимова эпĕ хăй самолечĕн кабининче тупрăм. Анчах унпа калаçма мана тӳр килмерĕ: команда пунктĕнчен сигнал пачĕç те, вăл, манпа васкаварлăн сывпул-

лашса, моторне хускатса ячĕ, вара, майĕпен стоянкăран кусса тухса, старт тăракан аэродром вĕçнелле çул тытрĕ.

— Çулу ăнăçлă пултăр, Петя!—илтрĕм эпĕ çав самантра.

Çаврăнса пăхрăм та хамран инçетре те мар тăракан самолет çуначĕ айĕнче сарлака хулпуççиллĕ, илемлĕ сăн-сăпатлă çамрăк лейтенант ларнине куртăм. Трофимов, кулкаласа, аллипе ун еннелле сулчĕ: чипер юлăр, имĕш. Пурте йĕркеллĕ пулĕ, урăхла, имĕш, пулма та пултараймасть.

Трофимов хыççăн тата виçĕ «Як» кусса кайрĕç. Вĕсене те самолет çуначĕ айĕнче ларакан лейтенант çапла майпах ăсатрĕ. Задание каякан летчиксем ăна хирĕç тем кăшкăрчĕç, анчах мотор шавĕ витĕр эпĕ вĕсен сăмахĕсене илтеймерĕм.

«Қам-ши тата ку лейтенант?»—шухăшларăм эпĕ, вара ĕнерхи командир кабинетĕнчен илтĕннĕ хулăн сасса аса илтĕм те, пуçа çавăнтах урăх шухăш пырса кĕчĕ:

«Петриванов мар-ши?»

Эпĕ ун патне çывхартăм та унăн сылтăм ури протез кăна иккенне асăрхарăм; лейтенант чăнах та Петриванов пулчĕ...

Қăнтăр тĕлĕ çитеспе эпĕ кӳршĕри площадкăна вĕçсе кайрăм, каялла вара тепĕр кунне каçпа тин таврăнтăм. Анчах Петриванова текех кураймарăм: полк парторгĕ ăна, тӳрленсе çитме тесе, каллех госпитале ăсатни çинчен пĕлтерчĕ.

...Халĕ эпĕ çак тĕлпулăва аса илтĕм те тĕлĕнмеллипех тĕлĕнсе кайрăм.

«Неушлĕ çав урасăр летчик халĕ колхоз председателĕ пулса тăнă-ши вара? Çук, çавах пулас çав. Сасси те çавăннах...»

Чăтса выртаймарăм, Павăла чĕнсе вăратрăм та килхуçи çинчен ыйтма пуçларăм:

— Алексей Ивановичăн сылтăм ури протез мар пулĕ вĕт?

— Ара çав.

— Тата, вăл летчик пулман пулĕ вĕт?

— Ара çав. Апла ăна эсĕ те пĕлетĕн иккен.

Эпĕ ăна, пăшăлтата-пăшăлтата, Орел таврашĕнчи пĕр тĕлпулу çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартрăм. Вăл та мана Алексей Иванович çинчен чылай япала пĕлтерчĕ. Петриванов халĕ—облаçри чи лайăх колхозсенчен пĕрин

председателĕ иккен. Пĕлтĕр вайлă тырпул туса илнĕшĕн правительство ăна Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне панă...

* * *

Алексей Иванович пире ирхине кăвак çутăллах тăратрĕ.

— Вот-тăк сунарçăсем,—терĕ вăл пиртен кулкаласа.—Çак вăхăтчен çывăрма юрать-и вара?

Чей ĕçрĕмĕр те сунара кайма хатĕрлене пуçларăмăр. Хутаçри резина атăсене кăларса тăхăнтăмăр. Павăл ик кĕпçеллĕ пăшалне çакнине курсан, Алексей Иванович йăл кулса илчĕ.

— Тытас тесен, унта пăшалсăр та тытма пулать,— терĕ вăл.

Кам пĕлет, тем шутласа хунă вăл унта. Тен, чăнах та çапла-и? Эпир çапах, сых ятне, пăшалсене те илтĕмĕр.

Ялтан тухсан, икĕ километра яхăн çеремпе утрăмăр. Кӳлĕ патне çитеспе хăва тĕмĕсем пуçланчĕç.

— Илтетĕр-и?—терĕ Алексей Иванович, пăртак хăва тĕмĕсем хушшинчи кукăр-макăр сукмак тăрăх утнă хыççăн, чарăнса тăрса.

Мал енчен, чăнах та, хурсем какăлтатни тата кăвакалсем нартлатни илтĕнчĕ. Павăл пăшалне хатĕрлесе тытрĕ.

— Васкатăн, Павăл, васкатăн,—терĕ кулкаласа Алексей Иванович.—Курăр акă, пăшалсăрах тытма пулать.

Малалла утнă май, хур-кăвакал сассисем вăйланнăçемĕн вăйланса пычĕç.

Пăртак кайсан, эпир пĕр пысăк хăва тĕмĕнчен иртрĕмĕр те сасартăк пысăк кӳлĕ хĕррине çитсе тăтăмăр.

Павăл, тĕлĕнсе, пăшалне усрĕ.

Кӳлле пĕтĕмпех хур-кăвакалсем сырса илнĕ. Вĕсен хисепĕ темиçе пинрен те иртет пулĕ. Ытла шавламасăр, мăнаçлăн ишсе çӳреççĕ вĕсем кӳлĕ çийĕпе. Анчах... вĕсем сунарçăсем тытакан кайăк-кĕшĕксем мар, килти хурсем, килти кăвакалсем!

— Эсир ан çиленĕр ĕнтĕ мана,—айăпа кĕнĕ пек пулса каларĕ Алексей Иванович.—Кунта сунара çӳреме май çук халĕ пирĕн.—Вăл Павăл çине пăхса илчĕ те хушса хучĕ:—Эсĕ килсе кайнăранпа пайтах улшăну пулса иртрĕ пирĕн. Леш Симĕс, Çаврака, Тăрăхла тата Укçаллă

кӳлӗсене пурне те Акӑш кӳллипе пӗрлештертӗмӗр те пысӑк кӑна кайӑк-кӗшӗк ферми уҫрӑмӑр.

Эпир пурне те ӑнланса илтӗмӗр. Ҫиленме мар, пуш-шех те юратса пӑрахрӑмӑр Алексей Ивановича кун хыҫҫӑн. Епле пысӑк ӗҫ туса хунӑ вӑл!

— Иртнӗ ҫул хурсенчен кӑна 420 пин тенкӗлӗх тупӑш куртӑмӑр,—терӗ Алексей Иванович, пире ҫаран тӑрӑх малалла ертсе кайса.—Колхозниксем мамӑк тӳшек-минтер ҫинче ҫывӑраҫҫӗ, хӗлӗпе хур-кӑвакал ашӗ ҫиеҫҫӗ. Государствӑна та нумай аш паратпӑр.

Алексей Иванович хурсен витисене тата Акӑш кӳллинчен леререхри Ҫирӗклӗ кӳлле кӑтартрӗ. Ку кӳлӗре вӗсем пулӑ ӗрчетеҫҫӗ-мӗн. Пӗлсе ӗҫлесен, мӗн тери пысӑк пуянлӑх параҫҫӗ иккен вӗсем, Акӑш кӳллисем те Ҫирӗклӗ кӳллисем!

Яла эпир кӑнтӑрла ҫитеспе тин таврӑнтӑмӑр. Ансӑр сукмак тӑрӑх Павӑл хыҫҫӑн утнӑ май, эпӗ пайтахчен Алексей Иванович ҫинчен, Алексей Иванович пекех пин-пин совет ҫыннисем—сталинла чаплӑ тапхӑр ҫуратса ҫитӗнтернӗ, Тӑван ҫӗршыва чечеклентерессишӗн, унӑн тӗрекне ӳстерессишӗн ырми-канми ӗҫлекен канӑҫсӑр ҫынсем ҫинчен шухӑшласа пытӑм.

1951.

## КĔЛТЕ

Таврара тин çеç-ха вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс—ылттăн тулă тинĕсĕ хумханатчĕ. Халĕ ăна пĕтĕмпех вырса илнĕ: ял хыçĕнчи сăрт çине—йĕтеме пуçтарса хунă. Унта, антăха-антăха кайнă пек уласа, авăн çапакан машина кĕрлет.

Çанталăк кĕр енне сулăннă пулин те, хĕвел ыраш пиçнĕ вăхăтри пекех хĕртет. Çил çук. Малта, тĕлĕ-тĕлĕпе сухаласа чăпарлатнă тӳрем те анлă хир çинче, ăрша вĕлкĕшет, пĕтĕм тавралăх чĕтресе тăнă пек, ялăн ку енне пĕтĕмпех шыв илнĕ пек туйăнать: Сĕве тулнă та—Путаша, Путаш—хире тапса тухнă, тейĕн.

Шоссерен уйрăлса каякан «ям çулĕ» патĕнче (Каша сыннисем ăна халĕ те çапла калаççĕ-ха) эпĕ чарăнса тăтăм. Ку çулпа ĕлĕк Тимин, Шемĕршел, Чăнлă тутарĕсемпе Кунтикав, Киштек, Таккавар чăвашĕсем, Упи таранах, Антăрти Самсун купца патне тырă турттарнă. Купца вара çав чăвашсемпе тутарсем хырçă-марçă тӳлеме тесе сутнă «ытлашши» тырра Атăл тăрăх анаталла та, тăвалла та ăсатнă. Çак ĕçрен илнĕ услампа Атăл пырĕ хĕрне бетон причал, темиçе пысăк кĕлет, элеватор, виçĕ хутлă ешĕл дача, хутор лартнă, хĕрпе кĕрӳшне картла выляса та Чĕмпĕр майрисем хыççăн чупса юхăннă пĕр айвантарах улпутран темиçе пин теçеттин çĕрпе таврари пĕртен-пĕр вăрмана туянса панă... Ку çулпа Пăваран çĕнĕ хырçă тӳлемелли, çĕнĕ вăрçă пуçланни, салтака е суда каймалли çинчен калакан хăрушă «хутсем», уретниксем, жандармсем килнĕ. Çак çулпах Каша çыннисем «приюма», вăрçа, тĕрмене, пуçилле туха-туха кайнă... Анчах халĕ «ям çулне» курăк пуснă, ăна ытлашши таптаса та пĕтер-

мен. Эпӗ унта ларса канма та шутланӑччӗ ӗнтӗ: шӑрӑх ҫанталӑк самаях йывӑрлантарать, анчах умра, пӗр пилӗкҫӗр утӑмра, такам пынине куртӑм та—лармарӑм, манӑн ҫав ҫынна хӑваласа ҫитес килчӗ: ял инҫе-ха, виҫӗ ҫухрӑм та пулӗ; ҫитменнине тата умри ҫын васкасах та каймасть, тем йӑтса пырать.

Ҫаллех шоссе ҫине тухрӑм, хӑвӑртрах утма пуҫларӑм. Манӑн пулас пӗлӗшӗм кӗлте йӑтнӑ-мӗн, ҫыххи тӗлӗнчен ыталанӑ та пучахӗсене ҫӳлелле тӑратса пырать, тулли тӑкӑнасран ӗнтӗ.

«Ӑҫта йӑтса каять-ши вӑл ӑна?—тӗлӗнтӗм эпӗ.—Ҫынни ку ӳркенекенни мар-ха».

Ман ура сассине илтсе пулас, кӗлте йӑтса пыракан тӗреклӗ те ҫӳлӗ ҫын ҫаврӑнса пӑхрӗ, палласа илсе, чарӑнса тӑчӗ.

— Э-э, Ҫуҫма иккен,—терӗ вӑл, кулам пек туса, малтан ҫиленнӗ чухнехи пек курӑнакан сӑн-пичӗ унӑн ырӑланса кайрӗ, куҫӗсем ҫийӗпе пӗр тӑтӑшран тӑсӑлакан хура куҫхаршийӗсем ҫӗкленчӗҫ, ҫӑмламас шӗпӗн тухса ларнӑ сулахай питҫӑмарти путса анчӗ.—Кунтикавран килместӗн пулӗ-ҫке? Мӗнле вӗсем, ҫапса пӗтермен-и-ха?—Миххи мучи кӗсйинчен тутӑр кӑларчӗ, вак пӗркеленчӗксем урлӑ та пирлӗ ҫуркаласа пӗтернӗ сарлака ҫамкине шӑлса илчӗ.—Эпӗ ҫӗртме пуссисене курса ҫаврӑнтӑм-ха. Ҫӗтессене шӑйрӑксем хӑварнӑ. Иванюка кайса пӗҫеркки памалла-ха, Михал института кайрӗ те, ун вырӑнне ҫавна лартрӗҫ вӗт-ха трактористсен бригадирне.

— Ку кӗлтене ӑҫтан йӑтса килетӗн вара? Таврара пӗр ҫӗмел те юлман та...

— Тоттӑ, пӗр ҫӗмел те юлман ҫав.—Миххи мучи сӑнӗ сасартӑк ҫиленнӗ чухнехи пек пулчӗ.—Ҫывӑхра ҫӗмел пулсан, кӗрӗттӗм те хурӑттӑм. Вырт, тейӗттӗм, килсе тийиччен...

Ним те ӑнланса илеймерӗм. Тем тесен те, тӗлӗнмелле старик вӑл Миххи мучи: ҫитмӗлелле ҫитнӗ пулин те (хӑй вӑл ҫавӑн ҫинчен нихҫан та шарламасть), кашни кунах колхоз хуҫалӑхне курса ҫаврӑнать. Пӗр япалана та тӗпчемесӗр хӑвармасть. Хӑшпӗр ҫынсене унран леккелет те. Пӗлтӗр-ха, авӑ, хӑй ывӑлне, председателе, колхоз садне аслӑлатас пирки хирӗҫ тӑнӑшӑн пухура макӑртас пек ятланӑ, теҫҫӗ. Ҫитменнине тата килӗнче те хытах лекнӗ, имӗш: пухура хӑй сӑмахӗ ҫинех тӑнӑ председатель тепӗр

ирхинех сада пысăклатас пирки калаçма пуçланă пулать.

— Кун пек япалана асăрхаманччĕ те, халĕ акă лекетех вăл Сантăра,—ман çине пăхмасăр мăкăртатса илчĕ Миххи мучи.—Комсорг вăл пирĕн, çамрăксемпе командовать тăвать. Çамрăкĕсем те маттур та вĕт, а вăт... Çук капла юрамасть, калаçмалла пулать-ха пĕрре вĕсемпе. Иртĕнсе кайĕç тата, тĕрĕслесе тăмасан...

Мĕн айăпа кĕнĕ-ши комсорг, çамрăксем? Эпĕ çаплах ăнланаймастăп-ха, ун сăмахне пӳлес мар тесе, ыйтмастăп та. Анчах вăл ман шухăша хăех сиссе илчĕ пулас.

— Ӳкернĕ те хăварнă пĕр кĕлтене,—терĕ вăл.—Юрать-ха, урапа кускăçĕ айне пулман, пĕрчĕ юлмиччен юхса тухатчĕ, сахалтан та виçĕ килограмм тулă çухалатчĕ. Тыррине халь питĕ ăнтарса тăватпăр, пучахĕсем чакантан та пысăкрах пулаççĕ. Çакăн пек тырра ăçта килчĕ унта сапаласан, мĕн пулать вара вăл?—Миххи мучи çутă сăмсаллă картузне çӳлерех çĕклесе лартрĕ те каллех çамкине шăлса илчĕ, хăвăртрах утма пуçларĕ. Пăртак кайсан, лăпланчĕ те хушса хучĕ:—Хамăрăн вĕт, хамăрăн. Халĕ вăл Самсун пек çăткăнсен кĕсйине мар, хамăр пӳлмене кĕрет. Эппин, унăн кашни пучахне, кашни пĕрчине упрас пулать. Çапла вĕт?

Часах кĕлте турттаракансем тунă çул курăнчĕ. Вăл хăмăл çийĕпе йĕтем еннелле тăсăлать.

— Ну, эпĕ çитрĕм,—терĕ Миххи мучи, унталла пăрăнса.—Çакна леçсе хурас пулать. Сывă пул.—Вăл кĕлтине тепĕр аллине куçарчĕ те йĕтемелле кайрĕ. Анчах кăшт кайсан, хуллентерех утма пуçларĕ, тем аса илнĕ пек пулса, чарăнса тăчĕ, ман еннелле çаврăнчĕ.—Кунтикавсем мĕнле унта, кунтикавсем? Çапса пĕтермеççĕ-и-ха?—ыйтрĕ вăл.

— Пĕтерме пĕтереймеççĕ-ха та, васкаççĕ,—терĕм эпĕ.

— Хе,—кăмăллăн кулса илчĕ Миххи мучи; ним сăлтавсăрах картузĕн çутă сăмсине тытса пăхрĕ, кăкăрĕ таранах ӳссе ларнă кĕреçе пек сарлака сухалне сăтăрса илчĕ.—Аван, апла пулсан. Çавăншăн ăмăрту та! Ытти çулсенче каярах юлаканччĕ-ха вĕсем. Кăçал васкаççĕ эппин? Аван, аван, хамăртан маларах тухсан та, ытлашшиех кулянас çук: пурсăмăр та пĕр ĕç тăватпăр вĕт. Сывă пул-ха эппин, чипер кай.—Миххи мучи аллипе сĕлтрĕ те йĕтем еннелле васкарĕ.

1952.

## ГЕРОЙСЕМ

Ҫак савӑнӑҫлӑ самантсене курасса тем пек ӗмӗтленнӗ пулин те, кун пек килсе тухасса шухӑшламанччӗ Хветӗр. Ултӑ ҫул иртнӗ ӗнтӗ пӗр-пӗрне курманни! Уйӑрлма та вӗсем чи йывӑр та хӑрушӑ вӑхӑтра—нимӗҫсем Сталинград патне ҫитсе, Атӑл хӗрринелле тапаҫланнӑ вӑхӑтра—уйӑрлнӑччӗ. Ҫак телейлӗ те савӑнӑҫлӑ тӗлпулу каллех килсе ҫитӗ-ха тесе, ун чухне Хветӗр те, Нина та татса калама пултарайман пулӗ, анчах вӗсем каллех тӗл пулчӗҫ. Каллех пӗрле!

— Эсӗ старши лейтенант-и халь?

— Старши лейтенант.

— Герой та-и?

— Герой та.

Хветӗр старши лейтенант иккенне те, герой иккенне те Нина тахҫанах пӗлет. Халӗ вӑл ун ҫинчен ҫийӗнчех урӑх сӑмах тупайманнипе ҫеҫ ыйтрӗ. Тӗлӗнчӗ ӗнтӗ. Савӑнчӗ те. Савӑнмасӑр: кам шутлама пултарнӑ-ха уйӑрлнӑ чухне, пӗтӗм ҫӗршывшӑн йывӑр килнӗ вӑхӑтра, каллех тӗлпулӑпӑр, тесе? Уйӑрлма та, ытти каччӑсемпе хӗрсем пек, чуптӑвӑшса та «манмӑп», «пӑрахмӑп», тесе сӑмах парса мар, шӑпах ассӑн сывлакаласа та алӑ тытса ҫеҫ уйӑрлнӑ. Анчах пӗр-пӗрне манайман вӗсем. Хветӗрӗн асӗнче пуринчен ытла Нинӑн куҫӗсем, тӳпе тӗсӗ ӳксе сенкерленнӗ тӑрӑ ҫӑлкуҫӗ пек, тарӑн кӑвак куҫсем тӑрса юлнӑ. Тата вунӑ ҫул курмасӑр пурӑнсан та, Хветӗр манаймастчӗ вӗсене. Анчах вӗсем тӗл пулчӗҫ акӑ. Хветӗр каллех ҫав куҫсене курать.

— Нумайлӑха килтӗн-и?

— Уйăха ячĕç.

Нина вăрçăччен Хветĕртен те хăюсăртарах пулнă. Қалаççах кайман. Хăй çине пăхсанах пуçне çĕрелле пĕкнĕ. Уйрăлнă чухне Хветĕр: «Çыр эсĕ»,—тесен те, ним те чĕнмен. Анчах вăл çырнă, кашни çыру çине ответ панă. Хветĕр вăрах çыраймасăр тăнă вăхăтсенче çыру илмесĕр те çыркаланă. Вăрттăнрах шухăшлă сăмахсемпе хăй ăна кĕтни çинчен пĕлтернĕ. Нумай хутчен йывăр самантсене мантарнă Хветĕре ун сăмахĕсем!..

— Епле улшăнса кайнă эсĕ, палламалла та мар,— терĕ кăшт тăрсан Нина, халичченхи пекех, вăтанчăк куçĕсене айккинелле тартса.

— Ватăлнă-им?

— Çук, апла каламарăм эпĕ.

Хветĕр, хăй сисмесĕрех, «эсĕ те улшăннă» тесе хуратчĕ, анчах темле майпа тытăнса тăчĕ. Çук, Нина улшăнман. Қуçĕсем те, питçăмартисем çинчи илемлĕ путăксем те ĕлĕкхи пекех унăн. Çивĕчĕсем те çаплах, йăваш, илемлĕ кулă; ун пек кулă урăх никамăн та çук!

Поезд çинчен аннисем вокзал еннелле иртсе пĕтрĕç. Юлашки вагонран тухнă тӳпетейлĕ ватă тутар та, çĕнĕ корзинкине çăтăртаттаркаласа, çавăнталлах иртсе кайрĕ. Чус сарса тунă çĕршĕнкĕрех перрон çинче Хветĕрпе Нина çеç тăрса юлчĕç.

Тавралăха шариех çурса, пăравус çухăрса ячĕ. Вагон айĕсенче тормоз калăпĕсем шаклатни, буферсем пĕрпĕрин çумне перĕнсе чăнклатни илтĕнчĕ. Поезд майĕпен тапранса кайрĕ те, рельсă сыпăкĕсенче тăнкăртата-тăнкăртата, станци хыçнелле, саралма пуçланă вăрман еннелле васкарĕ.

— Мĕн тăратпăр-ха эпир кунта?—терĕ Нина, юлашки вагон вăрмана кĕрсе çухалсан.—Атя, вокзал патнелле каяр-и?

— Атя эппин.

Вĕсем васкамасăр вокзал çурчĕ еннелле утрĕç.

— Мĕншĕн капла вăрах пурăнтăн-ха килмесĕр?— ыйтрĕ Нина, Хветĕр куçĕнчен пăхса.

— Вăхăт пулмарĕ, Нина.

Çапла çав, вăрçă чарăннă хыççăн Хветĕр яла пĕр хутчен çеç килсе кайрĕ. Қилнĕ вăхăтра тата Нина ялта та çукчĕ—Горький облаçĕнчи пĕр чаплă колхоза курма кайнăччĕ; тем пек пăшăрханчĕ пулин те, юратнă хĕрне курайманрĕ ун чух вăл. Иртнĕ çул вара, чăнах та, вăхăт

пулмарӗ. Ҫилме хатӗрленет кӑна — е инспекци пырать, е маневрсем пуҫланаҫҫӗ, е тата ротӑна ҫамрӑк салтаксем килеҫҫӗ. Ҫапла вара, ротӑна хӑйсӗр хӑварманиепле те май пулмарӗ...

Вокзал ҫурчӗ ҫинче, таврана ян ҫурса, громкоговоритель юрлать. Перрон ҫумӗнче, эрешлесе хунӑ решетке хыҫӗнче, ҫамрӑк хурӑнсем пӑшӑлтатаҫҫӗ. Вӑрҫӑччен хир варринче тӑлӑххӑн курӑнса ларнӑ станцие палламалла та мар: ултӑ ҫул хушшинчех вӑл нумай аслӑланса, илемленсе кайнӑ.

Вокзал умне ҫитеспе вӗсем чарӑнса тӑчӗҫ. Хветӗр ним тума аптраса шинелӗпе чемоданне пӗр аллине илчӗ те картузне хывса ӑна тепӗр хут тӑхӑнчӗ. Анчах, мӗнле тарӑхсан та, Нинӑпа калаҫма пӗр сӑмах та тупаймарӗ.

— Уттарар пуль,—терӗ вӑл юлашкинчен, ял еннелле пуҫӗпе сӗлтсе.—Эпӗ паян ҫитеймӗп тенӗччӗ те хирӗҫ ыран ҫеҫ тухма каларӑм телеграммӑра.

— Ҫийӑпӑр эппин.—Нина каймa тесе пӗчӗк чемоданне аллине илчӗ ҫеҫ, хыҫра ӑна такам чӗнни илтӗнчӗ.

— Нинук!

Вӗсем ҫаврӑнса пӑхрӗҫ те хӑйсем патнелле кӑвакрах сухаллӑ Уртемей пынине курчӗҫ.

— Тинке тухрӗ сана шыра-шыра,—терӗ вӑл, савнӑҫлӑн, вӗсем патне ҫитсен.—Паян та килеймен иккен, тетӗп. Эсӗ кунта мана шыратӑн пулас. Аван-тӑр?—Уртемей мучи Нина аллине тытса чӑмӑртарӗ те Хветӗр еннелле ҫаврӑнчӗ.—Ку кам пулчӗ тата? Пӗлӗш-тантӑш-и?—Уртемей мучи чеен кулса илчӗ.

— Паллаймастӑн-им, Уртемей мучи?—алӑ пачӗ ӑна Хветӗр.

— Ара, эсӗ... ҫак... Хветӗр пулмарӑн-и-ха?—терӗ мучи тӗлӗнсе; хытканрах аллипе Хветӗр аллине чӑмӑртарӗ.—Калап, эсӗ тесе. Вӑт, ватсупнӑ, хамӑр ял геройне паллаймарӑм пулать... Аннӳ те, Степанида Петровна та каларӗ вӗт эс килесси ҫинчен, чухлаймарӑм ҫав, Федӑр Андреич. Ҫаҫар, ан ҫилен ӗнтӗ.—Вӑл каллех Нина еннелле ҫаврӑнчӗ:—Ну, мӗнле, туянтарчӗҫ-и?

— Юрӗ, мучи, кайран,—терӗ Нина, темшӗн хӗрелсе кайса.—Эсӗ лашапа килмен пулӗ вӗт?

— Епле ҫуран килем-ха эпӗ сире илме? Ҫаплах каларӗ Мӗтри Макарч: чуптар, Артемий Сидӑрч, геройсене лартса килетӗн, тет. Паянхипе виҫҫӗмӗш кун килтӗм ӗнтӗ.

Атьăр, Мĕтри Макарч кĕтет пулĕ: тӳрех правление илсе пыма хушрĕ.

Уртемей мучи улшăнман иккен-ха. Калаçма та ĕлĕкхи пекех хаваслă калаçать. Сухалĕпе çӳçĕ çеç ылттăн тĕсне çухатса кăвакарма пуçланă.

Хветĕр Нинăран вăл ăçтан таврăнни çинчен, мĕн туянма кайни çинчен ыйтасшăнччĕ, анчах сăмах урăх енне пăрăнчĕ те — шарламарĕ.

Вĕсем станци хыçне тухрĕç. Уртемей мучи чĕлпĕрне салтса лашине вĕçертрĕ те, йĕнерчĕкне тӳрлеткелесе, урхалăхĕпе хырăмсарлăхне майласа çыхма пикенчĕ. Лаши умне хунă уттине тирпейлĕн пуçтарса тăрантас çине хучĕ, ăна вĕр-çĕнĕ шурă шăналăкпа витрĕ. Вара, тилхепине пуçтарса тытса, хĕрлĕ пăру тирĕпе сарнă ларкăç çине хăпарса ларчĕ те Нинăпа Хветĕр енне çаврăнчĕ.

— Ларăр, ларăр,—терĕ вăл, тăрантас кӳми çине кăтартса.—Кĕтеççĕ унта пире.

Çума-çумăн вĕсем именсе те хăюсăррăн ларчĕç. Нина пушшех те хĕрелчĕ. Хветĕр ăна асăрхаман пек пулчĕ, анчах пурĕпĕр çийĕнчех кирлĕ сăмах тупаймарĕ.

Уртемей мучи шăхăркаласа, тилхепине турткаласа илчĕ. Çăмăл тăрантас станци тулашне тухса шĕвĕр пуçлă шур юпасемпе карталанă çул тăрăх рельсăсем урлă каçрĕ те Чурпаялла çул тытрĕ. «Выездной» пуçне илемлĕн ухса, тулхăрса çеç юртса пырать.

Калаçу çул çинче те сыпăнса каяймарĕ. Те çамрăксем шăпах пынине кура, те Хветĕре ял хыпарĕсене пĕлтересси килчĕ — Уртемей мучи вара чарăнма та пĕлмерĕ. Вăл кăçал тырпула пуринчен те иртерех пухса кĕрсе, тырă леçмелли плана районри колхозсенчен пуринчен те малтан тултарни çинчен, районри куçса çӳрекен хĕрлĕ ялава халĕ хăйсен колхозне пани çинчен каласа кăтартрĕ.

— «Çăлтăрсем» парасшăн мар тапаçланнă тет те, пурпĕрех илтĕмĕр — хамăр мала тухрăмăр-çке-ха!—Мучи хавхаланса кайрĕ. Калаçма хĕрсе кайнăскер, вăл Хветĕрпе Нина еннех çаврăнса ларчĕ.—Пĕр пикенсен, шӳт-мĕн туса тăмастпăр, вăятпăр çеç ĕçе.

Ялав çинчен пĕтерсен, Уртемей мучи планран ирттерсе тепĕр обоз тырă пани тата яла обкомран лектор килсе кайни çинчен каласа пачĕ. Лекцийĕ калама çук лайăх пулнă-мĕн: унта пĕтĕм ялĕпех пухăннă.

Малта ял, тăван ял курăнчĕ. Ял хыçĕнчен, ватă йăмрасемпе тирексен хыçĕнчен, Сĕве кукăрĕ кăвакарса тух-

рĕ. Ун çине арманпа электростанци туса пĕтерни çинчен пĕлтернĕччĕ Нина юлашки çырăвĕнче. Ялта улшăнусем нумай пулнă иккен çак икĕ çул хушшинче те.

— Яла пĕтĕмпех çĕнĕрен турăмăр теме пулать, Федор Андреевич. Çыннисем те çĕнелчĕç. Да-а, çĕнелтĕмĕр çав.

Унччен те пулмарĕ, тăрантас яла пырса кĕчĕ те тӳрĕ урам тăрăх анаткассалла кусса кайрĕ.

— Çитрĕмĕр!—терĕ юлашкинчен Уртемей мучи, лашине ешĕл тăрлă пысăк шатрун çурт умне чарса.

Хветĕр анса та ĕлкĕреймерĕ, правленирен уяв чухнехи пек яка тумланнă Мĕтри Макарч — председатель сиксе тухрĕ те вĕсем патнелле ыткăнчĕ:

— Салам геройсене! — кăшкăрса ячĕ вăл савăнăçлăн, ыталама хатĕрленнĕ пек, аллисене саркаласа Хветĕрпе Нина патнелле чупса пынă май.

Хветĕр, ăна ыталаса илес тесе, аллисене сарчĕ çеç, председатель, асăрхаман пекех, унран иртсе кайрĕ те Нинăна ыталаса, чуптуса илчĕ.

— Саламлатăп сана, Нина,—терĕ вăл. Вара ăна вĕçертрĕ те Хветĕре ыталаса илчĕ:—Тăруках икĕ герой килсе çитрĕç, юлташсем! — кăшкăрчĕ вăл савăнăçлăн, правлени умне пухăннă колхозниксен енне çаврăнса. Унтан кулса илчĕ:—Ан çиленĕр, Федор Андреевич: малтан Нинăна саламлас терĕм. Сире эпир телеграммăпа та, çырупа та саламланăччĕ, а Нинăна пирвайхи хут çеç.

Хветĕр Нина çине пăхса илчĕ. Вăл ун çинелле пăхса, савăнăçлăн кулса тăрать.

«Акă мĕн туянма кайнă иккен вăл»,—вĕçсе иртрĕ шухăш Хветĕр пуçĕнче.

— Мĕншĕн каламарăн-ха апла пулсан?—терĕ вăл, Нинăна Социализмлă Ĕç Геройĕн чыслă ятне илме тивĕçлĕ пулнă ятпа саламласа аллине чăмăртанă май.—Миçе пăт илтĕр?

— Мухтанать теесрен хăрарăм...

— Мухтанмалла та çав, мухтанмалла!—ярса илчĕ ун сăмахне Мĕтри Макарч.—Мухтанмаллах, гектартан икçĕр утмăл пăт илтĕмĕр пулсан. Атьăр-ха, кĕрсе тухăр пирĕн «штаба», Федăр Андреич, эпĕ сире хамăр геройсемпе паллаштарам. Хăвăра та курăр унта. Пур геройсен сăнĕсем те пирĕн куç умĕнче, кĕленче айĕнче тăраççĕ. А санăн, Нина, сăнна тепĕр хут ӳкерттермелле пулать: Çăлтăрпа пултăр сăну.—Вара вăл геройсен хушшине

тăчĕ те вĕсене хулĕсенчен тытса, правлени пусми патнелле çавăтса пычĕ.

— Артем Сидăрч,—терĕ вăл, хăйпе никам калаçман пирки ним тума аптраса çитнĕ Уртемей мучие чĕнсе.— Эсĕ геройсен япалисене килĕсене леçсе хур. Степанида Петровнăна кала: ывăлу, Федăр Андреич килчĕ, те. Мĕтри Макарч туя хатĕрленме хушрĕ, те.

Юлашки сăмахсене калană чух вăл çамрăксем çине пăхса илчĕ.

Хветĕрпе Нина сасартăках хĕрелсе кайрĕç. Пĕр кĕтмен çĕртенех вĕсен куçĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулчĕç те, вăтанчăклăн çиçсе илсе, айккинелле пăрăнчĕç.

1948.

---

## ВАТӐЛМАЛӐХ ҪУНРА

Сармантей мучи кунӗпех темле, хирӗҫнӗ пек ҫӳрерӗ. Ниҫта лара-тӑра пӗлмерӗ, чӗнми, калаҫми пулчӗ. Ҫинӗ ирхине ҫеҫ кӳрсе панӑ хаҫата вуласа пама тӑрсан та, вӑл итлемерӗ, картишне тухса кайрӗ.

Ҫӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн, чӗрине кӑшт лӑплантарас тесе, вӑл хӑй пекех ватӑ Елисар тусӗ патне кайса ларчӗ. Анчах пӗрер хут чӗлӗм туртса пӑртак вӑл-ку ҫинчен калаҫкаласанах, унӑн ӑшӗ каллех вӑркама пуҫларӗ. Вӑл чӗлӗмӗ сӳннӗ-сӳнменех ӑна кӗсйине персе чикрӗ те, сывпуллашнӑ хыҫҫӑн ытти чухнехи пек: «хӑвӑр пырса ларӑр тата шавлама»,—темесӗрех, килнелле тухса утрӗ.

«Хӑямат карчӑкӗ,—ятлаҫса илчӗ вӑл ӑшӗнче.—Кӗрхи ҫӗртме туса пӗтермен иккен. Чӗлхи ҫине ҫӑпан тухинччӗ хуть...»

«Куртӑм, хам куҫпа хам куртӑм Ҫашкӑр варӗ леш енчи кӗртырри пуссине сухаламасӑр хӑварнине. Куҫса ҫӳрекен Ялава ӑна ваттипе анчах, кӳрентерес мар тесе ҫеҫ панӑ. Атту пулсан, ӑҫта унта Сармантейӑн Пуриса ҫитесси», аса илчӗ вӑл каллех Униҫҫе карчӑкӑн ӑнсӑртран илтнӗ сӑмахӗсене.—Ватӑлмалӑх кунра ята вараларӗ, ватсупнӑ.

Ҫилте, хӑй ҫиллессӗн курӑннипе пулас, Сармантей мучие никам та чӗнмерӗ. Вӑл вӑр-вар салтӑнчӗ те сӗтел ҫинче выртакан хаҫата илсе ҫавӑркалама пуҫларӗ. Анчах вуласси килмерӗ унӑн, вулани те пуҫа кӗмерӗ. Хаҫат ҫине пӑхса ларнӑ ҫӗртех шухӑша кайрӗ.

Ӑна хӑйӗн ӗлӗкхи, колхоза кӗричченхи пурнӑҫӗ аса килчӗ. Пӗртте манӑҫа тухмасть ҫав тапхӑр. Ун чухне вӑл

ниçта канлĕх тупаймасăр пурăнчĕ. Миçе хутчен колхоза кĕме ыйтса заявлени çырма тытăнман пулĕ? Анчах карчăкĕ, Ухиме, ăна кашни хутĕнчех тĕрлĕрен чуна вĕчĕрхентерекен сăмахсемпе ятлама тытăнатчĕ; Сармантей вара, ватăлмалăх кунра карчăкĕпе хирĕçес мар тесе, ку ĕçе каялла тăватчĕ... Çапах та, йывăр пулчĕ çав ун чух халăхран уйрăм пурăнма. Колхозра пуху таврашĕ пулсан е колхозниксем ушкăнпа ĕçе тухса кайсан, Сармантей мучи вара пушшех те хурланса ӳкетчĕ. Халĕ ĕнтĕ Ухиме те ăнланса илнĕ пулĕччĕ хăй йăнăшнине, анчах çак телейлĕ вăхăта кураймарĕ вăл, вилсе кайрĕ...

Ухиме вилсен, Сармантей мучи колхоза кĕчĕ. Пилĕк çул ĕçленĕ хыççăн, ăна бригадир туса хучĕç. Ку ĕçре вăл вуниккĕмĕш çул ĕçлет. Иртнĕ пилĕк çул хушшинче Сармантей мучи хăйĕн бригадине тивекен хиртен çулсеренех вăйлă тырпул пухса илчĕ. Виçĕмçул правительство мучие çакăншăн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăларĕ.

Иртнĕ çул ун бригади тата вăйлăрах тырă ӳстерчĕ. Çурхи тулă гектартан 37 центнер, вир 40 центнер тухрĕ. Сармантей мучи çакăншăнах ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвне те кайса килчĕ, унта чыслă вырăнта—ешĕл пуставпа витнĕ сĕтел хушшинче—президиумра ларчĕ.

Кăçал, çанталăк уяртарах тăчĕ пулин те, тырпул иртнĕ çулхинчен пĕртте кая мар пулчĕ. Вĕсене хиртен вăхăтра пухса кĕрсе, государствăна леçмелли плана колхоз ытлашшипех тултарчĕ. Çуркунне акма вăрлăх хатĕрлесе хучĕç тата колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне пилĕкшер кило валеçсе пачĕç. Калама çук ăнса пулчĕ тырă—çĕлен те шуса тухаймастчĕ пулĕ пусăран. Халĕ Сармантей мучин бригади çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешет. Çĕртме пуссине пĕтĕмпех сухаласа хăварчĕ. Кĕрхи тырăсене вăхăтра тата çуррине ытла хĕреслетсе акнă...

«Кӳрентерес мар тесе панă иккен ялав,—шухăшларĕ Сармантей мучи, паçăрхи пекех ăшĕнче тарăхса илсе.— Ĕненес те çук та-ха хуть, çапах аван мар».

Сасартăк калинкке сасси илтĕнчĕ. Сармантей мучи хаçатне хутласа хучĕ те ура çине тăчĕ.

Клубра сторожихăра ĕçлекен Праски кантăк тĕлĕнчен иртнине курсан, вăл пушшех çиленсе кайрĕ. «Агротехкружока чĕнме килет пулас ĕнтĕ,—шухăшларĕ мучи.— Унсăр пĕлместĕп пулĕ»...

Праски, Сармантей мучи çиллессĕн пăхнине кура,

ним калама аптраса тăчĕ. Сармантей мучи пуçне çĕклесе пăхрĕ те чи малтанах ун куçĕсене курчĕ. «А-а, мучи, лекрĕн-и? Халĕ ĕнтĕ эсĕ мĕнле мала тухни пуриншĕн те паллă»,—тенĕ пекех туйăнчĕç ăна Праскин кулса пăхакан хĕсĕкрех куçĕсем.

«Ку та илтнĕ иккен,—шухăшларĕ Сармантей мучи.— Вăт, ватсупнă ку Униççе, пĕтĕм ята вараларĕ».

— Қама çиленнĕ вара эсĕ çав тери, Сармантей мучи?—ыйтрĕ Праски кулкаласа.

— Çиленĕн ху та. Мĕн калаçса çӳремелли пур унта пĕлмесĕр?—Сармантей мучи, Униççе карчăк сӳпĕлтетсе çӳренĕшĕн Праски те айăплă пулнă пек, хаяррăн ун куçĕнчен пăхса илчĕ.

— Эпĕ пĕлместĕп, мучи,—терĕ Праски, кулма чарăнса.—Атя, председателе каласа пар луччĕ.

— Мĕн тума каймалла ман унта? Вăл хăй те пĕлет...

— Хăй чĕнме ячĕ те ĕнтĕ. «Чĕнсе кил, ĕç пур», терĕ, ятласшăн пулĕ çав пĕр-пĕр ĕç пирки.—Праски чеен кулса илчĕ.

— Хм!—Сармантей мучи пăртак шухăша кайса тăчĕ.—Штош, кайăпăр...

Қлуба çитиччен Сармантей мучи чупнă пек васкаса утрĕ. Қлуб умĕнче те чарăнса тăмарĕ, пусма çине кăптăр-каптăр хăпарса кайрĕ те вулав пӳлĕмне кĕрсе тăчĕ. Алăкне хупнă-хупманах:

— Тĕрĕс мар вăл, Тимофей Фомич, ăна Униççе карчăк çеç сӳпĕлтетсе çӳренĕ,—тесе хучĕ.—Халап ярса çӳрет вăл ял тăрăх.

— Мĕнле халап?—тĕлĕнчĕ председатель, вырăнĕнчен çĕкленсе.

— Çав, çĕртме çинчен.—Сармантей мучи вулав пӳлĕмĕнчи халăха пăхса çаврăнчĕ.—Униççе карчăк Упи пасарĕнчен таврăннă чух ман бригада Қашкăр варĕ лешенчи лаптăка лущени тунине курнă та пĕтĕм ята янă: Сармантей сухалас вырăнне темĕскер чармакĕпе çеç шăйăрттарса тухнă имĕш...

Вулав çуртĕнчи çынсем кулса ячĕç.

— Акă епле тата!—терĕ председатель, ыттисемпе пĕрле кулса илсе.—Ахальтен мар иккен сан çинчен Мускавра тухса тăракан хаçатсенче çыраççĕ.

Тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантарса парса пустуях сăмах сарса çӳренĕшĕн Униççе карчăка хытах ятласшăнччĕ ĕнтĕ Сармантей мучи, анчах председателĕн çак сăмахĕсене илтсен,

вăл шалтах аптраса ӳкрĕ. Ывăс пек пысăк аллаппипе хăмăр-кăвак сухалне ярса тытрĕ те, пĕр кана ним тума аптраса, урай варринче хытса тăчĕ. Сухалĕ тĕслĕ лăпсăркка куçхаршийĕсем айĕнчен çиллессĕн йăлтăртатакан куçĕсем çеç пĕрре председательпе парторганизаци секретарĕ, тепре—вулав çуртне пухăннă çынсем çине пăхса илчĕç.

— Мĕн çыраççĕ вара?—ыйтрĕ вăл шăппăн, сĕтел патнерех иртсе.—Эпĕ... агротехника хушнă пек...

— Çавăн çинчен çав, агротехника хушнă пек ĕçлени çинчен. Унсăрăн кун пек чыса курма çук. Вуласа пар-ха, Николай Васильевич!

— Сармантей мучи, итле,—терĕ парторганизаци секретарĕ, ура çине тăрса; вара председатель панă хаçата саркаларĕ те васкамасăр вулама пуçларĕ:—«СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ... Убамсаров Сармантей Убамсаровича Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне парасси çинчен...»

Сармантей мучи малалла ярса пусрĕ. Çак кĕтмен хыпар ăна калама çук хытă хумхантарса ячĕ. Ним сăлтавсăрах, вăл çĕлĕкне тăхăнчĕ, каллех хыврĕ, вырăнĕнчех-ши тенĕ пек, сухалне тытса пăхрĕ, вара майĕпен хăйне сырса илнĕ çамрăксем çине пăхса çаврăнчĕ те вĕсен чаплă награда ячĕпе саламласа паракан аллисене чăмăртама пуçларĕ. Ун куçĕнчен куççуль тумламĕсем сăрхăнса тухрĕç, питçăмартисем çинче çутă йĕрсем хăварса, каçăртарах сăмси айĕнче тăрмакланса тăракан çăра та вăрăм мăйăхĕсем айне юхса анчĕç.

— Тавтапуç, ачамсем,—терĕ Сармантей мучи чĕтрекен сасăпа.—Тавтапуç Аслă Сталина ватăлмалăх кунра мана çапла хисеп тунăшăн!

1952.

## ПЛАЩ

Тĕттĕм-кăвак пĕлĕтсем çăралнăçемĕн çăралса килчĕç те часах пĕтĕм тӳпене витсе хучĕç. Саккас вăрманне хура сăн çапрĕ. Пăртакран ун çийĕ шурăхма пуçларĕ, тĕтрепе карăнса, курăнми пулчĕ.

Çумăрпа исленсе çăрăлнипе катрашкаланса юлнă çул тăрăх чиперех хăлтăртатса пыракан машина сасартăках чарăнчĕ те, кабинăран çамрăк та вĕçкĕнрех шоферăн тăрăхларах хура пуçĕ курăнчĕ.

— Элшелĕнче чарăнса тăма тивет,—терĕ вăл, çăварĕнчи çунса пĕтнĕ пирусне çул айккине сурса пăрахса; анчах, эпĕ çийĕнчех чĕнменнине кура пулас, урăх шут тытрĕ:—Е чуптарăпăр-и?—терĕ вăл.—Ытла ислетсе яриччен аслă çул çине тухăпăр та—тĕттĕм пулнă çĕре хулана çитĕпĕр. Э?

Эпĕ килĕшрĕм. Шофер газ пачĕ. Малта, капот айĕнче, темскер шатăртатса, нăтăртатса илчĕ, машина хытăрах кĕмсĕртетме пуçларĕ, малалла ыткăнчĕ.

Хыçалта, тĕттĕм тӳпене çуркаласа, çиçĕм йăлтăртатрĕ. Унăн хĕрнĕ сăнни, хуçкаланса темиçе татăк пулчĕ те вăрман çине сапаланчĕ. Таврана аслати сасси кисрентерсе ячĕ. Шăпăртатса çумăр çума пуçларĕ.

Манăн плащ та, зонтик таврашĕ те çукчĕ. Анчах, шофер машинине тепĕр хутчен чарсах чĕнчĕ пулин те, кабинăна ларма кăмăл тумарăм, тăвăрлас килмерĕ: унта, шоферпа пĕрле, «Çăлтăр» колхоз доярки Валентина Уйгасова ларатчĕ; вăл ялхуçалăх институтне вĕренме каять иккен. Вăрăм сăмсаллă кепкăна пусарах лартрăм та, урасене хам аярах пуçтарса, кабина хыçне сĕвентĕм.

Çул çинчи лакăм-тĕкĕмсенче хăлтăртатса, шыв кӳленчĕкĕсене пĕрхĕнтерсе, машина çаплах малалла, Элшелел-

леваскать. Анчах, «ытла ислетсе яриччен» аслă çул çине çитме пурĕпĕрех ĕлкĕреймерĕмĕр,—ялтан тухаспа çумăр вăйлăрах çума пуçларĕ. Укăлча çумĕпе иртекен пĕчĕк çырма урлă каçсан, кĕперĕн тепĕр вĕçĕнче, машинăн хыçалти кустăрмисем пылчăклă лупашкана кĕрсе ларчĕç те пĕр вырăнта çаврăнма пуçларĕç.

— Эх-ма, мĕн çумăр витĕрех каятăр-ха эсир?—илтĕнчĕ сасартăк малта хулăн сас.—Тăхтасчĕ пăртак.

Эпĕ çаврăнса пăхрăм та машина умĕнче çӳлĕ те патвар, сарлака хулпуççиллĕ, сарăрах сăнлă çын тăнине куртăм. Унăн сарăрах мăйăхĕн çӳлелле тăратăннă вĕçĕсенче, иккĕшин çинче те, тап-таса çумăр тумламĕсем йăлтăртатаççĕ. Çине вăл ешĕл брезентран çĕлетнĕ плащ тăхăннă, аллине виçĕ юплĕ сенĕк тытнă. Вăл ăна çул айккине тирсе лартрĕ те, кузов хыçне пырса, машинăна малалла тĕртме пуçларĕ.

— Кĕрлеттер, кĕрлеттер хытăрах!—терĕ вăл.—Тепĕр хут, тепĕр хут! Вăт çапла!

Машина ăрăлтата-ăрăлтата илчĕ те лакăмран сиксе тухрĕ, пылчăк çинче чăмпăлтата-чăмпăлтата, тăвалла, çыран çинелле, шума пуçларĕ.

— Васкатăр эппин?—ыйтрĕ пире пулăшакан çын, çаплах машинăпа юнашар утса.—Мĕнле-ха апла, çумăр витĕрех? Пĕтĕмпех исленсе каятăр вĕт... Ак, çакна пĕркенĕр хуть.—Вăл утса пынă çĕртех çийĕнчи плащне хыврĕ те ман пата ывăтрĕ.—Илемĕ çук та, селĕмĕ пур,—пĕр тумлам та витмест.

Эпĕ ура çине сиксе тăтăм. Пĕр палламан çын хăй япалине шанса пани мана шалтах тĕлĕнтерчĕ.

— Чимĕр-ха, епле апла? Сире тата тахçан курăп-ха эпĕ?!. Çук, çук...

Анчах вăл мана итлесшĕн те пулмарĕ. «Юрĕ, манăн инçе каймалла мар, темиçе утăм çеç юлчĕ», текелесе, чарăнса тăчĕ. Пирĕн машина, тӳрем çĕре хăпарса çитрĕ те, малалла хăвăртрах кайрĕ.

— Чипер çитĕр!—кăшкăрчĕ плащ хуçи, аллине сулса, вара çаврăнчĕ те ялалла уттарчĕ.

Эпĕ ним чĕнме, ним тума аптрарăм. Плащ хуçи,— унăн ятне те пĕлсе юлаймарăм,—укăлча çумĕпе лартса кайнă ватă йăмрасем хушшине кĕчĕ те курăнми пулчĕ.

...Элшелре эпĕ тепĕр эрнерен тин пултăм. Плащ хуçине аран-аран шыраса тупрăм: вăл тракторист пулнă-мĕн, çĕртме тунă çĕртен каç пулсан тин килчĕ.

— Ну, мĕнле, чипер ҫитрĕр-и ун чух?—ыйтрĕ вăл, ман алла чăмăртаса.

— Питĕ аван. Пысăк тав ĕнтĕ сире...

Иван Михайлович мана чей ĕҫме чĕнчĕ. Анчах эпĕ васкаттăм: плащ хуҫине шыраса вăхăт чылаях иртрĕ, манăн тĕттĕмлениччен «Ҫăлтăр» колхоза ҫитмелле,— Валентина Уйгасова мана амăшĕ патне кĕрсе, хăй института кĕни ҫинчен каласа пама хушнăччĕ. Анчах хам васкани ҫинчен эпĕ шарламарăм: Иван Михайлович мотоциклне майлама пуҫларĕ; каланă пулсан, вăл леҫсе хăвармасăр та лăпланмастчĕ вара.

1952.

## ЮР ИРĔЛЕТ

Урине инке, калинкке хыçĕнче хĕрĕ такампа калаçнине илтрĕ те, шаршан умне çитичченех чарăнса тăчĕ.

— Эппин, ыран мар тепĕр кун лаша ярăр,—илтĕнчĕ çав самантра Нинăн янăравлă сасси.—Запчаçсемпе ытти япаласене хурса килме кирлĕ пулать.

— Ярăпăр, ярăпăр, Нина,—ответлерĕ ăна хулăн саслă çын.—Ирхине ирех персе çитĕç. Хăвăртрах юсаса пĕтерĕр кăна эсир. Юр ирĕлме те пуçларĕ авă, çул татăлма пултарать.

«Кам-ши вара ку?—шухăшларĕ Урине инке.—Сергей мар, унăн сасси çинçерех пулаканччĕ... Çитменнине тата...»

Урине инкен шухăшĕсене Нина татрĕ.

— Çул пăсăласран çаплах хăратăн-и вара?—янăраса кайрĕ унăн сасси.—Удобрени пĕтĕмпех кӳрсе килтĕр-и-ха?

— Килнĕ, килнĕ, Нина.

— Хурал сăрчĕ те хуралать авă.

— Эсĕ мĕн каласшăн пулнине чухлатăп-ха,—кулчĕ хулăн сасли.—Кĕл те сапнă унта, йăрансем те туса хытарса тухнă. Пĕр тумлам шыв та юхса каяс çук васана.

— Сăмах патăн пулсан—тумаллах ĕнтĕ.

— Эсир каланă пек пулĕ.

— Юрать.

Калинкке хыçĕнче савăнăçлăн кулса илчĕç.

«Мишша, агротехник... Ав кам кĕрлесе тăрать иккен унта,—тинех палласа илчĕ Урине инке хулăн саслă çынна.—Сергей чăнах та килмест пулĕ çав ĕнтĕ...»

Вăл пĕшкĕнчĕ те шаршан çийĕнчен тĕксе антарнă вутсыпписене пуçтарма пикенчĕ. Çур ытам пухсан, кал-

лех тӳрленсе тăчĕ. Анчах калинкке хыçĕнче урăх нимле сас-чĕв те илтĕнмерĕ.

Урине инке пӳрте кĕчĕ. Вутă çĕклемне кăмака умне пăрахрĕ çеç, алăк яр уçăлса кайрĕ те пӳлĕме хăмач пек хĕрелсе кайнă Нина кĕрсе тăчĕ. Вăл вăрт-варт салтăнчĕ, тутăрĕпе пальтине çакса, сĕтел çине майлама тытăнчĕ; агротехникăна вĕренмелли кĕнекесене илчĕ, хăй ертсе пыракан трактор бригади çураки вăхăтĕнче хăш пусăра мĕн ĕçлемеллине кăтартакан плана сумкинчен кăларса сĕтел çине хучĕ.

«Чи малтанах ял патĕнчи пусăра ĕçлеме пуçламалла, инçете кайса тата каллĕ-маллĕ çӳресе вăхăта сая ямалла ан пултăр»,—шухăшларĕ вăл.

Унтан Нина хăш пусăран ăçта куçмаллине тепĕр хут пăхса тухрĕ, ăçтан, хăш çулпа каймаллине паллă турĕ. Паçăр çавăн çинчен калаçса татăлчĕç те ĕнтĕ вĕсем агротехникпа.

Нина, планне пуçтарса, каллех сумкине чикрĕ, ăна та, кĕнекине те этажерка çине хучĕ, хăй кантăк умне пырса тăчĕ, каллех шухăша кайрĕ. «Мĕншĕн килмест-ши вăл? Иртнĕ эрнерех килме пулнăччĕ-çке, ма килмест-ха? Е чăнах та...»

Çуркунне çитрĕ çав ĕнтĕ. Авă, хуралтă тăррисем те чăпарланма пуçланă. Урамри лапсăркка йăмрасемпе тирексем юртан тасалнă, тĕттĕмре хуп-хуран курăнаççĕ. Чӳрече умĕнче кĕмĕл пек йăлтăртатакан пăр хӳрешки çакăнса тăрать... Халех, халех илсе килес пулать тракторсене. Анчах... бригадăри пĕр трактора юсаса пĕтереймен-ха. Пĕтернĕ пулĕччĕç те, хăшпĕр агрегачĕсене юсама хулана ăсатни ĕçе тытса тăчĕ; унтан çав агрегатсене час илсе килеймерĕç...

Урине инке тепĕр сĕтел çине каçхи апат пуçтарма пикенчĕ. ,

— Сергейпе хирĕçсе каймарăр пулĕ-çке эсир?—кăмакаран чугун кăларнă май ыйтрĕ вăл Нинăран.—Уйăх ытла курмастăп ĕнтĕ. Çынсем калаçни тĕрĕсех пуль çав...

Урине инке ассăн сывласа илчĕ те шăпланчĕ.

— Мĕн калаçаççĕ вара çынсем?—ыйтрĕ Нина, чӳрече умĕнчен пăрăнса.

— Хам та савăнса тăраттăм та вĕт, пулмарĕ-тĕр ĕнтĕ. Çынни лайăхчĕ... Авă ялта: Нинук пĕринпе те тепринпе çӳрет, халĕ Мишшана явăçнă, теççĕ. МТС-ра та çавнах калаççĕ-мĕн: Нина ĕçре пуринчен те кайра пырать, ялтан,

Мишша патӗнчен, таврӑнма та пӗлмест, теççӗ. Çавна пула, Сергей те сана пӑрахнӑ имӗш. Хвеклапа çӳрет, тет. Çапла ӗнтӗ вӑл, çӑмӑлттай хӑтлансан. Лешӗ, Хвекли, мӗн вӗт, Сергей бригадинчех. Тата лайӑх та ӗçлет, теççӗ. Эрнерепех иккӗшӗ пӗрле, хулара пурӑнаççӗ, тет. Юри канма кайнӑ тет-и вара, мӗн-и...

Кӗтмен хыпар Нинӑна шартах сиктерчӗ. Кам çапла шутлама пултарнӑ-ши Нинӑпа Мишша çинчен? Тепӗр тесен, кулӑшла сӑмах ку. Агротехникпа тӗл пулсан, ӗç çинчен çеç, ытларах тырпул туса илесси çинчен çеç калаçаççӗ вӗсем. Неушлӗ çынсем чӑнах та урӑхла шутлаççӗ-ши вара? Тен, Сергей те çавӑншӑнах килмесӗр тӑрать?

Нина ним тума аптрарӗ, сӗтел умӗнчи пукан çине пырса ларчӗ.

— Суя вӑл, анне. Кам апла калать вара?

— Вут хумасан тӗтӗм тухмасть. Эпӗ хам та сисетӗп тата çывӑх çынсем те каласа кӑтартрӗç.

— Кам каласа пачӗ эппин?

— Кам... Ав, кӳршӗ Матӗрнех калать.

— Тупнӑ кама итлеме. Эпӗ çине тӑнипе ӑна колхозран хӑваласа кӑларчӗç те, вӑл ман çинчен ырӑ сӑмах калаçмӗ çав ӗнтӗ.

— Кунта та пӑртак лӑпкӑрах пулнӑ пулсан юратчӗ. Кашни çынна ан çулӑх. Çын хуть те мӗн тутӑр, сан ӗç çук унта. Пасара çӳрет-и вӑл, пулӑ сутать-и, мӗне кирлӗ сана? Эсӗ ху лайӑх ӗçле.

Нина хӑй те сисмесӗр тенӗ пек, хӑвӑрт ура çине тӑчӗ.

— Епле вӑл ман ӗç мар! Епле тытмалла-ха Матӗрне пеккисене колхозра? Бригадир ӑна пӗринче ман пата плугаре янӑччӗ те, вӑл никама каламасӑр-тумасӑр хулана пӑрахнӑ та кайнӑ. Епле чӑтмалла-ха çавӑн пек ӳрӗксӳрӗк ӗçлекенсене? Вӑл çулталӑкра та вӑтӑр икӗ ӗçкунӗ çеç тунӑ вӗт.

— Мӗнле ӑнланасшӑн мар-ха эсӗ, Нинук? Матӗрне, епле пулсан та, кӳршӗ. Кӳрше апла тумасан та юратчӗ ӗнтӗ. А эсӗ... Ӑçта унта! Ав, мӗнле шӑв-шав пуçласа ятӑн. Çавӑнтанпа вӑл вара сана çиленсе çӳреме пуçларӗ. Пурӑнасчӗ лӑпкӑ кӑна, хисепре, пурте çитет... Савӑнса çеç пурӑнмалла. Эсӗ пур... Акӑ, ӗнер те-ха, сирӗн МТС директорӗ, Кузьма Сидорчӑ, тӗл пулчӗ те: Ну, Ирина Артемьевна, çуратнӑ та эс хӗр, пурӑнма памасть, тет. Запчаçсем пур чухнех киввисене юсаса аппаланать,

хаклă вăхăта сая ярать, тет. Хамăр мастерскойра юсама май çукки çинчен каларăм та, апла пулсан, мĕншĕн кирлĕ оборудование халиччен те туянмастăр, тесе ятласа пăрахрĕ, тет.

— Мĕн начарри пур вара унта?—кулса илчĕ Нина.— Юсама май пур япалана ма пăрахăçламалла-ха? Тӳрлетрĕмĕр те, чип-чиперех пулчĕç.

— Япалисем санăн мар-çке-ха вĕсем? Мĕне кирлĕ вĕсем сана, çĕннисем пур пулсан?

— Ҫамăн тата вĕсем? Пурте хамăрăн. Ют япала çук пирĕн çĕршывра, пурте хамăрăн.

— Вăт... Вăт... Ялан çапла аннӳне хирĕç пыратăн. Ĕнтĕ юр та ирĕлет тетĕн те, ху авă халь те юсаса пĕтермен-ха тракторусене.

Амăшĕн юлашки сăмахĕсем Нина чĕрине самаях ыраттарчĕç. Унăн ăшĕ тата хытăрах вăрка пуçларĕ, анчах вăл ним те чĕнмерĕ. Урине инке те шарламарĕ урăх. Нина, сăран сумкинчен «Бригадир дневникне» кăларса, сĕтел хушшине ларчĕ. Анчах унта халĕ ним çырмалли те çук, çырма та йывăр кун пек кăмăлпа... Икĕ çул хушшинче те пĕлсе çитеймерех-ши вара вăл Сергее?

Юрату çинчен тӳрех каламан пулин те, хытă юрататчĕç вĕсем пĕр-пĕрне. Ҫулла, вăйлă çумăр çунă вăхăтсенче, Сергей Нина патне вунă-вунпилĕк çухрăмран та килетчĕ; çумăр витĕрех, пылчăк çийĕнченех... Иртнĕ çулла ыраш акма çĕртме сухи тунă чух, пĕррехинче, çумăр çума тытăнсан, Сергей çĕр варринчех Нина патне чупса килчĕ. Вĕсем вара çумăрпа исленнĕ çĕртме пусси тăрăх ирччен çӳрерĕç. «Ҫапла майпа сирĕн тырпул йăтăнать çеç ĕнтĕ. Орден та парĕç акă»,—терĕ вăл Нинăна; Сергей ĕçлекен колхозра хирсене пĕлтĕр кӳлĕ шывĕпех шăварнă та,— вăйлă тырпул туса илнĕшĕн вăл иртнĕ çулах орден илнĕ... Ҫавăн чухнех тата вăл, выля-кула тенĕ пек, туй пирки сăмах тĕртсе хучĕ. Малтанах Нина илтмĕш пулчĕ, анчах Сергей ун çинчен тепĕр хут сăмах тапратсан, вăл каччă куçĕнченех пăхрĕ те: «Юрĕ, ун çинчен кайран», терĕ. Унтанпа Сергей туй пирки урăх ним те шарламан...

Хĕлле вара, колхоз хирĕсенче юр купаласа çӳренĕ хыççăн, Сергейпе Нина, иккĕш икĕ МТС-ра ĕçлекенскерсем, хăйсен бригадисенчи тракторсене ăмăртса юсасси çинчен калаçса татăлчĕç. Машинисене пăхса тухнă дефект ведомоçне тусан, вĕсем татах пĕр-пĕринпе канашласа илчĕç, улăштарса лартмалли детальсене хăйсемех

юсама, ытти материалсене перекетлеме пулчĕç. Хайсен сăмахĕшĕн çирĕп тăчĕç вĕсем: улăштармалли детальсенех çĕнĕрен юсаса лартрĕç, ку ĕçре кирлĕ пулакан япаласене те нумай перекетлерĕç. Анчах... Нина бригади каярах юлчĕ. Сергей çавăншăнах юратма пăрахрĕ-ши вара ăна? Неушлĕ вăл Нина бригади кая юлнин сăлтавне пĕлмест?

Нина тăчĕ те çакса хунă тутăрне илчĕ.

— Эпĕ ирччен кĕтсе тăмастăп, анне,—терĕ вăл, тутăрне пуçĕ çине уртнă май.—Каятăп.

— Ăçтаваскатăн вара?—тĕлĕнчĕ амăшĕ.

— МТС-а каятăп.—Нина пальтине илчĕ.—Эпир ыран та ĕçлетпĕр, иртерех тытăнасчĕ.

— Çĕрле вĕт, ăçта кайăн çак тĕттĕмре?

— Тĕттĕм мар, уйăх тухрĕ авă. Çил-тăман та çук, ăшă. Кăвак çутăлла МТС-ра пулатăп.

Урине инке хĕрне текех чарса тăма шутламарĕ; пурпĕрех ӳкĕте кĕмест вăл, хăйĕннех тăвать. Тата ĕçĕ те пур, васкавлă ĕç; кайтăр эппин.

Нина пальтине тăхăнчĕ, тутăрне тӳрлетрĕ.

— Пĕлмесĕр каларăн эсĕ Сергей пирки, анне,—терĕ вăл. Хăй темшĕн вăтанса кайрĕ, пичĕсем хĕрелчĕç, пĕçерме пуçларĕ. «Тен, чăнах та тĕрĕсех калать-и», пăшăрханса илчĕ вăл çав вăхăтрах. Унтан, пĕр самант пӳлĕм варринче ним тума аптраса тăнă хыççăн, вăл хăвăрттăн урама тухрĕ.

Çанталăк уяр пулин те ăшă. Çурт çийĕсенчен пăнт! пăнт! туса тумла юхать. Урамри йăмрасемпе тирексем çинче хутран-ситрен кураксем çуначĕсемпе çатăлтатса илеççĕ те каллех йăвисене кĕрсе ларса лăпланаççĕ. Лăпкă. Шăп. Пăртакран çеç Турикасра хуткупăс сасси илтĕнчĕ, хĕрсен юрри илемлĕн янăраса килчĕ. Кĕçех хĕрсен юррине каччăсен сасси хутшăнчĕ. Анчах юрă часах шăпланчĕ,—юрлаканнисем клуба кĕчĕç пулмалла.

Хуралтăсен çийĕ тата юр кĕрчĕсен айккисем хуралнипе пĕтĕм таврадăх темле чăпаррăн курăнать. Тĕксĕм кăвак тӳпере йăлт-йăлт туса симĕс-кăвак çăлтăрсем çиçеççĕ. Ял леш енчи хура вăрман хыçĕнчен пăхăр тĕслĕ тулли уйăх хăпарать. Вăл ял çине, хирсем çине хĕрхĕлтĕм çутă сапать.

«Иванов тавранман-ши яла,—сасартăк чарăнса тăчĕ Нина, Сергейпе пĕр МТС-ра ĕçлекен Кирук тракториста аса илсе.—Вăл пĕлме тивĕç...»

Нумай шухăшласа тăмарĕ Нина, хирелле тухакан аслă урамран пăрăнчĕ те клуб патнелле кайрĕ.

Вăл зала пырса кĕнĕ чух çамрăксем ташлатчĕç. Кирук чăнах таврăннă-мĕн. Вăл пуçне малалла пĕшкĕртнĕ те, ниçталла пăхмасăр, тăрăшсах купăс калать. Нина, ташлакансене перĕнес мар тесе, майĕпен малалла иртрĕ, купăсçă çумĕнчи пĕр пушă пукан çине пырса ларчĕ.

— А-а, эсĕ те кунта-мĕн,—вылянă хушăрах калаçма пуçларĕ Кирук, ăна асăрхасан.—Ҫанма килтĕн-и? Ма ташламастăн?

— МТС-аваскатăп-ха эпĕ...

Нина Сергей çинчен ыйтасшăн пулчĕ, анчах çиĕнчех ниепле те хăяймарĕ, сăмах тупаймарĕ.

Кирук ун çинчен хăй пуçларĕ.

— Пирĕннисем таврăнаймарĕç-ха хуларан,—терĕ вăл, кулкаласа.—Е эсĕ пĕлместĕн те-и ун çинчен? Сергей ман Хвеклана туртса илчĕ вĕт. Хулана пĕрле кайрĕç.

Ку сăмахсем Нина чĕрине шар! çурса ячĕç. Вăл ним калама аптрарĕ.

«Эппин, Матĕрне тĕрĕсех калать?—шухăшларĕ вăл.—Анчах та... Мĕнле апла пултăр-ха вăл? Неушлĕ хальччен те пĕлсе çитеймен-ха эпĕ ăна?»

Текех клубра ларма кăмăл тумарĕ Нина.

— Ну, канăр эппин, ырă каç пултăр,—терĕ вăл Кирука; вара, вырăнĕнчен тăрса, алăк патнелле утрĕ.

Кирук купăсне пукан çине лартрĕ, Нина хыççăн тухма тăчĕ.

— Нина, тăхта!—чĕнчĕ вăл.

Анчах Нина чарăнмарĕ, «васкатăп эпĕ», терĕ те, чупсах урамалла тухса вĕçтерчĕ.

Хирте вăл хуллентерех утма пуçларĕ. Лăпланас тесе, урăх япаласем çинчен шухăшлама тăрăшрĕ, анчах пултараймарĕ: хăлхинче тăтăшах амăшĕнчен тата Кирукран илтнĕ сăмахсем янăраса тăраççĕ.

«Эрнерен пех иккĕшĕ пĕрле, хулара пурăнаççĕ тет...»

Мĕнле сӳпĕлти пулсан та, Матĕрне хăй курнине калать пулĕ ĕнтĕ. Ҫанма кайнă-и унта, хăнана-и,—Хвеклийĕн тăванĕсем те нумай вĕт унта,—пурпĕрех пĕрле кайнă...

«Сергей ман Хвеклана туртса илчĕ вĕт...»

Кирук, пĕр МТС-ра ĕçлекенскер, аван пĕлет ĕнтĕ ăна, пĕлсе калать. Неушлĕ Сергее кăмăлларах панă вара Хвекли? Ҫапла та пулĕ çав: вĕсем яланах пĕрле—МТС-ра

та, хирте те. Çапла килсе тухасса малтанах кĕтмелле пулнă...

Нина сасартăк пĕлтĕр пулса иртнĕ ĕçсене аса илчĕ те тăпах чарăнса тăчĕ. Яла пырсассăн, Сергей пĕртте вăрах тытăнса тăрасшăн марччĕ. «Хвекла тракторне пăхмаллаччĕ-ха», «Хвеклана пулăшмаллаччĕ» тесе, часах хăй бригадине чупатчĕ. Пĕррехинче çапла—Октябрь уявĕ умĕн пулнăччĕ-ха ку—Сергей яла каçхине пычĕ те, Нинăпа кăшт калаçкаласанах, хăйсен МТС-не таврăнма васкарĕ. «Хвекла паян хăй çуралнă кунне уявлать», терĕ. Нинăна та чĕнчĕ, анчах Нина килĕшмерĕ, çиленсе кайрĕ. Вĕсем вара килĕшеймесĕрех уйрăлчĕç, Нина ăна тепре тĕл пуличченех çиленсе пурăнчĕ.

«Акă мĕншĕн васканă иккен вăл ун чух,—шухăшларĕ Нина, каллех васкаса утма тытăнса.—Халĕ тата... Çав Мишшапа... Қам шутласа кăларнă-ши ĕнтĕ? Ăна та ĕненчĕ пулĕ...»

МТС-алла каякан çулăн икĕ хĕррипе çамрăк хурăнсем лартса тухнă. Вĕсен хыçĕнче—ик енче те—кĕрхи çĕртме пусси. Ăна кĕркунне Нина бригади сухаланă. Çуркунне, юр кайса пĕтсен, çĕр кушсан, культиваци тума пуçлĕç акă, тулă акĕç. Çĕрĕн-кунĕн тракторсем кĕрлĕç...

Нина çултан пăрăнчĕ те хурăнсем хушшипе хирелле тухрĕ. Юр пусăрăннă ĕнтĕ, йăшнă, ирĕлме пуçланă; ура айĕнче вăл нăтăр-нăтăр тăвать. Тĕл-тĕл, сăртлăрах вырăнсенче, хура курăнать. Çĕрĕ питех те лайăх кунта, кăпăшка, мамăк пек. Ырашĕ те вăйлă пулнăччĕ, Нина уншăн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илчĕ кăçал...

Пăртак юр ашса çӳренĕ хыççăн Нина каллех çул çине тухрĕ, хăвăртрах утма пуçларĕ. МТС Пилешкассинчен—Нинăн тăван ялĕнчен—пилĕк çухрăмра, Тимĕрçен леш енче. Тепĕр сехетрен Нина унта пулать.

«Неушлĕ урăх кураймăпăр та-ши вара пĕр-пĕрне?—шухăшларĕ Нина, каллех Сергее аса илсе.—Халь курмасан, курас та çук вара кĕркуннеччен... Ĕлĕкхи пек, вăл пирĕн яла пырас çук халĕ. Пĕрлех ĕçлеççĕ, ялан пĕрле пулаççĕ... Часах акă хĕрӳ ĕç пуçланать, кунсене те, çĕрсене те хирте ирттермелле пулать. Анчах... Мĕнле капла пулса тухрĕ-ха ку?»

Нина малтанах МТС кантурне кĕчĕ. Çĕр варринче унта никам та пулмарĕ. Пăртак ларсан, вăл хĕрсен общежитине пычĕ. Юлташĕсем çывăраççĕ. Вĕсене вăратас мар тесе, вăл аттисене алăк патĕнчех хыврĕ, пальтине те

çавăнта çакрĕ. Анчах çыварасси килмерĕ унăн, вăл часрах мастерскойне каясшăн пулчĕ. Çуркунне çитет-çке-ха, юр ирĕлет!

...Қанмалли кун пулин те, ремонтниксем ирех ĕçе тухрĕç. Нина хăйĕн цех кĕтессинче ларакан тракторĕ патне пычĕ çеç, леш вĕçĕнчен ăна такам чĕнни илтĕнчĕ.

— Нина!

Нина сасă илтĕннĕ çĕрелле çаврăнса пăхрĕ те... унта Сергейпе Хвекла тăра параççĕ! Савăнăçлă хăйсем, кулаççĕ, васкаса Нина патнелле утаççĕ. Мĕншĕн килнĕ-ши ĕнтĕ? Çынна кăлăхах çунтариччен, курăнас марччĕ хуть, пĕр-пĕр ĕçпе килнĕ пулсан та...

— Ăçтан лекнĕ эсир кунта?—ыйтрĕ Нина, пĕрре тĕлĕнсе, тепре çиленсе. Хăй çапах та хытă пăшăрханнине кăтартасшăн мар пулса, ирĕксĕртереххĕн йăл кулчĕ. Кун хыççăн унăн хула пирки те тĕртсе илес килчĕ, анчах ним те шарламарĕ.

«Пултăрах ĕнтĕ».

— Хамăр килтĕмĕр.—Сергей çаплах ăшшăн кулать, Нинăна алă парать.

— Пулăшма килтĕмĕр,—терĕ Хвекла та, Нинăн тепĕр аллине тытса.

— Эпир хамăрах пĕтеретпĕр паян,—хирĕç тавăрма васкарĕ Нина, кулма чарăнса.—Çӳресе чăрманмалла та марччĕ.

Вăл аяккалла пăрăнса каймa та шутланăччĕ ĕнтĕ, анчах ăна тем чарса тăчĕ.

Сергейпе Хвекла ним чĕнме аптрарĕç, малтан—пĕрпĕрин çине, унтан—Нина çине пăхса илчĕç.

— Мĕншĕн çиленетĕн-ха эсĕ?—ыйтрĕ Хвекла, аллине Нина хулĕнчен вĕçертсе.

Сергей те аллисене усрĕ. Вăл, шултра та шап-шурă шăлĕсене кăтартса, айăпа кĕнĕ чухнехи пек йăл кулчĕ. Унтан аялалла усăнса аннă сарă çӳç пайăркисене сăран тӳпеллĕ çĕлĕкĕ айне тĕртсе кĕртрĕ те—тем систерсе пулĕ ĕнтĕ!—йăлт çеç Хвекла куçĕнчен пăхса илчĕ; вара Нина еннелле çаврăнчĕ.

— Эсĕ пире хăвaласа ярасшăн-им апла?—ыйтрĕ вăл.—Пĕрле хăвăртрах пĕтерĕпĕр, ăмăртатпăр вĕт...

«Ăмăртатпăр...» Ку сăмаха Сергей Нинăна кая юлнăшăн тĕртсе каларĕ пулмалла. Кулмасăр мĕн туччăр тата: вăл (вĕсем!) маларах юсаса пĕтернĕ-çке! Пĕтернĕ те, уçăлма, канма тесе, хăнана çӳренĕ, халĕ тата,—кулмал-

лах ёнтĕ,—пулăшма тесе, кунта килнĕ. Ара, Нина хăй чĕнсеччĕ-çке-ха вĕсене ăмăртăва! Чĕнчĕ те... акă, намăс çеç курчĕ.

Çапах та Нина Хвеклана ытларах çиленчĕ. Уншăн çак ним сăлтавсăрах хĕреле-хĕреле каякан именчĕк те хытканрах хура хĕр тăшман пулнă пекех туйăнчĕ. Пĕлнĕ-çке-ха вăл Нина Сергее юратнине, тăвата çул хушши, трактористсен курсĕнче вĕреннĕ вăхăтранпах юратнине... Эппин, мĕншĕн, мĕншĕн вăл?..

Текех калаçса тăма шутламарĕ Нина, ал айне пулнă темле гайка уççине ярса тытрĕ те трактор умĕнче радиаторпа аппаланакан тракторист патне пычĕ, ăна пулăшма пуçларĕ.

— Нина, тен, эсĕ...—Хвекла тем каласшăн пулчĕ, анчах ним те татса калаймарĕ. Тĕлĕнчĕ те вăл, кӳренчĕ те. Çунса тăракан хура куçĕсем шывланнă пек пулчĕç.

Сергей текех чăтса тăраймарĕ. Вăл сăран перчеткине кĕсйине чикрĕ, унтан Нина патне пырса, аллине ун хулпуççийĕ çине хучĕ. Нина тӳрленсе тăчĕ, каччă еннелле çаврăнчĕ. Пасăр çеç вăл Сергее те, Хвеклана та кураймиех пулса çитнĕччĕ, анчах каччăпа хĕр аптраса ӳкнине, уйрăмах Хвекла хурланнине туйсан, унăн кăмăлĕ кăшт улшăнчĕ.

«Тен, ку ĕçре эп хам, пĕр хам çеç айăплă пулĕ,—шухăшларĕ вăл.—Этем чĕре хушнине тăвать... Çынна ирĕксĕр... Ирĕксĕр юраттарма май çук...»

— Туйĕ хăçан пулать-ха сирĕн?—ыйтрĕ Нина, халĕ ёнтĕ пĕтĕм ĕçе шӳтпе ирттерсе яма тăрăшса.—Чĕнетĕр-и?

— Туй-и?—Сергей ăнланаймарĕ.—Вăл ёнтĕ санран килет, Нина.

— Манăн ирĕк памалла-и? Кунта çавна ыйтма килтĕр-и-ха эсир?

— Ун çинчен пĕрре калаçсаттăмăр вĕт эпир? Астăватăн-и?—Сергей Нинăна куçран пăхса илчĕ те каллех йăл кулчĕ.—Халĕ пулăшма килтĕмĕр.

— Пулăшма? Çук, ан чăрманăр, чăнах та. Эпир паян хамăр та пĕтерме шутлатпăр.—Вара тĕртсе илчĕ:—Ыйтса тăмасан та юратчĕ: кайăрах, тăвăрах туйне. Хуть хулара, хуть ялта тăвăр—чару çук.

— А-а-а, авă мĕн пирки иккен эсĕ!—Тинех туйса илчĕ Сергей. Вăл хăй те ёнтĕ ахăлтатсах кулса ячĕ.—Çиленсен те юрамаллаччĕ те сана, пултараймастăп, кулас ки-

лет.—Вăл Нинăна икĕ аллипе те хулпуççийĕсенчен тытрĕ.—Хула пирки, мĕн... Ҫайса килтĕмĕр çав: çул татăличчен Хвеклапа икĕ çĕнĕ трактор илсе килтĕмĕр.

Нина пĕр утăм каялла чакрĕ. Ун пуçĕнче çавăнтах çĕнĕ шухăш вылянса иртрĕ. Тен, чăнах та çапла пулнă-тăр? Хальччен нихçан та суйманччĕ вĕт-ха Сергей. Вăл хĕрелсе кайрĕ, Сергейпе Хвекла çине пăхма именнипе, пуçне пĕкрĕ.

Ун ăшĕнче халĕ икĕ тĕрлĕ шухăш кĕрешме пуçларĕç. Сергее юрататъ вăл, пĕтĕм чун-чĕрипе юрататъ. Ун сăмахĕсене ĕненмесĕр тăма хал та çитмен пек, анчах вăл çавăнтах амăшĕнчен, Ҫирукран илтнĕ сăмахсене аса илет те иккĕленме пуçлатъ, чунĕ вĕчĕрхенсе каять. Тен... Ҫам пĕлет...

Вĕсем патне Хвекла пычĕ. Унăн паçăр сивĕннĕ пек пулнă хура куçĕсем халĕ пăртак йăвашрах пăхаççĕ. Нина каллех именсе кайрĕ. Вăл, аллинчи нимле гайкăна та юраман уççине стеллаж çине хучĕ те, кирлĕ мар çĕртенех, тепĕр уçă илчĕ.

— Эпир пĕркунах килесшĕнччĕ те, çул татăличчен тракторсене илсе килме шутларăмăр,—терĕ Хвекла, ним асăрхаман пек пулса.

— Тытăнар пуль?—Сергей ун куçĕнчен пăхса илчĕ.— Халĕ ĕнтĕ... Хăвăра пулăшма ирĕк пар. Васкас пулатъ Нина: çуркунне çитрĕ, юр ирĕлет.

«Ҫуркунне çитрĕ, юр ирĕлет...»

Ĕнер каç та, халĕ çеç те хытă, питĕ хытă çиленнĕччĕ Нина Сергее, анчах çилĕ, ăшшăн пăхакан хĕвел çинче юр ирĕлнĕ евĕр, майĕпен-майĕпен сĕвĕрĕлме пуçларĕ, чĕрере татах çурхи кун пек ăшă туйăм вăранчĕ.

«Кăлăхах çилентĕм акă Хвеклана,—шухăшларĕ вăл, тусĕн каллех кулăпа çиçме пуçланă сăн-питне пăхса.— Сергее çын сăмахне итлет тесе вăрçатăп, хам çын сăмахĕ тăрăх хирĕлсе çӳретĕп».

— Юрĕ эппин, пĕрле ĕçлĕпĕр,—терĕ Нина пăртакран. Вăл Сергейпе Хвекла аллине тытса хыттăн чăмăртарĕ.— Ҫаçарăр.—Анчах кăна мĕншĕн ыйтнине каламарĕ— хăяймарĕ, вăтанчĕ.

Ĕçлеме те тытăнаймарĕç, мастерскоя васкаса килнипе хĕремесленсе кайнă Ҫирук кĕрсе тăчĕ. Хуларан таврăннă тракторист-тусĕсене тата Нинăна курсан, вăл калас тенĕ сăмахне калаймасăр, пурне те алă тытса тухрĕ те йăл кулса илчĕ, айккалла пăрăнса тăчĕ.

— Вăтанмасăрах калам-ха,—терĕ вăл.—Эпĕ Нина патне каçару ыйтма килтĕм.—Кирук Нина енне çаврăнчĕ.—Эсĕ паçăр итлесе пĕтермерĕн...

— Мĕн çинчен çак эсĕ?—пĕр вăхăтрах ыйтрĕç Хвеклапа Сергей. Вĕсем вара çавăнтах чухласа илчĕç те кулса ячĕç:—Кунта эсĕ те айăплă иккен!

Кирук мĕншĕн каçару ыйтнине Нина та çийĕнчех ăнланчĕ. Ăна темле аван мар пулса кайрĕ. Питçăмартисем пĕçерме пуçларĕç.

— Ун çинчен кайран,—терĕ вăл, хăй тракторĕ патнелле иртсе.—Ну, пулăшма килтĕр пулсан—пулăшăр.

— Эпĕ те юлатăп, апла,—Кирук малтан—Нина çине, унтан—Хвекла çине пăхса илчĕ.—Юрать-и?

— Сана халĕ кунтан хăваласа та ярас çук ĕнтĕ. Тунсăхларăр пулĕ?!. Çапла-и, Хвекла?—шӳтлерĕ Сергей.

...Трактора вĕсем кăнтăрлаччен юсаса пĕтерчĕç, моторне ĕçлеттерсе тĕрĕслесе пăхрĕç, картишне кăларса ыттисемпе юнашар лартрĕç. Тепĕр кунне çеç кайма шутланăччĕ ĕнтĕ Нина, анчах унăн текех кĕтсе тăрасси килмерĕ,—трактористсем машинисене МТС картишĕнчен хирелле илсе тухрĕç те Пилешкассинелле çул тытрĕç.

Пĕр самант Нинăпа Сергей иккĕшĕ пĕрле тăчĕç пулин те, нимех те калаçаймарĕç. Тракторсем ана пĕвĕ тăршшĕ кайсан, Сергей Нинăна ваткатма пуçларĕ,—хăваласа çитеймĕн тата,—терĕ вăл.

— Тавтапуç ĕнтĕ сире,—сăмах хушрĕ Нина уйрăлас умĕн Сергейпе Хвеклана.—Çуракинче хытăрах ăмăртăпăр. Текех кая юлас марччĕ, килес çул хăвăра пулăшма пырасчĕ. Сана та пысăк тав, Кирук.

Вара уйрăлчĕç. Нина васкасах тракторĕсем хыççăн утрĕ. Сергей, Хвекла тата Кирук урăх çулпа—хăйсен МТС-ĕ еннелле кайрĕç; вĕсен те тракторĕсене колхоза илсе таврăнмалла.

Нина, Пилешкасси çулĕ çинчен каялла çаврăнса пăхса, темиçе хутчен аллине сулса илчĕ. Унăн çутă сăнĕнче çав тери ырă кулă палăрчĕ.

— Тепре куриччен, тусăм!..

Хирте тăп-тăрă кун çиçет. Пĕлĕтпе çĕр инçетре-инçетре пĕрлешеççĕ; вĕсем сыпăннă тĕлте витĕр курăнакан кăн-кăвак сывлăш чĕтренсе тăрать. Сенкер тӳпере хĕвел кулать. Хир çине çемçе, ăшă пайăркасем тăкăнаççĕ; юр ирĕлет, çаралса юлнă хура тĕмескесем çинчен пăс йăсăрланса хăпарать.

Часах акӑ хир талккишӗпех вӑранӗ, унта тракторсем кӗрлени, ҫамрӑксем, тӑрисем юрлани илтӗнме пуҫлӗ; савӑк, илемлӗ юрӑ инҫете-инҫете янраса саланӗ, ҫӳле-ҫӳле вӗҫсе хӑпарӗ. Вӑл ҫак аслӑ хирте чӑн-чӑн юрату юрри пек илтӗнсе тӑрӗ.

---

## ТУССЕМ

### 1

Унтанпа пилĕк çул çурă иртсе кайрĕ... Вăхăт, пĕр шутласан, вăрах та мар, анчах вăл ĕнтĕ тахçанах пулнă, таçта, инçете-инçете тăрса юлнă пек туйăнать. Çапах та аса килет вăл, аса килет... Аса килет те—чун хурланать, чĕре пĕтĕмпех кӳтсе çитет, ыратать. Çавăн пек йывăр самантсенче вара çамрăклăх кунĕсемпе пĕрле иртсе кайнă телее ĕненес те килмест. Пулнах-ши вĕсем, çав савăнăçлă, илемлĕ кунсем?

Пулнă çав, пулнă! Çав кунсенчен пуринчен ытла Павăл асне пĕр хĕвеллĕ, ăшă кун тăрса юлчĕ. Павăлпа Люба ун чух, хальхи пекех, хăйсен çутă, пысăк пӳлĕменче, Атăл енне тухакан кантăк умĕнче тăратчĕç... Институт пĕтернĕ хыççăн, Люба ăна Киеврах юлма ӳкĕтлерĕ. Анчах Павăла хăй çуралса ӳснĕ çĕршыв туртрĕ—вăл Шупашкара килме шутларĕ. (Унта та инженерсем кирлĕçке-ха!) Вара вĕсем арăмĕпе чăнласах хирĕçсе кайрĕç те «ĕмĕрлĕхех» уйрăлчĕç. (Çапла каларĕ Люба уйрăлнă чух.) Анчах хирĕçӳ часах манăçа тухрĕ, çав ĕмĕр асран кайми телейлĕ кун Люба хăй Павăл патне, Шупашкара килчĕ... Ĕнер пулнă пекех астăвать Павăл çав куна. Вĕсем пĕр-пĕрне чуптурĕç те, ним калаçма аптраса, пайтахчен кантăк умĕнче ыталашса тăчĕç... Умра, çывăхрах, чăнкă çыран айĕнче, анлă Атăл канса выртатчĕ. Ун çийĕ кĕленче пекех тип-тикĕс те çап-çутăччĕ; леш хĕрри çеç ун, ешĕл вăрман сĕмĕ ӳкнипе, симĕссĕн-кăваккăн курăнатчĕ. Атăл кăкăрĕ тĕслĕ çӳлĕ тӳпере шурă пĕлĕт татăкĕсем вĕçе-вĕçе иртетчĕç. Вĕсем, акăш еверлĕскерсем, çуначĕсемпе те сулнăн туйăнатчĕ... Телейлĕ, илемлĕ, савăнăçлă кунсем! Манăçма пултарăр-ши эсир?!

Уçă кантăкран палатăналла аран палăракан лăпкă çил вĕрет. Çак çил те çав пилĕк çул каялла пулнă телейлĕ кунах аса илтерет. Ун чухне те çапла уçă çил вĕретчĕ, Любăн сарă çӳçне варкăштарса, пĕрре малалла усса антаратчĕ, тепре айккинелле, Павăл пичĕ çинелле сулăнтарса яратчĕ.

Чун хурланать çаксене аса илсен, чĕре ыратать. Анчах ним тума та çук. Суккăрах пулса юлать çав ĕнтĕ Павăл. Эх, куçсем курас пулсан! Тăрĕччĕ те урама тухĕччĕ, аслă столица тăрăх пĕчĕк ача пек чупса кайĕччĕ, Кремль патне çитсе курĕччĕ, Мавзолее, метрона, музейсене, театрсене кĕрсе пăхĕччĕ. Унтан кайĕччĕ килне, çуралнă çĕршывне. Атăл тăрăх пăрахутпа анĕччĕ. Мĕн Шупашкара çитичченех кĕмĕччĕ каютăна, пăхса пырĕччĕ...

Павăл кантăк патĕнчен пăрăнчĕ те хăй койки патнелле утса кайрĕ.

Койка инçе мар, кантăкран тăватă утăмра ларать. Тăватă утăм ярса пуссан, аллăсене малалла тăсатăн та кроватĕн чĕнтĕрленĕ пуçĕ лекет.

Павăл койки çинчен витĕнкĕçне сирчĕ, халатне хывса кровать пуçне çакрĕ те выртрĕ. Унăн кăмăлĕ пăсăлнине палатăри юлташĕсем сисрĕç пулмалла: юнашар койка çинче выртакан сапер-инженер та, пĕр полкра çапăçнă Макар Иванов летчик-штурмовик та (вăл шупашкарсемех, вăрçăччен Павăл цехĕнче токарьте ĕçлетчĕ) халĕ ăна ним те чĕнмерĕç.

Павăл каллех шухăша кайрĕ. Паçăрхи шухăшах канăç памасть ăна. Неушлĕ çапла ĕмĕрлĕхех суккăр, çын ĕнси çинче тăранса пурăнакан çын пулса юлĕ-ши вăл? Ку шухăшсем ĕнтĕ икĕ уйăх хушши ун пуç мимине пăралаççĕ. Анчах ним тума та çук, малта—пурăнас пулсан—ăна çав телейсĕр, хурлăхлă пурнăçах кĕтет...

Куççене ылханлă хура бинтпа çыхса лартнăранпа виçĕ уйăх çеç иртнĕ пулин те, Павăлăн хăй унчченкуçлă пулнине те ĕненес килмест хăш чух. Ун пек чухне вăл яланах хăй суккăр пулса юлнă куна аса илет. Кашни аса илмессерен вара вăл юлашкинчен хăй мĕн курнине шыраса тупма тăрăшать, анчах кашни хутĕнчех суккăр куçсем умне урăх сăн тухса тăрать. Пĕрре унта Сухачув таврашĕнчи çунакан ялпа (çав каç вăл пушшех те вăйлăрах çуннăччĕ) ун çинчи юн тĕслĕ тӳпе, тепре самолечĕ çинчи пулемечĕсемпе тупписен çулăм пĕрĕхекен кĕпçи-

семпе хăйсем пăрахакан бомбăсем пĕрхĕнтерекен хăрушă фонтансем тухса тăраççĕ. Анчах чи юлашкинчен вĕсенчен хăшне курнине маннă вăл; халь куçа йăмăхтаракан çутă çулăм пĕтĕм пит-куçа пĕçерсе илнине тата çав çутăпа пĕрлех темĕн хыттăн кĕрĕслетсе çурăлнине те хăй самолечĕ-мĕнĕпех таçта кĕрсе ӳксе пăлтăрпалтăр çаврăнса кайнине çеç астăвать.

Павăл хăйне тухăçалла илсе каякан санитари поезчĕ çинче тăна кĕчĕ. Анчах ун чухне вара вăл суккăрччĕ, куçĕсем çинчен, хальхи пекех, йывăр та кăшăл пек хĕсекен, ыраттаракан, курма чаракан кăна мар, хускалма та, шухăшлама та кансĕрлекен бинт выртатчĕ... Вăл акă халĕ те выртать. Çынсем çĕнтерӳ кунне уявласа савăнчĕç, анчах Павăл вăл савăнăçлă куна, чĕрипе туйнисĕр пуçне, куçĕпе кураймарĕ те...

Павăл хăй сисмесĕрех ассăн сывласа ячĕ те, йывăр шухăшсене вăхăтлăха манас тесе, хăйĕн ача чухнехи пурнăçне аса илчĕ...

Ашшĕне вăл пачах астумасть. Амăшĕнчен те çичĕ çултах юлнă. Çакăн хыççăн вара вăл пиччĕшĕ патĕнче пурăннă. Мĕнле пулсан та, савăнăçлă пулнă ача чухнехи кунсем... Акă вăл чăнкă çыран çийĕпе Атăл çинелле йĕлтĕрпе ярăнса анать. Çыран тикĕс мар. Йĕлтĕрсем Павăла пĕрре çӳлелле илсе улăхаççĕ, тепре, тĕл пулнă кĕрт е хысак урлă каçнă чух, вăхăтлăха тӳрех илсе пыраççĕ, унтан сасартăк аялалла, юрпа витĕннĕ пăр çинелле ĕрĕхтерсе каяççĕ. Хăлхасенче çил шăхăрать, ик аяккипе çара йывăççем, çыран çинелле хăпаракан юлташĕсем вĕлтлете-вĕлтлете юлаççĕ...

«Халĕ çапла ярăнма пултараяс çук»,—шухăшларĕ Павăл; кулса илчĕ; çынсем хăй кулнине ан курччăр тесе, питне простыньпе хупларĕ...

Пионерсен лагерĕнчи шурă чатăрсем, кĕмĕл сывлăмпа эрешленнĕ газонсем тата звенопа инçе походсене çӳренисем аса килеççĕ. Хăйне комсомола илнĕ кун тухса тăрать...

Павăл вăтам шкул пĕтерсен, ун пиччĕшĕ Украинăна, Киев хулине куçса кайрĕ. Тăвансемсĕр ан юлтăр тесе, шăллĕне те хăйĕнчен хăвармарĕ. Павăл вара мĕн институт пĕтеричченех унта пурăнчĕ. Киевра вăл Любăпа паллашрĕ...

— Çывăрмастăр-и эсир, Павăл Степанович?—илтĕнчĕ çав самантра çывăхрах сестран йăваш, лăпкă сасси.

— Çук, çывăрмастăп.

Сестра каймасть иккен, ун умĕнчех ларать. Вăл питĕ çамрăк пулас; сасси Любăнни пек чечен, ачаш. Хăй те вăл Люба пекех сарă çӳçлĕ, тӳрĕ сăмсаллă, çаврака питлĕ, илемлĕ пулмалла... Çук, Любăна çитеймест пулĕ—ун пеккисем урăх çук тĕнчере...

Пĕрле çулталăк пураннă хыççăн, 1941 çулхи çуркунне, Люба Киев çывăхĕнчи тăван ялне, ашшĕ-амăшĕсене курма кайрĕ. Павăл унпа каяймарĕ—заводри çĕнĕ цеха ĕçе яма хатĕрленетчĕç. Вăл цех пĕтĕмпех ун куçĕ умĕнче çитĕнчĕ, вăл хăй ăна тăваканĕ пулчĕ. Туса пĕтерсен вара, цех шăп кăна ĕçлеме пуçлас умĕн, вăл ăна пăрахса хăварма пултараймарĕ. Люба ăна ăнланчĕ, хăйпе пĕрле пыма хистемерĕ, пĕчченех кайрĕ... Кайран вара... вăл партизансен отрядĕнче вилни çинчен çырса пĕлтерчĕç... Люба ашшĕ-амăшĕсем тата Павăлăн Киевра пурăнакан инкĕшĕ оккупацире вилнĕ, пиччĕшĕ Сталинград патĕнче пуçне хунă. Чĕрешĕн хаклă пулнă çывăх çынсем пурте ĕмĕрлĕхех çухалчĕç, Павăл пĕччен, тăр-пĕччен тăрса юлчĕ. Пĕччен те суккăр...

— Çывăрса каймарăр-и, Павел Степанович?—каллех ыйтрĕ сестра, сасси пушшех те йăвашшăн илтĕнчĕ.

— Çук-çке. Мĕншĕн?

— Часах апат илсе килеççĕ.

Каçхи апат хыççăн Павăл умлăн-хыçлăн икĕ пирус туртрĕ те каллех хăй вырăнĕ çине пырса выртрĕ. Кӳршĕри койка çинче выртакан Макар Иванович летчик, Шăмăршă таврашĕнче çуралса ӳснĕ хура кăтра çӳçлĕ, çунтарса илес пек пăхакан хура куçлă каччă, ăна хăй темле журналта вуласа пĕлнĕ авиацири çĕнĕ япаласем çинчен каласа пама тăчĕ, анчах Павăл ăна: «Кирлĕ мар, ыран калăн»,—терĕ те пуç çийĕнченех витĕнсе выртрĕ. Тусĕ ăна ăнланчĕ пулас, пăртак шăпах выртнă хыççăн:

— Юрĕ, юрĕ эппин, кан,—терĕ те урăх ним те чĕнмерĕ.

«Канмалли кăна юлчĕ ĕнтĕ... Сана аван калама»,—шухăшларĕ Павăл, тарăхса; анчах çавăнтах тусне сăлтавсăрах çиленнине туйса илчĕ те ӳкĕнме пуçларĕ.

Виçĕ çул хушши вĕсем пĕр полкра, пĕр эскадрильйăра çапăçнă. Юлашки çул вара пĕр звенорах: Павăл ведущи пулнă, Макар—ведомăй. Нумай-нумай хутчен пĕрле фашистсен укреплениййĕсене, переправисене çĕмĕрме çӳ-

ренĕ, вилĕм çывăхĕнче пулнă, анчах кирек мĕнле нушара та пĕрне пĕри пăрахман...

Ытахальтен тенĕ пек, Павăл Сухачувран çурçĕререх пулса иртнĕ пĕр ĕçе аса илчĕ. Вăл январĕн вунтăххăрмĕш кунĕнче пулнăччĕ пулас.

...Акă вĕсем, вуникĕ штурмовик, Висла шывĕ пысăк авăнчăк туса айккинелле пăрăнакан çĕрелле вĕçсе пыраççĕ; унта фашистсем каçă тунă.

Вĕçет те Павăл тăшман зениткисем пеме пуçласса кĕтсе пырать: каçă патне вĕсене яланах нумай лартса тултараççĕ. Каçма, чăнах та, кăнтăр çутинчех тытăнайман пулĕ-ха, анчах васкамалла; тытăнĕç те,—çак хĕрӳ вăхăтра, хыçран хăвалана чух, вăрманта ларма та хăрушă вĕсемшĕн.

Макар тем юрлать. Çапла çав, юрлатчĕ, лайăх кăмăллăччĕ вăл. Сăлтавĕ те пулнă ĕнтĕ: çирĕм виççĕ тултарчĕ йĕкĕт. Çитменнине тата, шăп задание вĕçсе тухас умĕн, икĕ çыру илчĕ: амăшĕнчен тата Наташăран, савнă хĕрĕнчен; вăл вĕсен цехĕнче ĕçлетчĕ...

Эскадрилья каçă еннелле пăрăнчĕ.

Тăшман вĕсем пырасса кĕтсех тăнă-мĕн. Каçă çине кĕрсе пĕрер хут бомба пăрахсанах урăм-сурăм пеме пуçларĕç. Анчах халĕ ĕнтĕ зениткăсем тытса тăраймарĕç штурмовиксене: «илюшинсем» ула-ула аялалла, Висла çинелле чăмаççĕ те ухлаттара-ухлаттара бомбăсем пăрахаççĕ, пулеметран, тупăран переççĕ.

Юлашкинчен, пиккене кĕрӳçĕн Павăл хыçалалла çаврăнса пăхрĕ те юлташĕ юлса пынине курчĕ. Анчах Макар пиккене те кĕмерĕ, айккинелле пăрăнса ӳкрĕ те çывăхри уçланкă çинелле ярăнса анма пуçларĕ. Павăл юлашки бомбисене каçă çине пăрахрĕ, юлташĕ хыççăн кайрĕ.

Макарăн моторне лектернĕ пулас. Вăл самолечĕн шассине те кăлармарĕ, уçланкăри юра чăл-пар тустарса, хырăмĕпе шуса кайрĕ те пĕр лапсăркка хыр умне çитсе выртрĕ.

Павăл уçланкă çинелле анчĕ, ун çийĕпе çаврăнкалама тытăнчĕ, ытти юлташĕсем асăрхаччăр тесе, çуначĕсене сулкаларĕ. Анчах мĕн туса пулăшма пултарĕ-ха вăл çапăçури тусне? Авă, аманнă штурмовик патне фашистсем те чупаççĕ. Павăл хăй те сисеймерĕ, вĕсем çинелле ӳпĕнчĕ те, аялалла аннă май, тупписемпе пулемечĕсенчен персе илчĕ. Гитлеровецсенчен хăшĕсем çавăнтах выртса юлчĕç, хăшĕсем вăрмана тарса пытанчĕç.

Бомбисене пăрахса пĕтерсен, ытти штурмовиксем те усланкă çийĕпе çаврăнма пуçларĕç. Павăл нумай шухăшласа тăмарĕ, шассине кăларчĕ те посадкăна кайрĕ.

Самолет çĕре перĕнчĕ, пĕрре, тепре сиксе илчĕ те, малалла та çаплах сиккелесе-уксахласа, Макар самолечĕ патнелле чупрĕ. Уçланкă пысăк мар,—Павăл тăтăшах тормоз çине пусса пычĕ. Аманнă штурмовик патне çитсен, вăл варт çаврăнса тăчĕ те чарăнчĕ.

Фашистсем вăрмантан сиксе тухрĕç, штурмовиксем патнелле чупма пуçларĕç. Павăл самолетне вĕсем енне çавăрчĕ те гашеткисем çине пусрĕ. Нимĕçсем чăл-пар саланчĕç, каллех вăрмана тарса пытанчĕç...

Нумай хутчен çапла чупа-чупа тухрĕç вĕсем. Сывлăшри штурмовиксем вĕсене чакарсах пычĕç, анчах бензин пĕтсе килнипе нумайччен тытăнса тăраймарĕç—çӳлерех хăпарса йĕркеленчĕç те килелле вĕçсе кайрĕç.

Çакăн хыççăн фашистсем хăюланчĕç, автомачĕсенчен пере-пере, штурмовиксем çывăхнех çитрĕç. Пульăсем броньăна пыра-пыра перĕнеççĕ, фонарь плексикласне чĕркелеççĕ, анчах ку Павăлшăн ним те мар—вăл самолетне Макар штурмовикĕ патнех илсе пычĕ те ăна радист патне куçса ларма хушрĕ. Макарпа ун радисчĕ, пĕрре куç хупса иличчен тенĕ пек, Павăл машинин кайри кабинине кĕрсе ларчĕç. Штурмовик, çĕр кисретсе, малалла чупса кайрĕ те, тăвата çынна сывлăша илсе хăпарчĕ...

Ку—хĕллех пулнă. Ун чухне Павăл та, Макар та сывахчĕ-ха. Акă халĕ... вĕсем летчиксем те, салтаксем те мар ĕнтĕ...

Аманасса вĕсем Висла çинчи каçăна аркатсан тепĕр эрнерен, иккĕш те пĕр кун аманчĕç. Темле телейпе, иккĕш те пĕр госпиталех лекрĕç те ултă уйăх хушши пĕрле, ялан юнашар выртрĕç. Анчах часах акă—çак кунсенчех—вĕсене уйрăлма тивет: Макар юсанса тухать. Вĕçме вăл та пултараймасть иккен—сылтăм урине пакăлчакĕ таранах татса пăрахнă. Çавăнпа та ăна киле яраççĕ. Макар час-часах килĕ, Шупашкар çинчен, Наташа çинчен тата унта кайсан каллех хăйсен заводне ĕçлеме çӳресси çинчен калаçать. Телейлĕ вăл: мĕнле пулсан та тăван çĕршывшăн усăллă ĕç тума пултарать. Павăлăн вара... Мĕн тăвĕ вăл, суккăр инженер, малашне? Мĕнле таврăнĕ тăван хулана? Кам хавас пулĕ ăна унта?..

Кăмăлĕ хытнă пек пулнăччĕ ĕнтĕ, анчах тăван хулана, унпа пĕрлех тепĕр хутчен Любăна аса илсен, вăл каллех

çемçелсе кайрĕ. Те хурланнипе, те тарăхнипе, ĕлĕк куçсем пулнă шăтăкран куççуль сăрхăнса тухрĕ. Çав шăтăксенче, бинт айĕнче, кăткăсем кĕрсе тулнă пекех, тем йăшăлтатнă пек туйăнчĕ, кĕçĕтме, сурма пуçларĕ.

— Старши лейтенант юлташ, мĕншĕн эсир нихçан та ним те ыйтмастăр?

Сестра çаплах ун умĕнче тăрать иккен-ха. Мĕншĕн тăрать-ши тата? Каясчĕ, канасчĕ.

— Спаççипă, сестра, мана ним те кирлĕ мар.

— Юрамасть капла, Павел Степанович, пурăнас пулать, хăрас пулмасть.

Павăла ку сăмахсем сасартăках çилентерсе ячĕç. Унăн ничĕсем пĕçерме пуçларĕç. Неушлĕ Павăла хăравçă тесе, пурăнма хăрать тесе шутлать вăл?

— Эпĕ вилме шутламастăп-çке,—терĕ Павăл, пăртак чĕнмесĕр выртнă хыççăн, сассине йăвашрах кăларма тăрăшса.

— Мĕн çинчен шухăшлатăр вара эсир кунĕн-çĕрĕн?..

— Тĕрлĕ япала çинчен, сестра. Ача чухнехи çинчен, тăван хула çинчен... Пурин çинчен те, Нина.

Павăл калаçма пуçланипе пулас, сестран кăмăлĕ уçăлчĕ. Вăл Павăл çинчи витĕнкĕçе тӳрлетрĕ те койка хĕррине пырса ларчĕ.

— Сирĕн арăмăр пур-и, Павăл Степанович?

— Пурччĕ...

Сестра ăнланчĕ. Ку сăмаха пуçланăшăн ăшĕнче ӳкĕнсе те илчĕ пулмалла: ним чĕнме аптрарĕ.

Тем чарать Павăла унпа йăвашрах калаçма. Тем чарать мар, вăтанать унтан Павăл. Пĕлет вăл, Нина ун çине шеллесе пăхать. Вăл халĕ унăн салхуллă кăвак куçĕсене те курать; вĕсем Любăнни пекех кăвак пулнăн туйăнаççĕ; куççульпе йĕпеннĕскерсем — йĕпеннех-тĕр ĕнтĕ,—халĕ пушшех те кăвакрах курăнаççĕ пулĕ.

## 2

Ним курмасть пулин те, Павăл Макара палата алăкĕ патне çитиччене ăсатса ячĕ. Алăкран тухас чух алă та панăччĕ ĕнтĕ, анчах унта та юлмарĕ, тусĕн хулĕнчен тытрĕ те, унпа пĕрле коридора тухса, аялти хуталла анмалли пусма патнех çитрĕ. Вара Нина чĕнсен тин чарăнчĕ, Макара икĕ хулпуççинчен те ярса тытрĕ те, хытă пăлханса, ăна виçĕ хутчен чуптуса илчĕ.

— Эппин, каятӑн?—терӗ вӑл, тусӗн куҫӗнчен пӑхнӑ пек, пуҫне каҫӑртса.

— Ҫаятӑп, Павел Степанович. Часрах сывал эсӗ те.

Павӑл чӗнмерӗ, пӗр хускалмасӑр тӑчӗ. Макар, уксахла-уксахла, чӑнкӑ пусма тӑрӑх аялалла анма пуҫласан тин вӑл площадка айккинчи чӗнтӗрлӗ карлӑка ярса тытрӗ те малалла ӳпӗнчӗ.

— Салам кала,—терӗ вӑл, кӑшт тӑрсан,—Наташӑна, заводри юлташсене...

Унӑн шурхайнӑ ырхан пичӗ ҫинче, хӑй пӗтӗм вӑйӗпе тӑрӑшса кулам пек турӗ пулин те, салхуллӑ сӑн палӑрчӗ. Макара вӑл йӗресшӗн пулнӑ пек туйӑнчӗ. Тен, йӗчӗ те-и, анчах куҫӗсене ҫыхса янӑ пирки, вӑл уҫҫӑнах палӑраймарӗ, ӑна тутисем ним сӑлтавсӑрах сиккеленинчен, ҫинҫерех мӑйӗ ҫинчи шӑнӑрӗсем туртӑна-туртӑна илнинчен ҫеҫ туйма пулчӗ.

— Ҫалӑп, калӑп, Павел Степанович.

Вестибюльрен тухас чух Макар каллех ҫаврӑнса пӑхрӗ. Павӑл ҫаплах карлӑк ҫине ӳпӗнсе тӑрать. Хулӑнрах тутисем ҫаплах сиккелеҫҫӗ унӑн, сулахай питҫӑмартипе ҫара мӑйӗнчи шӑнӑрсем ҫаплах туртӑна-туртӑна илеҫҫӗ. Вӑл хурланнине курсан, Макарӑн та кӑмӑлӗ хуҫӑлчӗ, унӑн хӑйне вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑ тусне темле лайӑх япала тӑвасси, ӑшӑ-ӑшӑ сӑмах каласси килчӗ, анчах ним тума та, ним калама та пултараймарӗ—йывӑррӑн латӑртатакан пружинӑллӑ алӑка уҫрӗ те урама тухрӗ, ниҫта каймa аптӑранӑ пек, вӑрахчен пусма ҫинче тӑчӗ.

«Люба вилнӗ те хуть, ҫапах та таврӑнас килет манӑн Шупашкара,—тетчӗ вӑл, ҫуллахи шӑрӑх кунсенче самолет айӗнче, хӗллехи сивӗсенче—земленккере е палатӑра, задание вӗҫсе кайма сигнал кӗтсе ларнӑ вӑхӑтсенче.— Ҫаҫсенче Атӑл хӗррине тухса, тӗттӗм шыв ҫийӗпе ҫапҫутӑ пӑрахутсем шавласа килнине курас килет, хула садӗнче хӗрсем юрланине илтес килет...»

Вӑрҫӑ пынӑ кунсенче Павӑл ку сӑмахсене темиҫе хутчен те каларӗ, анчах суранланнӑранпа вара ҫакна Макар пӗрре те илтеймерӗ; халӗ вӑл тӑван хулана таврӑнасси ҫинчен шухӑшламасть те пулас... Ҫаплах каларӗ вӑл пӗррехинче. Ҫавӑнпа та Павӑл госпитальтен тухнӑ вӑхӑта ӑна илме кунта Макар хӑй килме ӗмӗтленет...

Те ҫӳреме хӑнӑхманнипе, те шӑмӑ ҫине каръннӑ ӳчӗ тӗрекленсе ҫитменнипе, протез ҫине таяннӑ сылтӑм ура кӑкӗ шыҫнӑ пекех ыратать. Ӑна пӑртак кантарас тесе,

хаҫатсем сутакан пӗр сенкер киоск умӗнче вӑл чарӑнса тӑчӗ. Ун тӗлӗнчен вӗр-ҫӗнӗ кителӗ ҫине темиҫе орден тата Герой ҫӑлтӑрӗ ҫакнӑ летчик-лейтенантпа ҫӳлӗ пӳ-силлӗ курсант иртсе кайрӗҫ, иккӗшӗ те илемлӗн честь пачӗҫ.

Троллейбуссем чарӑнакан ҫӗре ҫитиччен Макарӑн ури самаях ыратакан пулчӗ, вӑл хытах уксахлама пуҫларӗ. Ҫилне малтан пӑрахутпа анма шутласа хунӑччӗ ӗнтӗ, анчах троллейбусӗ шӑпах чугун ҫул вокзалӗ еннелле каяканни пулчӗ те,—Макар хӑйӗн шухӑшне ҫавӑнтах улӑштарчӗ: ларчӗ те станцинелле вӗҫтерчӗ. Вокзала ҫитсенех билет туянчӗ, Павӑла, хӑй ҫулӗн пуҫламӑшӗ питӗ ӑнӑҫлӑ пулни ҫинчен пӗлтерсе, кӗске кӑна ҫыру ҫырса ячӗ; вара Ҫанаша ҫитиччен тесе, Новосибирска каякан поезд ҫине ларчӗ...

Акӑ вӑл, тӑван ҫӗршыв, асран каймӗ тӑван ҫӗршыв! Ҫанашран тухсан, Макар чӳрече патӗнчен пӑрӑнма та пӗлмерӗ, куҫ хупмасӑр тенӗ пек, ешӗл хирсемпе вӑрмансем, хӗрлӗ ҫырлӑ варсемпе йӑмра айне пытаннӑ ялсем ҫине пӑхса пычӗ. Юлашкинчен, малта, вӑрман уҫлӑхӗнчен, Шупашкар сӑрчӗ ҫинче пӗлӗтелле кармашса ларакан икӗ мачта курӑнса кайрӗҫ. Самантранах вара хула хӑй те тухса ларчӗ. Поезд Ишлей вӑрманӗнчен вирхӗнсе тухрӗ, саламланӑ пек, вӑрӑммӑн ӳхӗрсе илчӗ те, пилӗк ҫул хушши яланах курма ӗмӗтленнӗ сарӑрах вокзал умне кӑлтӑртатса ҫитрӗ. Вагонсенчен перрон ҫине халӑх тухса тулчӗ.

Макар та анчӗ. Симӗс кутамккине хӑрах хулӗ ҫине ҫакрӗ, паллакан ҫынсем ҫук-ши тесе, тавраналла пӑхса ҫаврӑнчӗ. Пӗлӗшсем курӑнмарӗҫ. Макар, халӑхпа хутшӑнса кайса, вокзал хыҫне тухрӗ.

Ҫынсем хӑшӗ автобус ҫине ларма черете тӑнӑ, хӑшӗ хулана ҫуранах утаҫҫӗ. Ури ыратнине пӑхмасӑрах, Макар та вӗсем хыҫҫӑн сӗнкӗлтетрӗ.

Ҫурма-ҫула ҫитсен, вӑл ларса канчӗ. Хӗвел халӗ ӗнтӗ ытла хӗртсех каймасть, каҫ енне сулӑннӑ. Машинӑсем хыҫҫӑн парӑлтатса ҫӗкленекен тусан унӑн хӗлхӗлтӗм-сарӑ ҫуттинче ылттӑн тӗслӗ курӑнать.

Часах халӑх пӗтӗмпех иртсе пӗтрӗ. Ҫул пушанчӗ. Макар тӑчӗ те ҫамрӑк хурӑнсем хушшипе каякан такӑр сукмакпа анаталла утрӗ.

Хулана вӑл хӗвел анса тӗттӗмленме пуҫласан ҫитрӗ. Завод тӗлӗнче чарӑнса тӑчӗ. Ҫунта тин вӑл хӑйӗн ниҫта

та кайма çуккине туйса илчĕ. Завода кĕме иртерех-ха паян, общежитине... аван мар: унччен пуранна юлташĕсем халĕ пĕри те юлман, фронта кайса пĕтнĕ те унтан таврăнма ĕлкĕреймен пулĕ, çĕннисем—палламаççĕ. Çитменнине тата вырăн та çук-тăр: ун койкине хăй Павăлпа пĕрле вĕçев шкулне тухса кайнă кунах пĕр ача йышăннăччĕ...

Хытă пăлханса, вăл завода кĕмелли будка патнех утса пычĕ. Акă вăл темиçе çул хушши пусса иртнĕ пусма, темиçе çул хушши уçса кĕнĕ алăк! Тата кĕрсе çӳреме тивĕ-ши ĕнтĕ Макара çакăнта?..

Гостиницăна вырнаçрĕ. Регистратурăра: «Хăçанччен?»—тесе ыйтсан, татăклăнах: «Икĕ кунлăха»,—терĕ; тата икĕ кунтан завода ĕçлеме кĕрсе, пурăнма общежитие куçма ĕмĕтленчĕ.

Çул хыççăн çăвăнса, тумтирĕсене, аттисене тасатрĕ, протезне хывса, урине кантарчĕ.

Тĕнчене ĕнтĕ каç сĕмĕ çапрĕ, юпасем çинчи электрохунарсем йăлтлатса çуталчĕç. Урамри шав вăйланчĕ, хула садĕнче музыкантсем «Маньчжури сопкисем çинче» вальс выляма пуçларĕç. Хĕрĕхпĕрмĕш çулхи июньпе танлаштарсан, хула палламалла мар улшăннă: çутă, савăк вăл.

Макар протезне, аттисене тăхăнчĕ те урама тухрĕ, майĕпен садалла утрĕ. Музыкантсем унта халĕ вăл пĕлмен вальс выляççĕ. Сада кĕнĕ çĕрте те, ташă площадки патĕнче те çамрăксем хĕвĕшеççĕ: пĕрисем кĕреççĕ, теприсем тухаççĕ. Макар, чарăна-чарăна тăрса, кашни ушкăнах сăнаса пăхать, шырать, анчах тăвату çул хушши тăтăшах курма ĕмĕтленнĕ çын курăнмасть-ха. Курăнмасть... Çӳрет-çӳрет, пăхать-пăхать те вăл, ун чĕринче темле, пур савнăçа тĕксĕмлетме пăхакан ырă мар туйăмсем тĕвĕленме пуçлаççĕ. Тен, кам пĕлет, вăл... урăххипе?.. Наташа çав «урăххипе» пынине курасран хăрать Макар.

Ташă площадки патĕнчен вăл пĕр тĕттĕмрех аллейăна пăрăнса кĕчĕ, ун вĕçнех утса кайса, сарлака хăмаран тунă хыççăр сак çине ларчĕ. Кĕсйинчен пирус кăларчĕ те тивертсе ячĕ, шухăша кайрĕ.

...Çакăнта ларсаччĕç вĕсем Наташăпа иккĕшĕ ун чух, пилĕк çул каялла. Таврара, кĕçĕрхи пекех, хаваслă çамрăк-кĕрĕм хĕвĕшетчĕ, ăçта килчĕ унта кулни, шавласа

калаçни илтĕнетчĕ. Вĕсем вара улахрах кĕтес шырарĕç... Вăрахчен ларчĕç çак сак çинче. Тем каласшăнччĕ Макар, темле питĕ кирлĕ япала çинчен пĕлтересшĕнччĕ, анчах хăяймарĕ: пĕрре ăна ак-ак çынсем пырса тухассăн, тепре Наташа çиленессĕн туйăнатчĕ. Çапла вара садран халăх саланма тытăнитчченех ассăн сывлакаласа та ытти вактĕвек ĕççсем çинчен çеç перкелешсе ларчĕç. Қайран Макарăн пуçĕ çаврăнса кайрĕ, вăл Наташăна хулĕнчен тытрĕ те... тутипе унăн питне перĕнчĕ... Татах та ларатчĕç пулĕ, анчах çакăн хыççăн Наташа сиксе тăчĕ, питне аллисемпе хупласа, алăк патнелле утрĕ. Хирĕçсе те каятчĕç пулĕ ĕнтĕ, юрать-ха, алăк патĕнче Павăлпа Люба тĕл пулчĕç — вĕсемпе пăртак калаçса тăни Наташăн çиллине сĕвĕртсе ячĕ.

Çакăн хыççăн вара темиçе кун хушши тĕл пулма та, тĕл пулсан — пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхма та вăтанса пурăнчĕç... Вĕçев шкулне тухса каяс умĕн, юлашки каç, вĕсем çак сак çинех килсе ларчĕç. Малтанхинчен те вăрахрах, хĕвелтухăç енчи кăтра пĕлĕтсен хĕррисене хĕвел кăварлантарса яричченех ларчĕç. Наташа килне йăпăртлăха кăна кĕрсе тухрĕ те завода, ĕçе чупрĕ. Уйрăласса вара завод хапхи умĕнче уйрăлчĕç...

— Асатма пыраймастăп та эпĕ,—терĕ Наташа; кăвак куçĕсем салхуллăччĕ хăйĕн, тулли пичĕ темшĕн хĕрелсе кайнăччĕ.—Ан çилен... Çырсах тăр вара. Эпĕ те çырăп.

Унăн çак сăмахĕсем: «Ан ман, эпĕ те манмăп»,— тенине пĕлтерчĕç. Макар манмарĕ. Пилĕк çул хушши яланах — çĕр çинче те, тӳпере те — ун çинчен шухăшларĕ, тĕл пулма ĕмĕтленчĕ. Халĕ акă — куратех ĕнтĕ...

Макар тăчĕ те каллех халăх хĕвĕшекен анлă аллейăна тухрĕ. Пăртак тăрсан, унăн Наташăпа тĕл пулас шанчăк çухалма пуçларĕ. Юлашкинчен, пачах та çухалчĕ; вăл урама тухрĕ.

Атăл хĕррине кайса килесшĕнччĕ, анчах площадьрен вăл тӳрех Наташа пурăнакан урама пăрăнса кĕчĕ. Часах Макар ытла пысăк мар шурă çуртăн иккĕмĕш хутĕнчи асран кайми икĕ чӳречене курчĕ. Вĕсем çутах. Пĕрне яриех уçса пăрахнă, шурă каркăçĕ тулалла карăнса тăрать. Вăхăт-вăхăт ун вĕçĕ çӳлелле вĕлкĕшсе çĕкленет те, чӳрече çинче хĕрлĕ чечексем ларни курăнса каять.

Макар малтан хăюллăнах килчĕ, анчах кĕме именчĕ. Хирĕçри çурт пусми умне кайса тăчĕ те уçă чӳречене сăнама пуçларĕ.

Çук, чӳречерен никам та пăхмарĕ. Сехете яхăн иртсен, ăна такам аллисем хупса хучĕç те, пăртакран çутă та сӳнчĕ. Çутăпа пĕрле — Наташăна курас ĕмĕт те; Макар, урăх ниçта кайма кăмăл тумасăр, гостиницăналла уттарчĕ.

Наташа нимпе те айăплă марччĕ ĕнтĕ кĕçĕр çапла килсе тухнишĕн, анчах Макар ăна хытă çиленчĕ. Çывăраймасăр çĕрĕпех тарăхса выртрĕ.

Анчах унăн çилли тепĕр ирхинех сĕврĕшсе кайрĕ...

Ĕçе Макара хăй цехнех йышăнчĕç, вăрçăччен хăй ĕçленĕ станокнех пама пулчĕç. Малтан ăна канма та ӳкĕтлесе пăхрĕç, анчах вăл килĕшмерĕ, тепĕр куннех ĕçлеме килме пулчĕ. Çапла калаçса татăлнă хыççăн, Наташăна тата фронта каиччен пĕрле ĕçленĕ юлташĕсене курас тесе, вăл цеха кĕчĕ.

Чи малтанах вăл аслă мастера — Кирилл Петровича тĕл пулчĕ. Лешĕ, утмăл пилĕк çулалла çывхарнă старик, юлашки кунсенче пушшех те ватăлнă-мĕн... Янаххи патнех çитекен мăйăхĕпе сайралнă çӳçĕ тата лапсăркка куçхаршийĕсем кăвакарса кайнă, куçĕсем хĕрелме пуçлана. Партак пĕкĕрĕлнипе пĕвĕпе те лутраланнă пек туйăнать.

Цеха Макар кĕнине курсан, вăл ним тума аптраса тăчĕ; ăшшăн йăл кулчĕ; унтан сасартăк малалла ярса пусрĕ те вăрçăччен хи токарь-стахановец патне пырса ăна ыталаса илчĕ:

— Ну, салам! салам!—терĕ вăл, ăна çамкинчен чуптуса.—Наташа!

Макарăн чĕри кăртах сикрĕ. Наташа кунтах, ĕлĕкхи вырăнтах, çав станокпах ĕçлет-мĕн. Акă вăл аслă мастера хирĕç сасă пачĕ, детальне резец айĕнчен илчĕ, станоксен хушшипе алăк патнелле васкарĕ. Пилĕк çул хушшинче вăл ним чухлĕ те улшăнман пек туйăнать. Кăлкан евĕрлĕ сарă çӳçне яланхи пек пуçĕ тавра кăшăл туса хунă. Вăл сасартăк Макара асăрхаса илчĕ те, тĕлĕннипе, утнă çĕртенех чарăнса тăчĕ. Ун питçăмартисем хĕрелсе кайрĕç, вăл, тӳрех пăхма ватанса, пуçне çĕрелле усрĕ.

— Епле вăл, чĕниччен асăрхасшăн та мар,—шӳтлесе кулчĕ унтан Кирилл Петрович.—Кил, кил ĕнтĕ, пире кур, хăвна кăтарт.

Анчах Макар Наташа çывхарасса кĕтмерĕ, уксахлауксахла, хĕре хирĕç утса кайрĕ. Вăл ăна ыталаса та илесшĕнччĕ ĕнтĕ, анчах ватă мастерпа цехри темиçе теçетке

çын умĕнче хăяймарĕ, аллине тытса хытă-хытă чăмăртарĕ те куçĕнчен пăхса илчĕ. Халĕ вăл Наташа ăна кунĕн-çĕрĕн кĕтнине, унăн çырăвĕсенчи кашни сăмахах чĕри патĕнчен тухнине тата çĕркĕ ăна кăлăхах çиленнине аван туйрĕ.

— Эпĕ çитрĕм те акă,—терĕ вăл, ун аллине вĕçертсе.—Павел Степанович салам калама хушрĕ...

Урăх нимех те каламарĕ вăл, ăна ытти рабочисем сырса илчĕç те хăй çинчен, Павăл çинчен тĕпчеме тытăнчĕç. Анчах Макар, вăрах калаçса тăрса вĕсен ĕçне хăварас мар тесе, çынсене ĕç хыççăн завод клубне пухăнма ыйтрĕ те тухса кайма васкарĕ. Наташăпа та калаçаймарĕ вăл, тусĕ ыттисемпе пĕрле клуба пырасса, ăна унта тĕл пуласса çеç шанчĕ...

## 3

Икĕ эрне иртрĕ...

Пĕррехинче, ĕç пĕтес умĕн, унччен тем сăлтавпа тухнă Эрхип токарь цеха чупса кĕчĕ те Макара хыттăн чĕнчĕ.

— Телеграмма!—кăшкăрчĕ вăл, аллинчи кăвакрах хут таткине сулкаласа.—Мускавран!

Унтан вăл васкамасăр Макар патне пычĕ те ăна ун енне тăсрĕ:

— Письмоносецĕ паллакансккер, хамах парса хăварчĕ. Çиленместĕн пулĕ? Айккинчен çыпăçтарни те хăйпăнса кайнă та...

— Юрĕ, юрĕ, темех мар вăл. Тавтапуç сана!—Макар станокне чарсах ун аллинчи телеграммăна илчĕ те хăвăрт вуласа тухрĕ. Пĕр хут, тепĕр хут вуларĕ, унтан ĕлĕкхи йĕрĕсемпех хутлатрĕ те кăкăр çинчи кĕсйине чикрĕ. Тавраналла пăхса çаврăнчĕ.

Наташа ун çине пăхать. «Мĕнле телеграмма вăл, кам-ран?»—ыйтаççĕ унăн кăвак куçĕсем. Анчах часах вăл вĕсене айккинелле пăрчĕ, ĕçлеме пуçларĕ.

Макар ăна хăй илнĕ телеграммине те кăтартма шутланăччĕ ĕнтĕ, анчах çав вăхăтра ĕç вăхăчĕ пĕтни çинчен пĕлтерчĕç, çынсем станокĕсен таврашне тасатма пуçларĕç. Макар кунĕпе тунă деталĕсене панă чух, Кирилл Петровичпа эрнелĕхе отпуск илесси çинчен калаçса кайрĕ.

Çав самантра Наташа патне Эрхип пырса вăрăнчĕ. Вăл, вăрттăн хăтланнă пек, Макар çине пăха-пăха илет,

чеен кулкаласа, хĕре тем каласа парать. Малтан Наташа та кулкалатчĕ, анчах пăртакран ун пичĕ çинчи именчĕк кулă çухалчĕ, вăл çиленнĕ, тарăхнă сăнлă пулса кайрĕ.

«Мĕн те пулин суйса парать пулмалла,—шухăшларĕ Макар, аслă мастерпа калаçнă хутран вĕсем çинелле пăха-пăха илсе.—Çав, пухури ĕç çинченех пулĕ-ха...»—Вăл çиленчĕ.

Эрхип çинчен цехра: пĕр сăмахран çĕр сăмах тума юрататать, текен хыпар çӳренĕ. Вĕçкĕнрехскер, йăлттăмялттăмрахскер, вăл Макара пĕртте килĕшмен. Ку туйăма вăл Эрхип умĕнче те пытарман, мĕнле те пулин йăнăш япала тусан, ăна куçкĕретĕнех каланă. Ĕнер-ха акă, комсомолецсен пухăвĕнче, ăна вăл хытах тĕксе илнĕччĕ; çав кунхи задание лешĕ çитмĕл виçĕ процент çеç тултарнăччĕ.

Цех алăкĕ тĕлĕнчи электрошăнкăрав хыттăн чăнкăртатса илчĕ. Смена пĕтрĕ, киле каймалла. Макар, ĕçне пĕтерсе, тухса кайма хатĕрленекен Наташа патне пыма тăнăччĕ кăна, кантур алăкĕнче Кирилл Петровичăн кăвак пуçĕ курăнчĕ.

— Иванович, кĕр-ха наччаслăха,—чĕнчĕ аслă мастер.

Наташа, ним чĕнмесĕр, Макар умĕпех иртсе, алăк патнелле кайрĕ. Вăл çапла сасартăках улшăнни качча тĕлĕнтерчĕ, вăл пĕр сăмах та хушса юлаймарĕ...

— Заявлени çыр та, ыран кайма пултаратăр,—терĕ цех начальникĕ, Макар хăй ăçта кайма шутлани çинчен каласа кăтартсан.—Анчах пĕр эрне кăна çитĕ-и-ха сире?

— Çитет, çитет, Михаил Егорович.

Макар цех начальникĕпе аслă мастера тав турĕ те, чупнă пекех васкаса, картишне тухрĕ. Анчах Наташа унта та, урамра та пулмарĕ...

Ахалех Макар каç пуласса кĕтрĕ, ахалех садри шавлă аллейăсенче çӳрерĕ, паллă сак патне тата тăвалла хăпаракан ешĕл урамри икĕ хутлă пӳрт умне çите-çите килчĕ, анчах Наташăна курса калаçаймарĕ-калаçаймарех вăл.

Тепĕр кунне, завода пырсанах, ăна отпуск пачĕç. Вăл темиçе хутчен те Наташа патне пыра-пыра тухрĕ, халĕ ĕнтĕ хĕр мĕншĕн хирĕçнине туйса, ăна Павăл çинчен, Нина çинчен, тата сестра, Павăл юсанса çитсен, телеграмма яма пулни çинчен, халĕ, çав телеграммăна илсен, хăй Мускава Павăла илме кайма хатĕрленни çинчен каласа кăтартасшăнччĕ, анчах Наташа çаплах хирĕçрĕ, ун сăмахĕсем çине çилĕллĕн тавăра-тавăра, айккинелле пăрăна-пăрăна тăчĕ. Ытлашши калаçса тăма Макарăн вăхăчĕ те

юлмарӗ, вӑл юлташӗсемпе сывпуллашрӗ те заводран тухрӗ, станцие каякан автобуссем чарӑнакан ҫӗрелле уттарчӗ.

Чӗри пӗртте вырӑнта мар унӑн. Унӑн халех автобус ҫинчен анас та завода, цеха таврӑнас килет. Наташа патне пырса — ӑна ӗҫлеме чарсах — чӗререн калаҫас, вӑл кӑлӑхах хирӗҫни ҫинчен ӑнлантарса парас килет, анчах ӑна тепӗр шухӑш та канлӗх памасть: Павӑл госпитальтен тухнӑ ҫӗре ҫитсе ӗлкӗрейӗ-ши вӑл, ӑна вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑ суккӑр тусӗ, суккӑрлӑхӗнчен вӑтанса, урӑх ҫӗре тухса каймарӗ-ши?

## 4

Госпитальтен Павӑлпа пӗрле Сухачув патӗнчи ҫапӑҫуччен пӗр полкра служить тунӑ Костюк механикпе Варшава патӗнче аманнӑ Сапрыкин сапер тухрӗҫ.

Вӗсем каҫченех хула тӑрӑх ҫӳрерӗҫ. Сапрыкин, Мускав ҫынни, урамсен, тӗл пулакан площадьсемпе памятниксен, паллӑ зданисен ячӗсене каласа пычӗ. Вӗсенчен нумайӑшне Павӑл хӑй куҫлӑ чухне ӳкерчӗксем тата кинохроника кадрӗсем ҫинче курнӑ. Сапрыкин ячӗсене каласанах вӗсем куҫ умне киле-киле тӑраҫҫӗ.

Кун хыҫҫӑн метрона анчӗҫ. Павӑл кашни станцӑрах чарӑнса, мрамортан тунӑ сивӗ колоннӑсене хыпалахыпала пӑхрӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вӗсене те хӑй куҫӗпе хӑй курнӑ пекех туйӑнчӗ ӑна.

Ним те курас ҫук пулин те, Павӑл хӑйне мавзолея ертсе кӗме ыйтрӗ. Тупӑк тавра утса ҫаврӑннӑ чух, вӑл ӑнсӑртран часовоя перӗнчӗ. Хӑй нихҫан та курман пулин те, халӗ ун куҫӗ умне постамент ҫинче, кӗленче айӗнче выртакан Ильич сӑнӗ тухса тӑчӗ. «Капла халпа та пурнӑҫри хӑвӑр вырӑна тупас пулать, Ятманов юлташ», — тенӗ пек туйӑнчӗ ӑна ҫав ҫывӑх та мӗн ачаранпах паллалланӑ аслӑ ҫын.

Мавзолейран тухсанах Спасск башни ҫинче сехет ҫапма пуҫларӗ. Унӑн кӗрлевӗнче темӗнле, чӗрене тыткӑна илекен, чуна ӑшӑтакан сасӑсем илтӗнчӗҫ. «Ҫирӗп пул — эсӗ аслӑ ҫӗршыв ҫынни, аслӑ ҫӗршыв салтакӗ», — тенӗ пекех туйӑнчӗ Павӑла ҫав сасӑсем.

Каҫхине вӗсем Сапрыкин хваттерне пухӑнчӗҫ. Унта, Павӑлпа Костюксӑр пуҫне, фронтра пӗр полкра ҫапӑҫнӑ, халӗ госпитальтен юсанса тухнӑ хыҫҫӑн Белоруссие

каякан çамрăк офицер тата Сапрыкин тăванĕсемпе юлташĕсем пулчĕç, вăрçăччен пĕрле вĕреннĕ, пĕрле ĕçленĕ хĕрсем пычĕç. Вĕсенчен кашниех Павăла тĕрлĕрен канашсем пама пуçларĕç, хăйсем патне пурăнма чĕнчĕç. Унта çанталăк та ырă, çынсем те кирлĕрех тесе, Шевцов инженер ăна Крыма илсе каясшăн пулчĕ. Сапрыкин Мускава, хăй патне юлма ӳкĕтлерĕ. «Кунта темле ĕç те тупăпăр»,—терĕ вăл.

Калаçу шăп хĕрсе кайсан, пĕр кĕтмен çĕртен, вĕсем патне Нинăпа Макар пырса кĕчĕç. Госпитальтен икĕ эрне каялла çеç тухса кайнă хура кăтра çӳçлĕ истребителе кунта пурте палласçĕ; ăна питĕ хаваслăн йышăнчĕç. Салтăнса ларсанах, Макар хăй Мускава мĕншĕн килни çинчен систерчĕ. Ун сăмахне ыттисем ярса илсен, вара тӳрех çапла каларĕ:

— Павел Степанович вăрçăччен пирĕн заводра ĕçленĕ... Унта ăна халĕ те кĕтеççĕ, хытă каласа ячĕç...

Ыттисем те çаплах хăйсем патне чĕнчĕç. Вĕсем калаçнă чух, Павăл шăпăртах ларчĕ. Каярахпа çеç, юлташĕсем шăплансан, вăл тăчĕ те пăлханнипе чĕтреме пуçланă сассипе:

— Пĕлместĕп, тусăмсем...—терĕ.—Пурсăра та пысăк тав сире мана пăрахманшăн... Украинăна, хамăр çапăçнă вырăна каяс тетĕп.

— Шупашкарта мĕн калăп вара эпĕ? Хăçан таврăнассине кала хуть,—терĕ Макар, кӳреннĕ сасăпа.—Мĕнле-ха апла...

— Пырăттăм та... Чун та туртать, анчах...—Павăл вăхăтлăха шăпах ларчĕ; хуллен хушса хучĕ:—Мĕн тăвăп эпĕ унта?

— Сире унта ним тума та хушмаççĕ, тăвас пулсан та... Хăвăршăн çеç... Мĕн те пулин тума пултаратăр. Çитменнине тата... Хам та пысăк парăмлă сирĕн умăрта. Манас çук эпĕ...

— Мĕн? Кирлĕ мар!—Павăл хăй те сисеймерĕ, чышкипе сĕтеле çапса илчĕ.—Кирлĕ мар. Ăнланатăн-и? Мана нимле парăм та çук санăн. Илтетĕн-и? Çук тетĕп. Эсĕ ху апла туман пулăттăн-и вара? Çаплах тунă пулăттăн, чăнчăн тус пулсан... Эппин, вăл «парăм» çинчен ман эсĕ, Макар. Ыр сăмаххушăн пысăк тав сана, анчах Шупашкара пымастăп-ха халĕ, мана, инженера, çынсен ури айĕнче çапкаланма намăс пулать унта. Канас-тăк — Костюк патĕнче те пулать канма.

Тепĕр ирхине вара Павăлпа Костюк Украинăна тухса кайрĕç. Вĕсене, Макарсăр пуçне, Сапрыкинпа Нина та ăсатрĕç. Поезд хускалса каяс умĕн вĕсем виççĕш те ун аллине тытса чăмăртарĕç, телейлĕ çул сунчĕç, çыру çырма хушрĕç. Вагонран тухса кайма тăрсан, Нина сасартăк ăна ыталарĕ те тутинчен чуптуса илчĕ.

— Тепре куриччен, Павăл. Ан кулян...—Тата тем каларĕ Нина.—Павăл, ытла хумханса ӳкнипе, унăн юлашки сăмахĕсене илтеймерĕ...

Поезд тапрансан, вăл пуçне кантăкран кăларчĕ те, хăйне ăсатакансем асăрхасса шанса, пайтахчен вĕсен еннелле аллипе сулса пычĕ.

* * *

Çапах та вăрах пурăнма пултараймарĕ вăл Украинăра. Икĕ эрнерен каллех Мускава таврăнчĕ. Сапрыкинпа пĕрле госпитале, Нина патне кайса килчĕç. Сапрыкин вĕсем мĕн калаçнине илтеймерĕ. Килнелле таврăннă чух çеç вăл хăйĕн тусĕ ĕлĕкхинчен савăнăçлăрах пулнине туйрĕ.

...Тепĕр кунне, Павăла Шупашкара ăсатнă чух, Нина ăна станцие çитиччен хăй çавăтса пычĕ.

## 5

Мускавран таврăнсан, Макара пушшех те хытăрах тарăхма тиврĕ...

Наташа, унччен цехран та пĕрле тухма тăрăшаканскер, унтан çаплах пăрăнса çӳрет. Çитменнине тата Макар хăлхине вăл хăй Мускавра чух Наташа Эрхиппе «калаçкаланă», унпа хула садне кайкаланă, текен сăмах пырса кĕчĕ. Малтанлăха Макар ку хыпара ĕненмерĕ. Ăçтан ĕненсе пăрахăн-ха тăруках çакăн пек япалана: вĕсем акă çичĕ çул ĕнтĕ пĕр-пĕрне юратса пурăнаççĕ, пилĕк çул хушши уйрăм пулсан та, тăтăшах çыру çырса тăчĕç. Анчах... Çынсем калаçни тĕрĕсех пулчĕ пулмалла: халĕ Наташа цехран яланах Макартан маларах е чылай кайран тухма тăрăшать. Макар ун çывăхне пыма тăрсан, хĕр патне Эрхип çитсе тăрать те хула варринелле вĕсем пĕрле анса каяççĕ. Тен, Макара тарăхтармаллах пулĕ, хытă утаççĕ, вăл, уксахскер, вĕсене ниепле те хăваласа çитеймест.

Эрне, эрне çурă, икĕ эрне иртрĕ...

Çак хушăра, ĕлĕк панă задание те путлĕн тултарса пырайман Эрхип пачах улшăнса кайрĕ: нормине иртте р-

сех ĕçлекен пулчĕ, цехри стахановецсен хыççăн хăвалама пуçларĕ.

«Малашне те çапла ĕçлесе пырсан, пирĕн Наташăна хăй майлă çавăратех вăл»,—кулкалама пуçларĕç цехри çамрăксем ун пирки.

Анчах юлашки вăхăтра вĕсем пĕрле пулни ытла курăнсах та каймарĕ. Тен, малтан Наташа унпа Макара тарăхтармалла çеç çӳрерĕ пулĕ? «Темле Нина патне кайнă, лешĕ хăй чĕнсе янă», тесе каласа панă-çке-ха ăна Эрхип!

Чăнах та, Макар Наташăна хăй Мускава нимшĕн те мар, Павăла илме çеç кайни çинчен темиçе хут та калакала пачĕ, анчах хĕр çаплах ĕненсе çитмерĕ ăна, халĕ ĕнтĕ вăл завод клубĕнчи вечерсене те юлми пулчĕ, хула садĕнче те сайра хутран çеç курăнкаларĕ. Хăй те хуйхăрчĕ, тарăхрĕ пулмалла: пуçне усарах çӳреме пуçларĕ, пичĕ шурхайрĕ, яланах кулса пăхакан пысăк кăвак куçĕсем салхуланчĕç.

Эх, çав мăнкăмăллăх тени! Хăш чухне лайăх та вăл пулни, хăш чухне начар та. Пĕрне-пĕри чунĕсене парса, пĕрне-пĕри пĕтĕм чĕререн шанса калаçасчĕ те вĕсен, пур хирĕçӳ иртсе кайĕччĕ, иккĕшин чĕринчи пăр та ирĕлсе пĕтĕччĕ.

## 6

Çĕнĕ заказа çийĕнчех кирлĕ пек тума май килменни пĕтĕм цеха кулянтарчĕ. Малтан, ытти стахановецсемпе пĕрлех, Макар та часах тума пуçлăп тесе сăмах паначчĕ, анчах цех пĕр хатĕр деталь те параймарĕ-ха акă. Кăнтăрларан вара, ăна тума пулсан, Наташа Макар çине темле ăшшăн, ĕлĕкхи пекех ăшшăн пăха-пăха илчĕ. Çавăн хыççăн Макар, вăхăт тупса, ун патне кайса та килчĕ. Хĕр хирĕçӳчченхи пек шанса та ытла чĕрененех калаçмарĕ пулин те, Макар хăй çинчен вăл пăртак урăхларах шухăшлама пуçланине туйса илчĕ. Туйса илчĕ те—хĕпĕртерĕ, тума пулнă детале пуринчен те маларах пама ĕмĕтленчĕ, вăрттăн-вăрттăн сăмахсемпе, Наташăна хăй унпа каçхине тĕл пулса калаçма шутланине систерчĕ, калас сăмахсем ăшĕнче нумай-нумай капланнине систерчĕ...

Анчах... акă ĕнтĕ смена та пĕтсе килет, çапах та Макар хăй тума пулнă детале туса параймасть-ха. Ĕç пĕтес умĕн ун патне Наташа пырса тухрĕ. «Ну, мĕнле?»

тесе ыйтрĕ те, Макарăн тарăхнă сăнĕпе ун аллинчи хуçăк сверлона курсан, айккинелле пăрăнса кайрĕ. «Эпĕ чăнах та... тесе... шаннăччĕ»,—илтрĕ Макар унăн кӳреннĕ чӳхнехи пек тухакан сивĕрех те лăпкă сассине.

Леш хирĕçӳ иртрех пулмалла, Наташа ăна нимпе те палăртмарĕ паян. Эппин, вĕсен юратăвĕн шăпи пĕтĕмпех çак детальтен килет. Тен, ку япала аплах та мар пулĕ, анчах мĕн тăвăн-ха — хĕр чĕри темле детальтен те кăткăсрах.

Макар пур вăйне хурса ĕçлеме пуçларĕ. Тата тепĕр сверло хуçăлчĕ, тепри, виççĕмĕшĕ... Вăл, инкеке парăнмасăр, такама эрлентересшĕн пулнă пек, урăх сверло илет, урăхларах пусса хыртарать, урăхларах е урăх çу сĕрет. Хĕрсе кайнипе вăл сисеймен те — ăна такам хулĕнчен пырса туртрĕ. Макар çаврăнса пăхрĕ те хыçĕнче, вăрăм кăвак мăйăхне пĕтĕркелесе, Кирилл Петрович тăнине курчĕ. Цех та пушах иккен: смена пĕтнĕ те рабочисем килĕсене саланнă. Наташа та çук...

— Çаплах пулмарĕ-и-ха?—ыйтрĕ аслă мастер.—Вот вĕт, тухатнă япала пекех.

Макар ним те чĕнмерĕ, ассăн сывласа илчĕ те станокне чарчĕ. Халĕ тин вăл хăй питĕ ывăнса çитнине, алурисем йăслама, чĕтреме пуçланине туйрĕ.

— Шухăшлар-ха мĕн тумаллине, Макар Иванович. Ытлашши вĕриленни те усăсăр.—Кирилл Петрович станокри предохранителе вĕçертсе илчĕ те ун-кун çаврăкалама пуçларĕ.—Эсĕ васкамастăн пулĕ вĕт?

— Çук-çке.

Макар суйрĕ. Тата сехет çурăран унăн Наташăна курмалла. Вĕсем Атăл хĕрринче тĕл пулма калаçса татăлчĕç. Икĕ эрне хушши пĕрре те путлĕн пуплеймерĕç-ха вĕсем. Наташа хăй пăрăнса çӳрерĕ. Халĕ акă вăл та хирĕç мар тĕл пулма, анчах Макар хăй каяймасть. Ĕç пур. Сăмах панă. Цех кĕтет, завод, çĕршыв.

Тата тепĕр сехет аппаланчĕç, — ĕç çаплах тухса пĕтеймерĕ. Çакăн хыççăн вара Кирилл Петрович Макара хăй хăвалама пуçларĕ. Анчах, малтан мĕнле васкарĕ пулин те, Макарăн халĕ каяс та килмерĕ цехран. Мĕн калĕ ĕнтĕ вăл Наташăна? Мĕнле ăнлантарса парĕ детале тума май килменни çинчен? Вĕçкĕн, çынсен умĕнче мухтанас кăмăлпа сăмах патăн эсĕ, теме пултарать-çке-ха вăл? Çитменнине тата каланă вăхăта ĕлкĕреймест те Макар...

Ҫӑнах та ёлкӗреймерӗ. Чул сарнӑ ҫӳлӗ ҫыран тӑрӑх карталанса утакан ҫамрӑксем хушшинче вӑл пайтахчен уксахласа ҫӳрерӗ, анчах кӑлӑхах. Тарӑхрӗ те вӑл, ӳкӗнчӗ те; заводра вӑрахрах пулнӑшӑн мар, иртерех тӗл пулма калаҫса татӑлнӑшӑн ӳкӗнчӗ. Анчах мӗн тӑвӑн ёнтӗ, иртнӗ вӑхӑта каялла тавӑрма ҫук:—суран сиплесен пӗтет, йӑнӑш — тӳрлетсен. Ҫамрӑксенчен чылайӑшӗ хула сад-нелле туртӑнаҫҫӗ. Макар та унталлах анса кайрӗ.

Акӑ алӑксем. Пӗрре уҫӑлаҫҫӗ вӗсем, тепре хупӑнаҫҫӗ— пӗрисем сада кӗреҫҫӗ, теприсем тухаҫҫӗ. Пилӗк ҫул каялла Макарпа Наташа кунта Павӑлпа Любӑна тӗл пулнӑччӗ. Макар Наташӑна чи пирвайхи хут чуптума тӑнӑччӗ ҫав каҫ...

Ташӑ площадки ҫинче оркестр вылять. Тен, Наташа ҫавӑнта пулӗ? Вӑрҫӑччен вӗсем иккӗшӗ час-часах хӑпа-ратчӗҫ унта. Халӗ, унта пулсан, кампа ташлать-ши вӑл?

Эрхиппе иккен! Вӗсене курсан, Макарӑн чунӗ сӳ! туса кайрӗ. Пӗркунхи пекех, ӑшӗнче кӗвӗҫӳ туйӑмӗ амаланма пуҫларӗ, ташлакансем ҫине килнӗ ҫилӗ ӳснӗҫемӗн ӳссе пычӗ. Ӑшӗнче туртӑнса карӑннӑ темле кирлӗ япала патах татӑлса кайнӑ пек пулчӗ, вӑл вӑйран кайса, пӗр лапсӑркка пилеш айӗнчи сак ҫине пырса ларчӗ.

Темле туйӑм, темле шухӑшсем ярса илчӗҫ ӑна; вӗсем чи пирвайхи хут госпитальте, операци хыҫҫӑн пулнӑччӗ. Вӑйран кайнӑскер, вӑл ун чух месерле выртатчӗ, ча-рӑлса кайнӑ куҫӗсене мӑч та тутармасӑр, хӑймине пуҫ-тарнӑ сӗт тӗслӗ мачча ҫине пӑхатчӗ. Ун чухне унӑн сылтӑм урине татса пӑрахнӑччӗ ёнтӗ, апла пулин те, Макара вӑл хӑй ҫумӗнчех пулнӑн туйӑнчӗ: шухӑшӗпе вӑл унӑн пӳр-нисене, тупанне сиккелеттерчӗ, утса пӑхрӗ... Ҫакна вӑл час-часах тӑватчӗ. Ҫакӑн пек вӑхӑтра вара вӑл вӗриленсе каятчӗ, тарлатчӗ, ури тупанне курас тесе, пуҫне ҫӗкле-ҫӗкле пӑхатчӗ...

Майӗпен ку туйӑм иртсе кайрӗ. Вӑхӑт иртнӗ май, Макар хӑйӗн ури татӑк иккенне те манчӗ. Анчах акӑ халӗ... Мӗнле аван пулӗччӗ вӑл пулсан! Ҫапла тарӑхса ларӗччӗ вӑл, хӑпарӗччӗ те площадка ҫине, Наташӑна хӑйпе пӗрле ташлама чӗнӗччӗ...

Оркестр тепӗр вальс выляма пуҫларӗ. Наташӑпа Эрхип те ҫаврӑнса кайрӗҫ. Тем ҫинчен калаҫаҫҫӗ хӑйсем, кулкалаҫҫӗ. Хуть пӗрре пӑхса илӗҫинччӗ Макар ҫине! Эх, Наташа, Наташа...

Макар кӗсйинчен тутӑр кӑларчӗ те тарланӑ ҫамкине

шăлса илчĕ, тăрса, сарлака аллейăпа утса кайрĕ. Хăй ăçта каяссине пĕлмесĕрех утать вăл, çаврăна-çаврăна пăхать. Ташă площадки йывăççемпе карăнса курăнми пулсан, вăл алăк патнелле çул тытрĕ.

Урама тухсан, Макар пĕр кĕтмен çĕртен Кирилл Петровича тĕл пулчĕ. Лешĕ хуп-хура çĕнĕ костюм тăхăннă, сăрăрах кĕпе çухи айĕнчен йăм-йăм курăнакан хура пурçăн галстук усăнса тăрать.

— Ташлама килместĕр пулĕ вĕт?—хăй тарăхнине палăртас мар тесе, кулкаласа ыйтрĕ унран Макар.

— Эпĕ, Иванович, ташласа илтĕм ĕнтĕ, хыпарне илтсенех ташларăм. Халĕ эсĕ ташла: Павел Степанович таврăннă тет,—хавассăн каларĕ аслă мастер, паян пуçласа курнă пек, токарь аллине чăмăртаса.

— Чăнах-и?—кĕтмен хыпар Макарăн пур хуйхи-суйхине сирсе ячĕ, вăл хĕпĕртесе ӳкрĕ.

— Мĕн, Кириле старик утмăл çичче çитсен суйма пуçланă тетĕн-и? Тĕрĕсне калатăп: кӳршĕ, Хрул мучи пĕлтерчĕ, станцирен пĕрле килтĕмĕр, тет. Эпĕ çавăнта кайма тухрăм халĕ.

— Атя, атя, эпĕ те пыратăп.

Вĕсем паçăр Макар садалла килнĕ урампа Атăл хĕрринелле утса кайрĕç. Халĕ ĕнтĕ Макар ытларах Павăл çинчен шухăшлама пуçларĕ.

## 7

Поезд Шупашкар станцине çитсе чарăнчĕ. Пассажирсем васкаса перрон çине тухрĕç.

Вагон пушанса юлнине туйсан, Павăл та тăчĕ, пĕчĕк чемоданне аллине илсе, вагонран тухрĕ.

Перрон çинче савăнăçлă шав тăрать. Çывăхрах такамсем чуптăвашни, хĕрĕн савăнăçлă сасси илтĕнчĕ:

— Мĕнле улшăнса кайнă эсĕ, Петĕр! Уссипе палламалла та мар сана.

— Эсĕ те улшăннă, Валя: маттурланнă...

— Кулма çапах та пăрахман иккен-ха.

— Кулса мар, Валя, тупата.

— Мĕн чул кĕтнĕччĕ...—Унтан каллех чуптăвашни илтĕнчĕ.

Усси ӳстерме пуçланă çамрăк салтак çартан е госпитальтен таврăнать пулас. Мĕнле телейлĕ вăл, çав

уссиллӗ ҫамрӑк салтак, тӑвансемсӗр, туссемсӗр Павӑлпа танлаштарсан. Ӑна арӑмӗ — е савнийӗ-и?—кӗтсе илет, савса чуптӑвать. Павӑла вара кӗтсе илекен мар, палласа чӗнекен те ҫук. Тӑван хула! Мӗнпе хаваслантарӑн ӗнтӗ эсӗ, тӑван хула? Ҡама савӑнтарӗ кунта Павӑл килни? Акӑ вӑл, ҫак хаваслӑ шав хушшинче ҫухалса, ниҫталла кайма аптраса тӑрать. Хӑйсен савӑнӑҫӗпе хӑйсене телейлӗ туякан ҫынсем, палласа чӗнме мар, асӑрхамаҫҫӗ те ӑна.

Павӑл, умри ҫӗре туйипе хыпашласа, вокзал еннелле утса кайрӗ. Анчах тӑват-пилӗк утӑм ярса пуссанах вӑл ӑнсӑртран рельсӑран такӑнчӗ те ҫӗр ҫине кӗрслетсе ӳкрӗ. Пӗчӗк чемоданӗпе туйи таҫта ывтӑнса кайрӗҫ. Павӑл япалисене шырама тӑчӗ, анчах ҫав самантра ӑна такам сылтӑм хул айӗнчен ярса тытрӗ те ҫӗклесе ура ҫине тӑратрӗ.

— Тавах сире,—терӗ Павӑл ҫав курӑнман, палламан ҫынна.

— Тархасшӑн,—илтӗнчӗ ӑна хирӗҫ ватӑрах арҫын сасси.—Ӑҫта каймалла сирӗн, старши лейтенант?—сасӑ хуҫи Павӑла туйине тыттарчӗ, чемодана хӑй аллине илчӗ пулас.

— Хулана... киле.

— Апла пулсан, каяр эппин пӗрле,—хӑпмарӗ унран кӑмӑллӑ сасӑ.—Эпир те хулана каятпӑр.

— Тавах сире,—терӗ Павӑл, пӑлханма пуҫласа.—Анчах эсир мана хӑварӑр, эпӗ сире кансӗрлӗп ҫеҫ.

— Ҫук, ҫук, тӑванӑм. Апла пулсан, эпӗ сире хамран ярас ҫук. Хветут, мӗн тӑратӑн ҫак эсӗ? Ме, тыт-ха.— Старик Хветут текеннине Павӑл чемоданне пачӗ пулас.— Юрӗ, каяр.

Вӗсем автобус патне пычӗҫ. Анчах унта халӑх нумай кӗпӗрленсе тӑнӑччӗ. Вара такси ҫине ларчӗҫ, шофер вӗсене хӑех чӗнсе илчӗ.

Павӑла хулана, килне илсе ҫитерме пулнӑ старик хӑйӗн Ҡанашри ФЗО шкулӗнче вӗренекен мӑнукне кӗтсе илме тухнӑ-мӗн. Мӑнукӗ халӗ, вунпилӗкри Хветут, хӑйсене шкулта мӗн-мӗн вӗрентни ҫинчен кала-кала кӑтартать. Павӑла, инженера, ун калавӗсем ҫав тери савӑнтараҫҫӗ, ӗҫлес кӑмӑлне ӳстереҫҫӗ. Унӑн часрах хулана, хваттерне ҫитесси, унтан — завода каясси килет...

Павӑлӑн хваттерӗнче темле палламан ҫынсем пурӑннӑ-мӗн. Вӑл кам иккенне пӗлсен, вӗсем ҫавӑнтах пӗр

пӳлӗмне ун валли пушатрӗç. Хуçа арӑмӗ, уçӑ кӑмӑллӑ, ырӑ чӗреллӗ хӗрарӑм, ӑна çавӑнма пулӑшрӗ, «çул хыççӑн çиес килет пулӗ», тесе, хистесех сӗтел хушшине лартрӗ. Çул çинче ывӑнса çитнӗскер, Павӑл хӑй пӳлӗмне кӗчӗ те салтӑнмасӑрах вырӑнӗ çине пырса выртрӗ. Анчах ыйхи килмерӗ унӑн. Ӑна каллех темле йывӑр шухӑшсем аптратма пуçларӗç.

«Акӑ, эпӗ каллех тӑван хулара,—шухӑшларӗ вӑл, канлӗх тупаймасӑр, енчен-енне çаврӑнкаласа выртнӑ май.—Анчах мӗн тӑвӑп-ха эпӗ кунта?..»

... Қаçхине, пӗр кӗтмен çӗртен — чӑнах та, ӑçтан пӗлме, сисме пултарнӑ-ха вӗсем?—ун патне Макарпа цехри аслӑ мастер Қирилл Петрович персе çитрӗç. Аслӑ мастер, ытти пур ватӑ çынсем пекех тӑтӑшах йӑнкӑртатма та ӗçре çылӑха кӗрекен çамрӑкрах рабочисене ятлакалама юрататакан кӑвакарнӑ çӳç-сухаллӑ ырӑ старик (халӗ вӑл пушшех те кӑвакарса кайнӑ пулӗ ӗнтӗ) заводра вӑрçӑ-чченӗх, Павӑл унта пыричченех ӗçленӗ. Аслӑ мастерпа вара вӗсем питӗ килӗштерсе, туслӑ пурӑнчӗç. Фронта тухса кайнӑ чух вӑл ӑна ӑсатса та ячӗ; станцие çитичченӗх. Қайран, мӗн госпитале лекичченӗх, пӗр-пӗрин патне çырусем çӳретрӗç...

Макарпа Кирилл Петрович Павӑла умлӑн-хыçлӑн ыталарӗç те чуптуса илчӗç.

— Паян килтӗр-и?—ыйтрӗ Макар.

— Поездпа-и е пӑрахутпа-и?

— Поездпа.—Павӑлӑн кӑмӑлӗ пӑртак уçӑлнӑ пек пулчӗ.—Нумай пулмасть çеç-ха.

— Мӗншӗн маларах пӗлтермерӗр килессе?

— Кӗтсе тӑракан çынсемех çук вӗт ман кунта...

— Эсир халь те хирӗçме пӑрахман иккен-ха. Ӑçта сухалса пурӑнтӑр-ха хальччен?—Кирилл Петрович ӑна пукан çине лартрӗ те хӑй те ун çумнех вырнаçрӗ.—Мӗншӗн тӳрех ман пата пымарӑр?

— Ыран кӗме шутланӑччӗ,—суйрӗ Павӑл, ватӑ мастера кӳрентерес мар тесе.—Ларӑр, ларӑр эсир, Макар Иванович.

Макар та ларчӗ.

— Ну, мӗн тума шутлатӑн малашне?—ыйтрӗ вӑл.

— Пӗлместӗп, Макар Иванович, шухӑшламан-ха ун çинчен.

— Заводра парторг пулма пултарăттăнччĕ эсĕ...

— Çук, пултарас çук, хăнăхман эпĕ ку ĕçе. Çитменнине... суккăр та.

Макар вăхăтлăха шăпах ларчĕ. Тем каласа кăмăлне тупмалла ĕнтĕ унăнне? Чăнах та, Макарăн хăйĕн те ури çук ĕнтĕ, анчах çапах та вăл вăрçăчченхи пекех заводра ĕçлет. А Павăл... Суккăр вĕт, мĕнле ĕçлеме пултарĕ-ха вăл инженерта? Çапах та мĕнле те пулин хавхалантарас пулать ăна, завода ертсе каяс пулать. Унта хăй вырăнне тупатех вăл, тупатех.

— Акă мĕн, Павел Степанович,—терĕ ăна Макар, сасартăках пĕр япалана аса илсе.—Пирĕн çамрăк рабочисем валли каçхи шкул уçма шутлаççĕ. Эсир унта ирĕккĕнех ĕçлеме пултарăттăр.

— Çапла, çапла,—терĕ Кирилл Петрович та.

— Каçхи шкул?—Ку хыпар Павăла пăртак савăнтарнă пек те пулчĕ.—Темле çав... Юрĕ эппин, шухăшласа пăхăп эпĕ. Тен, пултарăп та-и...

— Итлĕр-ха, Паша.—Макар ура çине тăнăччĕ, анчах вăл каллех ларчĕ те Павăл çумнерех сикрĕ.—Заводра халĕ вăрçăчченхинчен те лайăхрах. Ӳссе кайнă вăл— курсан, паллас та çук. Астăватăр-и хăвăр уçнă цеха? Ĕлĕкхинчен виçĕ хут та пысăк пулĕ. Пĕтĕм Союзăмăр заказ парать. Эх, Павел Степанович, чăнах та, атьăр, эпĕ пулăшăп сире... Пултарнă таран пулăшăпах.

Халĕ Макар сасартăках пĕр япала çинчен асăнчĕ те çав тери хĕпĕртесе кайрĕ. Павăла та савăнтармалла вăл япала, Макара та... Анчах вăл виçĕ эрне каялла, Мускавра пулса иртнĕ калаçăва аса илчĕ те халлĕхе ним çинчен те шарлама шутламарĕ: иртерех-ха.

— Пулăшма ăна пурсăмăр та хатĕр, Павел Степанович. Пирĕн коллектива аван пĕлетĕр эсир,—терĕ лăпкăн Кирилл Петрович та. Сасси унăн лăпкă, вăл чĕререн калаçать.—Вăрçă вăхăтĕнче фронта кайса пĕтнĕччĕ те, халĕ нумайăшĕ каялла таврăнчĕç ĕнтĕ.

Хула паркĕнче тахçантанпах музыка вылять,—ытларах вальс; Атăл çыранĕ çинче паçăртанпах яш-кĕрĕм кĕрлет,—туять, илтет Павăл, анчах вĕсем çаплах калаçса лараççĕ-ха; вăрçă çулĕсене, тăшмана штурмлама çӳренисене, вăхăтсăр вилнĕ тата хăйсенчен полка сывах юлнă юлташĕсене асăнаççĕ, республикăри, хулари, заводри ĕçсем çинчен калаçаççĕ. Калама çук хăрушă вăрçă пынă пулин те, хула та, завод та чылаях ӳснĕ иккен; эх, çӳре-

се çeç курасчĕ пĕрре, курасчĕ те — савăнасчĕ чунтан, ĕçлесчĕ килениччен...

— Атьăр усăлма тухса кĕретпĕр,—татрĕ Павăл шухăшне Макар.—Қаçĕ питĕ аван кĕçĕр—усă, ăшă.

— Çук-ха, кĕçĕр ниçта та тухмастăп.—Павăл аллине тусĕн хулпуççийĕ çине хучĕ.—Ыран ĕçе кайнă чухне кĕрсе тухăр-ха эсир — завода кайăпăр. Юрĕ-и?

— Парăр аллăра, Павел Степанович, питĕ пысăк тав сире!—Макар тăчĕ те унăн аллине тытса, хытă чăмăртарĕ.—Пĕтĕм заводшăн савăнăç кӳретĕр ĕнтĕ. Пăртак кӳреннĕ пек те пулнăччĕ-ха пирĕннисем, мана та ятлатчĕç...

— Ятлаттăмăр çав, ятлаттăмăр. Ятарласа илме ятăмăр та иккен...—хĕпĕртерĕ Кирилл Петрович та.

Тусĕсем кайсан, Павăл чӳрече патне пычĕ те ăна уçса ячĕ. Пӳлĕме усă, ăшă çил вĕçсе кĕчĕ. Вăл, шăп çав пилĕк çул çурă каялла пулнă телейлĕ кунхи пекех, чӳрече каррине вĕлкĕштерчĕ, Павăл çӳçне хускатрĕ, пайăркан-пайăркан лĕпке, çамка çинелле уса-уса антарчĕ. Шăп çав пилĕк çул каялла пулнă пекех! Анчах çук, Павăл вăл куна текех нихçан та кураймĕ ĕнтĕ. Акă, умрах анлă Атăл ассăн-ассăн сывласа выртать, инçетрен, анатран, пăрахут килни илтĕнет, çыран çинче çамрăксем шавлаççĕ,—алла-аллăн тытăнса, карталанса çӳреççĕ пулĕ,— анчах Павăл халĕ таврара мĕн пуррине курмасть, курмасть... Паçăр, Макарпа Кирилл Петрович килсен, завод çинчен, унта вăл каллех ĕçлеме пултарасси çинчен калаçсан, унăн кăмăлĕ пăртак çĕкленнĕ пек те пулнăччĕ, анчах халĕ, пĕччен юлсан, çав савăнăçлă шанчăксене салхуллăн шухăшсем хупласа хучĕç.

Лăпланаймарĕ Павăл. Ним тума аптраса, çаплах кантăк умĕнче тăчĕ. Çамрăксем кĕрлеççĕ-ха, савăнаççĕ. Пăрахут пристань тĕлне çитрĕ пулмалла; туять Павăл, пысăк урапасемпе шыва авăса-авăса, хыттăн шавласа, вăл ку енчи çыран патнелле çывхарать... Акă, вăл инçе çулта пулнă, ик çыран хушшипе, пĕрре — пĕрин патне, тепре — теприн патне сулăнса, çитес çĕре, пристане васкана. Акă, халĕ çитрĕ. Урапасем хуллентерех çаврăнма пуçларĕç, пăртакран пачах шăпланчĕç. Вара вăл пристань çумне калт! пырса перĕнчĕ те лăпланса тăчĕ. Çыран хĕрринчи чулсем хушшинче пайтахчен хумсем чăмпăлтатса çӳрерĕç.

Павăла çак пăрахут халĕ хăйĕн пурнăçне аса илтер-

чĕ. Госпитальтен тухнăранпа ĕнтĕ виçĕ уйăх иртрĕ, ку хушăра Павăл пĕрре унта, тепре — кунта сулăнчĕ, анчах тĕллевĕ патне — пристанне — вăл çаплах килсе çитейменрĕ-ха. Çитменнине тата, унăн тĕллевĕ те пулайман-тăр ахăр: пултараймастăп тесе, вăл ним тума та тытăнса пăхмарĕ. Неушлĕ пурнăç тĕллевне пачах çухатнă-ши вара вăл? Неушлĕ унăн пурнăç çулĕ тăрăх, Атăлпа ыракан пăрахут пек, пĕрре унталла, тепре кунталла сулăнса утмалла? Çук, çитет! Хăй тĕллевĕ патне çитрĕ Павăл,— тĕллев пур!—вăл унтан ниçта та пăрăнмасть, ниçта та сулăнмасть малашне. Ыранах завода каять те хăй юратнă ĕçне — инженер ĕçне тума тытăнать. Ан тив, суккăр пултăр вăл, анчах унăн алăсем пур, унăн чĕре пур, унăн чун пур, вăл — совет çынни, вăл — салтак, вăл — коммунист.

Уçă кантăкран пӳлĕмелле çаплах лăпкă ăшă çил юхать. Атăл ĕнтĕ хăвăртрах, уççăнрах сывлама пуçларĕ; вăхăт-вăхăт вăл, такампа тем канашланă пек, пăшăлтата-пăшăлтата илет. Пăртакран ăна каллех пăрахут хускатрĕ. Вăл, кустăрмипе шав-шав-шав! туса, пристаньтен хăпрĕ те Атăл варринелле кĕчĕ, унăн кăкăрне çурса, тăвалла кайрĕ. Ҫайтăрах ĕнтĕ, вăл — çул çинче, унăн васкамалла, тепĕр тĕле, тепĕр пристане çитмелле...

## 8

Макар çыран çинче те чарăнса тăмарĕ, парка та кĕме шутламарĕ, кинотеатр патĕнче автобус çине ларчĕ те тӳрех хăй пурăнакан общежитие кайрĕ. Унта костюмне хывса, комбинезон тăхăнчĕ, завода анчĕ.

Цехра кăнтăрлахинчен шăпрах пек туйăнать. Станоксем нăй! нăй! туса илеççĕ те шăпах пулаççĕ. Шăплăха вара хутран-ситрен сунтал çине ӳксе чанклатакан мăлатуксем çеç пăсаççĕ.

Пĕр-ик сехет тăрмашса виç-тăват сверло хуçнă хыççăн, Макарăн пĕтĕм чăтăмлăхĕ пĕтсе çитрĕ. Вăл станокне чарчĕ те тавраналла пăхса илчĕ.

Цехра иккĕмĕш сменăра ĕçлекенсем кăна мар, кăнтăрла ĕçленĕ токарьсем те пур иккен. Вĕсем хушшинче Макар цехăн леш кĕтессинче ĕçлекен Эрхипе те курчĕ. Ĕçĕ унăн та тухсах пĕтеймест пулмалла-ха: вăл çиленнĕ сăнлă, станокĕ умнелле пĕшкĕннĕ те, хырать те хырать.

Анчах деталĕ каллех ăнăçлă пулаймарĕ: вăл ăна хĕскĕчĕнчен вĕçертсе илсе, çавăркаласа пăхкаларĕ те тепĕр хут хĕстерсе лартрĕ, шăтарма пуçларĕ.

Ăна тата вăл çапла тăрăшса ĕçленине курсан, Макар çак кăткăс детале чи малтан хăй туса парасса та ĕненми пулчĕ. Çитменнине тата... Эрхип ăна малтан тусан... Наташа та...

Макар станокне чарса, хăйне иккĕмĕш тарăхтаракан предохранителе аллине илчĕ те шухăша кайрĕ.

Тен, шăтарма тепĕр енчен тытăнмалла мар-ши ăна? Формине, калăпăшне çаплах хăварса, конструкцине пăртак улăштармалла мар-ши?

Çапла уйласа тăнă çĕрте Макара сасартăках çĕнĕ шухăш пырса кĕчĕ. Малтан паллах та марччĕ вăл шухăш, тĕтреллĕччĕ, таçта, аякра мĕлтлетрĕ, унтан — уçăлсах, аталансах пычĕ. Макар детале урăхла лартрĕ те ун айккине хальччен тума май килмен çӳç пĕрчи кĕрес пек шăтăк шăтарса хучĕ, унтан, кăшт хăяккăнрах хĕстерсе, тепре шăтарчĕ.

«Пулчĕ те!»

Çак самахсене вăл чутах пĕтĕм цех илтмелле кăшкăрса яратчĕ. Анчах çапла тума ăна пaçăр Павăл хваттерĕнче ларнă чухне пырса кĕнĕ шухăш чарса тăчĕ. Хатĕр детале илсе кĕсйине чикрĕ те, çынсем асăрхамарĕç-ши, тенĕ пек, тавраналла пăхса çаврăнчĕ, станокне чарчĕ.

«Акă, пулчĕ те. Тинех пулчĕ!»

Никам тăвайман детале чи малтан Макар пани çинчен ыран пĕтĕм цеха, пур завода саланĕ. Халĕ ĕнтĕ Наташа та урăхларах пăхма пуçлĕ ун çине: хăй панă самах çине тăчĕ-тăчех вăл. Тăчĕ, турĕ. Сивĕнмен пулсан, Наташăпа мирлешеççех ĕнтĕ. Вара каллех пĕрле çӳрĕç, ĕлĕкхи пекех телейлĕ пулĕç...

Ĕмĕтсемпе çунатлăнса кайнă çĕртенех Макар сасартăк Павăла тата хăй пĕрре Висла кукăрĕ патне ӳкнине аса илчĕ. Вăл, тен, çавăнтах выртса юлатчĕ пулĕ, тен, Шупашкара, тăван çĕршыва та таврăнаймастчĕ, Наташăна та, пилĕк çул хушши кунĕн-çĕрĕн курма ĕмĕтленсе пурăннă Наташăна та алă тытаймастчĕ пулĕ, анчах... Павăл унран уйрăлса каякан телее ярса илчĕ те каялла пачĕ. Çав телее пула Макар киле çитрĕ, Наташăна курчĕ. Анчах мĕнле ырă япала турĕ-ха вăл çавăншăн Павăла? Тумарĕ, ним те тăваймарĕ...

## 10

Тепӗр кунне Кирилл Петровичпа пӗрле ун патне вӑрҫӑченех пӗрле ӗҫленӗ Филиппов инженер, Зоя технолог тата темиҫе рабочи кӗчӗҫ. Павӑл ҫӗрӗпе тенӗ пекех ҫывӑрман пулин те, ирхине ирех тӑчӗ, сивӗ шывпа ҫӑвӑнса, фронта кайиччен ҫӳренӗ сӑрӑ костюмне тӑхӑнчӗ, апатланчӗ те хӑйне тусӗсем чӗнме пырасса кӗтсе ларатчӗ.

Вӗсем ҫуранах кайрӗҫ: вӑхӑт пурччӗ-ха. Миҫе хут иртсе ҫӳремен пулӗ Павӑл ҫак урамсемпе! Акӑ вӗсем сылтӑмалла пӑрӑнчӗҫ, кинотеатр тӗлне ҫитрӗҫ пулмалла. Чӑнах та ҫапла иккен: ҫул анаталла сулӑнчӗ. Кӗпер урлӑ каҫрӗҫ, площаде ҫитрӗҫ. Те автобус, те ахаль машина иртессе кӗтсе, чарӑнса тӑчӗҫ. Пӑртакран машини те уласа иртсе кайрӗ, вӗсем площадь урлӑ каҫрӗҫ те урӑх урама кӗчӗҫ, иртен-ҫӳренсем хӗвӗшекен такӑр тротуарпа тӑвалла утрӗҫ.

Завод кӗрлевӗ инҫетренех илтӗнме пуҫларӗ. Павӑл пӑлханса ӳкрӗ, унтан вӑрҫӑччен пӗрле ӗҫленӗ юлташӗсене, ҫутӑ та пысӑк цехсене, кунӗпе те, ҫӗрӗпе те тӑрӑлтатса ларакан станоксене аса илчӗ. Анчах картишне иртмелли будкӑна кӗриччен ним те шарламарӗ, тӑтӑшах ҫав иртнӗ кунсене аса илсе пычӗ. Унта килекенсене кашнинех сӑмах хушма ӗлкӗрекен Макҫӑм пичче — вӑл халӗ те ҫакӑнтах иккен-ха — ӑна ҫийӗнчех палласа илсе аллине хыттӑн чӑмӑртасан ҫеҫ вӑл шухӑшсем сапаланса кайрӗҫ. Ҫынсем, пилӗк ҫул иртнӗ пулин те, хӑйне ҫийӗнчех палласа илни, астуса тӑни ӑна самаях савӑнтарчӗ.

— Значчӑт, каллех таврӑнтӑр пулать,—терӗ Макҫӑм пичче, пропуск ҫырса париччен пукан ҫине ларма хушса.—Эпир сире манса кайрӑр пулӗ тесе те шухӑшласа пӑхрӑмӑр кунта. Значчӑт, ҫылӑха ҫеҫ кӗтӗмӗр: эсир манман вӑн.

«Эппин вӑл та эпӗ ӗҫлеме пултарасса шанать-ха»,— шухӑшларӗ Павӑл; кӑмӑлӗ унӑн уҫӑлса кайрӗ.

— Манман, манман, Макҫӑм пичче,—терӗ вӑл.—Епле манма пултарӑп-ха эп хамӑн завода?

— Тоттӑ. Хам та ҫавнах калатӑп-ха.

Пропуск ҫырса пачӗҫ. Павӑл вара хӑйне ертсе килнӗ юлташӗсемпе пӗрле завод картишне кӗрсе кайрӗ.

Директор ӑна питӗ савӑнса йышӑнчӗ. Аллине тытса чӑмӑртасан, вӑл унӑн икӗ хулӗнчен те ярса тытрӗ те хытӑ

силлесе илчĕ, унтан вăйпах диван çине лартрĕ, хăй те ун çумне вырнаçрĕ.

— Пĕлетĕп эпĕ сире, Павел Степанович,—терĕ вăл, çаплах-ха ун хулпуççине аллинчен ямасăр.—Хамăр заводсăр, юратнă ĕççĕр пурăнма пултараймастăр эсир — пурпĕрех килетĕр хăçан та пулин. Сывлăху мĕнле-ха?

— Аван.—Павăла лайăх мар пулса кайрĕ: Макар, ятарласа ăна илме Мускава пынăскер, паллах, каласа кăтартнах ĕнтĕ кунта ун çинчен, каласа панах унăн Украинăна тухса каяс умĕн каланă сăмахĕсене. Çавăнпа та вăл ку калаçăва урăх енне пăрса яма васкарĕ:— Ĕçлес тесе килтĕм эпĕ.

— Эппин, канма шутламастăн çул хыççăн?

— Нумай кантăм ĕнтĕ, Иван Яковлевич. Ун çинчен калаçма та намăс.

— Ху кăмăлу. Тӳррипе каласан, эсĕ шăп кăна кирлĕччĕ пире: эпир çамрăк рабочисем валли каçхи шкул уçма шутлатпăр. Унта материаловеденипе электротехникăна вĕрентекен преподаватель кирлĕ. Килĕшĕн-ши эсĕ çав ĕçе тума?

— Пултарайсан...

— Пултаратăр, Павел Степанович, пултаратăр. Ун пирки сăмах та çук.

Пăртак калаçса ларнă хыççăн, Павăл заводри партбюро секретарĕ патĕнче тата завкомра пулчĕ. Унтан вăрçăччен хăй ертсе пынă цеха кĕчĕ.

* * *

Çĕрĕпех çывăраймарĕ Макар. Тепĕр кунне вăл Павăл патне те каяймарĕ — Кирилл Петровича хăй цеха каясси çинчен кĕрсе пĕлтерчĕ те ирех заводалла утрĕ.

Хăшпĕр рабочисем кунта çĕрĕпех ĕçленĕ пулас. Вĕсен хушшинче вăл Эрхипе те курчĕ. Куçĕсем хĕрелнĕ унăн, пичĕ шуралнă, хăй çапах та савăк сăнлă, кулмасть.

«Тен, вăл та туман-ши?» — шухăшларĕ Макар, шикленме пуçласа.—Е манран-ши?»...

Станокĕ умне çитсе тăчĕ çеç, ун патĕнчен Наташа иртсе кайрĕ. Вăл каллех çиленнĕ сăнлă. Чĕнесшĕн те марччĕ пулмалла, анчах Макар хăй çине пăхнине курсан, чăтаймарĕ, чарăнса тăчĕ те, каччă куçĕнчен сиввĕн пăхса:

— Мĕнле, турăн-и?—тесе ыйтрĕ.

Сăмахĕ ку деталь пирки пулчĕ ĕнтĕ. Ҫаҫхинехи ĕҫ ҫинчен вăл ним те шарламарĕ. Деталь ăна ытларах та интереслентерет пулмалла. Ку вара Макаршăн та лайăх: предохранителе вăл тунă. Акă, кăларса кăтартать те — ĕҫĕ те пĕтет, хирĕҫӳ тĕтре сирĕлнĕ пекех сĕвĕрĕлсе каять. Макар Мускава «темле Нина» патне мар, Павăл патне кайнине пĕлет ĕнтĕ вăл, пĕлмест пулсан — пĕлĕ, ĕненĕ, а куншăн вара, ҫак детальшĕн—ҫиленмелли пулас та ҫук: вăл хатĕр.

Макар аллине деталь выртакан кĕсйине чикрĕ, анчах... кăлармарĕ, кăтартмарĕ. Наташа та тăмарĕ текех, пăрăнчĕ те хăй ĕҫлекен ҫĕрелле кайрĕ.

## 11

Питех те кăмăллă ҫав цехри мĕн ĕлĕкрен хăнăхса ҫитнĕ шава тăнлама. Вăл шава илтсен, халĕ Павăла темле маннă, анчах калама ҫук илемлĕ юрра тепĕр хут аса илнĕ пекех туйăнса кайрĕ. Савăннипе тата мĕн ҫине те пулин пырса тăрăнасран хăраса, вăл чарăнса тăчĕ.

— А-а, Павел Степанович,—асăрхаса илчĕ ăна аслă мастер.—Килĕр, иртĕр.

— Ĕҫлеме тесе те... Пăлханатăп, Кирилл Петрович,— хăй туйăмне тӳрех пĕлтерчĕ Павăл.—Вăхăт-вăхăт пултараймассăн та туйăнать...

— А эсир ан туйăр, хăвалăр вăл шухăшсене, мĕншĕн тесен, эпĕ лайăх пĕлетĕп — пултаратăр. Эпир вăт... Ниеплe те ĕҫ кăлараймастпăр-ха акă.

— Мĕнле кăлараймастăр?—ăнланаймарĕ Павăл.

— Ҫаплах.—Кирилл Петрович завод пĕр заказ илни, ҫав кăткăс детале иккĕмĕш кун асапланса та ним ĕҫ те тухманни тата ăна Макар тума пулни ҫинчен каласа пачĕ, айккинелле, хăй сĕтелĕ патне пăрăнса кĕрсе, ăна ҫав детале тыттарса кăтартрĕ.

— Мĕнех вара, ăна Макар тăватех, шантарчĕ пулсан,—терĕ Павăл.

— Тăваймарĕ ҫав-ха, — хĕрӳлленсе кайрĕ аслă мастер. — Ĕнтĕ вăл та иккĕмĕш кун асапланать, каҫхине те кунтах пулнă, анчах ҫаплах пулса ҫитеймест-ха. Хăшĕсем тата тунă та теҫҫĕ те, а хăй тăваймарăм-ха, тет. Пĕлместĕп ĕнтĕ. Станоксем пушă лараҫҫĕ... Паҫăр сана шарламарăм эпĕ ун ҫинчен.

Ҫирилл Петрович сăмахĕсем Павăла тĕлĕнтерсе ячĕҫ. Мĕншĕн апла хăтлантăр-ха Макар? Ун пек ҫын марччĕ-ҫке?

— Хам каласса пăхам-ха эппин эпĕ унпа,—терĕ вăл.—Тен, тăвайман та пулĕ-ха.

— Калаҫ-ха, калаҫ,—хĕпĕртесе ӳкрĕ старик.—Анчах эсĕ хулленрех, чеерех пул: Наташăпа та темле хирĕҫӳ пырать-ха вĕсен, туйĕ вăраха ан юлтăрччĕ.

Ҫирилл Петрович панă детале Павăл вăрахчен ҫавăркаласа ларчĕ. Анчах куҫĕ курманнипе вăл тăруках ним те шухăшласа тупаймарĕ-ха.

«Макарпа каласса пăхасах пулать»—шухăшларĕ вăл.

Анчах Макар та ним те татса каламарĕ. «Халлĕхе тухаймарĕ-ха манăн, Павел Степанович, кăткăс япала вĕт. Сиртен пулăшу ыйтас пулать ĕнтĕ, эсир пултармалла», текелесе ирттерсе ячĕ. Тата тем каласшăн та пулчĕ, анчах — те ҫынсем илтесрен хăрарĕ, те хăймарĕ, нимех те шарламарĕ. Часах вара смена та пĕтрĕ, Павăл занятиеваскарĕ. Вăл цехран кайнă чух Макар ăна картишне тухиччен ăсатса ячĕ.

— Итлĕр-ха, Павел Степанович,—терĕ вăл.—Ан ҫиленĕр-ха эсир... Эпĕ чăнах та турăм вĕт ăна. Ун вăрттăнлăхне... Тен, ҫиленĕр те-ха эсир... сирĕншĕн пытарса тăтăм. Ăна, ҫав детале, чи малтан эсир тусан... Ну, мĕнле каламалла ĕнтĕ...

Лешĕ тытăна-тытăна калаҫрĕ пулин те, Павăл лайăх ăнланчĕ Макара. Унăн ҫилли те тăвălса килчĕ, пичĕ пĕҫерме пуҫларĕ. Хăй ăҫта пуснине те курмасăр, вăл Макар патнех ҫывхарчĕ те, ҫынсем илтесрен хăрамасăрах, хĕрӳллĕн калаҫма пуҫларĕ:

— Эпĕ мана ҫапла «ырă» тăвасси ҫинчен манма хушнăччĕ сана. Астăватăн-и? Неушлĕ эпĕ килĕшĕп-ши вара ҫак,—ан ҫилен, тӳрех калатăп,—ухмахла шухăшупа? Намăс мана, Макар, саншăн намăс. Мана ахаль те юрататъ коллектив, эпĕ ахаль те ĕҫлеме, авторитетлă пулма пултаратăп. Ĕҫĕмĕр вара, тусăм, пирĕншĕн пĕр-пĕриншĕн ҫеҫ мар вăл, пĕтĕм коллектившăн, пĕтĕм халăхшăн. Ырă ĕҫ тусан эпĕ сана ахаль те тав тăватăп. Халĕ те ҫаплах. Эппин, пытарса ан усра вăл япалана. Ҫай та кăтарт халех, ыттисене тума вĕрент ăна.

Пилĕк-ултă ҫул иртсен каллех хăйĕн заводне таврăннипе, хăй юратнă ĕҫе тума тытăннипе тата Макарпа

хирĕçленипе пăртак пăлханчĕ пулин те, заняти аван иртсе кайрĕ. Çамрăксем ун сăмахĕсене питĕ тăнласа итлерĕç, лекци пĕтсен, темиçе ыйту пачĕç. Иван Яковлевич ăна килне машинипех ăсаттарасшăнччĕ, анчах вăл хăйĕн цехне кĕрсе тухма шутларĕ.

Цехра ĕнтĕ ĕç хĕрсех пырать. Қăткăс детале халĕ ĕнтĕ Макар кăна мар, ытти хăшпĕр токарьсем те тума пуçланă-мĕн; цеха тата кăнтăрлахи сменăра ĕçленĕ рабочисем те чылайăшĕ юлнă.

Павăл кĕнине курсан, ун патне Макар чупса пычĕ. Савăнать те вăл, именет те. Аллине тытса чăмăртарĕ.

— Пуçланчĕ вĕт,—терĕ вăл.—Пуçласа ятăмăр... Эсĕ каçар мана, Павел Степанович.

— Тус тесе çеç, хама лайăх ăнланнăшăн çеç, каçарсан та.—Павăл та ун аллине чăмăртарĕ.—Çапах та маттур эсĕ, пултаратăн. Тӳрех çапла тумаллаччĕ. Тепĕр хут калатăп. Ман умра нимле парăм та çук санăн — халăх умĕнче, çĕршыв умĕнче парăмлă эпир, вăл парăмран пысăкки урăх ним те çук.

— Тĕрĕс, тусăмсем,—хутшăнчĕ вĕсен калаçуне тин çеç пырса çитнĕ Қирилл Петрович та.

Завод картишĕнче Макарпа Павăла Наташа хăваласа çитрĕ. Вăл, ĕлĕкхи пекех именчĕклĕн кулкаласа, вĕсен хушшине тăчĕ те каччăсен хулĕсене тытрĕ. Вĕсем виççĕшĕ те урама тухрĕç. Қаç пулса килнĕ май, хула пушшех те хытăрах шавлама пуçланă. Урам варрипе — хирĕç те, май та — автобуссем, грузовиксем, çăмăл машинăсем вăшлата-вăшлата иртеççĕ. Хĕвел анман-ха, вăл хула çине, пит çине ачаш та ăшă шевлесем сапать. Юпа çине вырнаçтарнă громкоговоритель — вăл вăрçăччен те çавăнтахчĕ — марш евĕрлĕ илемлĕ юрă юрлать. Вăл кăмăла çĕклет, чуна çăмăллатать — юрлас килтерет, утас, пĕр чарăнса тăмасăр малалла утас килтерет.

1953.

## ТЕМИҪЕ ХУТ ВАЙЛĂРАХ

Зайкин капитан аэродромран вĕçсе кайнăранпа ĕнтĕ тăватă сехет иртрĕ. Вăл каялла таврăнасси çинчен халĕ ĕмĕтленме те çук. Анчах полк командирĕ, Исхаков подполковник, çаплах раци умĕнчен хăпма пĕлмерĕ.

— «Акăш», «Акăш»! Илтрĕр-и эсир мана?—çине-çинех чĕнчĕ вăл.—«Акăш», эпĕ — «Утрав».

Анчах Зайкин самолечĕ çинчен хальхинче те хыпар пулмарĕ.

— Самолечĕ ӳксе çĕмĕрĕлнĕ пулĕ, ăна пăрахса çуран таврăнать пулмалла,—терĕ подполковникпе юнашар тăракан Баранов.

Баранов — Зайкинăн заместителĕ. Эскадрилья командирĕ тек таврăнас çуккине ĕненсех каймасть вăл. Çавăнпах-и тен, мĕнле те пулин хыпар пуласса кĕтсе, команда пунктĕнчех тăрать.

Полк командирĕ çийĕнчех чĕнмерĕ. Кăштах шухăша кайса тăнă хыççăн, вăл çӳлелле, тĕтĕм евĕр пĕлĕтсем çинелле пăхса илчĕ:

— Эсир кайма пултаратăр,—терĕ вăл Баранова.— Эскадрильйăна ыранхи вĕçеве хатĕрлĕр.

— Есть,—терĕ Баранов, хăй хумханнине пытарма тăрăшса.

Команда пунктĕнчен тухсан, вăл тӳрех эскадрилья самолечĕсем тăнă çĕрелле утрĕ. Ун пуçĕнче каллех тĕрлĕрен аван мар шухăшсем вăркама пуçларĕç.

— Ăçта-ши вăл халь? Неушлĕ тыткăна лекрĕ?..

Пĕтĕм полк юратакан Зайкин капитан аэродромра çук. Ĕненес те килмест вăл çуккине. Анчах чăнлăха сирсе яраймăн: командир чăнах та таврăнман. Стоянкăри унăн

самолечӗ тӑракан «точка» та пушах. Ун вырӑнне, эскадрилья командирӗ вырӑнне, халӗ вӑл хӑй, Баранов юлнӑ...

* * *

Стоянкӑра шӑп. Баранов хӑй самолечӗн стабилизаторӗ ҫине тайӑнчӗ те тарӑн шухӑша кайрӗ... Унӑн куҫӗ умне командирӑн пысӑк кӗлетки тухса тӑнӑ пек пулчӗ.

Акӑ вӑл, ӑшӑ кулӑпа ҫиҫекен кӑвак куҫлӑскер, енчен енне сулкаланса, хӑй самолечӗ тавра уткаласа ҫӳрет.

— Хатӗрлен, хатӗрлен, Миша,—тет вӑл хӑйӗн стрелокне, Саламова.—Пур шанчӑк та сан ҫинче ҫеҫ.

Саламов чӗнмест. Командир мухтани ӑна вӑтантарать. Барановӑн задание кӑнтӑрла иртсен ҫеҫ каймалла, ҫавӑнпа вӑл хӑй самолечӗн ҫуначӗ ҫинче вӗсене пӑхса ларать.

Зайкин ури айӗнче ирхи юр чӗриклетет. Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе вӑл, утма чарӑнса, тӑп-тӑрӑ горизонтпа кӑвак тӳпе ҫинелле пӑхкалать. Вара, ҫилпе куштӑрканӑ хулӑн тутисене пӗркелесе илет те, каллех уткалама пуҫлать. Вӑрӑм пӳ-силлӗ те сарлака хулпуҫҫиллӗскер, ҫине пысӑк ҫухаллӑ, хура тиртен ҫӗленӗ ӑшӑ комбинезон, урине ҫӑмламас атӑ-унттӑ тӑхӑннӑскер, халь вӑл ҫамрӑк та йӑваш упа пек курӑнать.

Аэродром ҫинче кӑн-кӑвак, тӑп-тӑрӑ ир ҫиҫет. Самолетсем хыҫӗнчи лапсӑркка чӑрӑшсен турачӗсем ҫинче пӑр хӳрешкисем йӑлтӑртатаҫҫӗ.

— Петька, кун хисепне пӗлместӗн-и эсӗ?—ыйтать вӑл сасартӑк, Баранов еннелле ҫаврӑнса тӑрса.

— Мартӑн 1-мӗш кунӗ пулас,—тет Баранов, самолет ҫуначӗ ҫинчен шуса анса.

— Эппин ҫуркунне пуҫланать,—тет савӑнӑҫлӑн Зайкин, Баранов куҫӗсенчен пӑхса.—Да, ҫуркунне...

Вӗсем пирус тивертсе яраҫҫӗ.

— Ан кулян, Петя, Май уявне сирӗн хулара уявлӑпӑр. Зайкин хӑйӗн пысӑк вӑйлӑ аллине Баранов хулпуҫҫийӗ ҫине хурать.—Майччен унта ҫитетпӗрех.—Вӑл ӗненмелле калать, Барановӑн ӑна ирӗксӗрех ӗненес килет. Зайкин тата темскер каласшӑнччӗ, анчах сигнал вӗсен калаҫӑвне татрӗ... Темиҫе самантран вара вӑл задание вӗҫсе кайрӗ... Вӗҫсе кайрӗ те... таврӑнмарӗ текех.

Баранов тарӑннӑн сывласа илчӗ...

* * *

Подполковник Исхаков çаплах команда пунктĕнче. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе вăл, мĕн те пулин илтĕнмест-ши тесе, аллине микрофон илет:

— Акăш, Акăш!—илтетĕр-и эсир мана? Эпĕ — Утрав.

Анчах наушниксенче нимĕнле сасă та илтĕнмест. Акăш чĕнмест.

2

Пăртак тăн кĕрсен, Зайкин куçне уçса пăхрĕ. Вăл темĕнле тарăн вар тĕпĕнче, кĕрпеклĕ юр ăшĕнче выртать. Ун умĕнче, темиçе утăмра, çаралнă хăва тĕмĕсем лараççĕ; вĕсен хыçĕнчен юр тĕлĕ-тĕлĕпе ирĕлнипе чăпарланса юлнă чăнкă çыран пуçланса каfive. Вăл шупка пĕлĕтсемпе карăннă тӳпенелле хăпарать.

Зайкин пуçне çĕклеме тăчĕ, анчах çĕклеймерĕ. Çак самантра вăл хăйĕн сулахай куçĕ хыттăн чиксе ыратнине туйрĕ.

«Ăçта эпĕ? Мĕн пулнă мана?»—шухăшларĕ вăл, хăйĕнчен хăй тĕлĕнсе.

Куç умне ирхи çапăçу картинĕ тухса тăчĕ. Аэродром, таван полк, полк командирĕ тата унăн сăмахĕсем аса килчĕç.

— «Акă Ҫ ялĕ. Вăл фронт линийĕнчен 80 километртра. Разведка пĕлтернĕ тăрăх, унтан кăнтăрарах, вăрманта нимĕçсен автомашинĕсемпе танкĕсен резерви тăрать. Сирĕн задача...»

Ку сăмахсене полк командирĕ Батя каланă. Зайкин унăн кашни сăмахне, вăл панă кашни канашпа кăтартăва астăвать. Кашни задани умĕнех вăл çапла, мĕн тумаллине, мĕн тусан авантарах пулма пултарассине тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пама тăрăшать. Çав вăхăтра — кашни хутĕнчех, кашни задани умĕнех, хăй тăтăшах кăранташĕпе сĕтел çине сарса хунă карттине йĕрлет.

— Астăвăр, тăшман самолечĕсемпе тĕл пулсан...— карттă çинчен куçне илмесĕрех малалла ăнлантарчĕ вăл.

Çук, ку тĕлпулу çинчен Батя паян каламанччĕ пулас. Ун çинчен вăл темиçе кун маларах, пĕтĕм эскадрильйипе тăшман аэродромне штурмлама каяс умĕн каланăччĕ. Зайкин ăна та астăвать халĕ.

— «...Астăвăр, тăшман истребителĕсемпе тĕл пулсан, хăвăра сыхлакан истребительсенчен малтан çапăçăва ан чикĕнĕр. Ку — çухату çеç кӳме пултарĕ...»

Çухату... Ĕçсем яланах ăнса пынă пулин те, çухатусем пулнах. Халь Зайкина темшĕн çавăн пек тĕлпулусен-

че çухалнă летчиксемпе стрелоксем аса килчĕç. Акă, эрне маларах пулнă вĕçеврех... тăшман тылĕнчен фронта килекен автомашинăсен колоннине штурмланă чух вĕсем «мессерсен» кĕтĕвĕпе тĕл пулнăччĕ. Эскадрильйăна сыхласа пыракан истребительсемпе пĕрлех штурмовиксем те çапăçăва хутшăннăччĕ. Çапăçура Зайкин эскадрилья штурманне Ладыгина, иккĕмĕш звено командирне Шипилина тата икĕ рядовой летчика çухатнă. Çав çапăçурах вĕсене сыхласа пыракан икĕ истребитель ӳкнĕ.

Тепĕр задание вĕçсе каяс умĕн вара командир Зайкина çавăн пек тĕлпулусенчен сыхланма хушнă. Анчах кун пек тĕлпулу вăл вĕçевре те пулнă... Çапăçу хыççăн аэродрома икĕ экипаж таврăнман.

— Герой Çăлтăрне пама кирлĕччĕ те сана куншăн, анчах ман приказа пăснă — пултараймастăп, — тенĕ Батя, Зайкин аэродрома таврăнсан.

Герой Çăлтăрне Зайкин чăнах та илеймен. (Мĕн тĕлĕнмелли пур вара — эскадрильйăпа аллă самолета хирĕç çапăçса, вĕсенчен вунçичĕ самолетне персе ӳкернĕ пулсан? Пирĕн штурмовиксем вĕсен «лаптежникĕсенчен» вунă хут, çирĕм хут вăйлăрах. Çитменнине тата... вăл çапăçу хыççăн аэродрома Петривановпа Семенов таврăнман). Анчах Батя ăна пурпĕрех Хĕрлĕ Ялав орденне памалла тунă. Çав çапăçу çинчен кайран икĕ хутчен арми хаçатĕнче те çырнă.

Юлашки задание ăсатас умĕн вара Батя тăшман самолечĕсемпе тĕл пулас пулсан мĕн тумаллине каламан. Анчах ĕмĕрех çынна ырă тăвас текенскер, вăл хăйĕн летчикĕсене канаш памасăр ăсатса яма пултарайман:

— «Астăвăр, эсир истребительсемсĕр вĕçетĕр, тĕл çинче нумай тытăнса ан тăрăр»..—Малалла вăл кашни вĕçев умĕн калакан сăмахсене каланă:—Позывнойсем çавсемех: «Акăш», «Утрав».

«Утрав»... «Утрав» — аэродром. Зайкин паян ирхине çеç унтан вĕçсе тухнă. Анчах халь ăна хăй аэродромран вĕçсе тухнăранпа вăхăт çав тери нумай иртнĕн туйăнать. Неушлĕ паян вĕçсе тухнă вăл унтан? Паянах пуль çав...

Пуç çаврăнать. «Утравра» пулнă ĕçсем те татăкăн-татăкăн çеç аса килеççĕ... Акă землянкке. Полк командирĕ — кĕрнеклĕ те лутрарах пӳллĕ, хĕрĕх çулалла çитнĕ подполковник—Батя. (Хăй çук чух ăна летчиксем çапла чĕнеççĕ: Батя чĕнтерет, Батя ятларĕ, аван пирĕн Батя...)

— Ăнланатăр-и эсир задачăна?—куна Батя ыйтать.

— Ăнлантăм, подполковник юлташ. Ҫайма юрать-и?
— Ну, телей сунатăп...

Батя алă памасть. Йăли ҫапла, авалхи летчиксенчен юлнă йăла: алă тытса уйрăлсан, каялла таврăнасси ҫинчен ан та шутла. Паллах, ку халапа никам та ĕненмест халĕ, анчах командирăн Зайкина кӳрентерес килмест.

Зайкин земленккерен тухать те хăй эскадрильйин самолечĕсем патнелле утать. Унта ăна хăйĕн заместителĕ Баранов тата стрелокĕ Саламов кĕтсе илеҫҫĕ.

— Баранов, эпĕ часах задание вĕҫсе каятăп. Эсир ман вырăна юлатăр.

— Есть!

— «Есть» мар, «слушаюсь» темелле... Баранов устава пăсать. Зайкин ăна уншăн ятлама шутланăччĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ... Тата мĕн ҫинчен калаҫнăччĕ-ха ун чух? Ҫуркунне ҫинчен пулас. Ҫапла, ҫуркунне ҫинчен... Неушлĕ халех ҫуркунне пуҫланать? Ҫук, ҫуркунне часах мар-ха. Сивĕ. Ох, сивĕ.

Сылтăм алă кăкăр айĕнче хирĕнсе выртать. Зайкин сулахай алли ҫине тĕренсе, ăна хăй айĕнчен кăларма тăчĕ, анчах сулахай хулпуҫҫийĕ сасартăк хыттăн чиксе ыратрĕ, куҫĕ хуралса килчĕ, ҫĕр кăлтăрмач пек ҫаврăнса кайнăн туйăнчĕ. Неушлĕ ҫĕр ҫапла ҫаврăнать? Ун ҫинчен таҫта ыткăнса каяс мар тесе, Зайкин хăйне итлекен сылтăм аллипе мĕнрен те пулин ярса тытма тăчĕ. Анчах ӳт-тире чĕрекен кĕрпеклĕ юрпа шăннă ҫĕртен пуҫне, алла урăх нимĕн те ҫакланмарĕ...

Ăна тепĕр хут тăн пырса кĕнĕ ҫĕре ĕнтĕ каҫ пулма пуҫларĕ. Анса ларма хатĕрленекен хĕвелĕн хĕрлĕрех пайăркисем хыҫри ҫыран ҫинчен шуса тухса таҫталла, ҫыран хыҫнелле анса кайрĕҫ. Хĕвеланăҫĕнчи пăс ҫăмхисем евĕр шупка пĕлĕт татăкĕсем кĕрен тĕспе сăрланма пуҫларĕҫ.

Пăртак, сиккеленмесĕр выртнă хыҫҫăн, Зайкин тăрса ларчĕ. Нумай юн ҫухатнипе тата суранĕсем калама ҫук хытă ыратнипе унăн пуҫ ҫаврăнать, куҫ умĕ хурала-хурала килет. Темиҫе сехет юр ҫинче выртнипе вăл шăнса кайнă. Ăшĕнче, кăкăр шăммисем айĕнче, пăр катăкĕ выртнă пек туйăнать. Ҫав пăр катăкĕсем, ӳснĕҫемĕн ӳссе пырса, кăкăра хĕссе ыраттараҫҫĕ, пĕтĕм ӳт-пĕве шăнтса чĕтретеҫҫĕ, сывлама кансĕрлеҫҫĕ.

Сулахай куҫ йĕппе тирнĕ пек чиксе ыратать. Зайкин ăна хыпаласа пăхрĕ те хăйĕнчен хăй хăраса кайрĕ: куҫ вырăнĕнче темĕнле шăтăк ҫеҫ тăрса юлнă. Питҫăмарти

çине çав шăтăкран юхнă юн кĕвелсе хытса ларнă. «Мĕнле майпа шăтса юхнă вара вăл?» Самантлăха манăçа тухнă тĕнче каллех аса киле пуçларĕ. «Ķуçлăх кĕленчи чавса кăларнă пулас? Анчах... хăçан, мĕнле майпа?»

Йĕркипе аса илес пулать. Аэродром... Унтан Зайкин чиперех вĕçсе тухнă. Акă тĕл, ял. Унăн ятне астумасть халĕ Зайкин. Тĕл çине вĕсем икĕ хутчен вĕçсе кĕчĕç: малтан бомбисене пăрахрĕç, иккĕмĕш хутĕнче тупăсемпе пулеметсенчен печĕç. Тăшман çӳлелле перекен пулеметсенчен персеччĕ. Мотора лектернӗччĕ пулас. Çук, Зайкин самолетне лектереймерĕç вĕсем, унăн ведомăйĕн, Ķутузов младши лейтенант самолетне лектерчĕç. Ķутузов самолечĕ юлма пуçларĕ. Зайкин, ăна пăрахса хăварас мар тесе, унта-кунта пăркаланса, ăна сыхласа вĕçсе пычĕ. Тĕл çинчен инçете те пăрăнаймарĕç, вĕсене ултă «мессер» хăваласа çитрĕ. Тăшман истребителĕсем, наставленире хушнă пекех, мăшăрăн-мăшăрăн тапăнчĕç: иккĕшĕ — Зайкин çине, иккĕшĕ — Ķутузов çине. Тепĕр иккĕшĕ — çӳлелле хăпарса кайрĕç.

«Мессерсем» çывхарчĕç...

— А ну, Миша, хăрат-ха вĕсене!

Миша Саламов — радист-стрелок. Вăл хăйĕн пулеметĕнчен вăрăм черет пачĕ. Самолет чĕтренсе илчĕ.

— Маттур, земляк!

Саламов — Ульяновск облаçĕнче çуралса ӳснĕ чăваш каччи. Ķашасем пулас. Çапах та Зайкин, хăй Чăваш республикинчен пулсан та, ăна земляк тесе чĕннĕ.

— Маттур!

Хысра пыракан «мессер» хăй хыçне хура тĕтĕм çулĕ хăварса, аялалла анса кайрĕ. Тепри çывăха килме хăяймарĕ, инçетренех темиçе черет пачĕ. Çапах та лектерчĕ. Сулахай алă ĕçлейми пулчĕ пулас çавăн хыççăн. Тата сылтăм ура. Вăл та çавăн чухнех суранланчĕ пулас...

Ķутузов çулăмпа явăнса çĕрелле анса кайрĕ. Ăна ĕнтĕ нимĕнпе те пулăшма май çук. Зайкин хыçне тепĕр «мессер» кĕрет...

— Миша! Земляк!

Стрелок-радист йывăр суранланчĕ пулас: наушниксенче вăл йынăшни çеç илтĕнчĕ.

— Утрав, Утрав! Эпĕ — Акăш. Ķиле таврăнатăп... пĕччен.

Полк командирĕ, аэродромра чух яланах команда пунктĕнче тăраканскер, ун радиограммине илтни çинчен

каларĕ. Малалла вăл темĕн çинчен пĕлтерме ыйтнăччĕ пулас, анчах Зайкин ăна ăнланаймарĕ: ун сăмахĕсен уйрăм сыпăкĕçене çеç илтсе юлчĕ. «Мессер» тепĕр хут вĕçсе кĕчĕ...

— Миша!

Миша чĕнмерĕ.

«Мессер» пемерĕ. Вăл посадка питлĕхĕсене кăларчĕ те Зайкин самолечĕ çумне вĕçсе кĕчĕ. Фонарь плексигласĕ витĕр Зайкин нимĕç летчикĕн кулăпа ейĕлнĕ сарлака çăварне тата савăнăçлăн çиçекен çаврашка чармак куçĕсене курчĕ. «Çĕнтерӳçĕ» çара пуçĕ çинех лартнă наушникĕсене тӳрлетрĕ те сарă сăран алса тăхăннă аллипе Зайкина юнаса илчĕ. Çилĕ тăвăлса килчĕ. Зайкин пур вăйне пухса, çыхăнса ларнă пиçиххи тăхисене вĕçертрĕ те самолетне сылтăм çуначĕ çине тайăнтарчĕ. Сылтăм урипе педале пусрĕ. Самолет сасартăк сылтăмалла пăрăнчĕ те «мессер» çине пырса тăрăнчĕ. Малта тăшман самолечĕн обшивкинчен тата винтран сирпĕннĕ алюмини татăкĕсем курăнчĕç...

## 3

Унтан темиçе утăмра, çӳлерех, çыранри чăнкă хысак çинче унăн ванчăк самолечĕ выртнă. Паçăр ăна Зайкин асăрхаман та. Халĕ, куç умĕнчи тĕтре сирĕлсен, вăл ăна сасартăк асăрхаса илчĕ те хырăмĕпе унталла шума пуçларĕ.

«Саламов... Миша... Чĕрĕ-ши вăл? Е ман пекех ăçта та пулин ыткăнса кайнă-ши?—вылянса иртрĕç ун пуçĕнче шухăшсем.—Вĕт эпĕ ăна сикме те хушаймарăм...»

Çак шухăшсем вăхăтлăха сурансем çинчен те мантарса ячĕç. Вăл хăвăртрах самолечĕ патне шуса çитме тăрăшрĕ. Анчах хысак тăрне шуса çитеспе вăл каллех аялалла татăлса анчĕ, суранланнă ури çине ӳксе, ăна хытах ыраттарчĕ. Хулпуççи çумне çыпăçса ларнă кĕпе туртăнса суран çинчен хăпрĕ те çурăм тăрăх вĕри юн юхма пуçларĕ. Каллех пуç çаврăнса кайрĕ. Тăнлавсенче темскер хыттăн тăпăлтатса илчĕ. Ăшчикрен пыр тĕпнелле темле аван мар япала йăтăна-йăтăна килсе кăмăла пăтратрĕ.

Пăртак вăй пухса выртнă хыççăн, Зайкин каллех çĕкленчĕ те самолечĕ патнелле шума тытăнчĕ.

Самолет хысак ҫинче выртать. Зайкин унӑн сулахай ҫуначӗ ҫине шуса хӑпарчӗ, сывӑ аллипе стрелок кабинин бортне ярса тытса, ури ҫине ҫӗкленчӗ.

— Миша,—чӗнчӗ вӑл.

Чӗнчӗ те, хӑй сассинчен хӑй тӗлӗнсе кайрӗ: вӑл таҫтан, ҫӗр тӗпӗнчен тухакан ют сасӑ пек туйӑнчӗ. Ҫам илтме пултарӗ тулалла тухса ҫитеймесӗрех, ӑшрах ҫухалакан вӑйсӑр сасса?

— Миша,— чӗнчӗ тепӗр хут Зайкин, пуҫне кабина ӑшнелле усса.— Чӗрӗ-и эсӗ?

Анчах вӑл нумайччен ҫакӑнса тӑма пултараймарӗ. Вӑйран кайнипе унӑн ури чӗтреме пуҫларӗ. Вара хӑй те сисеймерӗ, пӗлми пулса кайнӑ алли кабина бортӗнчен вӗҫерӗнчӗ те, вӑл каллех самолет ҫуначӗ ҫине тӗшӗрӗлсе анчӗ.

Пӑртак вӑй кӗрсен, Зайкин тӑрса ларчӗ.

Ёнтӗ каҫ пулнӑ. Пӑр тӗслӗ тӳпере ҫӑлтӑрсем ҫиҫеҫҫӗ. Тип варӑн леш енчи ҫыранӗ ҫийӗпе кӗмӗл чашӑк евӗрлӗ тулли уйӑх шӑвать.

Стрелок кабининче йынӑшни илтӗнчӗ. Ҫакна илтсен, Зайкин савӑнса кайрӗ. Вӑл аллипе кабина бортне ярса тытрӗ те каллех ури ҫине ҫӗкленчӗ.

— Миша, мӗншӗн чӗнместӗн? — ыйтрӗ вӑл.

Стрелок тем мӑкӑртатса илчӗ, анчах Зайкин ун сӑмахӗсене уйӑрса илеймерӗ: стрелок йӗнӗ пек, темле уланӑ пек туйӑнчӗ ӑна. Вӑл ҫӳлерех ҫӗкленсе, хырӑмӗпе кабина борчӗ ҫине выртрӗ те стрелок ҫинелле уртӑнчӗ. Лешӗ сылтӑм аллипе ӑна мӑйӗнчен ыталаса илчӗ.

— Ну, мӗншӗн чӗнместӗн? Чӗрӗ вӗт...

Вӑл сывӑ аллипе стрелок ҫыхӑнса ларнӑ пиҫиххи тӑхине вӗҫертрӗ те, ӑна хул айӗнчен ярса тытса, ҫӳлелле сӗтӗрме пуҫларӗ. Саламов пӑртак ҫӗкленчӗ, кабинӑран тухса борт хыҫнелле уртӑнчӗ. Зайкин мӗнпур юлашки вӑйне пухса сывӑ аллипе унтан ҫакӑнчӗ. Пӑртак ҫапла ҫакӑнса тӑнӑ хыҫҫӑн стрелок майӗпен кабинӑран шуса тухрӗ те, вӗсем иккӗшӗ те аялалла татӑлса анчӗҫ.

## 4

«Фронт линийӗ кунтан сахалтан хӗрӗх километрта. Кунне вуншар километр шусан та, тӑватӑ кун каяс пулать,—минтретрӗҫ пуҫа аван мар шухӑшсем.—Анчах

эпир иксĕмĕр те çурма вилĕ çынсем. Кунне... километр та...»

Миçе километр шума пултарĕ вăл? Тата шума пултарĕ-и вăл, хăрах урапа, хăрах алăпа? Унăн çаплах пуçĕ çаврăнать, хăсасси килет, суранĕсем чиксе ыратаççĕ. Куçлăх кĕленчи чавса кăларнă куçран юн сăрхăнать. Ăшри темле сивĕ япала пысăкланнăçемĕн пысăкланса килет. Зайкин сиксе чĕтрет.

Саламов ун çумĕнче тăнсăр выртать. Хутран-ситрен вăл йынăша-йынăша илет. Зайкин майĕпен чĕркуçленсе ларчĕ те ун çинелле пĕшкĕнчĕ.

— Миша!

Саламов чĕнмерĕ. Унтан текех вăл мĕн те пулин каласса кĕтме те çук: çурăлакан пуля унăн янах шăммине пĕтĕмпех ватса пăрахнă. Янах вырăнĕнче халĕ ваннă, юнланнă шăмă тата ӳт татăкĕсем çеç çакăнса тăраççĕ. Вăл тăтăшах хăрушшăн хăрăлтата-хăрăлтата, пĕтĕм пĕвĕпе туртăна-туртăна илет.

«Ăçта шуса çитмелле ĕнтĕ пирĕн? — шухăшларĕ Зайкин хуйха ӳксе.—Кам шутланă ĕнер çапла пулса юласса?»

Темиçе сехет каялла çеç-ха вĕсем, чĕрĕ те сывăскерсем, сывлăшра, тӳпере (мĕнле ирĕк, ырă вăл тӳпе!) пулнă. Тăшман çине вилĕм сапнă. Халĕ... Халь акă вĕсем вĕçме мар, çĕр çийĕпе шума та пултараймаççĕ. «Юлашки вĕçев, юлашки çапăçу пулчĕ пулас çав»,— шухăшларĕ Зайкин кӳренсе.

Сакăр уйăх маларах вăл (Зайкин ун чух истребитель çинче вĕçнĕ) хальхи пекех тăшман тылне ӳкнĕ. Вăл хутĕнче унăн сулахай ури суранланнă пулнă. Нумай юн çухатнипе вăйсăрланса юлнăскер, Зайкин икĕ эрне ытла пĕр ялти колхоз вити маччинче пытанса пурăннă. Ун чух та вăл «текех вĕçме памĕç, юлашки вĕçев пулчĕ пулас», тесе шутланă, анчах телей пĕтĕмпех пĕтмен пулнă-мĕн: госпитальтен сывалса тухнă хыççăн, ăна каçхи бомбардировщиксен эскадрильйин командирĕ туса хунă. «П-2» çинче пулин те сывлăша, тӳпене хăпарма май пулнăшăн вăл савăннă. Уйăхран Зайкин штурмовик çине куçнă. Çавăнтанпа вара вăл çĕр çирĕм хутчен задание пулнă...

Саламов хыттăн йынăшса илчĕ. Çакна илтсен, Зайкин майĕпен сылтăм алли çине çĕкленсе, тăрса ларчĕ.

— Миша,—терĕ вăл, ун çинелле пĕшкĕнсе. — Пирĕн кунтан тарас пулать. Мĕнле пулсан та урăх çĕре куçса ӳкес. Кунта пире фашистсем тупма пултараççĕ.

Саламов чĕнмерĕ.

— Шума пултаратăн-и эсĕ? — ыйтрĕ пăртак чĕнмесĕр ларнă хыççăн Зайкин.— Атя, хăтланса пăхар-ха...

Вăл каллех ӳпне выртрĕ те самолет хӳри патнелле талпăнчĕ. Шума питĕ те йывăр пулчĕ. Малтан вăл хырăмĕ çинче шума хăтланчĕ, анчах суранланнă хулпуççипе ури чăтма çук ыратнине пула, капла тума май пулмарĕ — вара вăл сылтăм аякĕ çине çаврăнса выртрĕ.

Аран-аран стабилизатор патне çитрĕ те, вăйран кайнипе тата пуçĕ çаврăнма пуçланипе, шума чарăнчĕ. Пăртак вăй кĕрсен вăл каллех пуçне çĕклерĕ.

Тӳпе пăтранчăк шыв пек курăнать — илемсĕр, тискер. Унта халĕ уйăх та, çăлтăрсем те курăнмаççĕ. Тип вар тăрăх аскăн çил ĕрĕхсе чупать. Сивĕ.

Зайкин пăртак çĕкленчĕ те хыçалалла çаврăнса пăхрĕ. Саламов ун хыççăн шумасть-мĕн — вăл паçăрхи тĕлтех, паçăрхи пекех пĕр хускалмасăр выртать.

«Пултараймасть, сĕтĕрес пулать»,—шухăшларĕ Зайкин.

Тăватă уйăх вĕсем пĕрле, пĕр самолет çинче вĕçнĕ, пĕр пурнăçпа пурăннă: пĕрин хуйхи теприне хуйхăртнă, пĕрин савăнăçĕ теприне савăнтарнă. Пур хăрушлăхсемпе йывăрлăхсене те пĕрле, пĕр тан чăтса ирттернĕ. Пĕри капитан, тепри сержант, пĕри командир, тепри унăн салтакĕ пулсан та, вĕсем туслă пулнă. Кунне виç-тăватă хутчен штурмовкăна çӳрекен, тăтăшах пурнăçпа вилĕм хушшинче тăракан çынсем аван пĕлеççĕ ку туслăха.

«Мĕнле пулсан та сĕтĕрес пулать»...

— Миша! Земляк!

Саламов чĕнмерĕ. Вăл ик-виçĕ хутчен пĕтĕм пӳ-сийĕпе туртăнса илчĕ те хускалми пулса выртрĕ. Зайкин ун çине пĕшкĕнсе пăхрĕ.

Халь вăл паçăрхи пек хăрăлтатмасть, шăпах выртать; куçĕсем хупăннă ун. Пăхсан-пăхсан, Зайкин вăл пачах сывламаннине туйса илчĕ.

«Вилнĕ» — вĕçсе иртрĕ пуçра.

Зайкин хăй шухăшĕнчен хăй çӳçенсе кайрĕ. Пур-çук вăй-хал сасартăках пĕтсе ларчĕ — вăл каллех ӳпне тăсăлса ӳкрĕ те пĕр самант хускалмасăр выртрĕ.

— Қаçар, Миша, упраймарăм...— хăй тĕллĕн пăшăлтатса илчĕ вăл вăйсăр сасăпа.

Қăшт выртнă хыççăн, Зайкин çĕкленчĕ те Саламова хыпаласа пăхрĕ. Саламов ĕнтĕ хытма пуçланă, ăна вырăнтан куçарма та май çук. Вара вăл унăн айккинелле

чарӑлса выртакан аллисене аран-аран хутласа кӑкӑрӗ ҫине хучӗ те пӗртен-пӗр аллипе ун ҫине юр тата чул муклашкисем купалама пуҫларӗ...

Саламова пытарнӑ хыҫҫӑн, вӑл нумаях малалла шӑваймарӗ. Вӑйран кайса, пӗр сас-чӗвӗ кӑлармасӑр, халь ҫеҫ ӳкнӗ мамӑк пек ҫемҫе юр ӑшне тирӗнчӗ.

Ҫӑнтӑр енчен нӳрлӗ ҫил вӗрет. Анчах халӗ вӑл вӑйсӑрланнӑҫемӗн вӑйсӑрланса килсе, лӑпланма пуҫларӗ. Тухӑҫ енче шуҫӑм хӑпарни палӑрчӗ.

«Мӗншӗн-ха ӗнер никам та килмерӗ? — шухӑшларӗ вӑл, ӗнтӗ темиҫемӗш хут.— Е тупаймарӗҫ-ши?.. Юрӗ, чӗрӗлле ҫеҫ парӑнас марччӗ. Ӑнран кайнӑ вӑхӑтра ҫеҫ килсе ан тухчӑр...»

Вӑл пистолетне кобурӗнчен кӑларчӗ те комбинезонӗн кӑкӑр кӗсйине пытарчӗ.

Ҫапла вӑл ҫутӑличчен выртрӗ. Пайтахчен тапранмасӑр выртнӑ хыҫҫӑн, унӑн суранӗсем ыратма чарӑннӑ пек пулчӗҫ те, вӑл тӗлӗрсе кайрӗ.

* * *

Зайкин, такам ҫухӑрашнине илтсе, вӑранса кайрӗ. Вӑл пуҫне ҫӗклесе пӑхрӗ те хӑйӗнчен чылай инҫетре нимӗҫ салтакӗсем тӑнине курчӗ. Вӗсем ӑна асӑрхаса илмен пулмалла — тем ҫинчен тавлашса пӗр вырӑнта кӗпӗрленсе тӑраҫҫӗ. Зайкин кӗсйинчен пистолетне туртса кӑларчӗ те ҫӗр ҫумне лӑпчӑнчӗ. Анчах вӑл пытанса ӗлкӗреймерӗ: нимӗҫсем ӑна асӑрхаса илчӗҫ, ун патнелле чупма пуҫларӗҫ. Зайкин затвора шӑлӗпе ҫыртса уҫрӗ те пистолетне авӑрларӗ.

«Ҫумра вунтӑватӑ патрон,— шухӑшларӗ вӑл.— Пӗр патронӗ хам валли...»

Анчах ку шухӑш ӑна сасартӑках хӑратса, ҫӳҫентерсе ячӗ. Ҫамӑн уйрӑлас килтӗр-ха пурнӑҫран? Хӑрах куҫсӑр, урасӑр, алӑсӑр тӑрса юлнӑ хыҫҫӑн та Зайкин ун ҫинчен шухӑшламарӗ, ӑна — пурнӑҫа — пушшех те вӑйлӑрах юратма пуҫланӑ. Анчах халӗ... Унпа ирӗксӗрех уйрӑлма тивет. Ҫак самантра вӑл хӑйӗн юратнӑ писателӗ — Николай Островский калanӑ сӑмахсене аса илчӗ: «Этемшӗн чи хакли вӑл—пурнӑҫ. Вӑл мӗн пурӗ те пӗрре анчах пулать, ҫавӑнпа та ӑна тивӗҫлӗ пурӑнса ирттермелле, иртнӗ ҫулсене тӗллевсӗр пурӑнса ирттертӗм тесе чун ыратмаллах кулянмалла ан пултӑр, иртнине ирсӗрленсе, вак-тӗвек-

ленсе ирттернĕшĕн намăсланса пите пĕçертмелле ан пултăр, вилес умĕн: пĕтĕм пурнăçăма, мĕнпур вăй-халăма эпĕ тĕнчере чăн илемлине — этемлĕхе ирĕке кăларасшăн кĕрешес ĕçе патăм, тесе каламалла пултăр».

«Пурнăçра хам мĕн тума тивĕçлине пурне те турăм-и эпĕ?» — ыйтрĕ вăл хăйĕнчен хăй.

Халĕ ăна пĕтĕм иртнĕ пурнăçĕ аса килчĕ. Ку асаилӳ унăн хăйĕн ыйтăвĕ çине панă ответ пулчĕ.

Ача чухнехи пурнăç ытти пин-пин ачасен пурнăçĕнчен нимĕнпе те уйрăлса тăман — нимĕнле паллă ĕç те туман: ытти пин-пин ачасем пекех шкула çӳренĕ, ытти пин-пин çамрăксем пекех вăтам шкул, каярахпа институт пĕтернĕ. Институтра вĕреннĕ хушăрах вăл аэроклуба çӳренĕ — вĕçме вĕреннĕ. Тен çавăнпа уйрăлса тăнă-и Володя Зайкин ытти çамрăксенчен — студентсенчен? Анчах вăл аэроклуба ыттисен хушшинче палăрса тăрас тесе мар, хăй мĕн пĕчĕкрен ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тесе çеç çӳренĕ. Института та, аэроклуба та лайăх паллăсемпе пĕтернĕ... Педагог пулса ĕçлесси те, вĕçесси те питĕ те интереслентернĕ ăна, анчах малашне ăçта ĕçлессине суйласа илме ĕлкĕреймен вăл — вăрçă пуçланнă. Летчик пулса çапăçса нумайрах усă кӳрĕп, тенĕ, виçĕ уйăх хушши тренировочнăй отрядра вĕреннĕ хыççăн, вăл фронта ăсаннă...

Тискеррĕн çухăрашнă сасăсем çывхарма пуçларĕç. Зайкин пуçне çĕклесе нимĕçсене шутлама хăтланчĕ, анчах куç умĕ хуралса килнипе вăл вĕсене ниепле те пĕр-пĕринчен уйăрса илеймерĕ: ун патнелле хăй ĕмĕрĕнче те курман темĕнле пысăк, темиçе уралла чĕрчун чупса килнĕ пек туйăнчĕ...

## 6

Каç пулчĕ. Зайкин таврăнмарĕ. Аэродрома вăл таврăнас шанчăк та сӳнме пуçларĕ: вăхăтра таврăнман летчиксенчен кайран — темиçе кунтан е уйăхран — вуннăшĕнчен те пĕри çеç таврăнкалаççĕ.

Дивизие янă боевой донесенире Исхаков подполковник Зайкинпа Кутузов экипажĕсем çухални çинчен пĕлтерсе çырчĕ. Тепĕр кунне, команда пунктĕнче, Зайкин текех нихçан та хурав парас çуккине пĕлнĕ пулин те, вăл радио тăрăх ик-виçĕ хутчен «Акăша» чĕнчĕ...

7

Тăн пырса кĕрсен, Зайкин куçне уçса пăхрĕ те хăй тĕлĕнче, сăрă тĕтре ăшĕнче, сарă мачча хăмисем ишсе çӳренине курчĕ.

«Ăçта выртатăп эпĕ? — хăйĕнчен хăй ыйтрĕ вăл.— Мĕнле майпа лекнĕ эпĕ кунта?»

Вăл çĕкленме тăчĕ. Анчах сулахай хулпуççи хыттăн чиксе кайрĕ те, вăл каллех минтер çине персе анчĕ. Сăрă тĕтре çăралса килчĕ, сарă мачча хăмисем куçран çухалчĕç. Анчах халĕ Зайкин тăнне çухатмарĕ: пăртак хăйне хăй пĕлмесĕр выртнă хыççăн ун куçĕ умне каллех сарă мачча хăмисем тухса тăчĕç.

«Ăçта выртатăп эпĕ? Ăçта?»

Асаилӳ татăкĕсем пĕрин хыççăн тепри вĕçе-вĕçе иртрĕç. Юнланса пĕтнĕ, шурса, кăвакарса кайнă Саламов вилли... Тискеррĕн çухăрашса ун патнелле чупакан нимĕçсем... Вĕсенчен сыхланма меллĕрех вырăн йышăнас тесе вăл çыран хӳттинелле шуса аннăччĕ пулас, анчах чăнкă çыранта тытăнса тăраймарĕ, çырма тĕпнелле татăлса анчĕ. Малалла мĕн пулса иртнине Зайкин астумасть.

Асаилӳсем ăна йăлăхтарса, ывăнтарса çитерчĕç. Вăл куçне хупрĕ те, самантлăха нимĕн çинчен те шухăшлас мар тесе, лăпланса выртнă пек пулчĕ.

Инçетре те мар ура сассисем илтĕнчĕç. Такам ун патне пырса, çийĕнчи çивиттине турткаларĕ. Пăртакран такамăн ырхан та куштăркаса кайнă сивĕ аллисем унăн пуçне çĕклесе, айĕнчи минтерне тӳрлетрĕç. Çав самантра лăпкă та вăйсăр хĕрарăм сасси илтĕнчĕ:

— Ывăлăм...

Зайкин куçне уçрĕ те хăй умĕнче пĕркеленчĕк питкуçлă, ырă сăн-сăпатлă карчăк пĕшкĕнсе тăнине курчĕ. Унăн куçĕ хĕрарăмăн шывланнă куçĕсемпе тĕл пулчĕ. Вăл кулянçи туса илчĕ. Хĕрарăм пăртак пĕшкĕнчĕ те Зайкинăн бинтпа чĕркенĕ çамкине чуптуса илчĕ.

— Мĕскĕнĕм,—терĕ вăл, чĕтрекен сасăпа.

Ун куçĕсенчен куççуль тумламĕсем юхса тухрĕç те пĕркеленчĕк питçăмартийĕсем тăрăх йăрлатса анчĕç.

— Вĕсем сана паян ирхине илсе килчĕç. Сыватма шутлаççĕ...

Çав самантра пӳртре хăйăлтатакан урмăш сасă илтĕнчĕ:

— Карчăк, капитана канлĕх кирлĕ.

Зайкин пуçне сасӑ илтӗннӗ еннелле çаврӑнчӗ те алӑк патӗнчи пукан çинче симӗс шинель тӑхӑннӑ, мӑйӗнчен автомат çакса янӑ типшӗм те шӑтӑк-путӑк питлӗ нимӗç ларнине курчӗ.

— Сирӗнтен канлӗх ыйтмастӑп,—терӗ Зайкин нимӗçле, тӑвӑлса килнӗ çиллине пусараймасӑр.

Çав хушӑрах вӑл хӑй çине хӗрхенсе пӑхса тӑракан карчӑкран ыйтрӗ:

— Ăçта выртатӑп эпӗ? Кам патӗнче? Мӗнле нимӗç вӑл?..

— Ман патӑмра эс, ывӑлӑм,— куççульне чараймасӑр пӑшӑлтатрӗ карчӑк.— Пӗртен-пӗр ывӑлӑм... вӑрçӑ пуçлансанах фронта тухса кайрӗ те... Халь нимӗнле сас-хура та çук. Пӗр-пӗччен тӑрса юлтӑм. Халь акӑ... Сана тупса килчӗç те — пӑхма хушрӗç. Питӗ хӑранӑччӗ, вилсе кайӑн тесе, кунӗпех ӑнран кайса выртрӑн. Ку йӗрӗнчӗк мӗлке çине ан пӑх эсӗ...

Пурне те ӑнланчӗ Зайкин. Малта ӑна хӑрушӑ кунсем, хӑрушӑ вилӗм кӗтет. Эрнерен-и, уйӑхран-и, вӑл килсе çитмеллех...

— Мадам, капитан говори не нада, нельзе,— кӑшкӑрса пӑрахрӗ нимӗç салтакӗ, ури çине сиксе тӑрса.—Нельзе!

Хӗрарӑм тутӑр вӗçӗпе куçӗсене шӑлса илчӗ те Зайкин патӗнчен пӑрӑнчӗ.

Зайкин каллех шухӑша кайрӗ. Çак кӗске вӑхӑтра вӑл хӑйӗн тӑван çӗршывне, килне юлнӑ икӗ шӑллӗпе амӑшне аса илчӗ.

Акӑ, амӑшӗ ӑна фронта ӑсатать... Çӳçӗсем кӑвакарнӑ ӗнтӗ унӑн, пичӗсем пӗркеленнӗ. «Юрӗ ӗнтӗ, ывӑлӑм, нимӗн тума та çук, халӑхпа пӗрле... Чипер çаврӑнса килмелле пултӑрччӗ çеç»... тет вӑл. Татӑлса йӗмест вӑл, шӑппӑн çеç, ӑна хурлантарас мар тесе-и тен, куççульне пытарма тӑрӑшать.

...Акӑ — тӑван ял. Инçетри юратнӑ тӑван ял. Ял çумӗпе ем-ешӗл çыранлӑ та кӗмӗл пек çутӑ шывлӑ Кӗтне юхса выртать... Улмуççи пахчисем... Улӑхсем... Хирсем... Зайкин пӗлет, ӑна унта кӗтеççӗ... Тен, Клава халӗ те-ха вӑл кайнӑ çул çине кунсеренех туха-туха пӑхать пулӗ...

* * *

Тепӗр кунне Зайкин ирех вӑранчӗ. Халӗ вӑл хӑйне çӑмӑлрах пек туйрӗ. Лайӑх каннӑран пулас, пӑртак вӑй та кӗнӗ пек туйӑнчӗ ӑна.

Пӳртре нимĕçле калаçни илтĕнчĕ. Çав самантра такам Зайкин патне пырса, ун çинчен çивиттине сирсе пăрахрĕ. Зайкин куçне уçса пăхрĕ те умĕнче вăрăм та хыткан, шатра питлĕ, ешĕл-сăрă куçлă нимĕç ефрейторĕ тăнине курчĕ.

— А-а, рус капитан,—сарă шăлĕсене йĕрсе кулам пекки туса илчĕ вăл.—Добрый утро.

Зайкин чĕнмерĕ. Унăн çилли тăвăлса килчĕ. Хăйĕн куçĕ ефрейторăн тĕссĕр, тискер кайăкăнни пек йăлтăртатакан куçĕпе тĕл пулсан, вăл чăтса выртаймарĕ, сылтăм аллипе çивиттине хăй çинелле туртса илчĕ те:

— Ан çывхар ман патăма! — тесе кăшкăрса пăрахрĕ.

Ефрейторăн пичĕ туртăнкаласа илчĕ. Пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа çӳреме пуçларĕ.

— Кам вăл? — ыйтрĕ Зайкин, карчăк еннелле çаврăнса.

— Вăл кунне темиçе хутчен киле-киле каять. Сана сыхлакан салтаксен асли пулас...

Ефрейторпа тепĕр салтакĕ тухса кайрĕç. Алăк патне ĕнерхи хыткан, шăтăк-путăк питлĕ салтак çеç тăрса юлчĕ.

Кăштах вăхăт иртсен, лутра та тулли пит-куçлă нимĕç-врач килчĕ.

— Сывлăхăр мĕнле?—ыйтрĕ вăл, «ырă ир» сунна хыççăн, таса вырăс чĕлхипе, йăвашшăн, хĕсĕкрех куçĕсене чеен хĕскелесе.— Хăвăра мĕнле туятăр?

— Ман сывлăхăм мĕнли сире кирлĕ мар,— терĕ Зайкин мăнкăмăллăн,— эпĕ Совет Çарĕн офицерĕ.

— Халь эсир пирĕн патăрта, нимĕçсем патĕнче. Совет Çарне манма тивет сире малашне. Сире, хăвăрах куратăр, нимĕç врачĕ сыватать.

— Эпĕ сире хама сыватма ыйтман...

— Эпĕ — врач. Политикăпа ытти вăрçă ĕçĕсене хутшăнмастăп. Маншăн пурĕ-пĕр. Тепĕр хут калатăп: ку — ман ĕçĕм мар, эпĕ — врач...

— Куратăп эпĕ, сире мĕнле «пурĕ-пĕр» иккенне, — Зайкин унран йĕрĕннĕ пек пулса, кулса илчĕ. Анчах врача ку ним чухлĕ те тивмерĕ пулас, вăл сассине пушшех йăвашлатрĕ:

— Эпир сыватни килĕшмест пулсан, кун çинчен эпĕ коменданта пĕлтерĕп,—терĕ вăл; урăх сăмах чĕнмесĕрех тухса кайрĕ...

Виçĕ эрне ниçта тăмасăр выртнă хыççăн, Зайкин ура çине тăчĕ. Пуля унăн ура хырăмне çурса пăрахнă пулнă.

Шăмă сиенленмен те суран часах туртăнма пуçларĕ. Сулахай хулпуççи çеç çав-çавах, хальчченхи пекех, чике-чике ыратать. Малтан, пăртак вăй кĕрсен, Зайкин кунтан тухса тарма шутларĕ, анчах тăрăшни кăлăхах пулчĕ: юлашки эрнере пӳрт тавра тăтăшах икĕ часовой уткаласа çӳрерĕç.

Пĕр лăпкă, илемлĕ ирхине — тулта ĕнтĕ март уйăхĕн юлашки кунĕсем тăраççĕ — нимĕç-врачпа пĕрле шатра питлĕ ефрейтор тата мăйĕсенчен автомат çакса янă икĕ салтак килчĕç.

— Капитан,—терĕ врач, ун патнелле иртсе.—Сире комендант чĕнтерет.

Зайкина ку ним чухлĕ те тĕлĕнтермерĕ: эрнерен-и, уйăхран-и — ку хăрушă та йывăр самант килсе çитмеллех пулнă. Юлашки кунсенче Зайкин ăна кунсерен кĕтрĕ. Вăл ĕнтĕ, комендант патĕнче — допросра — хăйне хăй мĕнле тыткаласси не те, унта пулма пултаракан ыйтусем çине мĕнле ответ парассине те тахçанах палăртса, шухăшласа хучĕ.

Комендатура çурчĕ çывăхра пулин те, Зайкин унта аран-аран çиткелесе ӳкрĕ. Юсанса çитмен ура каллех чиксе сурма пуçларĕ. Комендатура çурчĕ умĕнче, пусма çине хăпарнă чух, салтаксем ăна хул айĕнчен тытса пулăшма тăчĕç, анчах Зайкин вĕсене ик еннелле сирсе ячĕ те хăех, уксахла-уксахла, пусма çине хăпарса тăчĕ.

— Мĕнешкел мăнаçлă çын эсир, капитан, хе-хе-хе!— йĕрĕнчĕклĕн кулса илчĕ врач.

Зайкин чĕнмерĕ. Вăл сывă урипе комендант пӳлĕмĕн алăкне тапса уçрĕ те сăмсана йĕкĕлтекен йӳçĕ табак тĕтĕмĕпе тулса ларнă ытла пысăках мар пӳлĕме кĕрсе тăчĕ. Пӳлĕмри пĕртен-пĕр сĕтел хушшинче, чавсаланса, вăтам çулалла çитнĕ, хыткан питлĕ нимĕç офицерĕ ларать. Зайкин пӳлĕме кĕрсе тăрсан, вăл, сайра шăлĕсене йĕрсе, кулам пек туса илчĕ:

— Иртĕр, ларăр, — терĕ вăл, аллипе сĕтелĕн тепĕр аяккинче ларакан хура клеенкăпа сăрнă çемçе пукан çине кăтартса.

Зайкин малалла иртрĕ те сĕтел çинче, черниля савăчĕсемпе тата сигар тĕпĕсем пăрахса тултарнă пепельницăпа пĕрле унăн япалисем — сарă сăран кобуринчен кăларса хунă обоймăсăр пистолечĕ, кĕмĕл портсигарĕпе мундштукĕ тата задание вĕççе·каяс умĕн илнĕ амăшĕн çырăвĕ выртнине курчĕ. Анчах ним те чĕнмерĕ.

Пăртакран комендант тăчĕ те сĕтел хушшинчен тухса алăк патнелле иртрĕ.

— Эсир кайма пултаратăр,— терĕ вăл врача.— Эсир те.— Вăл ефрейтор енне çаврăнса, куçне чеен хĕссе илчĕ те алăк çине пуçĕпе сулса кăтартрĕ.

Пӳлĕмре комендантпа Зайкин çеç тăрса юлчĕç. Офицер каллех сĕтел патне утса пычĕ, сĕтел çинче выртакан виç кĕтес туса хутлатнă çырăва тата портсигарпа мундштука илсе, Зайкин енне тăсрĕ.

— Ан çиленĕр эсир, — сайра шăлĕсене йĕрсе йăвашшăн каларĕ вăл.—Пирĕн йĕрки çапла: тыткăна лекекенсен çумĕнче нимĕнле япала та хăварма юрамасть. Халĕ акă — тархасшăн.

Зайкин чĕнмерĕ. Вара комендант ун патне иртрĕ те аллинчи япаласене Зайкинăн шăлавар кĕсйине чикрĕ.

— Ларăр, ларăр эсир,— терĕ вăл йăвашшăн, тепĕр хут тенкел çине кăтартса.—Ан тунăр, сире ура çинче тăма йывăр...

Офицер унпа мĕншĕн çапла йăвашшăн калаçнине Зайкин аван ăнланчĕ. Унăн çилли тăвăлса килчĕ, урисем чĕтреме тытăнчĕç. Вара вăл сывă аллипе сĕтел çине таянчĕ те путса аннă, вăйсăррăн пăхакан пĕртен-пĕр куçĕпе нимĕç офицерĕ çине тăрăнчĕ.

— Допрос пуçлăр,— терĕ вăл, ун çине шăтарас пек пăхса.—Тархасшăн ан йăлăхтарăр мана хăвăрăн комплиментăрсемпе.

Комендант унăн сăмахĕсене пĕтĕмпех ăнланса илеймерĕ пулас. Вăл каллех хăй вырăнне ларчĕ те Зайкин çине пăхса, кăмăллăн кулса илчĕ.

— Ан вăтанăр, именме кирлĕ мар,— терĕ вăл.— Эпир вăрçăра. Этем тени кунта суранланма та, тыткăна лекме те пултарать. Ку, мĕнле пулсан та, вилни мар. Вăрçă часах чарăнĕ акă. Эсир те килĕре таврăнăр...

Комендант каласа пĕтерейменрĕ, Зайкин ăна пӳлчĕ:

— Эпĕ Совет Çарĕн офицерĕ, коммунист, лётчик. Сирĕн мана йăпатас, сутăн илес шухăшăр пур пулсан — йăнăшатăр. Эпĕ пĕтĕмпех сирĕн алăра, мĕн тăвас тетĕр, çавна тума пултаратăр; анчах ман умра икĕпитленни усăсăр.

Çакна илтсен, офицер ыйтма чарăнчĕ те сасартăках пĕçернĕ рак пек хĕрелсе кайрĕ. Çапах та хăйне хăй лăпка тытма тăрăшрĕ.

— Эпĕ канаш çеç паратăп...

— Мана сирĕн канашăр кирлĕ мар! — Зайкинăн питкуçĕ пĕçерме, хăй вăйран кайма пуçларĕ.

Комендант пичĕ çинчи кулă çухалчĕ. Унăн халĕ майĕпе пичĕ çеç мар, куçшуррисем те хĕрелме пуçларĕç.

— Сирĕнпе нимĕç çарĕн обер-лейтенанчĕ калаçать, çавна ан манăр,— терĕ вăл, сассине çĕклесе.— Пур ыйтусем çине те эсир тĕрĕс ответ пама тивĕç. Вĕсем сире вилĕмрен хăтăлма, сывлăхăра юсаса çын пулма, тăван килĕре таврăнма пулăшĕç. Суя ответсем, хăвăрах пĕлетĕр, вилĕм кӳме пултараççĕ.

— Вилĕмпе ан хăратăр мана, — лăпкăн ответлерĕ Зайкин. — Совет çыннисем — вăл кирлĕ пулсан — пăрăнмаççĕ унран. Анчах ответ... суя ответ та, тĕрĕс ответ та парас çук эпĕ сире.

Пĕр самантлăха комендант та, Зайкин та нимĕн те чĕнмерĕç. Хутран-ситрен çеç урамран хăйăлтатакан çинçе сасăпа темле нимĕç ятлаçни илтĕнет. Часах вăл та шăпланчĕ.

— Қалăр-ха, господин капитан, эсир миçе «боевой вылет» турăр?

— Кун çинчен сире отчет туса пама хатĕрленместĕпха эпĕ.

Комендант, çилли тăвăлса килнипе пулас, сивчир тытнă пек сиксе чĕтреме пуçларĕ.

— Хушаматăр мĕнле?—ним калама аптранă енне ыйтрĕ вăл.

— Манăн хушаматăм та, хам та сире ним тума та кирлĕ мар; усăллă çын мар эпĕ — тăшман.

— Сирĕн аэродромăр ăçтарах?

Зайкин чĕнмерĕ.

— Пурĕ миçе самолет вăл аэродромра? Мĕнле самолетсем?

Зайкин çаплах чĕнмерĕ.

Комендант хăйĕн сивĕ, урмăшнă куçĕсемпе Зайкин çине пăхса темрен тĕлĕннĕ пек, майĕпен пуçне сулкаласа илчĕ:

— Так, так... Хăвăра хăвăр çакнашкал чăрсăр тытни сире нимĕнле ырă япала та кӳрес çук.

— Сирĕнтен, йытăсенчен, эпĕ нимĕнле ырă япала та кĕтместĕп, кирлĕ те мар...

Пăртак чĕнмесĕр ларнă хыççăн, комендант лăпланнă пек пулчĕ.

— Эсир çамрăк-ха,— терĕ вăл, каллех йăвашлăнса.—

Халĕ сире вилĕм хăрушă мар пулсан — вăл сурансем тарăхтарса çитернипе çеç; суранĕсене эпир тӳрлетĕпĕр. Вăрçă чарăниччен эсир Европăри чи лайăх курортсенче канма пултаратăр. Вăрçă чарăнсан — килĕре таврăнăр. Таврăнас килет вĕт сирĕн килĕре — аннĕр патне, çамрăк арăмăр е вăл çук пулсан — савнă хĕрĕр патне? — комендант кулса илчĕ.

Таврăнас килмесĕр! Унта ăна̄ тăван амăшĕ кĕтет, шăллĕсем тата Клава, пединститутран пĕрле вĕренсе тухнă Клава, кĕтет.

Клава!.. Вĕсем пĕрне-пĕри виçĕ çул хушши юратса пурăнчĕç... Уйрăлнăранпа ĕнтĕ виçĕ çул иртрĕ. Зайкин ăна кĕт тесе хăварман — çаплах Клава та, кĕтĕп, тесе ăсатман. Анчах Зайкин аван пĕлет: Клава кĕтет ăна. Урасăр, алăсăр таврăнсан та, Клава ăна юратма пăрахас çук. Анчах халĕ...

«Сывă пул, Клава! Телейлĕ пулăр. Тăван çĕршыва, аннепе шăллăмсене, Саламов ашшĕпе амăшне тата сана, Клава, сутма шутламастăп эпĕ», — шухăшларĕ вăл.

— Мĕншĕн чĕнместĕр? — ыйтрĕ комендант, Зайкин чĕнмесĕр тăнине кура.

— Эпĕ итлеместĕп сире, — лăпкăн ответлерĕ Зайкин, ăна куçĕнчен пăхса.

Комендант кулма̄ чарăнчĕ. Унăн пичĕ туртăнкаласа илчĕ.

— Капитан, эсир хăвăра хăвăр çакнашкал тыткалатăр пулсан, эпир сире сыватма пăрахатпăр. Шухăшласа пăхăр, капитан. Эпĕ сире усал тăвасшăн мар.— Вара вăл тăчĕ те: — Астăвăр, кайран ӳкĕнмелле ан пултăр, — тесе, часовоя чĕнчĕ.

Пӳлĕме ефрейтор кĕрсе тăчĕ.

— Илсе кайăр,— терĕ комендант; Зайкин енне çурăмĕпе çаврăнса тăчĕ.

## 9

Ефрейтор ăна тултан тăм сĕрсе шуратнă пĕчĕк витене илсе пырса хупрĕ. Нимĕçсем киличчен хуçисем кунта ĕнине усранă пулмалла: витере халĕ те тислĕк шăрши тăрать. Кĕленчи тухса ӳкнĕ, тимĕрпе каркаланă пĕртен-пĕр кантăк витĕр унта çурхи уçă çил вăркăшса кĕрет.

Зайкин урайне сарнă улăм ҫине йăванчĕ те пайтахчен пĕр хускалмасăр выртрĕ.

Қантăр тĕлĕ пулсан та, витере тĕттĕм. Ниҫта нимле сас-чĕвĕ те илтĕнмест. Хутран-ситрен ҫеҫ алăк е кантăк хыҫĕнче вите тавра уткаласа ҫӳрекен часовой ури сассисем илтĕнкелеҫҫĕ.

Пăртак вăй кĕрсен, Зайкин ура ҫине тăчĕ. Самантлăха пĕр вырăнта тăнă хыҫҫăн, вăл аран-аран алăк патне иртрĕ те ăна аллипе тĕртсе пăхрĕ. Алăк уҫăлмарĕ. Зайкинăн урисем чĕтреме пуҫларĕҫ. Қаллех урайне йăванса каяс мар тесе, вăл сулахай хулĕпе алăк ҫине тĕренчĕ те пайтахчен сулкаланса тăчĕ. Юлашкинчен, капла тăнинчен нимĕнле усă та пулас ҫук тесе, вăл алăк патĕнчен пăрăнса малтанхи вырăна кайса выртма шутларĕ, анчах ҫав самантра саваласа якатнă чусран тунă алăк ҫине кăранташпа ҫырнă сăмахсене асăрхаса илчĕ те вĕсене тинкерсе вулама пуҫларĕ:

«Халĕ эпĕ ҫурма вилĕ ҫын — мана эрне хушши тĕпчерĕҫ, хĕнесе пĕтерчĕҫ...»

Малалла вара вĕтĕ саспаллисемпе ҫырса кайнă. Ҫыраканĕ, те васканипе, те тĕттĕм пулнипе, темиҫе сăмаха пĕр ҫĕре пĕрлештерсе ҫырнă. Хăрах куҫлă Зайкин вăл сăмахсене аран-аран уйăрса илчĕ:

«Офицер мана паян: «Ыран ирхине юлашки хут тĕпчетĕп сана», терĕ. Ан тив, тĕпчеччĕр, асаплантарччăр — эпĕ вĕсене пурпĕрех ним те пĕлтерес ҫук. Халĕ акă, каҫ тăрать — манăн ҫамрăк пурнăҫăмăн юлашки каҫĕ. Витере тĕттĕм. Хам мĕн ҫырнине курмасăрах эпĕ ҫак сăмахсене ҫыратăп. Часах акă шуҫăм хăпарĕ. Вара мана юлашки хут тĕпчĕҫ те... Анчах халĕ эпĕ чĕрĕ-ха, эпĕ чĕрĕ! Вăйхалтан кайнипе, сурансем ыратнипе эпĕ ура ҫине те ҫĕкленме пултараймастăп, анчах эпĕ чĕрĕ — чĕре те тапать, куҫ та курать тата вĕсемпе, йĕрĕнчĕк сыснасемпе, калаҫма, ятлаҫма та пултаратăп. Халĕ эпĕ чĕркуҫҫи ҫинче тăратăп, анчах нумаях тытăнса тăраймăп — вăй пĕтсе, ӳт-пӳ темле хытса килет. Тен, вилĕм ҫывхарса килет-и? Пурăнас килет. Юрататăп пурнăҫа. Анчах тăван ҫĕршыва пурнăҫран та ытларах юрататăп. Қу юрату — вилĕмрен те вăйлă, темиҫе хут вăйлăрах!

Сывă пулăр, тăвансем, тусăмсем! Пĕлетĕп — эсир килетĕр. Эсир ҫĕнтеретĕр. Ҫав ҫĕнтерӳшĕн пурнăҫ та шел мар...»

Ҫыру пĕтрĕ. Ăна кам тата хăҫан ҫырнине пĕлес тесе,

Зайкин пур алăка пăхса тухрĕ, анчах ăна çыраканĕ хăйĕн ятне те, ăна хăçан çырнине те кăтартман.

Зайкин алăк патĕнчен пăрăнчĕ те урайне сарнă улăм çине пырса выртрĕ. Унăн туртасси килчĕ. Вăл кĕсйинчен портсигарне кăларчĕ те ăна уçса пăхрĕ. Анчах унта пĕр пирус та çук-мĕн — комендант кăларса илнĕ пулас. Зайкин хăйпе хăй хыттăн ятлаçса илчĕ те портсигарне курите айнелле вăркăнтарасшăн пулчĕ. Анчах çав самантра вăл кантăк витĕр хăй çинелле часовой пăхнине курчĕ те пĕр самантлăха ăна аллинче тытса тăчĕ. Часовой, хĕрлĕ сухал пуснă, хĕрĕх çулалла çитнĕ типшĕм нимĕç, темшĕн, калама çук савăннă пек, шăлĕсене йĕрсе пăхать. Зайкин аллинчи кĕмĕл портсигара асăрхаса илсен, унăн куçĕсем сасартăках чарăлса кайрĕç, кашкăрăнни пекех çиçме пуçларĕç; вара вăл, портсигара ăна пама ыйтса пулас, аллине Зайкин енне тăсрĕ. Зайкин чăтса тăраймарĕ, тӳрленсе ларчĕ те аллинчи портсигарне пĕтĕм вăйĕпе часовой енне вăркăнтарчĕ. Портсигар, кантăка каркаланă тимĕр решетке çине пырса çапăнса, чăнкăртатса илчĕ те, каялла, кĕтесселле ыткăнчĕ. Сехри хăпнă часовой, мулкач пек, аяккалла сиксе ӳкрĕ, вара, йывăр аттисемпе кĕмсĕртеттерсе, хăвăрттăн вите тавра уткаласа çӳреме пуçларĕ.

Зайкин сылтăм аякĕ çине выртрĕ те, çийĕнчех пур пулса иртнĕ ĕçсене манса кайса, тарăн шухăша путрĕ. Куç умне, темшĕн, тăван килĕ, амăшĕпе пĕрле юлнă çичĕ çулхи шăллĕ тухса тăчĕ. Институтпа аэроклуб пĕтернĕ хыççăн, тренотряда каяс умĕн, Зайкин килне кĕрсе тухнăччĕ. Килĕнчен тухса каяс умĕн вăл шăллĕне хул айĕнчен тытса çĕклерĕ те виçĕ хутчен çамкинчен чуптуса илсе: «Ну, Миша, сывă пул, эпĕ таврăннă çĕре пы-ы-ысăк пул», — терĕ. Ялтан тухсан, Зайкин пур тăванĕсемпе, ялйышĕсемпе сывпуллашса, урапа çине хăпарса ларчĕ. Лавçă, Элюш мучи, тилхепине турткаласа илчĕ, çăмăл урапана кӳлнĕ утсем çăмăллăн юртса кайрĕç. Шăллĕ, унтан юласшăн мар пулса, пайтахчен урапа хыççăн чупса пычĕ. Часах вăл ыванчĕ те вĕсенчен юлма пуçларĕ: «Пичче, эсĕ часрах таврăн! Эпĕ пысăк пулăп!» — кăшкăрчĕ вăл, ун енне пĕчĕк аллисемпе сулкаласа. Самантран вара Миша та, тăван ял та колхоз сачĕ хыçне пытанса, курăнми пулчĕ...

«Халĕ эсĕ пысăк ĕнтĕ, шкула та çӳретĕн... Курайăпши сире тата хăçан та пулин, аннеçĕм, Миша... Клава?..»

Зайкин ҫӗрӗпех ҫывӑраймарӗ.

Шуҫӑм килеспе кантӑк витӗр вите ӑшнелле кӑвак ҫутӑ кӗрсен, пӗр кӗтмен ҫӗртен инҫетрен тупӑ сассисем илтӗнме пуҫларӗҫ. Ку кӗрлев ҫутӑличченех пычӗ.

«Хамӑрӑннисем ҫывхарса килеҫҫӗ пулас»,—вӗҫсе иртрӗ Зайкин пуҫӗнче.

Вӑл майӗпен ҫӗкленчӗ те кантӑк умне пырса тӑчӗ. Ӗнтӗ ҫутӑлнӑ... Тухӑҫри пӗлӗтсем хӑмаҫ пек ҫунаҫҫӗ. Хӗвел тухман-ха, вӑл инҫетри сӑрӑ вӑрман хыҫӗнче хӗрсе выртать...

Часах ял хӗррипе иртекен шоссе тӑрӑх хӗвеланӑҫнелле нимӗҫ автомашинисем иртме пуҫларӗҫ.

«Чакаҫҫӗ,—шухӑшларӗ Зайкин хӗпӗртесе.—Фронт инҫе мар пулас»...

Комендатура картишӗнче сасартӑк шӑв-шав пуҫланчӗ. Такам машина хатӗрлеме тата ун ҫине тем тиеме хушрӗ. Ку тӳрккес те урмӑш сасӑ комендант сасси пулчӗ, Зайкин ӑна аван палласа илчӗ.

«Тухса тарма хатӗрленеҫҫӗ пулас,—шухӑшларӗ вӑл.—Тен, васкаnӑ май ман ҫинчен манса та каймӗҫ-и-ха?»

Мотор кӗрленӗ сасӑ ун шухӑшӗсене сирсе ячӗ. Сасӑ вӑйлӑланнӑҫемӗн вӑйлӑланса килчӗ. Часах Зайкин тӳпере штурмовиксем ҫӳренине туйса илчӗ.

— Саланӑр! Саланӑр теп, сурӑхсем!—илтӗнчӗ картишӗнче паҫӑрхи урмӑш сасӑ.

Ҫав самантра, инҫетре те мар, ҫине-ҫине темиҫе бомба ӳксе ҫурӑлчӗҫ. Ҫӗр кисренсе кайрӗ. Хӑма хушшинчи ҫурӑксем витӗр маччаран витене тислӗк, тӑпра тӑкӑнчӗ. Шартлатнӑ сасӑсем шӑпланса та ҫитеймерӗҫ — тӳпере пулемет, тупӑ сассисем кӗрлеме пуҫларӗҫ...

Зайкин ҫӗкленчӗ те шоссе ҫинче автомашинӑсем ҫуннине тата нимӗҫ салтакӗсем чупкаланине курчӗ. Сасартӑках вӑй та кӗнӗ пек туйӑнчӗ ӑна ҫакӑн хыҫҫӑн.

Картишӗнче каллех комендант сасси илтӗнчӗ. Самантран алӑк уҫӑлчӗ те витене кун ҫути сӑрхӑнса кӗчӗ. Зайкин кантӑк умӗнчен пӑрӑнса хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхма тӑчӗ, анчах, темле майпа, унӑн алли тимӗр решеткерен вӗҫерӗнчӗ те вӑл вите урайне тӗшӗрӗлсе анчӗ.

Витене комендант кӗнӗ-мӗн. Пӑртак алӑк патӗнче тӑнӑ хыҫҫӑн, вӑл Зайкин патне иртрӗ.

— Ну, капитан, шухӑшласа пӑхрӑр-и эсир?—ыйтрӗ

вăл Зайкин çинелле пĕшкĕнсе.—Хăвăртрах калăр, сире машина кĕтет.

Зайкин майĕпен çĕкленчĕ.

— Эпĕ сире мĕн каламаллине ĕнерех каларăм.— Тăван çĕршыва, халăха сутмастăп эпĕ,—терĕ вăл лăпкăн; унтан, ӳкес мар тесе, стена çумне таянса тăчĕ те çилĕллĕн хушса хучĕ:—Юрататăп эпĕ Тăван çĕршыва, уншăн вилме те хатĕр: ку юрату вилĕмрен те вăйлă, темиçе хут вăйлăрах.

Комендант, çилли тăвăлса килнипе хăрăлтата-хăрăлтата, алăк патнерех чакрĕ, ним тăвайман енне, çумĕнче çакăнса тăракан кобурĕнчен пистолетне туртса кăларчĕ. Анчах унăн куçĕсем Зайкинăн курайманлăхпа çиçекен пĕртен-пĕр куçĕпе тĕл пулчĕç те, вăл пистолет тытнă аллине çĕрелле усрĕ.

— Мĕн тăратăр? Перĕр! Эпĕ — суранлă, хĕçпăшалсăр. Мана вĕлерме сире питĕ ансат. Перĕр, йытăсем! Анчах астăвăр: сире те пурăнма нумай юлмарĕ ĕнтĕ. Пĕтеретпĕрех сире—вăрçăшăн хыпса-çунса пурăнакансен текех шăрши-марши те ан пултăр çĕр çинче!

— Мо-о-лчать!—пĕтĕм вăйĕпе çухăрса ячĕ комендант; хăй пистолет тытнă аллине васкамасăр çӳлелле çĕклесе тĕллеме тытăнчĕ...

Темскер пулса иртрĕ çак самантра. Килхушшинче сасартăк хыттăн кĕрслетсе çурăлни илтĕнчĕ. Вите алăкĕнче тăракан нимĕç офицерĕ, хăрах аякне пăчăртаса тытса, вите урайне йăванчĕ. Печĕ вăл Зайкина, анчах пуля ăна тивмерĕ, пĕчĕк шăтăк туса, вите стенине кĕрсе кайрĕ.

1948.

## ПАМЯТНИК

Кинеш ялӗнчен эпир сентябрь уйӑхӗн варринче тухса кайрӑмӑр. Ӗнер пулса иртнӗ пекех аставатӑп: ял варринчи культурӑпа кану паркӗнчи йӑмрасемпе тирексем ӗнтӗ хӑйсен ылттӑн шӳлкемисене ҫакса капӑрланнӑччӗ. Ун тӗлӗнчен иртнӗ чух, пирӗн хулпуҫҫисем ҫине вӗсен ҫеҫтенкӗ пек илемлӗ ҫулҫисем киле-киле выртатчӗҫ, ҫаврӑнкала-ҫаврӑнкала, ҫӗр ҫине, хӑйӑрпа вак чул сарса тунӑ сарлака ҫул ҫине ӳкетчӗҫ.

Эпир, пӗтӗм батальонран та чӗрӗ тӑрса юлнӑ вӑтӑр ҫичӗ салтак, пуҫсене чиксе, ним калаҫмасӑр хӗвелтухӑҫнелле утатпӑр. Ниҫта ҫаврӑнса пӑхас килмест, пур таврари тӗнче те макӑрнӑ пек, хурланса макӑрнӑ пек туйӑнать; пирӗн унӑн куҫҫульне курас килмест. Чӗрене тем кӑшӑлласа илнӗ: хӗсет, ыраттарать. Утас килмест, выртас та,—тӑван ҫӗр кӑкӑрне ыталаса выртас килет...

— Каятӑр-им, ывӑлӑмсем? Хӑҫан килетӗр ӗнтӗ каялла?—илтех кайрӑм эпӗ ҫав самантра.

Ҫул айккинче юр пек шап-шурӑ ҫӳҫ-сухаллӑ ҫӗр ҫулхи мучи тӑрать. Вӑл кӑшӑл-ҫӗлӗкне хывса аллине тытнӑ, кӑкӑрӗпе кукӑр туйи ҫине таяннӑ, пирӗн ҫине тем тархасласа ыйтнӑ пек пӑхать.

— Ан хурлан, мучи, эпир часах каялла килетпӗр,— терӗ ун патне пырса батальонри пӗртен-пӗр офицер— старши лейтенант.—Часах каялла килетпӗр эпир—кӗтӗр.

Эпир иртсе кайсан, мучи ҫул ҫине тухрӗ. Вара мӗн куҫран ҫухаличченех ҫапла, туйи ҫине тӗренсе, пӑхса тӑчӗ.

Унтанпа ӗнтӗ ҫулталӑк мар, ҫичӗ ҫул иртрӗ, анчах ку халӗ те манӑн асра тӑрать. Эпир тепре Кинеше пынине, Кинеш витӗр хӗвеланӑҫнелле иртнине курчӗ-ши мучи?

Эпир унта çулталăкран пытăмăр. Çапăçусем ял тулашĕнче пулчĕç. Тăшман пур вăйĕпе хирĕç тухрĕ, анчах пире тытса чарма пултараймарĕ текех: эпир ял тулашĕнчи хăрнă курăкпа витĕннĕ çерем çине темиçе çĕр фашист вилли вырттарса хăвартăмăр...

Ҫаллех çав сарă парк çумĕпе, ылттăн çулçăсемпе витĕннĕ сарлака çулпа пытăмăр. Вăл куна та хальхи пекех астăватăп...

Пирĕн колонна сасартăках чарăнса тăчĕ. Ылттăн тумпа капăрланнă парк варринче, эпир хĕвелтухăçнелле иртнĕ чух пушах тăнă постамент çинче, Ленин памятникĕ ларать...

Парк хĕррипе иртсе пыракан, вăрăм авăрлă кĕреçе тытнă ватă хĕрарăм пире çапла ăнлантарса пачĕ:

— Нимĕçсем çывхарса киле пуçласан, эпир ăна вырăнĕнчен илсе пытарса хунăччĕ. Халĕ акă, ял хыçĕнче çапăçусем пуçлансан, каллех кăларса хăй вырăнне лартрăмăр.

Çаралнă сирень тĕмĕсем хушшинче памятник мăнаçлăн çӳлелле хăпарса ларать. Вăл халĕ чĕрĕ çын пулнăн туйăнать. Аллине хĕвеланăçнелле тăсса тăракан Ленин пире малалла кайма хушнă пекех пулчĕ. Ăшра çĕнĕ вăй, çĕнĕ шанчăк вĕресе кайрĕ.

1948.

ТУПМАЛЛИ


Юманкасси . . . . . . . . . . . 3
Чӗре хушать . . . . . . . . . . 76
Акăш кӳлли . . . . . . . . . . 83
Ҫӗлте . . . . . . . . . . . 91
Геройсем . . . . . . . . . . 94
Ватăлмалăх кунра . . . . . . . 100
Плащ . . . . . . . . . . . 104
Юр ирӗлет . . . . . . . . . . 107
Туссем . . . . . . . . . . . 119
Темиҫе хут вăйлăрах . . . . . . 151
Памятник . . . . . . . . . . 174



Переплет и титул
художника *Ф. Осипова.*

Редактор *И. Никифоров.* Тех. редактор *А. Краснов*
Корректор *М. Алексеев.*

НТ 00652. Подписано к печати 16-VI-1953 г. Бумага 84X108 1/32.
Объем 9,01 п. л., авт. лис. 8,60, уч. изд. лис. 8,76. Заказ № 1142.
Тир. 3000 экз. Цена 3 р. 65 коп.

г. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфиздата.



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Цена 3 руб. 65 коп.

В. САДАЙ

ТАЮТ СНЕГА

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ — 1953